Д 238-V
КС(чув)
Д 18

М. Н. ДАНИЛОВ-ЧАЛДУН




ЧĂВАШГОСИЗДАТ ◆ 1948

Национальная библи
k-000238

ЛИСТОК СРОКА ВОЗВРАТА

КНИГА ДОЛЖНА БЫТЬ ВОЗВРАЩЕНА НЕ ПОЗЖЕ УКАЗАННОГО ЗДЕСЬ СРОКА

Колич. пред. выдач ____________

ШКУЛ БИБЛИОТЕКИ

М. ДАНИЛОВ-ЧАЛДУН

# ВĂРÇĂ КАЛАВĔСЕМ

Обязательный контрольный экземпляр

ПРОВЕРЕНО

ЧĂВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
Шупашкар — 1947

ПРОВЕРЕНО
20 07,13



238-К

Чувашская
Республ... ...ская
БИБЛИ... ...КА
им. М. Горького

# М. Н. ДАНИЛОВ-ЧАЛДУН ПУРĂНĂÇĔПЕ ПУЛТАРУЛĂХĔ.

Отечественнăй вăрçăра чăваш совет писателĕсенчен нумайĕшĕ, алла хĕçпăшал тытса, малти линире çапăçрĕç. Вĕсен хушшинчен тăван çĕршыв ирĕкĕшĕн паттăрăн кĕрешсе пуçĕсене хунисем те пулчĕç. Ун пек вилнисенчен пĕри вăл—пирĕн паллă писатель Максим Николаевич Данилов-Чалдун. Вăл, нимĕç фашисчĕсене Ленинград фронтĕнче аркатнă чух йывăр аманнипе, 1944 çулхи мартăн 2-мĕшĕнче госпитальре вилсе кайрĕ.

Чалдун ячĕ чăваш литературине вулакансене пурне те паллă. Литературăра 20 çул хушши ытла ĕçлесе Чалдун нумай калавсем, новеллăсем, очерксем çырса пачĕ. Унăн произведенийĕсене пурте юратса вулаççĕ.

Максим Николаевич Пушкăрт республикинче, Стерлитамак районĕнчи Усăлă ятла ялта, 1893 çулхи январь уйăхĕнче çуралнă. Ашшĕ хуçалăхĕ вăйлах мар пирки, Чалдун ачаллах Çĕпĕре куçса кайса, Кемерово шахтине пырса вырăнаçнă. Малтан вăл çĕркăмрăкĕ турттарнă çĕрте лаша хăвалакан, ӳссе çитерехпе крепильщик, унтан забойщик пулса ĕçленĕ. Çапла вара вăл чăн-чăн шахтер—рабочий пулса, рудник еçĕсемпе пиçсе çитнĕ.

1914 çулта, тĕнче вăрçи пуçлансан, ăна çара илеççĕ. Виçĕ çул яхăнах фронтра пулса, Германи империализмĕн Россия çĕрне тапăнса кĕнĕ çарĕсене хирĕç çапăçать. 1917 çулта аманса госпитальре выртать. Псков хулинчи лазаретра выртнă вăхăтра çĕршывра Октябрь революцийĕ пуçланса каять. Чалдун, ачаранпах Кузбасри рабочисен йышĕнче пурăнса ӳснĕскер, Октябрь революцийĕн задачисене революцин малтанхи кунĕсенчех çителĕклĕн ăнланса илнĕ. Çавăнпа та вăл, сывалса лазаретран тухсанах, Псков хулинче тин çеç органнизациленекен Хĕрлĕ Гварди отрядне кĕнĕ. Хĕрлĕ Гварди чаçĕпе пĕрле Псков хулинче революциллĕ йĕркеллĕх тытас тĕлĕшпе ĕçленĕ.

1918 çул пуçламĕшĕнче Чалдун Кузбаса таврăнса каллех Кемерево шахтине ĕçлеме кĕрет. Çĕпĕре контр-

революциллӗ Колчак ҫарӗ йышӑнса илсен, Чалдун партизансен ретне тӑрса, Колчак бандисене хирӗҫ ҫапӑҫать. 1920 ҫулта вӑл Томск хулинчи совпартшкулта вӗренет. Ҫав ҫулах коммунистсен парти ретне кӗрет. 1921—1924-мӗш ҫулсенче—Томск кӗпӗрнинчи Верхотомскипе Кранивински вулӑсӗнчи парти комитечӗсен секретарӗ. 1925 ҫулта Мускавра уездсенчи парти работникӗсен курсӗнче вӗреннӗ. 1926—1930 ҫулсем хушшинче—ВКП(б) Томск окружкомӗ ҫумӗнчи Чӑваш секцин секретарӗ, унтан тата икӗ ҫул хушши Минусинск округӗнчи Усински районӗнче парти райкомӗн секретарӗ пулса ӗҫленӗ. 1933—34 ҫулсенче Томскри совпартшкул ҫумӗнчи Чӑваш уйрӑмӗн заведующийӗ пулса тӑнӑ.

1934-мӗш ҫул варринче Чалдун Шупашкара куҫса килет. Кунта вӑл 1938-мӗш ҫулччен Чӑваш совет писателӗсен союзӗн правленинче председатель заместителӗ тата пуҫламӗш парторганизацин секретарӗ те пулса ӗҫлет. Юлашки ҫулсенче Чалдун кӗске вӑхӑт хушши „Чӑваш коммуни" редакцинче, унтан Чӑваш Радиокомитетӗнче ӗҫлесе пурӑнать. Кунтанах вӑл тӑван ҫӗршыв ирӗклӗхӗ умне пысӑк хӑрушлӑх тухса тӑнӑ тапхӑрта, 1942 ҫулӑн пуҫламӗшӗнче хӑй ирӗкӗпе фронта тухса кайрӗ.

Чалдун пурӑнӑҫра нумай курнӑ ҫын. Патша влаҫӗн хӗсӗвне те, капиталист-хуҫасен пусмӑрне те вӑл хӑйӗн ҫурӑмӗ ҫинче тӳссе пӗлнӗ, пӗрремӗш тӗнче вӑрҫипе граждан вӑрҫи ҫулӑмӗсем витӗр тухнӑ, совет влаҫӗн мирлӗ строительстви вӑхӑтӗнче партипе обществӑллӑ ӗҫсен ответлӑ вырӑнӗсенче ӗҫленӗ. Яланах халӑх масси хушшинче пулса, Чалдун общество пурӑнӑҫне активлӑн хутшӑнса пынӑ. Ҫӗршывра мӗнле те пулин пысӑк та хӗрӳллӗ ӗҫ пулса пынӑ пулсан, Чалдун ҫав ӗҫсен айӑккинче тӑрса юлман. Вӑл яланах вӗресе тӑракан ӗҫ хушшине шала кӗрсе кайса, хӑй те ҫав ӗҫре вӗресе тӑма юратнӑ. Хаяр вӑрҫӑсемпе партизансен кӗрешӗвӗ тапхӑрӗсенче—вӑл хӑрушӑ вут ӑшне кӗрсе унта хӑйӗн вӑйне хума пикеннӗ. Мирлӗ саманара та вӑл ҫавах: партипе совет ӗҫӗсенче-и, е ытти ӗҫре-и—яланах малта пыма пикеннӗ, хӑйӗн вӑйӗпе пӗлӳлӗхӗ ҫитнӗ таран тӑван ҫӗршыва тата партипе совет влаҫне усӑ кӳме тӑрӑшнӑ.

Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ пуҫлансан, ватӑ коммунист, активист, хӑй ҫамрӑк маррине пӑхмасӑрах, фронтран инҫетре пурӑнассипе килӗшмерӗ. Тӑван ҫӗршывӑмӑршӑн

чи йывăр та хăрушă вăхăтра, вăл, военкомата кайса, хăйне хăвăртрах Хĕрлĕ Çар ретне илме ыйтрĕ.

Хăй ирĕкĕпе фронта кайса унта пĕр çулталăк ытла çапăçнă хыççăн Максим Николаевич Шупашкарти хаçат-журнал редакцийĕсем валли „34-мĕш атака умĕн" ятлă статья ярса пачĕ. Акă мĕнле çырать вăл çак статьяра хăй мĕн пирки фронта кайни çинчен:

„...Виççĕмĕш хут вăрçăра пуласси çинчен эпĕ мирлĕ вăхăтра шутламан та темелле. Аллă çула çитнĕскер, хам ирĕкпе вăрçă çынни пулса тăтăм.

1941-мĕш çулта пирĕн тăван çĕршыва хаяр тăшман тапăнса кĕчĕ. Çамраксене вăрçа иле пуçларĕç. Тăван çĕршывăма хаяр та усал тăшманран сыхламалла. Эпĕ хамран хам ыйтатăп: аллă çула çитрĕм, эпĕ ватă ĕнтĕ, вăрçă çыннисен ретĕнчен тухнă. Икĕ хутчен вăрçăра пулнă. Анчах халĕ, çĕршывшăн питех те хăрушă кунсем килсе тухнă вăхăтра, мĕнле килте ларас-ха? Çук, эпĕ ун пек çын мар. Маншăн тăван çĕршыв хаклă. Эпĕ ăна вĕçĕмсĕр юрататăп, уншăн вăрçма граждан вăрçи вăхăтĕнче те хамăн ирĕкĕмпе Хĕрлĕ Çар ретне тăтăм, тăшмана çĕмĕрсе тăкиччченех çапăçрăм. 1914—17-мĕш çулсенче нимĕççемпе вăрçнă. Суранланнă. Халĕ эпĕ каллех сывлăхлă. Тăван çĕршывран мăшкăллас, ăна чуралăха кĕртес шутпа килнĕ ирсĕр тăшмана çивчĕ шăлсемпе туртса çурас килет..."

Ку çыруран эпир М. Н. Чалдунăн чунне-кăмăлне уççăн курса ăнланатпăр. Чалдун тăван çĕршывăн хĕрӳллĕ патриочĕ. Тăван халăха пусмăрлама, ăна чуралатма килсе тапăннă нимĕç фашисчĕсене вăл пĕтĕм чунĕпеле курайман. Çакăнпа перлех вăл çав ирсĕр тăшмана хăйĕн пĕртен-пĕр ывăлне вĕлернĕшĕн те тӳсейми хытă тарăхнă:

„Фашистсем манăн пĕртен-пĕр ывăлăма вĕлерчĕç. Унăн вырăнне эпĕ вĕсене çĕр хут ытларах тавăрăп. Эпĕ ашшĕ. Манăн ватă ала чĕтресе тăмĕ..."—тесе çырать вăл хăйĕн „34-мĕш атака умĕн" ятлă статьинчех.

Çапла пирĕн паттăр писатель Максим Николаевич тискер тăшмана усал ĕçĕсемшĕн хытăрах тавăрас шутпа, ăна хăвăртрах çапса çĕмĕрес кăмăлпа хаярланса çапăçнă. Çак хаярлăх хистенипех вăл фронт хыçĕнче пурăнассипе килĕшме пултараймарĕ, часрах вăрçă вутне кĕрсе тискер фашистсене хăй аллипе хăй тавăрассишĕн çунчĕ. Хаяр вăрçăра вăл хăйне тăван çĕршывăн паттăр ывăлĕ пек,

чăн-чăн патриочĕ пек тытса, мĕн ураран ӳкичченех хĕрӳллĕн çапăçрĕ. Пĕтĕм ĕмĕрне халăх пурăнăçĕн варрипе пырса, пур событисене те хутшăнма юратаканскер, çак аслă вăрçăра та вăл çавнах кăтартса пачĕ.

Унăн вăрçări çапăçу çулĕ çĕнтерӳллĕ Хĕрлĕ Çарпа пĕрле,—Воронежпа Демьянск фрончĕсенчи хаяр çапăçусенче пулнă хыççăн,—Орёл патĕнчи Болховран пуçласа Брянск—Гомель хулисем урлă Днепр хĕррине тухиччен, унтан Новгород урлă Псков патне çитиччен таттисĕр наступленисемпе пычĕ.

Литература творчествипе М. Н. Чалдун 1922 çулта, урăхла каласан, вăрçăллă-тăвăллă тапхăрсем иртсе мирлĕ строительствăна куçнă хыççăн, ĕçлеме тытăннă. Ку вăхăтра унăн иртнĕ вăрçăсемпе партизансен кĕрешĕвĕнче хăй мĕн-мĕн курса тӳснисене хут çине çырса хурасси килнĕ. Çавсем çинчен çырнипех пуçлать те ĕнтĕ вăл хăйĕн творчествăллă ĕçĕсене.

Малтан сăвăсем çырать. Анчах та вĕсем, пулсах çитмен пирки, пичетленсех каймаççĕ. Унтан Çĕпĕрти партизансен кĕрешĕвĕ çинчен калавсем çырма пуçлать. Малтанхи калавĕ—„Вăхăтсăр вилĕм“ 1924 çулта пичетленет. Малалла çырнисем Мускаври „Ĕçлекенсен сасси“ ятлă журналта, унтан Шупашкарти хаçат-журналсенче те пичетленме пуçлаççĕ. Вĕсем „Таниле М.“ хушаматпа çапăнса тухаççĕ.

М. Н. Данилов-Чалдун ячĕ чăваш литературинче—„Тилĕ хыççăн“, „Якур“, „Левентей масарĕ“ тата „Шахтăра“ ятлă паллă калавсем „Сунтал“ журналта тухнă хыççăн ӳсме тытăнать.

1928 çулта Мускавра унăн „Калавсем“ ятлă сборник, 1929 çулта „Тайгара“ ятлă пьеси уйрăм кĕнекепе тухаççĕ.

Кĕнекисем тухнă хыççăн М. Н. Чалдун хавасланса кайса тата ытларах çырма пикенет. Çĕпĕр тайгисем хушшинче хăй тĕллĕн ӳссе аталаннă писатель Шупашкарти чăваш редакцийĕсене калав хыççăн калав ярса пама тытăнать. Вĕсенчен чылайĕшĕ „Сунтал“-ра пичетленсе тухаççĕ.

Чалдун, 1934 çулта Çĕпĕртен Шупашкара куçса килнĕ хыççăн, нумай çырма пуçларĕ. Чăвашиздатра унăн çулсерен кĕнеке тухма тытăнать. 1935-мĕш çулта: „Svнкăран“, „Партизансем“, „Икĕ вăй“ ятлă калав кĕнекисем, 1938 çулта „Çулăм витĕр“, 1939 çулта „Хĕрлĕ çăлтăр“, 1941 çулта „Тайга паттăрĕсем“ ятлă кĕнекесем тухаççĕ. Çак

хушăрах унăн калавĕсемпе очеркĕсем писательсен коллективĕ кăларнă тĕрлĕрен сборниксене те („Стахановецсем“, „Çĕнелнĕ ял“, „Хĕрÿллĕ кунсем“, „Суйлав кĕввисем“ тата ыт. те) кĕреççĕ. Кусемсĕр пуçне Чалдунăн тĕрлĕрен калавĕсем „Хатĕр пул“, „Ĕçхĕрарăмĕ“ журналсенче, „Чăваш коммуни“, „Çамрăк большевик“, „Пионер сасси“ хаçатсенче те пичетленеççĕ. Çакна пула, Данилов-Чалдун ячĕ хăвăрт пĕтĕм чăваш халăхĕ хушшине сарăлать.

Чалдун творчествин малтанхи тапхăрĕнче тĕп тематика пĕрре кăна, вăл—пĕрремĕш тĕнче вăрçинчен пуçланса („Вăрçăра“, „Лазаретра“) Октябрь революципе граждан вăрçи витĕр тухать („Малинкин“, „Климка“ тата ыт. те). Граждан вăрçи тапхăрне илсен, уйрăмăнах Çĕпĕрти партизансен кĕрешĕвĕ çинче чарăнса тăрать. Партизансем çинчен çырни Чалдун произведенийĕсем хушшинче питех те пысăк вырăн йышăнать („Партизансем“, „Тайга паттăрĕсем“, „Лубков отрячĕ“, „Катюша“, „Икĕ вăй“, „Колчакăн юлашки кунĕсем“, „Ункăран“, „Çапăçу иртсен“, „Çулăм витĕр“, „Çăлтăрлă çĕлĕк“ тата ыт. те). Ун пеккисем пĕр çирĕм калава яхăн шутланаççĕ.

Каярахри тапхăрта Чалдун урăх темăпа та чылай калавсем, новеллăсем, очерксем çырать. Çапла унăн шахтăри рабочисен ĕлĕкхи пурăнăçĕ çинчен („Вăтăр çулхи паллă“), кивĕ ял пурнăçĕ çинчен („Çирĕм çул ĕлĕк“, „Кÿршĕсем“, „Кутăн Куçма“), ялти комсомолпа коммунистсем çинчен („Кандидатсем“) çырнă калавсем пичетленсе тухаççĕ. Колхоз пурнăçĕ çинчен вăл: „Тăшман—куç умĕнче“, „Тимĕрçĕ Тимухха“ т. ыт. калавсене те çырать. Кусемсĕр пуçне вăл предприятисемпе колхозсенчи стахановецсем çинчен те сахал мар ятпаласем çырса кăларнă.

Чалдун обшество пурнăçне активлăн хутшăнса ĕçленипе пĕрлех, литература творчестви тĕлĕшĕпе те ывăна пĕлмесĕр нумай ĕçлерĕ. Унăн иксĕлми вăйĕ ăна пĕрмаях ĕçлеме хĕтĕклетчĕ. Пуçне пĕр-пĕр шухăш пырса кĕрсен, вăл хăвăртрах ăна çырма пикенет. Пĕре çырма пуçăннă произведенине вара, мĕн çырса пĕтеричченех аллинчен те ямасть. Ăна çырнă чух ыррăн сывăрма та, ахаль ларса канма та пĕлмест. Вăхăтлăха урăх ĕçпе ăста та пулин кайса килмелле пулсан та—васкаса, хыпаланса çÿрет. Кунĕн-çĕрĕн çырса ларать—ни шăмшакĕ ĕшеннине, ни пуçĕ ывăннине туймасть. Ĕçне туса пĕтерсен тин вара,

пуҫӗ ывӑннӑ пек туйса, тепӗр темиҫе кунлӑха лӑпланатчӗ. Ҫаваннпа та вӑл нумай ҫыратчӗ.

Анчах та хыпаланса тунӑ япалара час-часах тӗрлӗрен ҫитменлӗхсем пулма пултараҫҫӗ. Чалдун произведенийӗсенче те эпир кӑлтӑксем сахал мар куратпӑр.

М. Н. Чалдун—ҫырмалли сюжечӗ пирки час-часах лайӑххӑн шухӑшласа тӑмастчӗ. Ҫавӑн пекех, ҫырнӑ хыҫҫӑн та, хӑй мӗнле ҫырнине вуласа тухса тӗплӗн тишкерместчӗ. Ҫакӑн пирки унӑн калавӗсенче ҫитменлӗхсем пулатчӗҫ.

Унӑн произведенийӗсенче тӗл пулакан чи пысӑк кӑлтӑксенчен пӗри вӑл—геройсем кӗтмен ҫӗртенех темӗнле приключенисемлӗ сулнӑка кӗрсе ӳкни, ӗненмелле мар, ҫав самантра пулмалла мар ӗҫсем, тӗлпулусем умне пырса тухни пулса тӑрать. Кун пек приключениллӗ сулнӑка Чалдун хӑшпӗр чух ирӗксӗр, сюжечӗ пирки малтан тӗплӗн шутласа хуман пирки, произведенийӗнчи геройӗсен ҫулӗ питӗрӗнсе ларнӑ вырӑнсенче кӗрсе каять. Тепӗр чухне тата юриех те, вулакансене ытларах интереслентерес тенипе, пырса ҫакланать. Анчах кирек мӗнле приключени пулсан та, вӗсем нумай вырӑнта Чалдун калавӗсене хытах пӑсаҫҫӗ. Ун пек приключениллӗ примерсем ҫинче эпир кӑшт каярахпа уйрӑмӑнах чарӑнса тӑрӑпӑр-ха.

Чалдунӑн граждан вӑрҫипе партизансем ҫинчен калакан произведенийӗсенче, уйрӑмӑнах пысӑк япалисенче, идея тӗлӗшпе вайлӑ шухӑшсемех ҫук. Анчах, апла пулин те, вӗсенче вӑл пулнӑ-иртнӗ ӗҫсене аван картинласа кӑтартать. Вӑл калавсем пире иртсе кайнӑ ҫулсенчи пысӑк событисене, халӑхӑн героикӑллӑ ӗҫӗсене куҫ умне кӑларса тӑратма пулӑшаҫҫӗ. Ҫакӑн пек калама пулать унӑн „Икӗ вӑй“, „Колчакӑн юлашки кунӗсем“, „Партизансем“ ятлӑ пысӑк калавсем пирки.

Пысӑк калавӗсенче Чалдун тата яланах кӗрешӳри йышлӑ халӑха—рабочисене, хресченсене, партизансене, шуррисен салтакӗсене массӑллӑн илсе кӑтартма тӑрӑшать. Ҫакӑн пек халӑх йышӗ хушшине кӗрсе кайсан, унӑн калаври геройӗсем масса ӑшӗнче ирӗлсе, ҫухалса каяҫҫӗ, калавӑн тӗп шӑнарӗ сапаланать. Ҫакна пула вара произведенин хӑвачӗ те вайсӑрланса хӑйӗн пахалӑхне чакарать.

Пӗчӗк калавӗсене илсен, вӗсем урӑхла тӑраҫҫӗ. Чалдунӑн пӗчӗк калавӗсенчи тӗп геройсем малтан пуҫласа вӗҫне ҫитиччен уҫҫӑн сӑнарланса, хӑйсен ҫул-йӗрне

çирĕп тытса пыраççĕ. Хăй юратнă геройсене Чалдун час-часах лирикăллă ăшă кăмăл парса сăнарлать. Анчах та çак ăшă кăмăллă çынсемех тăшмана çавтери курайманççĕ. Ун пек сăнарсем унăн: Ехрем старикпе унăн кинĕ Васса („Тайга паттăрĕсем"), Ялампи („Икĕ вăй"), Таниле Макçăмĕпе арăмĕ („Тилĕ хыççăн"), Якур тата ыт. те. Вĕсем пурăнăçа юратаççĕ, йывăр пурăнăçра, кирек мĕнле пулсан та, яланах этеме тивĕçлĕ ирĕкпе пурăнма ĕмĕтленеççĕ, хăйсем пек çынна хĕрхенеççĕ, хăйсем те пурăнасшăн тăрăшаççĕ. Çапла Чалдун вулакансене хăйĕн лайăх геройĕсене юраттарма пĕлет, вулакансен кăмăлне вĕсен енне çавăрма пултарать.

Пĕчĕк калавĕсем Чалдунăн художество енĕпе те вăйлăрах, çӳлĕрех вырăнта тăраççĕ („Шахтăра", „Якур", „Левенти масарĕ", „Çапăçу иртсен" тата ыт. те). Чалдун çутçанталăк сăнне аван сăрласа кăтартать, пейзажсене илемлĕн сăнласа пама пĕлет, пулса иртнĕ ĕçсене час-часах пит те вырăнлă япаласемпе танлаштарса кăтартать. Акă мĕнле сăнласа парать вăл çанталăк сăнĕпе хăшпĕр пулса-иртнĕ самантсене:

„Çĕрле. Çанталăк лăпкă. Ăшă çумăр çуса иртсе кайрĕ. Ирхинепе çил шăпах лăпланчĕ. Урамсем, пралуксем тăрăх вĕçекен тусан хăй вырăнне лăпланса выртрĕ. Çырмара шыв шăнкăртатса юхни илтĕне пуçларĕ. Кĕтӳçсем кĕтĕвĕсене сарлака урамсем тăрăх уялла хуса кайрĕç. Хур-кăвакалсем те çырма тăрăх саланчĕç" („*Çапăçу иртсен*").

Е тата: „Кĕрен лаша çурăмĕ çине сăвăс пек çыпçăнса выртса, çап-çамрăк ача сиккипе сиктерсе килет. Ун хыçĕнче вĕри тусан пĕлĕт пек çӳлелле çĕкленсе юлать; лашин ăмри тăрăх шурă кăпăк татăла-татăла анать..." („*Çапăçу иртсен*").

„Атте сывлăш çавăраймасăр ӳсĕрет. Ульяна чӳрече янаххи çине тайăнса тăнă та, шывран типĕ çĕре кăларса пăрахнă пулă пек, турткаланса макăрать..."

„Салтак мана урипе тапса сирпĕтсе ячĕ. Эпĕ çăмха пек пĕтĕрĕнсе стена çумне пырса çапăнтăм. Урăх вара мĕн пулнине астумастăп, ăнтан кайнă" („*Шахтăра*" калавран).

Ку сăнлăхсем, танлаштарусем, Чалдун хăйне-хăй тишкерсе çырнă чух, илемлĕн çырма пултарнине кăтартса параççĕ. Анчах Чалдун хăйĕн геройĕсен пурăнăçне ĕненмелле мар приключенилле туса кăтартни унăн калавĕсен илемлĕхне чылаях çухатать.

Акă „Тайга паттăрĕсем“ ятлă калав. Вăл малтан тытăнса çурринчен иртиччен — Ехрим старикпе унăн кинĕ Васса çинчен — питех те аван каласа пырать. Калавăн чĕлхи те çамăл, ăна илемлĕ сăнлăхсемпе тултарнă. Анчах, çурринчен иртсен, калавра хайхи ĕненмелле мар ĕçсем пуçланса каяççĕ.

Тайга вăрманĕнче пурăннă Ехрим старикĕн ывăлне, Васса упăшкине — Уçăпа империализм вăрçи пуçлансанах вăрçа илсе кайнă. Уçăп пĕр сас-хурасăр çухалать. Вăрçа кайнă хыççăн вăл тăватă çул хушши пĕр çыру та яман. Ехрим старик хăй те, унăн кинĕ Васса та Уçăпа вилнех пўлĕ тесе шутлаççĕ. Империализм вăрçи чарăнать. Граждан вăрçи пуçланать. Шур гварди отрячĕсем тайга вăрманĕсене те пырса кĕреççĕ... Ехрим старик çуллахи кун шыв хĕрринче пулă тытса ларать. Сасартăк хăй хыçĕнчех вăрманта пăшал сассисем янтраса кайнине илтет. Кăна шурă офицерсем пенĕ иккен. Вĕсем тата, никама та мар, нимĕççем патĕнчен тыткăнран таврăнакан, хăйсен тăван килçурчĕ патне çитнĕ Уçăпах персе вĕлернĕ-мĕн. Мĕншĕн пенĕ-ха вĕсем çак телейсĕр Уçăпа? Мĕншĕн тесен, шуррисем вĕсене пĕр юлташĕпе иккĕшне тĕл пулсан, ирĕксĕрлесех хăйсен отрядне илме пикеннĕ пулать. Уçăппа юлташĕ килĕшмен. Офицер вĕсене конвойпа илсе кайма тăнă. Уçăппа юлташĕ тарма тăраççĕ. Тарнă чух Уçăпа персе ўкереççĕ те — вăл унтах вилсе каять. Çакна вуласа тухсан, пуçа ирĕксĕрех çакăн пек шухăшсем пырса кĕреççĕ: Уçăп фронтра çапăçса курнă, 4 çул хушши Германире тыткăнра пулса унтан чĕрĕпуççăн тухма пултарнă, Германирен Çĕпĕр тайгисене çитиччен темĕн тĕрлĕ йывăрлăхсем витĕр тухса, темиçе пин çухрăм хушши сыввăн таврăнма вăй-хал та, ăс та çитернĕ. Епле вăл çак юлашки сехетре, хăйсен килĕ патне çитнĕ чух, çав шурă офицере кăшт улталама та ăс тупайман-ши? Мĕн пирки апла, хăйсене пересле пĕлсех конвой аллинчен тарма тăнă-ха вĕсем! Вĕсем тайга мулкачисем мар-çке, пурăнăçра нумай курнă-тўснĕ, ăна пĕлсе çитнĕ çынсем! Çакăн пек шухăшсем килсе тухнипе, паллах вара, çак çыпăçусăр приключение ниепле те ĕненес килмест. Вăл калав ăшчиккине пăсса пăрахать çеç.

„Çăлтăрла çĕлĕк“ калава илер. Кунта та малтанхи калаври пекех ĕненмелле мар тĕлпулу сиксе тухать. Куçма ятлă çын империализм вăрçиве кайса çухалать. Пилĕк çул хушши киле пĕр хыпар та ямасть. Граждан

вăрçи пуçланса каять. Тайга вăрманĕсенче партизансен отрячĕсем пытанса пурăнаççĕ. Пĕр кунхине Куçман ывăлĕ ачи Энтри вăрмана çырла татма каять. Сасартăк пăшал сассисем илтĕнеççĕ. Кунта шургвардеецсем партизансене йĕрлесе çӳреççĕ иккен. Энтри кĕтмен çĕртен пĕр партизана тĕл пулать. Унпа калаçса каяççĕ. Тĕлĕнмелле! Ку партизан никам та мар, çак Энтрин ашшĕ — çухалнă Куçма хăех пулнă-мĕн! Вăл тахçанах фронтран таврăнса Çĕперти партизансен отрядĕнче çӳренĕ тата отряд командирĕ те пулса тăнă иккен. Куçма, пилĕк çул хушши килте пулманскер, хăйсен килĕ çывăхĕнчи вăрмансенчех пурăннă, çапах та тăван килне кĕрсе курăнăçман, хăйĕн çемьи мĕнле пурăннине пĕлесшĕн пулман. Çак кĕтмен самантра вăл хăй ывăлне ăнсартран тĕл пулнипе çеç унпа пĕрлешсе каять. Унсăрăн татах та темĕн чухлĕ вăхăт хушши килне пырса курмастчĕ-ха! Паллах, ку нимĕнпе те ĕненмелле мар япала пулса тухать.

Е тата акă çак кĕнекери „Çулăм витĕр" калаври ĕçсене илер. Партизан отрячĕн пуçĕ Карачăм Громов, унăн шăллĕ Кавруш тата Громов арăмĕ — кĕç-вĕç ача çуратас патне çитнĕ Тамара, пĕр аçа çиçĕмлĕ тĕттĕм каç тĕлĕнмелле майпа шурă казаксенчен хăтăлса тухса тараççĕ. Шыв хĕррине çитсе кимĕпе шывăн тепĕр енне каçса кайма тăраççĕ. Каçса çитес чух, вĕсем пĕр пĕчĕк утрав çине пырса тухаççĕ. Кунта, вăйлă çумăр хыççăн, утрава шыв илме пуçлать. Çыран хĕрринчи кимĕ шывпа юхса каять. Вара, çак виçĕ çыншăн кĕтмен асап пуçланать, шыв тулать, ниçта та хăтăлма çук. Громовсем утрав çинчи пĕртен-пĕр йывăç тăррине хăпарса лараççĕ. Çак самантрах Тамарăн ача çуратас вăхăт çитет... Ума пĕтмелли хăрушлăх тухса тăрать. Анчах та, телее, çак вăхăтра туран пĕр кимĕ юхса ана парать. Громовсем çак кимме тытнипе çеç вилĕм утравĕнчен тухса çăлăнаççĕ.

Кунта каллех çакăн пек ыйту сиксе тухать: отряд командирĕ Карачăм, кунти çĕршыва лайăх пĕлекенскер, мĕншĕн вара малтанах тӳрех каçса кайман-ха çак шыв урлă? Автор çырнă тăрăх, вăл унта (çыранăн тепĕр енче) казаксем сыхласа тăраççĕ пулĕ тесе шикленнĕ. Анчах та калава малалла вуласа пынă май, эпир унта казаксем мар, партизансен отрячĕ тăнине куратпăр. Карачăм Громов хăй те каç пулсан çеç шывăн леш енне çак отрядран тухса кайнă-мĕн. Тĕттĕм çĕрле, вăйлă çумăр çунă чух, унти çырана пырса тухма нимĕнле хăрушлăх та

пулман. Апла пулсан, вӑл ахалех шикленнӗ. Ҫук, кунта пӗчӗк утрав ҫине Карачӑм хӑй ирӗкӗпе мар, автор ирӗкӗпе ҫеҫ чарӑнса тӑнӑ. Вӑл ҫак виҫӗ ҫыншӑн приключенилле ӗҫсем ытларах тӑвасшӑн пулнӑ...

Ҫакӑнта илсе кӑтартнӑ пек ӗненмелле мар ӗҫсем Чалдун калавӗсенче час-часах пулса иртеҫҫӗ. Вӗсем калавсен сюжет идеин ҫыхӑнуллӑхне пӑсакан пысӑк кӑлтӑксем пулса тӑраҫҫӗ.

Чалдун творчествинчи тепӗр ҫитменлӗх тата — вӑл хӑйӗн геройӗсен сӑнарӗсене, характерӗсене, уйрӑмӑнах тӑшман ҫыннисен сӑнӗсемпе кӑмӑлӗсене пӗр евӗрлӗн кӑтартса пани. Тӑшман ҫынни пулсан, вӗсем пурте пӗр пек калаҫаҫҫӗ, вӗсен сӑнӗсем те пӗр майлӑ: шурӑ офицер-и е салтак-и вӑл — пурте мӑнтӑр, хӗрлӗ питлӗ, хулӑм туталлӑ, авӑнса тӑракан пысӑк мӑйӑхлӑ. Тата ҫакӑнпа пӗрлех тӑшман ҫыннисене вӑл час-часах ҫав тери айванлӑн, пӗр чеелӗхсӗр ҫынсем туса кӑтартать, вӗсем пӗр сисӗм-туйӑмсӑр автоматсем пек ӗҫлеҫҫӗ.

Юлашкинчен ҫакна палӑртмалла. Чалдун калавӗсен чӗлхи ҫӑмӑл,—вулама уҫӑмлӑ.

Эпир М. Н. Данилов-Чалдун ывӑна пӗлмесӗр нумай ӗҫлеме пултаракан ҫын тенӗччӗ. Кунта тата ҫакна хушса каламалла. Чалдун литература тӗлӗшӗпе темӗнле хӗрӳллӗ ӗҫсем хушшинче те, е ҫырма майӗ ҫук условиллӗ пурӑнӑҫра та ӗҫлеме пултаратчӗ. Ҫакна пула вӑл хӑйӗн юлашки ҫулӗсенче, Отечественнӑй вӑрҫӑ фрончӗсенчен те сахал мар калавсем, очерксем ҫыра-ҫыра ярса пачӗ. Ҫак калавсемпе очерксенчен нумайӗшӗ 1942—44-мӗш ҫулсенче „Илемлӗ литература" альманахра тата „Чӑваш коммуни" хаҫатра та пичетленсе тухрӗҫ. Вӗсенчен лайӑхраххисене суйласа илсе, Чӑвашиздат 1944 ҫулта унӑн „Фронтра" ятлӑ калавсен кӗнекине пичетлесе кӑларчӗ.

Чалдунӑн Отечественнӑй вӑрҫӑ фронтӗнчен ҫырса янӑ произведенийӗсем идейлӑхӗ тӗлӗшӗпе те, художествӑлӑхӗ енӗпе те вӑрҫӑ умӗн ҫырнӑ колхоз калавӗсенчен нумай лайӑхрах шутланаҫҫӗ. Вӗсем фронтри боецсен пурӑнӑҫне, вӑрҫӑри уйрӑм паттӑрсен ӗҫӗсене, нимӗҫ фашисчӗсен тискер ӗҫӗсене тата ыт. те кӑтартса параҫҫӗ.

Максим Николаевич Данилов-Чалдун пурнӑҫӗ питӗ те пултарулла произведенисем ҫырма хатӗрленнӗ вӑхӑтра татӑлчӗ. Чӑваш халӑхӗ унӑн ятне хисеплесе, юратса асӑнать.

*С. Элкер*

## ÇĂЛТĂРЛĂ ÇĔЛĔК

### I

— Андрюш ачам, вăрмана кайса, хăмла çырли татса таврăн-ха. Вĕретсе, шывне ĕçсе тарласан, тен кăшт çăмăл пулĕ,—терĕ Андрюшăн иккĕмĕш уйăх чирпе асапланса выртакан амăшĕ—Пăлаки.

— Юрĕ, анне, халех кайса килеп.

Çавăн пек ача вăл Андрюш. Мĕн пĕчĕкренех амăшне итлет. Ăна пур ĕçре те пулăшать. Амăшĕ чирлесе ӳкнĕренпе хăй яшка пĕçерет, кăвас хурать, çăкăр унать, вут хутать. Йăмăкĕ пур та, вăл çамрăк-ха—çиччĕ çине çеç кайнă, Ульяна ятлăскер.

Андрюш çур витре каякан пурак илчĕ. Унтан кĕсъине пĕр пысăк чĕлĕ çăкăр чикрĕ те:

— Ульяна, эсĕ эпĕ хăмла çырли татса киличчен ниçта та ан кай. Аннене пăх. Шыв ыйтсан—ĕçтер, çиесси килсен—çитер,—терĕ йăмăкне.

— Юрĕ, аннене пăхăп,—тесе юлчĕ Ульяна.

Çулла. Çанталăкăн чи илемлĕ вăхăчĕ çитнĕ. Уйра тырă ĕлкĕрет. Вăрманта тĕрлĕ çырла пиçет. Кайăк-кĕшĕксем тĕрлĕ сасăпа юрласа савăнаççĕ. Пыл хурчĕсем, тĕкĕлтурасем, сăпсасем нăрлатса вĕçеççĕ.

Андрюш çынран çӳллĕ хăмла çырли аврисен хушшинче, тин пиçсе кӳпченĕ хĕрлĕ çырласене пĕрчĕн-пĕрчĕн пуçтарса пурак ăшне тултарать. Вăл, çамрăк пулсан та, нимрен те хăрамасть. Çапах та аслă тайга ăшĕнче пĕччеиçи кичем пек туйăнать. Çавăнпа та Андрюш пырсан-пырсан пĕр шик! шăхăрса илет. Унтан вăл акă юрласа та ярать:

Ан кашла, вăрман, ан кашла.
Çулçу час тăкăнĕ.
Ан авăт, куккук, ан авăт,
Сассу час тытăнĕ...

Çак юрра Андрюш шкулта вĕреннĕ вăхăтра хăй шухăшласа кăларнă. Ана хăйĕн тетрачĕ çине те çырса хунă.

Пултармалла ача. Анчах ашшĕ çук. Çитменне тата амăшĕ чирлесе ӳкрĕ.

Сасартăк инçе те мар, пĕр çын шик! шăхăрчĕ. Андрюш çырла татма чарăнса итлерĕ: „Хăрушă мар, ман пек çырла татакансем татах пур-ха",—тесе шухăшларĕ. Унтан çын шăхăрнă май утрĕ.

— Эй, кам унта?! — тесе вăрмана янтратса кăшкăрчĕ Андрюш. Сасси инçете кайса тепĕр хут: нта-а... тесе пĕтрĕ.

Хăмла çырли аврисене чаштăрттарса, Андрюш умне пĕр кĕске пиншак тăхăннă çын тухрĕ. Вăл хулпуççийĕ урлă винтовка çакнă, унăн пуçĕнче вĕçлеке тăралла çĕлĕк, сĕлĕкĕн çамки çинче пиллĕк кĕтеслĕ хĕрлĕ çăлтăр йăлтăртатать.

— Ача, мĕн вăрман тăрăх суйăхса çӳретĕн? Аташса кайрăн-им? Упа тытса çиесрен хăрамастăн-им эсĕ?—терĕ винтовкăллă çын, Андрюш патнелле пырса.

Андрюш кĕтмен çĕртен пăшаллă çынна курсан, кăшт хăраса ӳкрĕ. Ун çине тинкерсе пăхрĕ. Çавăнтах хăюлланса илчĕ. Хăйĕн паттăрлăхне палăртасшăн пулчĕ:

— Аташман та эпĕ. Упаран та хăрамастăп!

— Çапах та, мĕн туса çӳретĕн эсĕ вăрманта пĕр пĕччен?—ыйтрĕ пăшаллă çын.

— Курмастăн-им, хăмла çырли пуçтаратăп.

— Куратăп, пурак йăтса çӳретĕн. А çырлу ăçта?

— Татма ĕлкĕреймерĕм-ха.

— Питĕ хăюллă ача пулас эсĕ, упаран та хăрамастăн,— тесе йăл кулчĕ пăшаллă çын.

— Упаран мĕн хăрамалли. Вăл вĕт çын сассине илтсенех тарать.

— Упасене хăратма кăшкăрса çӳретĕн апла эсĕ?..

— Вăрманта мĕншĕн шăппăн çӳрес. Сасăпа çӳресен кичем мар...

— Çапла. Хăш ял ачи пултăн эсĕ?—йăпăлтатса ыйтрĕ пăшаллă çын.

— Эпĕ, Кедравка ялĕнчен.

— Кунтан инçе-и сирĕн ял?

— Инçе мар, акă, вăрман урлă каçсанах куранать пирĕн ял.

— Аван. Мĕн ятлă эсĕ?

— Андрюш.

— Аçу мĕн ятлă?

— Атте? Атте манăн Захар ятлă пулнă. Халĕ вăл çук. Пилĕк çул ĕнтĕ, вăрçа кайнăранпа таврăнман. Хамăр та

пĕлместпĕр: те вилĕ, те чĕрĕ. Çыру та ямасть,— тесе пĕлтерчĕ Андрюш ашшĕ çинчен.

— Аннӳ пур-и?— йăвашшăн ыйтрĕ пăшаллă çын.

— Пур. Анчах вăл чирлĕ выртать. Паян çавăнпа хăмла çырли татма килтĕм. Хăмла çырли шывĕ вĕретсе ĕçтерсен, çăмăлтарах пулмĕ-ши, тесе шутлатпăр.

— Мĕн чирпе чирлĕ аннӳ?

— Перре яла салтаксем килчĕç те, аннерен: атте ăçта çӳрени çинчен ыйтса тĕпчесе, хĕнесе, хăратса пĕтернĕ. Çавăн хыççăн тытамак чирĕпе асапланать. Вăхăт-вăхăт аташса выртать. Хамăр та аптăрана ĕнтĕ, темле чĕртмелле?

— Йытăсем, пĕр айăпсăр хĕрарăма тарăхтараççĕ,—хăй тĕллĕн калаçса илчĕ пăшаллă çын.

— Йытăран та усалскерсем. Яла пырсан тӳсме çук айĕн-çийĕн пăтратаççĕ. Куçĕсен умне мĕн лекнĕ, пурне те хăйсемпе илсе каяççĕ,—терĕ Андрюш.

Пăшаллă çын Андрюш çине тинкерсе пăхрĕ. Çамрăк пулсан та, вăл шанчăклă ача пек туйăнчĕ.

— Андрюш, эсĕ шуррисен салтакĕсене курнă ĕнтĕ. Усалскерсем. Хĕрлисене пĕлетĕн-и эсĕ?—тесе ыйтрĕ пăшаллă çын.

— Пĕлместĕп. Халиччен курман. Пичче, эсĕ ху кам пулатăн? Хĕрлисем-и, е шуррисем-и?—тĕпчесе ыйтрĕ ача.

— Палла,—тесе йăл кулчĕ пăшаллă çын.

Андрюш лешин куçĕнчен тинкерсе пăхрĕ.

— Ăçтан паллас? Халиччен эпĕ сан пек шĕвĕр тăрăллă, çамки çинче хĕрлĕ çăлтăрлă çĕлĕк тăхăнса çӳрекен салтаксене курман. Акă, сана пирвайхи хут тĕл пултăм. Пирĕн яла пырса çӳрекеннисем вĕсем шуррисем. Çавăнпа питĕ усалскерсем,—терĕ Андрюш.

— Аçтан пĕлетĕн, тен, эпĕ те усал пулĕ.

— Çук, пичче, эсĕ усал мар. Пичче, кала-ха, мĕнле пилĕк кĕтеслĕ çăлтăр вăл санăн çĕлĕк çамки çинчи?— ыйтрĕ Андрюш.

— Ах, епле эсĕ, ăслă, пурне те пĕлесшĕн. Ку хĕрлĕ çăлтăр вăл пирĕн Хĕрлĕ Çар салтакне пĕлтерет.

— Пичче, апла эсĕ хĕрлисен салтакĕ! Халĕ палларăм ĕнтĕ?—савăнса кайрĕ Андрюш.

— Палларăн. Эпĕ хĕрлисен салтакĕ—партизан,—тесе пĕлтерчĕ пăшаллă çын.

Андрюш салтак куçĕнчен тинкерсе пăхать. Савăннипе ним тума пĕлмест.

— Пичче, пар-ха, эпӗ санӑн ҫӑлтӑрлӑ ҫӗлӗкна тӑхӑнса пӑхам. Мана килӗшет-и вӑл?—йӑлӑнса ыйтрӗ Андрюш.

— Ҫук, ку ҫӗлӗке сана тӑхӑнма юрамасть-ха.

— Мӗншӗн тӑхӑнма юрамасть?—кӑмӑлсӑр пулчӗ Андрюш.

— Ҫамрӑк-ха эсӗ.

— Ҫамрӑк? Вуниккӗ тултарнӑ ӗнтӗ эпӗ. Тата пилӗк ҫултан качча пулатӑн, тет мана анне.

Пӑшаллӑ ҫын ахӑлтатса кулса ячӗ:

— Ха-ха-ха! Каччӑ. Ну, юрӗ-ха. Акӑ, эпӗ сана пӗр ӗҫ хушам. Ҫавна тусан, хамӑн ҫӗлӗке тӑхӑнтарса пӑхма пултаратӑп.

— Мӗн ӗҫ?

— Паян эпӗ ҫимен. Манӑн ҫиес килет. Эсӗ яла кайса ҫӑкӑр тупса килме пултаратӑн-и? Ахаль мар. Укҫа парӑп. Ҫӑкӑр илсе килсен, ҫӑлтӑрлӑ ҫӗлӗке тӑхӑнтарса кӑтартӑп. Килӗшетӗн-и?

— Пичче, манӑн кунтах ҫӑкӑр пур. Ме, ҫи,—терӗ Андрюш, хӑйӗн кӗсъинчи чӗлӗ ҫӑкӑрне кӑларса пачӗ.

— Тавтапуҫ.—Пӑшаллӑ ҫын чӗринчен тавтурӗ. Вӑл ҫавӑнтах ҫӑкӑра ҫыртса илсе чӑмла пуҫларӗ.

— Пичче, эпӗ сана ҫӑкӑр патӑм, халӗ ҫӑлтӑрлӑ ҫӗлӗкна тӑхӑнтарса пӑхтарӑн-и?

— Ме, тӑхӑнса кур,—пӑшаллӑ ҫын пуҫӗнчи ҫӗлӗкне хывса, Андрюш пуҫне тӑхӑнтарчӗ.

Андрюшӑн кӑмӑлӗ тулчӗ. Вӑл тем пек савӑнчӗ. Амӑшӗ ҫӗвӗ кӗпе ҫӗлесе тӑхӑнтартсан та, нихӑҫан капла тӗхӗпӗртемен. Кӗпе мӗн вӑл? Ӑна ҫын мӗн ҫуралсанах тӑхӑна пуҫлать. Вӑт ку ҫӑлтӑрлӑ ҫӗлӗке Андрюш хӑй ӗмӗрӗнче пирвайхи хут тӑхӑнса курать.

— Пӑх-ха, пичче, килӗшет-и мана?

— Калама та ҫук килӗшет. Чӑн-чӑн хӗрлӗ салтаках пултӑн. Шинель тӑхӑнсан, аллуна пӑшал тытсан, паллас та ҫук,—тесе мухтарӗ пӑшаллӑ ҫын.

Халӗ ӗнтӗ Андрюшӑн ҫӗлӗке тӑхӑнса курни ҫеҫ сахал, ӑна пӗтӗмпех хӑйӗн тӑвасси килсе кайрӗ.

— Пичче, сут эсӗ ку ҫӑлтӑрлӑ ҫӗлӗкна мана.

— Ай-ай, епле ача эсӗ. Ҫук, Андрюш, ҫӗлӗке сутма юрамасть. Ӑна мана командир юлташ панӑ.

Андрюш кӑмӑлсӑр пулчӗ. Унӑн мӗнле те пулсан ҫӗлӗке хӑйӗн тӑвас килет. Ку ҫӑлтӑрлӑ ҫӗлӗке тӑхӑнсан, вӑл хӑй пек ачасен хушшинче командир пулма пултарать.

Пăшаллă çын çакна туйса илчĕ. Ачан кăмăлне хăварасшăн пулмарĕ.

— Андрюш, эсĕ мана ху çиес çăкăрна патăн. Уншăн тавтапуç сана. Эпĕ сана тепĕр ĕç хушам. Итлĕн-и?

— Тата мĕнле ĕç? Итлеп!—сиксе ӳкрĕ Андрюш.

— Эпĕ çисе тăраннипе çеç сахал. Манăн вĕт юлташсем те пур. Вĕсен те çиес килет. Эсĕ яла кайса, нумайрах çăкăр илсе кил. Вара эпĕ сана çак çĕлĕке пуçĕпех пама пултаратăп.

— Чăнах-и! Халех кайса илсе килетĕп, пичче!—кăшкăрса ячĕ Андрюш.

— Мĕншĕн суяс ман сана. Эпĕ вĕт шуррисен салтакĕ мар, пĕлетĕн, хĕрлĕ салтаксем суймаççĕ, чăннипе çеç калаççĕ.

— Эпĕ халех, пичче. Эсĕ ниçта та ан кай. Çак вырăнта кĕтсе тăр мана,—терĕ Андрюш, кайма хатĕрленсе.

— Тăхта. Ме укçа, çăкăра укçапа ил. Асту, мĕншĕн, камшăн çăкăр илнине никама та ан кала.

Пăшаллă çын Андрюша хут укçасем кăларса пачĕ.

— Юрĕ, пичче. Эсĕ мана хăвăн çăлтăрлă çĕлĕкне пама шантартăн. Ман çине те шан. Никам та пĕлмĕ,—терĕ Андрюш, укçисене кĕсъине чиксе.

— Тата ялта шуррисен салтакĕсем пур-и, çук-и—çавна та пĕлсе кил.

— Юрать,— Андрюш çавăнтах хăмла çырли аврисене хумхантарса, ялалла май чупрĕ.

## II

Яла çитсен, Андрюш килне кĕрсе амăшĕпе йăмăкĕн куçĕсене курăнмарĕ. Унта кĕрсен те, вĕсен çăкăр çук. Хăйсем те аран-аран çеç пурăнкалаççĕ. Çавăнпа вăл тӳрех кӳрше кайрĕ. Пахчисем урлă каçса хăйĕнчен икĕ çул аслă Костяна тĕл пулчĕ.

— Андрюш, мĕншĕн пирĕн пахча урлă каçса çӳретĕн? Хăяр вăрлама кĕтĕн-им?—кăшкăрса ячĕ Костя.

— Ан шарла, Костя, санăн канфет çиес килет-и?

— Мĕн, санăн канфет пур-им? Пар, çиер,—хĕпĕртесе ӳкрĕ Костя.

— Канфет çук та, укçа пур. Укçа пулсан канфет та пур,—тесе йĕкĕлтерĕ Андрюш. Унтан пĕр хут укçа кăларса кăтартрĕ.

— Пар укçуна!—Халех лавкана кайса канфет илсе килем,—терĕ Костя аллине чăсса.



238-К
Чувашская Республиканская БИБЛИОТЕКА им. М. Горького

Андрюш, Костяран кулнӑ пек, кӑштӑрт укҫине кӗсъине чиксе хучӗ.

— Ай-ай, епле эсӗ чее. Хатӗр укҫапа канфет илсе ҫиесшӗн. Ху мӗн паран?—кулса ыйтрӗ Андрюш.

— Мӗн парас манӑн? Ав пахчаран хӑяр парӑп.

— Мӗн тӑвас ман санӑн хӑярупа? Пирӗн хамӑрӑн та хӑяр пур.

— Ну, картаран ҫӑмарта илсе парам.

— Ҫӑкӑр пар. Вара ҫур кӗренке канфет илмелӗх укҫа парӑп.

— Суймастӑн-и?

— Ма суяс ман сана. Малтан ҫӑкӑрна илсе тух. Вара укҫа парӑп. Акӑ вӑл,—Андрюш тепӗр хут укҫине кӑларса кӑтартрӗ.

Костя ирӗлсех кайрӗ. Канфет ҫиесси килнипе, сурчӑкне ҫӑтрӗ. Куҫӗсем йалтӑр-йалтӑр ҫуталаҫҫӗ.

— Эпӗ халех. Кӗтсе тӑр ҫакӑнта,—терӗ Костя. Унтан вӑл пӳртне хӑвӑрт кӗрсе, амӑшӗнчен вӑрттӑн пӗр пысӑк ҫӑкӑр йатса тухрӗ.

— Ме ҫӑкӑр. Пар укҫуна. Асту, ҫур кӗренке канфет илмелӗх.

Андрюш, ҫӑкӑрне илсе хучӗ те, ним шарламасӑр, Костяна хут укҫа кӑларса пачӗ.

— Ме, пыр, ытти ачасене те кала. Камӑн канфет ҫиес килет, ҫӑкӑр илсе килччӗр ман пата. Эпӗ ҫакӑнта, мунча хыҫӗнче, кӗтсе ларӑп—тесе калама ҫеҫ ӗлкӗрчӗ Андрюш—ҫак вӑхӑтра унӑн хӑлхинчен такам алли ярса та тытрӗ.

— А-а... Эсӗ, манка чӑпти. Укҫа парса, хӑвӑнтан аслӑ ачасене ҫӑкӑр вӑрлама вӗрентетӗн! Канфет ҫитересшӗн! Андрюш карт! туртӑнчӗ. Пӑхать: Костя амӑшӗ. Вӑл мунча хутма тесе пынӑ та ачасем мӗн калаҫнине вӑрттӑн мунчара итлесе тӑнӑ-мӗн.

Андрюш, ҫакна курсан, Костя амӑшӗпе тавлашса тӑмарӗ, ҫӑкӑра ярса илчӗ те тарчӗ, ҫатан урлӑ сиксе каҫрӗ.

Костя амӑшӗн аллинчен вӗҫерӗнеймерӗ.

— Акӑ сана канфет! Ӳлӗмрен ан хӑтлан капла!—тесе хӑлхинчен лӑскать Костяна амӑшӗ.

Костя мӑйкӑча лекнӗ куян пек пуҫне пӑркалать. Куҫҫулӗсем шӑпӑр-шӑпӑр юхаҫҫӗ. Амӑшӗн алли ҫирӗп тытнӑ хӑлхаран, вӗҫертмест. Хӑлхи кӑмӑрчакӗсем шӑтӑр-шӑтӑр тӑваҫҫӗ, вутла пӗҫертет.

— Каçар, анне. Эпĕ вĕт ăна çăкăра ахаль паман. Укçалла сутнă,—тесе амăшне йăлăнать Костя.

— Ан вăрла! Аннӳнтен вăрттăн ан ил ӳлĕмрен!—тесе такмакла-такмакла лăскать амăшĕ Костяна хăлхаран.

— Çакна курсан, мунча патне ачасем пуçтарăнчĕç. Костяна амăшĕ хăлхаран лăсканине, хăшĕ пахча çатанĕ çине хăпарса, хăшĕ çатан витĕр пăхаççĕ.

— Мĕншĕн? Мĕн вăрланă вăл?—тесе пĕр-пĕринчен ыйтса пĕлеççĕ ачасем. Анчах тĕплĕн пĕлекен никам та çук. Андрюш пĕлет. Вăл никама та шарламасть. Унăн хăйĕн хуйхă, çăкăр пуçтарса, вăрмана илсе каймалла. Унта ăна пăшаллă çын кĕтет. Андрюш вăрах пымасан, вăл пăрахса та кайма пултарать. Вара унăн çăлтăрлă çĕлĕк пĕтет. Костя амăшĕ кансĕрлерĕ. Çав пулман пулсан, халиччен вăл çителĕклĕ çăкăр тупса каятчĕ ĕнтĕ. Çитменне тата Костя амăшĕ Андрюш амăшне: „Ачу укçа таçтан илнĕ. Укçа парса çăкăр пуçтарать. Мĕн тума пуçтарать вăл çăкăр?“ тесе элеклесе кăтартĕ. Чирлĕ амăшне хуйхă пулĕ. Кăшт çăмăлланнăччĕ-ха. Каллех тытса пăрахĕ. Ульяна хăраса пĕтĕ.

Андрюш çапах та пуç усмасть. Ачасене çăкăр илсе пыма хушать. Лешсем тултараççĕ. Андрюш укçа парать. Тепĕр çур сехетрен Андрюш тăватă çăкăр йăтса вăрманалла кĕрсе кайрĕ.

Андрюшран укçа илнĕ ачасем пĕрин хыççăн тепри лавкана пыра-пыра кĕреççĕ. Пурте канфет илеççĕ. Пĕрпĕринпе вăрттăн калаçаççĕ: „Укçа ăçтан илтĕн!-ыйтаççĕ. Анчах пĕри те: „Андрюша çăкăр сутса“ тесе калакан çук.

Андрюш çăкăрсене аран йăтса çитерчĕ. Кунĕ ахаль те шăрăх. Халĕ вăл мунча кĕнĕ пекех чăм шыва ӳкрĕ. Питçăмартийĕсем тăрăх шапăртатса тар юхать. Костя амăшĕ туртса ыраттарнă сылтăм хăлхи хĕрелсе кайнă, вут пек пĕçерет.

Пăшаллă çын Андрюша хаваслăн кĕтсе илчĕ:

— Ах, епле вăйлă эсĕ, ача. Тăватă çакăр трук йăтса çитернĕ.

— Татах та нумайрах илсе килес тенĕччĕ, Костя амăшĕ кансĕрлерĕ,—терĕ Андрюш мухтанса. Унтан ĕç мĕнле пулнине каласа пачĕ.

— Ну ан хуйхăр уншăн, Андрюш, эсĕ вĕт вăрласа мар, укçа парса илнĕ. Аннӳ: „укçа ăçтан илтĕн?“, тесе ыйтсан, çул çинче тупрăм те,—тесе вĕрентрĕ ăна пăшаллă çын.

Унтан вĕсем хăмла ҫырли сулхăнне хире-хирĕç ларчĕҫ.

— Халĕ ĕнтĕ пăртак канар та, унтан эпĕ сана ăсатса ярăп. Пăх-ха, эсĕ яла кайса киличчен, эпĕ сана валли пĕр пурак туллиех хăмла ҫырли татса пуҫтартăм,—терĕ пăшаллă ҫын, тулли пуракне Андрюш умне лартса.

Андрюш савăнса кайрĕ. Ҫӳхе тутисене йăл култарчĕ.

— Пичче, эпĕ эсĕ хушнине турăм. Халĕ ĕнтĕ ҫăлтăрлă ҫĕлĕкна паратăн-и?

— Ме, тăхăнса лар. Анчах, халĕ эпĕ ăна сана ялна парса ямастăп,—терĕ пăшаллă ҫын, хăйĕн ҫăлтăрлă ҫĕлĕкне Андрюш пуҫне тăхăнтарса.

— Мĕншĕн?—пӳлсе ыйтрĕ Андрюш.

— Халĕ ăна сана тăхăнса ҫӳреме юрамасть. Шуррисен салтакĕсем курсан, уншăн сана тĕрмене хупса лартма пултараҫҫĕ. Хăҫан эпир, хĕрлисем, шурă салтаксене ҫĕнтеретпĕр, ҫавăн чухне вара эпĕ сана ҫак ҫăлтăрлă ҫĕлĕке пусĕпех парăп. Эсĕ ăслă ача вĕт. Килĕшетĕн пулĕ ҫапла? Ĕнен, эпĕ сана суяс ҫук,—терĕ пăшаллă ҫын, Андрюша аллипе хулпуҫҫийĕнчен ҫупăрласа.

Андрюш пĕр вăхăт кăмăлсăр пулса ларчĕ. Унтан пăшаллă ҫын ҫине мĕскĕнĕн пăхса илчĕ.

— Хăҫан-ха эсир вăл шуррисене ҫĕнтеретĕр?

— Вăрах мар юлчĕ, тепĕр икĕ уйăхран эпир вăл тăшмансене ҫĕнтеретпĕрех. Ун чухне вара эсĕ ҫак ҫăлтăрлă ҫĕлĕке тăхăнса ҫӳретĕн.

Андрюшăн кăмăлĕ тулнă пек пулчĕ. Унăн хăйĕн те шуррисемпе ҫапăҫасси килсе ҫитрĕ. Ним шухăшламасăрах:

— Пичче, эпĕ те санпа пĕрле пырам-и?—персе ячĕ.

Пăшаллă ҫын Андрюшăн куҫĕнчен пăхса илчĕ. Унтан ачана йăпатса каларĕ:

— Ҫамрăкрах ҫав-ха эсĕ, шăллăм. Тата аннӳ чирлĕ, тетĕн. Ăна пăхас пулать. Эсĕ манпа пĕрле пымасан та пире пулăшма пултаратăн. Паянхи пек кашни кун ҫăкăр илсе килĕн ҫак вырăна. Яла шуррисен салтакĕсем пырсан пĕлтерĕн. Ҫаксене туни пирĕнпе пĕрле ҫӳренинчен те хаклăрах пулĕ. Эпĕ сана уншăн ахаль тумăп. Кирлĕ пулсан, пĕчĕк пăшал та тупса парăп. Эсĕ пĕчĕк пăшал курнă-и? Ак ҫакăн пеккине,—терĕ пăшаллă ҫын, пилĕкĕ ҫумĕнче ҫакăнса тăракан пăшалне кăларса кăтартрĕ.

Пăшаллă ҫын ытла ĕнентерсе калаҫнипе, Андрюш леш мĕн хушнă, ҫавна тума хатĕр.

— Юрĕ, пичче. Кайран вара эсĕ ан ултала мана. Эпĕ те сана эсĕ мĕн хушнă, ҫавна туса пырăп.

— Эпĕ сана улталаса мар, чăн калатăп. Çăлтăрлă çĕлĕк, пĕчĕк пăшал санăн пулĕç. Килĕшетĕн-и?

Вĕсем çапла каласса ларнипе хăйсем те сисмен, сасартăк:

— Стой... Руки вверх!—ахăрчĕ пĕр сасă.

Пăшаллă çын хăвăрт сиксе тăчĕ те хăмла çырли аврисем хушшипе пĕрхĕнсе кĕрсе кайрĕ. Вăл Андрюша тăхăнтарнă çăлтăрлă çĕлĕкне те манса хăварчĕ.

Курăк ăшĕнче ларакан Андрюша шуррисен салтакĕсем асăрхаса пăхмарĕç. Пăшалĕсене хатĕр тытса, партизан хыçĕнчен тапса сикрĕç.

— Стой!—кăшкăрчĕç вĕсем. Пăшал сассисем кĕрлесе вăрмана янтратрĕç. Андрюш курса та юлаймарĕ, умĕнчен те упа, те кашкăр курăка çĕмĕрсе тепĕр еннелле тарчĕ.

Халĕ ĕнтĕ Андрюш чухласа илчĕ. Вăл пуçĕнчи çăлтăрлă çĕлĕкне хывса аллине тытрĕ те, курăк хушшинчен тăвата уран упаленсе инçетелле тарчĕ.

Пăшал пенисем çавах ухлатса илтĕнеççĕ. Унтан Андрюш ури çине тăрса чупрĕ: „Тăшмансем персе вĕлерчĕç пулĕ", тесе шухашларĕ, партизана шеллесе. Кăмăлĕ хуçăлчĕ. Куçĕсем ирĕксĕрех шывланчĕç. Çул çине тухрĕ те килнелле утрĕ. Аллинчи çăлтăрлă çĕлĕкне темиçе хутчен тăхăна-тăхăна пăхрĕ.

## III

Килне Андрюш салхуллăн пырса кĕчĕ.

Амăшĕ Андрюшăн аллинчи çăлтăрлă çĕлĕкне асăрхарĕ:

— Ара, ачам. Мĕнле тĕнчере çук çĕлĕк илсе таврăннă эсĕ? Кам пачĕ? Ăçтан тупрăн?

Андрюш çăлтăрлă çĕлĕке ăçтан илнине амăшне пĕлтермерĕ.

— Вăрманта çўренĕ чухне тунката çинчен тупса илсе таврăнтăм. Малтанах эпĕ ăна йывăç кăмпи тесе. Тытса пăхрăм та, çĕлĕк пулчĕ тăчĕ. Тупнă япалана пăрахса хăвармарăм. Илсе таврăнтăм,—тесе суйрĕ вăл.

Ульяна пиччĕшĕн аллинчи çăлтăрлă çĕлĕкне илсе пуçне тăхăнчĕ те:

— Пичче, пăх-ха, пăх. Мана килĕшет-и?—тесе путек пек сиккелерĕ.

— Хĕрачасене валли мар вăл. Арçын ачасене çеç килĕшет,—терĕ Андрюш.

Ульяна кăмăлсăр пулчĕ. Пуçĕнчи çĕлĕкне хывса калле Андрюша пачĕ.

— Хăвах тăхăнса çӳре эппин,—терĕ тутисене мăкăртса.

Амăшĕ Андрюша ĕненчĕ: „Çĕлĕкне чăнах та вăрмантан тупнă пулĕ", тесе шухăшларĕ. Тыткаласа пăхрĕ.

— Питĕ лайăх çĕлĕк. Хĕлле, сивĕ вăхăтра тăхăнсан, хăлхусене ăшăтма çунаттисем те пур,—тесе мухтарĕ.

Ульяна урама выляма тухса чупрĕ.

— Пирĕн пичче, вăрмана хăмла çырли татма кайсан, шĕвреке тăраллă, çамки çинче хĕрлĕ çăлтăрлă çĕлĕк тупса таврăннă,—тесе пĕлтерчĕ хăйĕн тантăшĕсене.

Çакăн хыççăн Андрюшăн çăлтăрлă çĕлĕкĕ çинчен ялти ача-пăчасем те пĕлчĕç. Çăлтăрлă çĕлĕк курма пыра пуçларĕç.

— Андрюш, çăлтăрлă çĕлĕкне кăтарт-ха. Эпир те курар,—тесе ыйтаççĕ.

Андрюш кăтартасшăн мар пулса турткаланса тăчĕ.

— Нимĕнле çăлтăрлă çĕлĕк те çук манăн. Кăмпа вăл,—тесе пытарасшăн тăрăшрĕ вăл.

Çук, Ульяна хăй пиччĕшĕн суйине кăларчĕ:

— Суять, кăмпа мар. Чăн-чăн çăлтăрлă çĕлĕк. Хам тăхăнса куртăм. Мана ĕненмесессĕн, ав, аннерен ыйтăр. Вăл та тытса пăхрĕ,—тесе янтрать Ульяна ачасен умĕнче.

Андрюшăн ним тума та пулмарĕ, çăлтăрлă çĕлĕке ачасене кăтартмаллах пулчĕ.

— Ăçтан илтĕн?

— Кам пачĕ?—тесе тĕпче пуçларĕç ачасем.

Андрюш ачасене те амăшне калană пекех:

— Вăрмантан, тунката çинчен тупрăм,—тесе суйрĕ.

Ача-пăчасем шалт тĕлĕнеççĕ. Хăшĕ ĕненсех пăрахрĕç, хăшĕсем иккĕленеççĕ:

— Атьăр эпир те кайса шырар. Тен татах пур пулĕ унта çакăн пек çăлтăрлă çĕлĕк.

— Суять вăл. Кам пăрахса çӳретĕр унта çакăн пек çăлтăрлă çĕлĕке,—тесе пĕр-пĕринпе тавлашаççĕ.

Костяпа Миша, никама пăхмасăр, вăрмана кайса, çăлтăрлă çĕлĕк тупасшăн шыраса çӳрерĕç. Çапах та вĕсем ахаль таврăнмарĕç. Андрюшăн хăмла çырли татса тултарнă пуракне, унтан тăвата çăкăр тупса таврăнчĕç. Вĕсем хăйсен Андрюша укçалла сутнă çăкăрĕсене паллаpĕç. Ачасем шухăша путрĕç:

— Мĕне пĕлтерет-ха ку? Пиртен укҫа парса ҫăкăр илчĕ. Унтан вăрмана кайса пăрахнă?—тесе тĕлĕнеҫҫĕ.

Андрюш ҫăлтăрлă ҫĕлĕк ҫинчен пĕлтернĕшĕн Ульянана ҫиленнĕ.

— Карма ҫăвар. Мĕне кирлĕччĕ сана ҫăлтăрлă ҫĕлĕк ҫинчен ҫынсене пĕлтерме? Хам йăнăш турăм. Сана кăтартмалла марччĕ,—тесе пĕр йăмăкне вăрҫать, пĕр хăйне хăй ятлать.

Ҫăлтăрлă ҫĕлĕк хыпарĕ часах пĕтĕм яла сарăлчĕ. Малтан ача-пăчасем пĕлчĕҫ. Унтан ваттисем те сисрĕҫ. Пурте тĕлĕнеҫҫĕ. Тĕлĕнмесен те май ҫук. Кун пек шĕвреке тăрăллă, ҫамки ҫинче хĕрлĕ ҫăлтăрлă ҫĕлĕке никам та халиччен курман.

Костяпа Миша амăшĕсенчен вăрттăн сутнă ҫăкăрĕсене килĕсене илсе таврăнмарĕҫ. Андрюш патне кĕртсе пачĕҫ.

— Ме ҫăкăрусене, пуракна. Ҫăлтăрлă ҫĕлĕк тупнипе савăнса, кусене те манса хăварнă.

Андрюш тин астуса илчĕ хăйĕн пуракĕпе ҫăкăрсем ҫинчен. Пăшаллă ҫынна пĕтĕм чунĕнчен хĕрхенчĕ: „Перҫе вĕлерчĕҫ ĕнтĕ ăна. Унсăрăн вăл кайран та пулин ҫăкăрĕсене пырса илсе кайнă пулĕччĕ. Ыран кайса пăхап-ха. Тен чĕрех юлнă пулĕ. Каллех тĕл пулăпăр", тесе шухăшларĕ.

Ҫăлтăрлă ҫĕлĕк пирки нумай калаҫрĕҫ ялти ҫынсем. Мĕнле ҫĕлĕкне никам та пĕлекен ҫук. Пĕр Андрюш ҫеҫ пĕлет. Анчах вăл никама та пĕлтересшĕн мар, пытарать.

Сасартăк: „Яла шуррисем килсе ҫитнĕ", текен хыпар сарăлчĕ.

— Ачам, пытар ҫĕлĕкне. Тем курса тăрăпăр ун пирки,—тесе асăрхаттарчĕ Андрюша амăшĕ.

Андрюш, ҫалтăрлă ҫĕлĕкне пӳрт тăррине хăпартса пытарас тесе, аллине тытса тухатчĕ. Ăна хирĕҫ пĕр офицерпе тепĕр салтак пырса кĕчĕҫ.

— Тăхта-ха, ача. Мĕн ку санăн аллунта?—тесе чарчĕ офицер Андрюша.

— Ҫĕлĕк,—терĕ Андрюш хăранă сасăпа.

— Пар-ха кунта,—офицер Андрюш аллинчен карт туртса илчĕ ҫĕлĕке. Унтан ҫавăркаласа пăхрĕ:

— Ăҫтан илтĕн? Кам пачĕ ку ҫĕлĕке сана?

— Хăмла ҫырли татма кайсан, тунката тăрринчен тупса таврăнтăм...

— Ан суй, анчăк ҫури! Кала тӳррипе! Ăҫтан илтĕн! Кам пачĕ?—шăлне ҫыртса ахăрчĕ офицер.

— Никам та паман. Каларӑм вӗт сире: вӑрмантан тунката тӑрринчен тупса таврӑнтӑм, тесе.

— Ха-ха-ха. Пӗчӗккӗ пулин те епле суять вӑл!— лахлатса кулчӗ офицер.

— Мӗн мӑшкӑлатӑн. Пар ҫӗлӗке,—Андрюш офицер аллинчи ҫӗлӗке туртса илме тӑчӗ.

Офицер Андрюш ҫине куҫӗсене хӗссе пӑхрӗ те:

— Ах, анчӑк. Эсӗ тата манпа тавлашма-и-ха! Акӑ сана!—пӗтӗм вӑйӗпе Андрюшӑн пуҫӗнчен чӑмӑрӗпе ҫапрӗ.

Андрюш ҫӗр ҫумне хутланса ларчӗ. Аллисемпе пуҫӗнчен ярса тытрӗ:

— Ой!

— Халех штаба леҫсе хӑвар. Унта каласа парӗ,—терӗ офицер, хӑйпе пӗрле пынӑ салтак ҫине пӑхса.

— Слушаюсь, вашеблагороди!—терӗ салтак. Унтан Андрюша аллинчен тытса ури ҫине тӑратрӗ.

— Ара, пысӑк пуҫӑрпа мӗншӗн эсир ачана хӗнетӗр? Мӗн айӑп турӗ вӑл сире?—чирлӗ амӑшӗ чупса тухса, Андрюша ҫӑлса юласшӑн пулчӗ.

— Кай, ватӑ кӑркка!—офицер Андрюш амӑшне урипе тапса йӑвантарчӗ.

Икӗ уйӑх ытла чирпе асапланса типсе хӑрнӑ мӗскӗн хӗрарӑм ҫӗре сӑмсипе чикӗнсе анчӗ.

Салтак Андрюша, кашкӑр сурӑх путеккине тытса кайнӑ пек, сӗтӗркелесе урама илсе тухрӗ.

— Йытӑсем. Ачана ӑҫта илсе каятӑр?!—кӑшкӑрса юлчӗ Андрюш амӑшӗ.

Офицер ҫӳҫӗ-пуҫӗ сапаланса кайнӑ хӗрарӑм ҫине йӗрӗнчӗклӗ ҫавӑрӑнса пӑхрӗ те:

— Ан ахӑр. Халех персе пӑрахӑп! Йытӑ ами!—тесе кӑшкӑрса пӑрахрӗ.

## IV

Салтак Андрюша сӗтӗркелесе штаба ҫитерчӗ. Хӗнесе ӑнтан янипе, пирӗн Андрюш аран сулкаланса тӑрать. Сӑмси ҫӑварӗ, пичӗ-куҫӗсем юнпа, тӑпрапа варланса пӗтнӗ, кӗпи ҫурӑкӗсенчен ӳчӗ курӑнать. Ури тунисем, атӑпа тапнипе, кӑвакара-кӑвакара тухнӑ.

— Вашевысокороди. Акӑ ҫакӑ ача ӗнтӗ вӑл красноармеец шлӗмне тӑхӑнса ҫӳрекенни,—тесе пӗлтерчӗ салтак. Унтан Андрюшӑн ҫӑлтӑрлӑ ҫӗлӗкне сӗтел ҫине хучӗ.— Акӑ шлӗмӗ те.

Хурчăка пек курпун сăмсаллă, вăрăм майăхлă, кукша пуçлă, чармака куçлă, шатра питлĕ полковник пĕрре çăлтăрлă çĕлĕк çине, унтан ӳсĕр çын пек аран сулкаланса тăракан Андрюш çине пăхса илчĕ.

— Ну, кала! Ăçтан илтĕн ку çĕлĕке эсĕ?—шăлĕ витĕр ыйтрĕ полковник.

— Илмен эпĕ ăна. Вăрмантан тупрăм,—кĕскен ответлерĕ Андрюш юнлă сурчăкне çăтса янă хыççăн.

— Вăрмантан? Кам пăрахса хăварнă-ши ăна унта?

— Пĕлместĕп,—пуçне пăркаларĕ Андрюш.

— Çапла... Пĕлместĕн?—полковник ури çине тăрса, каллĕ-маллĕ утса çаврăнчĕ. Унтан Андрюш умне пырса тăчĕ.

— Пелместĕп, тетĕн? Кала-ха, эсĕ камсене юрататăн. Офицерсене-и е комиссарсене-и?

Андрюшăн, вăйĕ пĕтнипе, пуçĕ çаврăнса кайрĕ. Вăл тăнă çĕртех урайне чĕркуçленсе ларчĕ. Полковник мĕн каланине те лайăххăн илтмерĕ.

— Шыв ĕçтер!—хушрĕ полковник, алăк патĕнче юпа пек хытса тăракан салтака хушса.

— Слушаюсь!— Салтак тулалла хăвăрт тухса, витрепе шыв йăтса кĕчĕ те, пĕр курка тултарса, Андрюшăн çăварĕ патне илсе пычĕ.

Андрюш куркари шыва пĕр канмасăр ĕçсе ячĕ. Çăмăл пек туйăнчĕ. Хăш сывларĕ.

— Ну, кала: офицерсене юрататăн-и эсĕ, е комиссарсене-и?—тепĕр хут ыйтрĕ полковник.

Андрюш ури çине тӳрленсе тăчĕ.

— Никама та юратмастăп,—хуллен каларĕ.

— Комиссарсене те юратмастăн? Апла пулсан мĕншĕн-ха эсĕ вĕсен çĕлĕкне тупса тăхăннă? Мĕншĕн офицерсен картусне тупса тăхăнмастăн?—йĕкĕлтесе ыйтрĕ полковник.

Андрюш пĕр вăхăт чĕнмесĕр шухăша кайса тăчĕ. Унтан кантри татăлнипе анса ларакан йĕмне çӳлерех çĕклерĕ те:

— Хĕрлĕ çăлтăрлă вăл çĕлĕк, çавăнпа эпĕ ăна юрататăп,—терĕ.

Полковник хăйĕн картусне аллине илчĕ:

— Пăх-ха, офицерсен те картус çамки çинче çăлтăр пекки пур. Кăна юратмастăн-им?—тесе картус кокардине пӳрнипе тĕксе кăтартрĕ.

— Вăл çăлтăр мар. Амăрткайăк. Шăвăç татăкĕ,—терĕ Андрюш.

Полковник ачапа шӳт тума хăтланчĕ пулас:

— Ну-ка, офицер картусне тăхăнса пăх. Килĕшет-и сана,—тесе Андрюшăн пуçĕ çине картусне лартрĕ.

Андрюшăн çилли тулса çитрĕ. Вăл пуçĕнчи полковник картусне хывса илчĕ те урайне çĕклесе çапрĕ:

— Мĕншĕн эсĕ мана мăшкăласшăн? Хăвăн кукша пуçна тăхăнса çӳрекен таса мар картусна манăн таса пуç çине лартса çӳссĕр хăварас тетĕн-им!

Картусне çĕре çĕклесе çапсан, полковник çиленсе кайрĕ, Андрюш ăна парăнасла ача марриңе туйса илчĕ.

— Халех илсе тухса, ав, мукаçей кĕлетне хупса лартăр. Çамки тирĕ çине, шлĕм çумĕнчи çăлтăрпа виçсе, çăлтăр касăр. Ыран ирхине кăтартăр,—тесе приказ пачĕ полковник.

— Рады стараться, вашевысокороди,—тесе честь пачĕ салтак, Андрюша аллинчен çавăрса тытрĕ.

— Ан тыт мана алăран! Эпĕ хам та утса тухатăп,— терĕ Андрюш, салтак аллине чышса ярса.

Шăп çав вăхăтра тата икĕ салтак тепĕр çынна штаба илсе пырса кĕчĕç.

Андрюш пуçне çĕклесе пăхрĕ. Вăл хăйĕн умĕнче хайхи вăрманта курса калаçнă пăшаллă партизана курчĕ: „Вĕлермен. Чĕрĕлле тытса килнĕ", тесе шухăшларĕ. „Пичче", тесе чĕнме тăчĕ. Çук, шарламарĕ.

— Ну, ну, ут! Мĕн куçна чарса пăрахрăн!—салтак, Андрюша ĕнсинчен чышкаласа, алăкран кăларса ячĕ.

Партизан ача çине тинкерсе пăхса илчĕ: „Ку ачана мĕншĕн айăпласа тыткăна илнĕ-ши?"—тесе шухăшларĕ. Сĕтел çинче выртакан хăйĕн шлĕмне курсан тин чухларĕ Андрюша мĕншĕн айăпланине. Хăйĕнчен ытла Андрюша шеллерĕ.

— Сволочь! Ачана çапиччен мана çап!—тесе кăшкăрчĕ партизан салтак çине пăхса.

— Ну, ну, хуллентерех. Эсĕ вĕт кунта тайга вăрманĕнче мар,—тесе малалла чышса ячĕ пĕр салтакĕ партизана.

Аллисене хыçалалла туртса çыхнă партизан урай варрине тăсăлса ӳкрĕ.

— А-а.. Ку ватти лекнĕ,—савăнса кулчĕ полковник.

Салтаксем полковник хушнине пурăнăçлама пуçларĕç, Андрюш умĕнчех çĕлĕкне çуркаласа, хĕрлĕ çăлтăрне хăйпăтса илчĕç.

— Ну, ача, тӳс. Кайран атаман пулăн,—терĕ пĕр салтакĕ, Андрюшăн аллисене хыҫалалла ҫавăрса тытса.

Тепĕр салтакĕ хĕрлĕ ҫăлтăрне Андрюшăн ҫамки ҫине хурса, виҫсе пăхрĕ.

— Аван, шăп кĕрсе ларать. Ха-ха-ха!—ахăлтатса кулчĕ.

Андрюш малалла мĕн пуласса кĕтет. Мел пулсан, хăй шухăшĕпе, салтаксене тем туса тăкăччĕ. Анчах вăл ҫамрăк—вуникĕ ҫулхи ача, мĕн тума пултартăр. Салтаксем иккĕн, вăтă, сухаллăскерсем. Вĕсен аллисенче пăшал. Андрюшăн нимĕн те ҫук, пушă алăпа. Кĕсъинче пекĕ пурччĕ. Ăна та туртса илчĕҫ. Ҫав пекĕ пулсан, вăл халех салтаксен хырăмĕсене чике-чике ҫурса, пыршисене-пакартисене юхтарса кăларĕччĕ. Мĕнле намăс марши ҫак салтаксене пĕчĕк ачана асаплантарма?

Салтак, хĕҫ вĕҫĕпе Андрюшăн ҫамки тирĕ ҫине пиллĕк кĕтеслĕ ҫăлтăр каса пуҫларĕ.

Андрюш мĕнле ҫирĕп ача пулсан та:

— Ой! ой!—кăшкăрать. Питҫăмартийĕсем тăрăх шăпăртатса вĕри юн юхса анать.

— Ан ахăр. Ку ҫăлтăр ĕнтĕ ҫĕлĕк ҫумĕнчи ҫăлтăр пек мар, ҫĕтĕлмĕ, кивелмĕ, ĕмĕрпех ҫамку ҫумĕнче ҫакăнса ҫӳрĕ,—мăшкăласа кулать салтак.

Чылай асаплантарсан, Андрюшăн сасси лăпланчĕ. Нумай юн юхнипе, тăнĕ ҫухалчĕ. Малалла мĕн пулнине тĕлĕкри пек ҫеҫ астăвать. Куҫĕ умĕнче сухаллă салтаксем мĕлке пек мĕкĕлтетеҫҫĕ.

Каҫ пулчĕ. Ҫанталăка каҫхи хура сăн хупласа илчĕ. Ялта йытăсем вĕреҫҫĕ. Унта-кунта ҫынсем кăшкăркалани илтĕнет.

Нумай-и, сахал-и вăхăт иртсен, суранлă ҫамки вут пек пĕҫерсе ыратнипе тата ҫунса каяс пек ĕҫесси килнипе, Андрюшăн тăнĕ ҫитсе кĕчĕ. Юн хĕвĕнсе, куҫхупанкисем ҫĕленсе ларнă куҫĕсене пӳрнисемпе тăрмаласа уҫрĕ. Йĕри-тавра пăхкаларĕ: кĕлетре тĕттĕм, нимĕн те курăнмасть, шăшисем ҫеҫ: чик-чик тукалаҫҫĕ. „Чăн-ши ку, тĕлĕк-ши. Ăҫта-ши эпĕ"—шухăшлать. Чухласа илеймест. Аллипе хыпаласа пăхать. Ҫук, тĕлĕк мар, хĕнесе пĕтернипе, ӳт-тирĕ йĕппе чикнĕ пек ыратать. Ҫăвар ăшĕ типсе ларнă. Чĕлхине ҫыртса пĕтернипе шыҫăнса кайнă, ҫăвар, калама та ҫук, ыратать. Ура ҫине тăчĕ. Йĕри-тавра стена. Пĕр вырăнтан ҫеҫ пăртак ҫутă курăнать. Ҫутă патне утса пычĕ. Чухларĕ: кĕлет алăкĕ. Хăмаран

пуранă çӳлĕ пӳлме. Ун ăшĕнче тырă. Андрюш вăрманта тĕл пулнă пăшалла çынна асне илчĕ: „Халĕ мĕн турĕç-ши ĕнтĕ ăна? Ăçта хучĕç-ши? Вĕлерчĕç пулĕ", тесе шухăштарĕ. Кĕлет алăкĕ шăтăкĕнчен пăхрĕ. Тулта пĕр салтак пăшал тытса хурал тăрать: „Мана хураллать ĕнтĕ ку. Мĕнле хăтăлас. Çутăлсан каллех асаплантараç-çĕ ĕнтĕ вĕсем мана", тесе шухăшлать. Çав вăхăтра хăй хыçĕнче пĕр çын йывăррăн сывласа ахлатрĕ.

Андрюш аллисемпе хыпалашса çынна тупрĕ:

— Кам эсĕ? —пăшăлтатса ыйтрĕ.

— Эпĕ, —хăрăлтатрĕ çын.

Андрюш ăна сассинчен палларĕ: вăл хăйне çăлтăрла çĕлĕк паракан партизан пулчĕ.

— Пичче, эсĕ вĕт ку! —хăй те сисмерĕ, чуть кăшкăрса яраччĕ.

— Асту, ытла ан шарла, шăллăм. Хурал тăракан салтак илтĕ, —терĕ партизан хуллен. Унтан вĕсем пăшăлтатса калаçа пуçларĕç. Андрюш хăйĕн çамки тирĕ çине çăлтăр каснине каласа пачĕ.

— Ы-ых, тăшмансем! Ну, ан хуйхăр, Андрюш. Пире вĕлерсен те, хĕрлисем пурĕпĕрех вĕсене çĕнтереççĕ. Ун чухне вара хăйсене те пĕр пек кучченеç пулĕ, —тесе Андрюша ыталаса юратрĕ партизан.

Тĕттĕм çĕр майĕпен шуса иртет. Ял лăпкă мар. Унта та кунта ача-пăчасем йĕреççĕ. Пĕри таçта „хурах!" кăшкăрать.

— Ав, илтетĕн-и, Андрюш, яла çаратаççĕ салтаксем.

— Илтетĕп, —пăшăлтатать Андрюш.

— Андрюш, мĕнле тухса тарас пирĕн ку кĕлетрен?— тет партизан хуллен.

Вĕсем шуррисен тыткăнĕнче, кĕлетре хупăнса лараç-çĕ пулсан та, шанчăкĕсене çухатмаççĕ. Мĕнле те пулсан хăтăлма тăрăшаççĕ. Апла та, капла та пурĕпĕр вилĕм. Вăхăт кĕтмест. Çĕр иртет. Çутăласси çывхарать. Автансем иккĕмĕш хут авăтса ячĕç.

Андрюш аллисемпе хыпашласа пӳлме çине хăпарчĕ.

— Пичче, кĕлет тăррине улăмпа çеç витнĕ. Улăмне çăлса шăтаратăп.

— Шăтар.

Андрюш улăма чаштăртаттарса çăла пуçларĕ. Васкаса ĕçленипе, çан-çурăмĕ ыратнине, вăйĕ пĕтнине манса кайрĕ. Пĕтĕм шухăшĕ: мĕнле те пулсан хăтăлас. Хăй çеç мар, пуринчен ытла унăн партизана çăлас шухăш. Пилĕк

минутран Андрюш кӗлет тӑрринчи улӑма шӑтарчӗ. Малтан пуҫне кӑларса пӑхрӗ. Курать: хӑйсене хурал тӑракан салтак кӗлет ҫумне тӑнӑ та, пӑшалӗн кӗпҫи ҫине таянса, тӗлӗрет.

— Пичче, тухмалли шӑтӑк хатӗр. Кам малтан тухать —тесе ыйтрӗ Андрюш.

— Эсӗ тух, Андрюш. Иксӗмӗртен пӗри хӑтӑлма тивӗҫлӗ эпир. Андрюш, эсӗ хӑтӑлсан, тӳрех вӑрмана, хамӑр курса калаҫнӑ вырӑна кай. Унтан инҫе мар пӗр вар пур. Ҫавӑнта пирӗн партизансен отрячӗ тӑрать. Вӗсем эпӗ шуррисен аллине тыткӑна лекнине пӗлмеҫҫӗ. Яла кайнӑ тесе, кӗтеҫҫӗ ӗнтӗ. Ҫитсенех кунти ӗҫсем ҫинчен каласа пар,—тесе ӡӗрентрӗ партизан.

— Юрӗ, пичче.

Акӑ Андрюш шӑтӑкран тухрӗ. Шурӑмпуҫ ҫӑлтӑрӗ фонарь ҫутнӑ пек ялтӑртатса хӑпарать. Автансем авӑтаҫҫӗ. Ял ҫывӑрать. Тутлӑ ыйӑх вӑхӑчӗ ҫитнӗ. Андрюш, кушак-пек, пӗр сасӑсӑр ҫӗре анчӗ. Салтак сисмерӗ. Вӑл пӑшалӗ ҫине таяннӑ та хӑрӑлтатсах ҫывӑрать. Тен ним сисмесӗрех тӑрса юлатчӗ пулӗ. Анчах, Андрюш, салтак ҫине пӑхса утнипе, курмарӗ те, урлӑ выртакан пӗрене ҫине такӑнса ӳкрӗ. Салтак ыйхинчен вӑранчӗ.

— Стой! Кам ҫӳрет кунта?—кӑшкӑрса пӑшалне пеме хатӗр тытрӗ.

Андрюш сиксе тӑчӗ те, пӗтӗм вӑйне пуҫтарса, тепӗр кӗлет хыҫнелле тапса сикрӗ. Унта ҫатан урлӑ сиксе каҫса, пахчаналла кӗрсе кайрӗ.

— Стой!—салтак Андрюш хыҫӗнчен хӑваласа пырать. Пӑшалӗпе пересшӗн пулчӗ, переймерӗ. Ача таҫта кӗрсе кайрӗ.

Ҫак вӑхӑтра партизаншӑн калама ҫук усӑллӑ вӑхӑт пулчӗ. Вӑл ҫӑмӑлах тарса хӑтӑлчӗ.

Андрюш пӗр еннелле, партизан тепӗр еннелле тарса курӑнми пулчӗҫ. Салтак унталла чупрӗ, кунталла пӑхрӗ, нимӗн те тӑваймарӗ. Тыткӑнри ҫынсене тартнӑшӑн хӑйне айӑпласран хӑраса, кӗлет алӑкне питӗрнӗ ҫӑрине ҫапса ватрӗ те, алӑкне уҫса пӑрахрӗ. Унтан хаяр сасӑпа:

— Хурах! Хурах!—кӑшкӑрса, пӑшалӗпе ҫӳлелле пере пуҫларӗ.

Пӑшал сассине илтсен офицерсем, салтаксем пуҫтарӑнчӗҫ.

— Мӗн пулчӗ?—ыйтаҫҫӗ.

— Ялти мужиксем темиçен пуçтаранса килчĕç те, хама хупăрласа илсе, тытса тăчĕç. Ав, кĕлет алăкне питĕрнĕ çăрана çĕмĕрсе, тыткăнри çынсене кăларса ячĕç. Унтан хайсем те тарса пĕтрĕç,—тесе суйрĕ салтак. Çук, салтак пурпĕрех хăйĕн айăпне пытараймарĕ. Урса çитнĕ полковник наганне туртса кăларчĕ те çавăнтах салтака персе пăрахрĕ.

## VI

Андрюш, пахчасем урлă каçса, анкартисем хыçне тухрĕ. Унтан вăл тӳрех вăрманалла кĕрсе кайрĕ партизанпа курса калаçнă вырăна пычĕ. Пăхкаларĕ. Никам та курăнмасть. Унтан вăл, партизан каланă тăрăх, вар еннелле утрĕ. Тӳсме çук ĕçесси килет, суранĕсем чикĕшсе ыратаççĕ. Курăк çине вăйлă сывлăм ӳкнипе шыва кĕрсе тухнă пек йĕп-йĕпе. Йĕплĕ курăксем çара урисене чиксе ыраттараççĕ. Андрюш ăна пăхмасть. Вăл варалла васкаса анать. „Вар тĕпĕнче шыв пур ĕнтĕ. Пĕр тăраниччен ĕçетĕп,—тесе шухăшлать.—Унтан партизансене шырама пуçлатăп. Пичче хăтăлчĕ-ши?"—хăйпе пĕрле кĕлетрелернă партизана асне илет.

Сасартăк умĕнче курăк чăштăр-чăштăр туса илчĕ. Андрюш хăраса ӳкрĕ. Чарăнса тăчĕ. Мĕн унта? Тен каллех шуррисен салтакĕсем? Андрюш шăппăн итлесе тăрать. Малалла мĕн пуласса кĕтет. Шуррисен салтакĕсем пулсан—халех тапса сикме хатĕр. Кам пĕлет, тен унта партизансем çĕр каçнă? Халĕ ыйхинчен вăраннă. Апла тесен —калаçĕччĕç, сас-чӳ илтĕнмест.

Андрюш çапах та курăк чаштăртатакан çĕрелле хуллен утса пычĕ. Пăхать: унта упа амăшĕ икĕ çурине чĕчĕ ĕмĕртсе выртать.

Андрюш упасене хăратам тесе шутларĕ:

— Уй!—кăшкăрса ячĕ.

Упа амăшĕ мĕкĕрсе икĕ ури çине сиксе тăчĕ. Андрюш патнелле пырать. Ача хăранипе çавăрăнса тарма тăчĕ, курăкпа çыхланса ӳкрĕ. Упа вăрăм-вăрăм ярса пусать. Çурисем хыçĕнчен сиккелесе выляса пыраççĕ. „Шуррисенчен тарса хăтăлтăм. Упа çăварне çитсе лекрĕм",—тесе шухăшларĕ Андрюш. Хăй те сисмерĕ:

— Пулăшăр!—тесе чун-хавалĕпе кăшкăрса ячĕ. Вăрман таçта çити янраса кайрĕ.

Андрюш аран сиксе тăчĕ, йывăç тăррине хăпарса кайма хăтланчĕ. Упа амăшĕ çывăхах çитрĕ. Акă халех турт-

са çурма хатĕр. Шăлĕсене шатăртаттарать, сурчăкне сирпĕтет.

Андрюш йывăç тăррине хăпарма ĕлкĕреймерĕ. Урăх йывăç патне чупса пырса, пытанса тăчĕ. Упа йывăçа малти урисемпе ыталаса тытрĕ.

Çав вăхăтра Андрюш хăйĕнчен инçе мар пĕр çын курчĕ. Ку çын та шĕвреке тăрăллă, хĕрлĕ çăлтăрлă çĕлĕк тăхăннă. Аллине пăшал тытнă.

— Пичче, пулăш! Упа тытать мана!—йăлăнса, чунхавалĕпе кăшкăрчĕ Андрюш.

Партизан пăшалĕпе упа амăшĕн çамкинчен тĕллерĕ те ух! персе ячĕ.

Упа мĕкĕрсе месерле çаврăнса ўкрĕ. Çурисем амăшĕ çине сиксе ларчĕç. Вĕсем амăшĕ ĕмĕртме выртрĕ терĕç курăнать, чĕчĕ ĕмесшĕн нăйкăшаççĕ.

Андрюш пăшаллă çын патне пычĕ.

— Пичче, халĕ те эсĕ пултăн. Унсăрăн вăл мана халех тытса çиетчĕ,—терĕ Андрюш чĕтĕрекен сассипе.

Пăшаллă çын, Андрюшăн юнлă питне-куçне, çуркаланса пĕтнĕ кĕпи-йĕмне курсан, тĕлĕнсех кайрĕ.

— Ара, ачам, сана упа тулларĕ-им?—тесе ыйтрĕ.

— Çук, упа мар. Эпĕ шуррисен аллинчен тарса хăтăлтăм. Вĕсем манăн çамка тирĕ çине, санăн çĕлĕк çумĕнчи çăлтăр пек çăлтăр касса мана асаплантарчĕç. Манпа пĕрле тепĕр партизан пурччĕ. Пĕлместĕп, вăл те хăтăлчĕ, те çук. Хăтăлаймарĕ пулсан, паян вĕлереççĕ ĕнтĕ ăна,—тесе пĕлтерчĕ Андрюш.

— Ав, мĕншĕн упа сана тапăннă. Эсĕ юнлă... Лĕш, эсĕ пĕлекен партизан мĕнле çын вăл?—ыйтрĕ пăшаллă çын.

— Сан пекех, çăлтăрлă çĕлĕк тăхăнса çўрет. Пăшалĕ те пур,—пĕлтерчĕ Андрюш. Унтан вăл ĕç мĕнле пулнине каласа пачĕ.

— Ачам, айта хăвăртрах. Упа амăшĕ вилнĕ. Çурисем амăшне пăрахса ниçта та каймĕç. Вĕсене кайран тирпейлĕпĕр. Леш, санпа пĕрле пулнă партизан вăл—пирĕн отрядран. Ăна хăтарас пулать,—терĕ пăшаллă партизан.

Унтан вĕсем вар тĕпнелле анса кайрĕç.

Хĕвел хĕрелсе тухрĕ, вăрман çинелле кармашса хăпарчĕ. Çанталăкăн чи илемлĕ вăхăчĕ. Йĕри-тавра тĕрлĕ кайăккĕшĕксем юрласа илем параççĕ. Шăна-пăвансем сĕрлесе вĕçеççĕ.

Андрюшпа партизан вар тĕпне анса çитеймерĕç—вĕсен умне шуррисенчен хăтăлнă партизан çитсе тухрĕ.

— Ах, а ҫан хăтăлтăм! Андрюш, эсĕ те кунта ҫитнĕ. Аван! Халĕ ĕнтĕ эпир вĕсене парăпăр,—терĕ партизан.

Унтан вĕсем ҫырмана анса шыв ĕҫрĕҫ те отряд патнелле утрĕҫ.

— Усманов юлташ, эпир сана пĕтĕмпех ҫухатрăмăр. Ялта пурăнать пулĕ тесе, шырама кайма тухрăм,—терĕ упа амăшне персе вĕлернĕ партизан.

— Андрюша тавтăвас пулать. Ҫавă хăтарчĕ мана,—терĕ Усманов.

Андрюш савăнăҫлăн кулчĕ:

— Эпĕ хăтарман сана, пичче, пĕрле хăтăлтăмăр.

## VII

Ывăлĕшĕн хуйхăрнипе Андрюш амăшне вĕҫĕмрен иквиҫ хут тытса пăрахрĕ. Тăнĕ кĕрсен вăл хăйне-хăй тирпейленсе, кравать ҫине выртрĕ: „Ульяна ăҫта ҫӳрет-ши тата? Мĕнле те пулсан пĕлесчĕ, Андрюша мĕн турĕҫши?"—тесе хуйхăрчĕ.

Ҫак вăхăтра пĕр офицер тата икĕ салтак пырса кĕчĕҫ.

— Ну, вată кăркка! Ывăлу ăҫта? Кала тӳррипе! Унсăрăн начар пулĕ!—терĕ офицер кăшкăрса.

Хĕрарăм сиксе чĕтĕрет. Халĕ ĕнтĕ вăл хăйне тытса кайма килнĕ пулĕ тесе хăрать.

— Андрюша ĕнер хăвăр тытса кайрăр вĕт. Ҫавăнтан вара вăл киле таврăнман.

— Суятăн! Ăна мужиксем тарма пулăшнă. Ҫамрăкскер, киле таврăнмасан, ниҫта та кайма пултараймасть. Халех тупса пар!—урине тапса кăшкăрать офицер.

— Акă, ҫутă хĕвел. Суятăп пулсан, халех ҫĕр айне анса каям. Андрюш киле таврăнман,—терĕ Андрюш амăшĕ, офицер ҫине тилмĕрсе пăхса.

Салтаксем ун сăмахне ĕненмеҫҫĕ, ҫуртне айĕн-ҫийĕн ухтарса, Андрюша шыраҫҫĕ. Анчах вĕсен тăрăшни ахалех. Андрюш ҫук.

— Тăр, вată кăркка. Мĕн чире персе выртатăн!—офицер хĕрарăма, уринчен тытса, урайне сĕтĕрсе антарчĕ.

Андрюш ăмăшĕ хаяр саспа кăшкăрса ячĕ те, ҫавăнтах ăна тытса пăрахма пуҫларĕ. Вăл урисемпе тапăртатать, аллисемпе ҫапкалать, пуҫĕпе урайне ҫапать.

Салтаксемпе офицер ахăлтатса кулаҫҫĕ.

— Ну-ка, пĕр витре сивĕ шыв илсе кĕрĕр. Чирне лăплантарар,—терĕ офицер.

Пӗр салтакӗ, хӑвӑрт тухса, пӗр витре сивӗ ҫӑл шывӗ йӑтса кӗчӗ.

— Яр пуҫӗ ҫине!—хушрӗ офицер.

Салтак, ӑнсӑр выртакан хӗрарӑм ҫине сивӗ шыв чашлаттарса сапрӗ.

Хӗрарӑм каллех хутлана-хутлана тапӑртата пуҫларӗ. Ҫак вӑхӑтра Ульяна пырса кӗчӗ.

— Пиччесем, мӗншӗн эсир чирлӗ аннене асаплантаратӑр? Ӑна вӗт тытса пӑрахать,—тесе амӗш умне пырса тӑчӗ Ульяна.

Офицерпе салтаксем тинех ӗненчӗҫ: хӗрарӑм юри тумасть, ӑна чӑнах та тытса пӑрахать. Унтан вӗсем хӑвӑрт тухса кайрӗҫ.

Чылай выртсан хӗрарӑмӑн тӑнӗ кӗчӗ.

— Ульяна, ачам. Мӗн пулнӑ мана?—куҫӗсене уҫса хуллен пӑшӑлтатрӗ вӑл.

— Салтаксем—сӑмахне каласа пӗтерейменрӗ Ульяна, йӗрсе ячӗ.

— Ҫав тӑшмансемех манӑн чуна илеҫҫӗ ӗнтӗ. Андрюш, Андрюша мӗн турӗҫ-ши?—тесе вӑрӑмӑн сывларӗ. Хӑй вилес патне ҫитнӗ пулсан та, ывӑлне асӑнать. Сӑнӗ сапсарӑ сарӑхнӑ. Шӑммисем саланса каясран ӳчӗ ҫеҫ тытса тӑрать. Кӑлкан пек ҫӳҫӗ тӑкӑнса пӗтнӗ, куҫӗсем анса ларнӑ, пӗтӗмпех вилнӗ ҫын сӑнӗ ҫапнӑ.

— Анне, ан хуйхӑр-ха. Пиччепе вӗсем нимӗн те тӑвайман. Вӑл тухса тарнӑ,—тесе амӑшне лӑплантарать Ульяна.

— Ӑҫтан чӑттӑр? Ҫамки ҫине ҫӑлтӑр касна, тет, вӗт. Ҫав ҫӑлтӑрлӑ ҫӗлӗк пиркиех пуҫне ҫирӗ ачам. Таҫтан тупса тавӑрӑнчӗ ҫав ҫӗлӗке?—тесе тарӑхать амӑшӗ.

— Хам куҫпа куртӑм, пиччеве хупса лартнӑ кӗлетӗн алӑкӗ ҫӗмрӗк. Тата тӑрри те шӑтӑк.

— Ӗненместӗп. Суяҫҫӗ вӗсем, тарнӑ тесе. Тарман, вӗлернӗ ӗнтӗ вӗсем Андрюша.

Андрюш амӑшӗн чирӗ йывӑрланать. Вӑхӑт-вӑхӑт вӑл вилес патнех ҫитет.

Ульяна, тӑлӑха тӑрса юласран хӑраса, тапӑлсах йӗрет. Шуррисен салтакӗсем яла ҫаратаҫҫӗ. Пур-и, ҫук-и, ӑна-кӑна пӗлмеҫҫӗ. Пырса кӗреҫҫӗ те:

— Хатӗрле апат!

— Давай эрех!—тесе ҫеҫ ахӑраҫҫӗ.

Ыйтнине тупса памасан, хӗнесе тухса каяҫҫӗ. Ҫак хушӑра миҫе арҫына, миҫӗ хӗрарӑма хӗнерӗҫ пулӗ. Ӑна

шутласа та кăларма çук. Ялта чăх-чĕппе, хур-кăвакалсене хăвармарĕç. Мĕн курнă—тытаççĕ те пусаççĕ. Хуçинех пĕçерме хушаççĕ.

... Тул çутăлас умĕн. Шап тутлă ыйăх вăхăчĕ. Андрюш амăшĕ, тытса пăрахса иртсе кайнă хыççăн, шухăша кайса выртать. „Чĕрĕлейĕп-ши? Пĕрре те пулин Андрюша курасчĕ. Вара вилсен те ÿкĕнмĕттĕм", тесе шухăшлать. Унччен те пулмарĕ, пăшал сассисем: ух! ух! кĕрлерĕç.

— Ульяна ачам. Тăр-ха. Пăх мĕн шавлаççĕ унта?— Андрюш амăшĕ тутлă ыйăхпа çывăракан хĕрне вăратрĕ.

Ульяна тăрса чÿречерен пăхрĕ.

Урампа шуррисен салтакĕсем тараççĕ. Пулемĕт такăлтатать.

— Ачам, камсем переççĕ унта?

— Шуррисене,—пĕлтерет Ульяна.

— Хĕрлисем çитрĕç пулĕ!

Андрюш амăшĕ, чирлĕ пулсан та, чÿрече умне пырса тăчĕ. Тинкерсе пăхать.

Хĕрÿллĕ çапăçу пĕр сехет хушши пычĕ. Шуррисем каллĕ-маллĕ чупкаларĕç. Ялтан тухса тарасшăн пулчĕç. Çук, ăçта пăхнă унта салтаксем, пусса пăрахнă сыснасем пек, юн юхтарса выртаççĕ. Хăшĕ вилнĕ, хăшĕ суранланса пĕтнĕ.

Çутăлчĕ. Яла партизан отрячĕ пырса кĕчĕ. Малта хĕрлĕ ялав вĕлкĕшет. Ав, отряд командирĕ Щетинкин пырать. Унпа юнашар кăвак лаша утланнă Андрюш килет. Андрюшăн пуçĕнче те ыттисенни пекех хĕрлĕ çăлтăрлă çĕлĕк. Аллинче винтовка, пилĕкĕнчен кĕске пăшал çакса янă. Урисенче сăран атă. Паллама та çук, чăн-чăн партизан. Çитменне тата шинель тăхăннă. Суранлă çамкине шурă бинтпа çавăрса çыхнă. Лаши майĕнчен икĕ упа çÿрине вĕренсемпе кăкарса янă. Вĕсем урлă урисемпе лаплаттарса пусса утаççĕ.

— Ха, пăхăр-ха, пăхăр! Леш, упа çÿрисене çавăтса пыраканни, Андрюш тĕслех!

— Çавă—Андрюш!

— Андрюш!—кăшкăраççĕ отряда кĕтсе илекен çынçсем.

Пуринчен ытла ача-пăчасем савăннă. Сиккелесе чупаççĕ.

— Андрюш!

— Андрюш!

Андрюш йĕнер пускăçĕсем çине урисемпе тăрарах, лаши çинче тÿрĕ ларса пырать, кăкăрне малалла каçăртнă.

Ывӑлин ятне илтсен, чирлӗ амӑшӗ те урама тухрӗ.

— Андрюш ачам! Эсӗ чӗрӗ-ҫке!

Андрюш, лашине чарса сиксе анчӗ те амӑшне ыталаса илчӗ.

— Анне!—чуптӑвать амӑшне.

— Пичче!—Ульяна та ыталарӗ пиччӗшне.

— Спасибо сана, амӑшӗ, ҫакӑн пек герой ҫуратса ӳстернӗшӗн—тесе Андрюш амӑшне тавтурӗ Щетинкин. Унтан аллинчен тытса, питҫӑмартийӗсенчен виҫӗ хут чуптурӗ.

— Хӑвӑра тавтапуҫ, ачамсем, манӑн ачама вилӗмрен ҫӑлнӑшӑн,—пӑшӑлтатрӗ Андрюш амӑшӗ.

Халӗ ӗнтӗ вӑл чирлӗ ҫын пек мар, тутисем кулаҫҫӗ, куҫӗсем выляҫҫӗ...

Партизансем, Андрюшпа амӑшне мухтаса:

— Урра! Урра!—кӑшкӑраҫҫӗ.

Тайга вӑрманӗ хыҫӗнчен хевел хӗрелсе тухать.

Ялта савӑнӑҫ.

---

## ÇАПĂÇУ ИРТСЕН

### I

Тӳперен хĕвел хĕртсе пăхать. Çанталăк шăрăх. Таврари ялсем вĕри тусан ăшĕнче пăчăхса лараççĕ. Йĕритавра шăп. Ниçта нимĕн сас-чӳ илтĕнмест. Вăхăт-вăхăт çĕкленсе килекен çил çеç кашласа иртсе урамри тусана пĕр вырăнтан тепĕр вырăна вĕçтерет, çул çинчи çӳп-çапсене каллĕ-маллĕ хăвалаcа çӳрет. Ĕлĕк ял çинче выльăх-чĕрлĕх сасси илтĕнетчĕ, хур-кăвакал какăлтататчĕ, çынсем шавлатчĕç, юрлатчĕç. Халĕ ака пĕр сас-чӳ те илтĕнмест.

— Вилсе пĕтнĕ-ши вара кунта пурте?

Урамра, крыльца умĕнче, икĕ çитĕннĕ хĕр çынсем илтмелле мар мăкăр-мăкăр калаçса тăраççĕ. Куçĕсене хайсем, тусан кĕресрен пулас, умĕсене çыхнă тĕрĕлле чĕрçиттийĕсемпе хуплаççĕ.

Сасартăк ялăн пĕр вĕçĕнчен юланутлă çын мĕлкисем курăнса кайрĕç.

— Камсем-ши кусем?

— Сунарçăсем мар пулĕ-ске?

— Çук, сунарçăсем мар, мĕншĕн тесен çулла сунара çӳремеççĕ, тата вĕшле йыттисем те курăнмаççĕ.

— Апла туй халăхĕ мар-и?

— Çук, туй халăхĕ те мар,—шăпăр - сăрнай сасси илтĕнмест: хушпулла туй арăмĕсем те курăнмаççĕ.

Çапла хуллен калаçса тăраççĕ икĕ хĕр, юланутлă çынсене палласшăн пулса. Анчах нимĕн те уйăрса илеймеççĕ. Паллама та май çук çав, тĕлĕнмелле вăл çынсенчен: тӳсмелле мар шăрăх вăхăт пулсан та, хăшĕ тăла сăхманпа; урисенче—çăматă, çăпата; аллисенче хăшин пăшал, хăшин сенĕк, хăшин çава, хăшин чукмар.

Крыльца умĕнчи хĕрсем ниепле те ăнланаймаççĕ.

— Хайхи, ирĕклĕхшĕн çапăçакансем мар-ши вĕсем?

— Пулĕç те...

Вĕççĕр-хĕрсĕр юланутлă çынсем хĕрсен умĕнчен иртсе ял варринче чарăнчĕç. Вĕсем ку ял çын-

нисем мар, хуласенчен, шахтăсенчен, приискăсенчен, тĕрлĕ ялсенчен пуçтараннă партизансем. Вĕсем Колчак çарĕпе пуянсене пĕтересшĕн. Çавăнпа та, вилĕмрен хăрамасăр, тăван ашшĕ-амăшĕсене, çырла пек илемлĕ ачисене, савнă арăмĕсене, юратнă хĕрĕсене хĕрхенмесĕр пăраха-пăраха хăварнă; хăшĕ икĕ çул, хăшĕ виçĕ çул тăванĕсене курман, çыру та çырман. Тен, вĕсен çемьисене пуянсемпе Колчак салтакĕсем намăсласа, вĕлерсе те пĕтернĕ-и? Тен, вĕсем выçă, çарамас çӳреççĕ-и, тен, тĕрмере пăчланса лараççĕ-и?—Ăна хăйсем те пĕлмеççĕ, калакан та çук...

## II

Хĕвел пĕçертме чарăнчĕ. Ял хыçĕнчен çумăр пĕлĕчĕ хăпарса кăвак тӳпене хупласа илчĕ. Хĕвеланăç енчен сулхăн çил кашласа килчĕ.

Кĕрен лаша çурăмĕ çине сăвăс пек çыпçăнса выртса, çап-çамрăк ача сиккипе сиктерсе килет. Ун хыçĕнче вĕри тусан пĕлĕт пек çӳлелле çĕкленсе юлать; лашин ăмри тăрăх шурă кăпăк çĕре татăла-татăла анать.

Лаши çитсе чаранна-чаранманах вăл тытăнка сассипе васкаса:

— Юлташсем, утланăр лашăрсене, шуррисен отрячĕ çывхарать!—тесе пĕтĕм яла илтĕнмелле кăшкăрчĕ. Ун сасси крыльца умĕнче тăракан хĕрсене те чĕтретсе ячĕ.

Партизансенчен хăшĕсем лашисем çине утланса та ĕлкĕреймерĕç, сасартăк пулемётпа пăшал сасси янтăраса кайрĕ.

— Отряд, ман пата... Шуррисене хирĕç! –кăшкăрчĕ отряд пуçлăхĕ.

Каллех пăшал-пулемет сасси йĕркесĕр шатăртатма тытăнчĕ. Кĕрен лаша çинчи ача сасартăк каялла сулăнчĕ, унтан лаша купарчи урлă пуçхĕрлĕн çĕрелле чикĕнсе анчĕ. Вăл çĕре лаплатса ӳкнипе лаши те хăрарĕ пулас, урам тăрăх, ялăн тепĕр вĕçнелле аçа-çиçĕм пек сиксе иртсе кайрĕ.

Партизансем хăшĕ юланутсемпе, хăшĕ çуран урам тăрăх чупрĕç. Ялăн леш вĕçĕнчен те, ку вĕçĕнчен те пралуксем, урамсем тăрăх пĕр вĕçĕмсĕр пуля шăхăрать.

Ялти çынсем тĕпсакайсене, нӳхрепсене, авăн вучаххисене кĕрсе тулнă, хăранипе вĕсем чĕтресе лараççĕ.

Ялăн анат вĕçĕнче партизансем—пӳртсем, кĕлетсем, çатансем çумĕнче шуррисем сывăхарах çитессе кĕтсе выртаççĕ.

Шуррисем, хырăмĕсемпе шуса, тăватуран упаленсе, ялалла сывхараççĕ. Акă вĕсем яла çитсе кĕчĕç. Картасем, çатансем урлă, йăлт та ялт сике-сике каçаççĕ. Хуралтă хӳтлĕхĕсемпе йăпшăнса чупаççĕ. Пралуксенче, урамсенче вăльт-вальт курăнкалаççĕ.

Партизансем хăйсене палăртмарĕç. Вĕсем, пăшалĕсене, çависене, сенĕкĕсене, чукмарĕсене çирĕп тытса, арăслансем пек тăшман çине сиксе ӳкме хатĕрленсе выртаççĕ.

Шуррисем яла кĕрсе тулчĕç.

Сасартăк пĕр партизан, чукмарне çӳлелле çĕклесе сиксе тухрĕ те, „Урра!“ кăшкăрса, шуррисен çинелле чупрĕ. Ун хыçĕнчен ыттисем те кĕлетсем, пӳртсем, çатансем çумĕсенчен харăс çĕкленсе, тĕрле сасăпа „Урра“! кăшкăрса чупрĕç.

Шуррисем, пысăк йышлă партизансене курсан, хăраса ӳкрĕç, пăшалĕсене пăрахсах каялла чупма пикенчĕç.

— Отряд, пли!— кăшкăрчĕ пĕр сас.

Партизансен енчен пăшал сассисем кĕрлесе кайрĕç. Çавăнтах шуррисен хушшинчен хăшĕ месерле, хăшĕ ӳпне кая-кая ӳке пуçларĕç.

— Пулемёт!—кăшкăрчĕ шуррисен офицерĕ.

— Унччен те пулмарĕ, пулемет мăн саслă хураçи пек такăлтата пуçларĕ.

Шуррисемпе партизансем пăтранчăк шыв пек пăтранса кайрĕç.

Тытăçу пĕр вунă минут хушши тăсăлчĕ. Ăçта пăхнă унта вилеймен салтаксемпе партизансем юн юхтарса выртаççĕ. Ав, пĕр партизан шурă салтака пусса ӳкернĕ те карланкинчен шăлĕпе кăшлать. Лешĕ качака пек çухăрать. Кĕрмешекенсем патне шурă салтак çитсе партизана çурăмĕнчен штыкпа чиксе пăрахрĕ. Ăна курсан, тепĕр партизан хыçалтан чупса çитрĕ те салтака пуçĕнчен чукмарпа çапрĕ. Лешĕ малалла чикĕнсе анчĕ. Партизан шурă салтакăн пăшалне çулăхса илчĕ те малалла чупрĕ.

Партизансем, епле хастарлăн çапăçрĕç пулсан та, çав тĕрлĕ вăйлă хĕçпăшаллă шуррисене çĕнтерейммерĕç. Вăхăтлăха каялла чакмалла пулчĕ.

— Йĕркипе—каялла!—терĕ отряд пуçлăхĕ.

Партизансем пĕрерĕн-икшерĕн, хуралтăсен хÿтлĕхĕпе шуррисенчен уйăрăлса пĕтрĕç, тата тепĕр пилĕк минутран вĕсем хăшĕ юланутпа, хăшĕ çуран ял вĕçĕнчи вăрман хушшине кĕрсе курăнми пулчĕç.

III

Вăл кун темшĕн питĕ час каç пулчĕ. Хĕвелĕн юнлă урамсем, пралуксем çине пăхса тăрассси килмерĕ пулас, çавăнпа хăвăрт шуса кайса хăй вырăнне, савăл пек хĕсĕнсе кĕрсе, курăнми пулчĕ. Уйăх çÿтти пулаканччĕ, кĕçĕр вăл та çук. Вăхăт-вăхăт çеç шыв хумĕ пек кассăн-кассăн шăвакан хура пĕлĕтсен хушшисенчен çич çăлтăр курăна-курăна юлать.

Ял шăп. Юнлă çапăçу хыççăн шуррисен салтакĕсем хырăмĕсене тăрантасшăн чупкалаççĕ. Выçă кашкăрсем пек, çăварĕсене карса, килсем тăрăх ăçта сурăх, хур-кăвакал, сысна çури пуррине шыраса çÿреççĕ. Ăшаланă аш шăрши пĕтĕм ял çине сарăлчĕ.

Салтаксем, котелоксене аш тултара-тултара вутçине çакса янă та апат пĕçереççĕ. Хăшĕсем аша шÿреке патак çине тăрăнтарса шашлык туса çиеççĕ. Апат тунă май, хăйсем темĕн çинчен те калаçаççĕ.

— Хуçисем ăçта кайса пĕтнĕ? Пĕри те курăнмаççĕ-çке?

— Пурте бандитсем май. Ялĕпе, сăпкари ачисенчен пуçласа ваттисене çитиччен, вĕлерсе тухмалла вĕсене, сволăчсене!—терĕ шăлне шатăртаттарса, усăнчăк мăйăхлă, сарă çÿçлĕ шурă офицер. Вăл çак сăмахсене ытла хытă каларĕ. Унăн сăмахĕсем ялăн пĕр вĕçĕнчен пуçланса тепĕр вĕçне çитиччен илтĕнчĕç.

— Вĕсем мар, эсир хăвăр сволăчсем!—терĕ, аллисене чăмăртаса, кăвакара пуçланă ыраш сухарийĕ кăшласа ларакан, çара янахлă пĕр салтак. Хăй урлă мăйăхлă офицер çине ури тупанĕнчен пуçласа пуçне çитиччен пăхса сăнарĕ.

Офицер салтак мĕн каланине ăнланса илеймерĕ. Салтака вăл:

— Чăнах та большевиксем. Вот вĕт сволăчсем,—тесĕ çеç хучĕ.

— Çапла, сиртен урăх сволăч çук ку тĕнчере — терĕ салтак, ĕнсине хыçса.

Çара янахлă салтак калани офицер хăлхине кĕреймерĕ пулсан та, ытти салтаксем ăна ăнланчĕç:

— Хи-хи-хи!.. кулса ячӗҫ вӗсем вӑрттӑн.

Офицер урӑх еннелле пӑрӑнса кайрӗ.

— Илтрӗр-и, мӗн калать? Шухӑшласан, пуҫу ҫаврӑнса кайӗ. Мӗншӗн ҫапӑҫатпӑр-ха эпир хӗрлисемпе?—терӗ ҫара янахлӑ салтак.

— Мӗншӗн? Вӗсем большевиксемшӗн-ҫке!—терӗ теприн, хӗрлӗ сухаллӑскер.

— Большевиксем камсем вара?

— Тӗрмерен тухса кайнӑ вӑрӑ-хурахсем...

— Ха-ха-ха!.. Вӗсем мар, эсӗ ху хурах...

— Мӗншӗн эпӗ вӑрӑ-хурах?—ури ҫине сиксе тӑчӗ хӗрлӗ сухал.

— Мӗншӗнне нумай ӑнлантарса памалли те ҫук. Хӑвах шухӑшласа пӑх. Ак, ку ялта хӗрлисем пулнӑ. Вӗсем вӗт хресченсен выльӑх-чӗрлӗхӗсене пирӗн пек тыта-тыта пусма мар, ҫӑкӑрне те ыйтмасӑр илсе ҫимен. Вӗсенчен хресченсем пытанса ларман, пулӑшас тесе тӑрӑшнӑ. Анчах пире акӑ пӗри те курӑнасшӑн мар. Пиртен хӑраҫҫӗ вӗсем, мӗншӗн тесен эпир вӗсене чӑн-чӑн вӑрӑ-хурахла ҫарататпӑр.

Хӗрлӗ сухал хӑйпе калаҫакан салтак ҫине сивӗ куҫпа пӑхса илчӗ. Ҫаварӗ патне илсе пынӑ аш татӑкне ҫыртма хӑяйман пек пулса, чылайччен хӑй умӗнче тытса тӑчӗ.

— Камсем вара вӗсем?—ыйтрӗ вӑл.

— Вӗсем хамӑр пекех рабочисемпе хресченсем. „Вӑрӑ-хурах" тесе суйса калаҫҫӗ пире офицерсем.

Ҫара янахлӑ салтак пӗр паян ҫеҫ мар ӗнтӗ, офицерсем ҫук вӑхӑтра, ҫакӑн пек сӑмахсем кала-кала парать. Салтаксем шӑппансах итлеҫҫӗ унӑн сӑмахне. Ак халӗ те вӗсенчен нумайӗшӗ, ҫиме пӑрахсах, ӑна ункӑ пек ҫавӑрса илчӗҫ, вӑл каланӑ сӑмахсене ҫӑтса ярас пек итлеме пуҫларӗҫ, хӑшӗсем тата ыйтусем те параҫҫӗ:

— Вӗсем хамӑр пекех рабочисемпе хресченсем пулсан, мӗншӗн-ха апла вӑрҫа пӗтермеҫҫӗ?

— Камсем?

— Большевиксем.

— Большевиксем вӑрҫа пӗтерессе кӗтмелле мар, пирӗн хамӑрӑн пӗтермелле ӑна. Антив, килсе вӑрҫчӑр Колчакпа унӑн офицерӗсем хӑйсем. Вӗсем вӗт большевиксене ҫӗнтерсе, Раҫҫейре каллех ӗлӗкхи йӗрке туса хурасшӑн ҫунаҫҫӗ. Ӗлӗкхи йӗрке тӑвасшӑн та, пире каллех хӑйсен чурисем тӑвасшӑн. Ак мӗншӗн ҫапӑҫатпӑр

эпир. Пирĕн, большевиксене хирĕç мар, хамăрăн офицерсене хирĕç тăрса вăрçмалла.—Çара янах вăрçă кирлĕ марри, вăрçа мĕнле майпа пĕтересси çинчен тата чылайччен ăнлантарса пачĕ. Салтаксем те ăна тăнласах итлерĕç. Анчах сасартăках вĕсен хыçĕнче командир сасси илтĕнсе кайрĕ:

— А-а-а,—эсĕ большевиксен шпионĕ мĕн... Арестовать!..

Офицерсем çара янаха çавăнтах çавăрса илчĕç, ăна сасартăк хăраса ÿкнипе анкă-минкĕленнĕ салтаксем хушшинчен аяккалла илсе кайрĕç.

Шăп çав вăхăтра икĕ салтак пĕр утмăл енне çывхарнă карчăкпа шур сухаллă старике, аллисене хыçалалла туртса çыхнăскерсене, командир патне çавăтса пычĕç.

— Акă, большевиксене тытса килтĕмĕр, ваше благороди. Вĕсем тарса ĕлкĕреймен бандитсене хăйсем патне пытарнă,—терĕ салтаксенчен пĕри, честь парса. Чăх ашĕпе пĕçернĕ яшка çиме ларнă офицер, урлă майăхне шăлкаласа, ури çине тăчĕ те, карчăкпа старик куçĕсенчен шăтарас пек пăхса:

— Аха, çаклантăр-и?.. Рас-стрелять!

Анчах юлашки сăмаха каласа та ĕлкĕреймерĕ, пĕр çамрăк салтак урам тăрăх хашкаса чупса çитрĕ те, салтаксене тĕрткелесе, мала тухса тăчĕ.

— Атте!.. Анне! Эсир мĕнле кунта вара? Шыраса хăшкăлтăм паян сире,—терĕ, карчăкпа старик енне ывтăнса.

— Ах, Васça, вĕлерттереççĕ вĕт...

Ашшĕ, амăшĕ, ывăлĕ ыталаса, чылайччен çăмха пек чăмăртанса тăчĕç. Вĕсене кура, çисе ларакан салтаксем те сике-сике тăчĕç. Пĕр вăхăта пĕтĕм ял шăпланса ларчĕ. Офицер те аптăранă пек пулчĕ, кăшт кутăн-кутăн чакрĕ. Унтан çамрăк салтак çине пăхрĕ те:

— Илсе кайăр кăна та пĕрле!—тесе кăтартрĕ.

Салтаксем хускалмарĕç.

Çамрăк салтак ашшĕпе амăшĕнчен уйăрăлчĕ те вальт çавăрăнса пăшалне ярса тытрĕ, офицер енне сулăнчĕ. Тăвата кĕteслĕ хура штык вĕçĕ шургварди офицерĕн кăкăрĕнчен кĕрсе, çурăмĕ хыçĕнчен тухрĕ.

— Акă, сана „пĕрле!"—терĕ салтак, штыка туртса кăларса.

— Йытта—йытă вилĕмĕ!—терĕç ытти салтаксем те, лăштах сывласа ярса.

Çамрăк салтак хăй чиксе пăрахнă Колчак офицерĕ урлă сиксе каçрĕ те, аллисене çӳлелле çĕклесе, пыр тĕпĕ çурăлас пек.

— До-ло-й во-й-н-у!—тесе кăшкăрса ячĕ.

— Долой войну! Д-о-в-о-л-ь но? Пĕттĕр контрреволюци!.. Тĕп пултăр Колчак!—тесе кăшкăрчĕç темиçе салтак харăсах.

Ку сасă вăрахчен янтраса тăчĕ. Ăна илтсен, тĕпсакайĕнче, нӳхрепсенче, авăн вучаххисенче чĕтресе ларакан ял çыннисем те сике-сике тухрĕç. Вăл сасса ял вĕçĕнчи вăрманта тăракан партизансем те илтрĕç.

Шурăмпуç шуралса килсе хĕвел тухичченех пĕтĕм ял сасăпа янтраса тăчĕ.

IV

Çĕрле. Çанталăк лăпкă. Ăшă çумăр çуса иртсе кайрĕ. Ирхинепе çил шăпах лăпланчĕ. Урамсем, пралуксем тăрăх вĕçекен тусан хăй вырăнне лăпланса выртрĕ. Çырмара шыв шăнкăртатса юхни илтĕне пуçларĕ. Кĕтӳçсем кĕтĕвĕсене сарлака урамсем тăрăх уялла хуса кайрĕç. Хур-кăвакалсем те çырма тăрăх саланчĕç.

Савăнăç çитрĕ. Ĕнер çеç пĕрне-пĕри шеллемесĕр, ылханса, пăшалсемпе перĕшсе штыксемпе чикĕшнĕ салтаксемпе партизансем паян мирлешсе тăвансем пек пĕрлешрĕç.

# ШАХТĂРА

## I

Карательнăй отрядăн салтакĕсем пиртен виçĕ барак урлă çеç выранаçса тăратчĕç. Мĕншĕн вăл карательнăй отряд шахтăра тăнă—эпĕ ун çинчен тĕплĕнех пĕлмен. Анчах, шахтерсем калана тăрăх, вăл отряда ĕçлекенсем забастовка тăвасран сыхлама янă мĕн. Шахта хуçисем чĕнтернĕ пулас... Сыхласса пит лайăх сыхлатчĕç вара, лайăх йытă хуçа килне сыхланă пекехчĕ. Урамра, е ăçта та пулсан шахтерсем иккĕн-виççĕн пуçтаранса калаçса тăнине курсан, çавăнтах салтаксем чупса çитсе:

— Пошел вон! Саланăр! Мĕн большевиксен сăмахĕсене ĕçлекенсен хушшинче сарса тăратăр, вылыăхсем!— тесе кăшкăрса салатса яратчĕç.

Шахтерсем, салтаксем çине шурă куçĕсемпе çаврăна-çаврăна пăхса, тĕрлĕ еннелле саланса пĕтетчĕç... Хуть те мĕнле сыхласан та, шахтерсем вăрттăн та пулин пуçтарăна-пуçтарăна калаçатчĕçех.

— Эх, хăçан çитĕ-ши çав вăхăт?—тесе хăш-ш! сывлатчĕ вара пирĕн атте.

Кашни кун карательнăй отряд салтакĕсем, музыка кĕввипе урисене харăс пусса, урамсем тăрăх:

Соловей, соловей, пташечка,
Канареечка жалобно поет...—

тесе юрласа çӳретчĕç. Урăх юрă пĕлместчĕç те пулас салтаксем. Ялан çав „Соловее" тĕрлĕ май авкалантарса шăрантаратчĕç. Эпир—шахтерсен ачи-пăчисем—вĕсен юррине лайăх вĕренсе çитрĕмĕр. Кашни кун салтакла выляттăмăр. Хĕрачасем, арçын ачасем—пурте пĕрле, тăвăтшарăн-тăватшарăн юнашар тăрса, салтаксем пекех юрласа, урасене харăс пусса, урам тăрăх утса çӳреттĕмĕр. Кĕлешче уралла, сарлака хулпуççиллĕ, манран виçĕ çул аслă Алешка командир вырăнне çӳретчĕ. Алешка хăй манран виçĕ çул аслă пулсан та, пĕвĕ унăн лутраччĕ, çавăнпа та ăна манран çамрăк тетчĕç.. Вăйĕ вара Алешкăн упа вăйĕ пекехчĕ. Ой, вăйлăччĕ!..

— Урăрсене çӳлерех çĕклĕр! Хытăрах пусăр! Кăкăрăрсене малалла мăкăртăр! Янахăрсене каçăртăр! Ать, два! Ать! два, три...—тесе хулăн сассине чĕтретсе кăшкăратчĕ Алешка.

Эпир, ача-пăчасем, çапла çӳренине курсан, шахтăри çынсем каçса кайсах кулатчĕç:

— Ма хĕрачасене хăвăрпа пĕрле сĕтĕрсе çӳретĕр, вĕсенчен мĕн усси пур? Хĕрарăм, салтак пулса, пăшал йатса çӳреме пултараймасть,—тесе мăшкăлатчĕç пирĕнтен.

— Чăнах та, Алешка, мĕн çав утма пĕлмен хĕрачасене хамăрпа пĕрле сĕтĕрсе çӳретпĕр! Атьăр, арçын ачасем çеç салтакла выляр! Вĕсем хĕрача вăййисене выляччĕр. Хамăрах намăс вĕт,—терĕм пĕрре çапла Алешкăна.

— Мĕн калаçан! Эсĕ пĕлместĕним-ха,—партизансен отрядĕнче хĕрарăмсем те пăшал тытса, арçынсемпе пĕр танах çӳреççĕ?.. Ав, леш шурă картуслисемпе хăçан та пулсан çапăçасах пулать. Ун чух хĕрачасем те пулăшма пултараççĕ. Çавăнпа пирĕн вĕсене салтакла вĕрентесех пулать,—терĕ вăл пысăк çын пек ĕнентерсе, пуçпӳрнипе карательнăй отряд салтакĕсем пурăнакан барак еннелле кăтартса.

— Пулĕ,—терĕм эпĕ Алешка сăмахĕсемпе килĕшсе.

— То-тă!..

Чăнах та, Алешка вăл вăхăтра партизансен отрячĕсем çинчен лайăх пĕлнĕ пулас. Унăн ашшĕ 1914-мĕш çул салтака кайнăранпа каялла таврăнман. Ун çинчен шахтăра тĕрлĕ хыпар сарăлчĕ: хăшĕсем—Хĕрлĕ Çарта комиссар пулса çӳрет, хăшĕсем—тайгара партизан отрячĕн пуçлăхĕ пулса çӳрет, тесе калаçаççĕ. Никам та тĕплĕн пĕлекен çук. Эпĕ Алешкăран темиçе хутчен те ыйтнă ашшĕ ăçта çӳрени çинчен, анчах вăл каламастчĕ.

— Кайран пĕлĕн-ха,—теейсе хуратчĕ кĕскен.

Алешка хăй те вăхăт-вăхăт таçта кайса çухалса пурăнатчĕ, унтан каллех шахта таврăнатчĕ.

Карательнăй отряд начальникĕ темиçе хут та Алешкăна хăй патне чĕнсе илсе конфетсем парса йăпатнă, вĕлересси пе, тĕрмепе хăратнă пулас. Анчах Алешка, чеескер:

— Эпĕ нимĕн те пĕлместĕп. Атте вăрçа кайнăранпа таврăнман,—тесе суйнă.

Начальник Алешкăн амăшне те чĕнсе темиçе хут та тĕпчене, вăл та каламан.

Кайран-кайран вара шахтăра: Алешкăн ашшĕ вилнĕ, тесе хыпар сарăлчĕ. Анчах, те вилĕ, те чĕрĕ,—ăна тĕп-

лĕн пĕлекен çук. Алешкăпа амăшĕ хăйсем пермаях савăнăçлă калаçаççĕ.

— Аçу вилнĕшĕн мĕнле хуйхăрмастăн эсĕ?—тесен, вăл:

— Мĕншĕн хуйхăрас ман? Хуйхăрса, вилнĕ çын хыçĕнчен хамăн та вилес-им,—тесе хуратчĕ çеç.

Çапла, Алешка ашшĕ „вилнĕ" текен хыпар сарăлсан Кусиванов та лăпланчĕ пулас. Алешкăпа амăшне чĕнсе тĕпчеми пулчĕ. „Пĕр большевик пĕтрĕ" тесе, чунне лăплантарчĕ пуль...

## II

Час-часах вара, урам тăрăх салтаксем юрласа пынă чух эпир те, ача-пăчасем, хăшĕ хыçалтан, хăшĕ айăккинчен, хăюллăраххисем малтан та тапăлтатса чупаттамăр. Алешка ялан малтан, кăшкăрса пыратчĕ:

— Ать, два-а... Ать, два-а...

— Пăрăн çул çинчен, ура айне пулатăн вĕт!—тесе кăшкăратчĕ урлă мăйăхлă, сарлака купарчаллă, шĕвĕр хулпуççиллĕ фельдфебель...

Пĕрре çапла Алешкăпа вăйăран таврăнатпăр. Карательнай отряд пурăнакан барак тĕлне çитес чух:

— Чим-ха!—терĕ сасартăк Алешка.

— Мĕн пулчĕ?—ыйтрăм эпĕ хăранă пек шарт сиксе ўксе.

— Ав, çав часовойăн пăшалне туртса илетĕп те таратăп, терĕ Алешка, барак алăкĕ умĕнче хурал тăракан салтак еннелле куçĕсене хĕссе кăтартса.

Çаплаччĕ вăл Алешка, пысăкрах ĕç тăвас умĕн куçĕсене хĕскелесе калаçатчĕ. Çавăнпа та ăна шахтăри пуянсен ачисем „жулик" тетчĕç. Мĕн тăвас тен, вĕсем пĕр Алешкăна çеç мар „жулик" тенĕ. Шахтерсене те темĕнле ятсем парса пĕтернĕ... Мĕн каласан та—вĕсен ирĕк, власть вĕсен аллинче...

— Мĕн ухмахланан, епле туртса илме пултаратăн эсĕ ун аллинчи пăшала?—терĕм ĕненмесĕр.

— Ак, пăхса тăр. Туртса илсен, эпĕ сана куçăнтан сурăп, туртса илеймесен, эсĕ ман куçран сур,—терĕ те, кĕлешче урисене тата кĕлещелентерсе, часовой патнелле йăпшăнса пычĕ. Эпĕ барак хыçнерех аякка кайса тăтăм.

Каç пулнă. Тĕттĕмленсе çитет. Урамра çынсем иртсе çўрени курăнмасть. Çанталăк сивĕ пулсан та, алăк умĕнчи часовой кăркка пек пуçне тăлăпĕн çухи ăшне

хутласа чикнĕ те ăшă ыйăха путнă. Эпĕ пĕр çирĕм хăлаçран пăхса тăратăп.

Алешка часовой çумне пырса тăчĕ. Унтан йĕри-тавра пăхкаларĕ те сасартăк пĕтĕм вăйĕпе:—Ух!...—тесе кăшкăрчĕ. Часовой пĕтĕм кăвапипе ялтлатса сиксе ӳкрĕ, аллинчи пăшалĕ аяккалла сирпĕнсе кайрĕ. Çийĕнчен тата Алешка ăна ура явса, чышса ячĕ. Салтак хăма пек лаплатса ӳкрĕ. Çав вăхăтра Алешка салтакăн пăшалне çавăрса илчĕ те, эпĕ те курса юлаймарăм, куç уçса хупиччен бараксен хушшине кĕрсе кайса, курăнми те пулчĕ.

Салтак, сиксе тăрса, унăн-кунăн чупкалать. Пăшалне шырать—çук... Йĕри-тавра пăхать, никам та курăнмасть. Юлашкинчен тăлăпне хывса пăрахрĕ те хăй тĕллĕн:

— Раз-бо о-ой!... Большевиксем вĕлерессĕ! Пулăшăр! —тесе кăшкăра пуçларĕ.

Ун сассине илтсен, баракран салтаксем сике-сике тухрĕç. Пĕр самантрах килкарти тулли салтак тухрĕ. Кăткăсем пек, барак йĕри-тавра чупкалассĕ. Анчах мĕн шыраççĕ—хăйсем те тĕплĕн пĕлмеççĕ.

Часовой текех кăшкăрашать. Ыттисем каллĕ-маллĕ чупкалаççĕ.

Эпĕ салтаксем мĕн хăтланнине тата кăшт пăхса тăтăм та, хама çулăхса ан илчĕр тесе, бараксен çуммипе пĕшкĕнсе килелле утрăм. Карательнăй отряд пурăнакан баракăн килкартийĕ çаплипех кĕрлесе тăрса юлчĕ.

## III

Пирĕн аттен, хуть те ăçтан, хуть те хăçан таврăнсан та, ялан пĕр ыйту: --Мĕн туса çӳрерĕн халиччен?

Паян та ун çав ыйтăвах. Алăкран кĕнĕ-кĕменех:

— Ăçта, мĕн туса çӳрерĕн халиччен? Ыран праçник мар вĕт, ĕçе каймалла,—терĕ. Хăй, чей ĕçнĕ хыççăн плита умне кукленсе ларнă та, кукăр чăпăклă чĕлĕмне тивертесшĕн тутине мăкăртса паклаттарать.

Ун чух эпĕ çамрăк—вуниккĕ тултарса вунвиççĕ çине анчах пуснă пулсан та, иккĕмĕш çул ĕнтĕ шахтăра, аттепе пĕрле ĕçлетĕп.

Атте забойра кăмрăк чавать, эпĕ вăл чавнине вагонетка çине тиесе, ствол умне тĕртсе леçетĕп те, каялла пушă вагонетка сĕтĕрсе пыратăп. Унтан забоя çирĕплетме йывăç крепсем турттаратăп. Çĕр айĕнчи ĕç йывăр, сывлăш чĕрĕ. Каçхине, ĕç пĕтерсе çитмĕл хăлаç тăршшĕ

чикмек тăрăх çӳле улăхса çитиччен, ал-урасем сăрăлтатса чĕтреççĕ. Киле çитнĕ çĕре куç-пуç алчăраса çитет, хамăр пурăнакан барак иккĕллĕ-виççĕллĕ курăнать. Барака кĕрсенех, вырăн çине йăванса кайса, çимесĕрех çывăрас килет. Эх, пурăнăç-и ку!? Пурăнăç мар—тамăк!.. Ав, управляющи, инженер, штейгер, десятник ачисем пирĕн пек мар, вĕсем пиртен аслă пулсан та, ĕçлемеççĕ. Вунçиччĕрен иртнисем нянькăсемпе выляса çӳреççĕ. Хĕле кĕрсен, çырăва вĕренеççĕ, çăва тухсан, курортсене кайса сывлăхĕсене юсаççĕ. Эпир мĕскер? Çырăва та вĕренейместпĕр, курортсене каяймастпăр. Ĕçлетпĕр вăкăрсем пек. Камшăн, мĕншĕн ĕçлетпĕр—ăна хамăр та тĕплĕн пĕлместпĕр... Эпир аттепе иксĕмĕр ĕçлетпĕр, çын пек тумланмалăх мар, хырăмсене тăрантармалăх та аран-аран ĕçлесе илетпĕр.

Атте ку шахтăра вунпиллĕк çул ĕçлет ĕнтĕ. Эпĕ те шахтăрах çуралса ӳсетĕп. Тумтир таврашĕ пирĕн праçникре те пĕр тум—шыв витмен брезент—шахтĕрка.

Атте сывлăхсăр, ӳсĕрет. Те чăнах, те суя: „ӳпки çĕрет" теççĕ. Чăнах пулĕ çав, мĕншĕн тесен хăш чух вара ăнтан кайиччен çăварне карса пăрахса ӳсĕрет-ӳсĕрет те юлашкинчен çăра юнлă-пӳрлĕ сурчăк сурса кăларать. Анне те пирĕн çав „ӳпки çĕрнĕ" чирпе чирлесе вилчĕ. Эпир, çичĕ çулхи Ульяна ятлă йăмăкпа, çур тăлăха тăрса юлтăмăр. Иккĕмĕш çул ĕнтĕ аннесĕрех пурăнатпăр. Атте çĕнĕ арăм туянас тесе калаçкаларĕ те, сывлăхсăрскере качча пыракан хĕрарăм тупăнмарĕ пулас. Халĕ ĕнтĕ авланасса асăнмасть. Ульяна та ӳсет—тăхăр çул çине кайрĕ. Эпир ĕçрен таврăннă тĕле килте мĕн пуррипе апат пĕçерсе хурать.

Çамрăк вăхăт вĕт, ирхи куна каçчен ĕçлесе, йытă пек ывăннă пулсан та, ĕçнĕ-çинĕ хыççăн каллех вăй çитсе кĕрет. Вара ывăннине те манатăн. Тухан та чупатăн урама выляма. Урамра сана кĕтсе тăраççĕ юлташусем... Эх, çамрăк вăхăт вĕт вăл—çуркуннехи чечек пекех-çке, çурăлать те типет...

— Ну, ачасем, атьăр вĕшле йытăсене хĕнеме каятпăр!—тетчĕ вара Алешка, чавсисене тавăрса, аллисене чăмăртаса.

Нумай хĕненĕ эпир вăл управляющи, инженер, штейгер, десятник ачисене. нумай йĕртнĕ, нумай куççуль тăктарнă. Ĕçлемесĕр, сыснасем пек çисе çеç выртаççĕ пулсан та, вĕсем пире хирĕç тăраймастчĕç.

— Сăмсуна шăл, çăварна кĕрет вĕт! Ха-ха-ха...—кулса сăмсисенчен шарт! тивертетчĕ Алешка.

Лешсем вара, çавăнтах тутисене сарса пăрахса, пăрусем пек ĕнĕрлеме пикенетчĕç. Пĕри йĕре пуçласан, пурне те лекетчĕ вара.

Усалччĕ ĕнтĕ вăл, Алёшка, питĕ усалччĕ. Хăй усаллăхĕпе мана та усала вĕрентрĕ. Унпа туслашнăранпа вара пуян ачи-пăчисене пĕтĕмпех курайми пулса çитрĕм. Çавăнпа, ăçта хирĕç пулнă—унта сăмсисенчен çапаттăм та юн антараттăм. Вĕсен пирки атте мĕн чул вăрçнă мана, хĕненĕ! Çук, пурпĕрех чарăнмастăм... Чун чăтмастчĕ,—эпир ĕçлеттĕмĕр, вĕсем пирĕн вăйпа тумланса, сыснасем пек мăнтăрланса пурăнатчĕç.

Çав каç Алёшка часовой аллинчен пăшал туртса илсе тарни çинчен аттене тĕрĕссипех каласа парам,—тесе шутларăм. Тепре шутларăм та—каламарăм.

— Таçта та пулнă пулĕ,—халĕ ниçта та мар ĕнтĕ, килте,—терĕм, çири шахтĕркăна хывса пăрахса.

— Килте? Кашни каç килте? Çурçĕр çитет, эсĕ тин килетĕн! Каллех çав Алёшкăпа çемĕрсе çӳрерĕр пульха? Нумайрах çӳре-ха эсĕ унпа... Вăл сана таçта та чиксе хурĕ,—терĕ те атте ӳсĕрме хатĕрленчĕ.

Сĕтел хушшинче шăвăç куркапа чей ĕçсе ларакан Ульяна ĕçме пăрахса, плита хыçĕнче ларакан кăмрăклă витрене чупса кайса илсе, атте умне лартрĕ. Атте çавăнтах каçса кайса ӳсĕре пуçларĕ. Ульяна нăштик-нăштик йĕрсе ячĕ. Çаплаччĕ вăл пирĕн Ульяна, атте ӳсĕрме пуçласан йĕме пикенетчĕ, мĕншĕн тесен пирĕн анне те çапла ӳсĕрсе ларнă çĕртех йăванса кайса вилчĕ. Çавăнпа атте те çапла вилсе кайĕ, тесе хăратчĕ вăл.

— Ан йĕр-ха, Ульяна, ан йĕр!—тесе йăпатасшăн пултăм.

— Атте вилет вĕт... Курмастăн-им? Вăл вилсен, ăçта кайса кĕрĕн? Анне те çук...

— Вилмĕ-ха, вилмĕ... ӳсĕрĕ-ӳсĕрĕ те—иртсе кайĕ.

Ман пĕлес килет, мĕншĕн-ха вăл, Алёшка, часовойăн пăшалне туртса илсе тарчĕ? Чăнах та, ун ашшĕ вилмен пуль çав! Юри çеç „вилнĕ“ хыпар сарчĕç пулĕ Алёшкăпа амăшĕ. Вăл ашшĕн отрядĕнчи партизансем валли хĕçпăшал хатĕрлет пуль... Чее ĕнтĕ, ытла та чее çак Алёшкăпа амăшĕ.

Ах, питĕ те лайăх-çке пăшалпа çӳреме! Алăра пăшал пулсан, нимĕнле тискер кайăкран та хăрамастăн. Пĕле-

тĕн—вăл сана тытас çук, эсĕ ăна... Çавăнпа та ман Алёшкăна кĕçĕрех курас килет. Ăçта кĕрсе кайрĕ-ха вăл? Мĕншĕн манран пытанчĕ? Тен, тӳрех ашшĕ патне тайгана кайрĕ? Манăн та унтан юлас марччĕ. Пăшал тытса çав карательнăй отряд салтакĕсемпе çапăçасчĕ. Пурăнăç-и ку?.. Е вĕсем—мана, е эпĕ —вĕсене... çук, эпĕ, çамрăкха, манăн вилес килмест, вĕсенех петерес килет...

Атте сывлăш çавăраймасăр ӳсĕрет. Ульяна чӳрече янаххи çине тайăнса ӑăнă та, шывран типĕ çĕре кăларса пăрахнă пулă пек, турткаланса макăрать.

Атте, ăнтан кайса ӳсĕрсе ларсан-ларсан:

— О-ох!.. Сволăчсем! Çавсем пиркиех вилетĕп,—тесе сывлăшне çавăрса, хура юнлă сурчăкне витре çине лачлаттарса сурчĕ.

Эпĕ ăнланса илеймерĕм,—атте пире, Ульянапа иксĕмĕре, вăрçать пулĕ тесе шухăшларăм.

— Ма пирĕн çине ылханатăн? Сан чирӳшĕн эпир айăплă мар вĕт,—терĕм кăмăлсăрланса.

Атте, кăшт тĕлĕнсе, ман кусран шăтарас пек пăхрĕ:

— Ах ачамсем, эпĕ вĕт сирĕн çине çиленместĕп. Ав, леш, буржуйсене,—терĕ ӳкнĕ сассипе...

Атте сăнĕ, кăмрăк пек хура, куçшуррисем сап-сарă. Атте ӳсĕрме чарăнсан, Ульяна та йĕме чарăнчĕ. Вара, вырăнсем сарса, çывăрма выртрăмăр.

Чиркӳ чанĕ вуниккĕ çапрĕ, çурçĕр çитрĕ.

## IV

Ман çумри Ульяна выртнă-выртман, мăш-мăш сывласа, çывăрса кайрĕ. Кăмака çинчи атте темшĕн çывăраймасть, пĕр айăкки çинчен тепĕр айăккинелле çаврăна-çаврăна выртать. Эпĕ, çывăрас тесе, куçсене хупатăп, çук, ниепле те ыйăх килмест. Ман пуçра тĕрлĕ шухăшсем: Алёшка управляющи ачине хĕнет, çапмассерен: „Е-е-е... лекрĕн-и, буржуй чĕппи?.. Улĕмрен пирех пăхăнанха“,—тет. Леш ниçта кайса кĕреймесĕр, çĕлен пек явкаланать. „Пăхăнăп“, тесе каласшăн мар. Шăлĕсене шатăртаттарать. Ав, тата Алёшка часовой аллинчен пăшалне туртса илсе тарчĕ. Леш „разбой“ кăшкăрать. Ăçта пăхнă—унта Алёшка. Йĕри-тавра çапăçу. Ăçта пăхнă—унта çырма шывĕ пек юн тăкăнать. Ав, пăхăр, карательнăй отряд салтакĕсем пĕр шахтера урам варринчех хĕçпе касса пăрахрĕç. Унăн касса татăлман мăйĕнчен шĕрлесе юн юхать.

Çапла, тĕрлĕ шухăша кайса, тĕлĕк курнă пек аташса выртатăп. Чăнах тĕлĕк курап-ши эпĕ? Çук. Чăн-чăн тĕлĕк пулсан, çывăраттăм. Çук, эпĕ çывăрмастăп, хам куççемпе курса, хăлхасемпе итлесе выртатăп...

Сасартăк ура сассисем илтĕнчĕç. Пăртак вăхăт иртсен, барак алăкне шан-шан!.. шаккарĕç.

— Кам унта?—чĕнтĕм хуллен. Çавăнтах: „Алешка мар-ши?" шухăшларăм.

— Уçăр! Питĕрĕнсе выртаççĕ тата сволăчсем!—тенĕ сасă илтĕнчĕ алăк хыçĕнчен.

Çук, Алешка сасси мар, урăх çын сасси.

Вырăн çинчен хăвăрт сиксе тăрса, алăк çаклатнине вĕçертрĕм. Çавăнтах икĕ салтак барака кĕрсе тăчĕç.

— Çут лампуна! Арасланов чăваш çакăнта пурăнать-и? —терĕ пĕри хулăн сасăпа.

— Çакăнта. Мĕн кирлĕ сире манран?—тесе кăмака çинчен кăштăртатса анчĕ атте. Çав вăхăтра эпĕ лампа çутса ятăм.

— Мĕн кирлине хамăр пĕлетпĕр!

Хăйсенчен тӳсмелле мар эрех шăрши кĕрет. Çавăнтах, салтаксем сакайсене, тĕпсакайне, кăмака хыççене ухтарса шырама тытăнчĕç.

— Мĕн шыратăр эсир? Калăр хуть,—терĕ атте йăвашшăн.

— Мĕн шыратăр?! Пĕлмен пулса тăрать тата... Ăçта пытартăн пăшала? Сволăч! Кала! Каламасан, эпĕ сана..—терĕ пĕри, аттен сăмси умне чăмăрне илсе пырса.

— Мĕнле пăшал? Ним те пĕлместĕп,—терĕ атте, хулпуççийĕсене çĕклесе.

— Пĕлместĕн?! Волков ывăлĕ—Алешка—кӳртсе пани мĕн вăл? Ăçта хутăн? Кала! Ак сана...—пĕтĕм вăйĕпе ахлатса аттене янаххинчен çапрĕ. Атте, кутăн-кутăн чакса, алăк янаххи çумне çитсе çапăнчĕ те кĕтесселле кайса ӳкрĕ.

Эпĕ, чупса çитсе, салтакăн аллинчен çакăнтăм:

— Ма çапрăн ман аттене?.. Вăл айăплă мар вĕт кунта. Алешка! Çавна тупса хĕнĕр!..

Салтак мана урипе тапса сирпĕтсе ячĕ. Эпĕ çăмха пек пĕтĕрĕнсе стена çумне пырса çапăнтăм. Урăх вара мĕн пулнине астумастăп, ăнтан кайнă.

## V

Ăн кĕрсе çитсен, куçа уçса пăхрăм. Пуç çурăлса каяс пек тĕрлĕ енчен хĕссе ыратать. Хыпаласа пăхрăм—йĕкĕр

чăмăр пысăккĕш мăкăль хăпарса тухнă. Чул пек хытă, пуссан та путмасть. Ура çине тăтăм, барак алăкĕ яр уçă выртать. Плита кĕрлесе çунать пулсан та, тӳсмелле мар сивĕ. Тайкаланса утса пырса, алăка хупрăм. Пăхкалатăп — баракра атте курăнмасть. Ульяна пĕр хуйхăсăр, чĕреп пек хутланса выртнă та сывăрать. Мĕн пулна? Ним те ăнланса илеймерстĕп. Кăшт çеç, тĕлĕкри пек, астăватăп салтаксем пырса кĕнине, аттене янаххинчен çапнине, хама аларан тытса тапса янине... Çутăлман-ха. Çутăлассии инçе мар ĕнтĕ. Шурăмпуç килни палăрать.

Кăшт тăрсан, аннен аппашĕ — Кĕтерне мăнакка — хм-хм! ӳсĕркелесе пырса кĕчĕ. Ульянапа иксĕмĕре ыталаса тытса, икĕ пĕççи çине лартрĕ те:

— Эх, чĕппĕмсем... пĕтĕмпех тăлăха юлтăр вĕт! Анчĕр çеç çукчĕ. Халĕ ĕнте аçар та çук... Менле пурăнкалăр — тесе, йывăррăн сывласа, ялан ĕçпе çуркаланнă каштăрка аллисемпе пире пуçсенчен шалать. Хăйĕн пĕркеленчĕк куçĕсенчен куççуль, хурăн шывĕ пек пăчăртатса тухса, пирĕн пуçсем çине тумлать.

— Атте ăçта кайнă вара! Кала, мăнакка, кала часрах! — васкатать Ульяна.

Эпĕ, тĕплĕнех мар пулсан та, пĕлетĕп атте ăçта иккенне, çавăнпа шарламастăп. Ăна салтаксем е тĕрмене хупса лартнă, е леш тĕнчене ăсатнă.

Мăнакка йĕнипе Ульяна та йĕрет. Манăн та куçсенчен куççуль тухас пек тăрать. Анчах шăла çыртатăп та чăтатăп. Куççульне кăлармастăп.

„Йĕни мĕн вăл?.. Йĕнипе хуйха пусарас çук. Йĕриччен — кĕрешес пулать. Кĕрешӳпе çеç çын ырлăх курма пултарать" — тетчĕ Алешка. Халĕ ĕнтĕ епе те çапла шутлатăп. Эх, мур пакарти, каçхине кăшт йăнăшрăм... Аттене çапакан салтака аллинчен мар пырса тытмаллаччĕ, çĕçĕ илсе хырăменчен чиксе пырши-пакартине кăлармалаччĕ, тепри хăраса тухса тарнă пулĕччĕ. Вара эпир аттепе тайгана — партизансен отрядне кайса тарса хăтăлнă пулăттăмăр... Халĕ мĕскер ĕнтĕ, чавса çывăх та, çыртма çук... Хаман пуçа шăтарса хăварчĕç, — аттене таçта илсе кайнă, никам та курман, никам та пĕлмест.

— Аçуна, ачасем, карательнăй отряд салтакĕсем тытса кайнă. Ăçта хупнă пуль, пĕлместĕп, — терĕ мăнакка, Ульяна куçĕнчен пăхса. Унтан куççӳлпе шывланнă куçĕсене улача кĕпи аркипе шăлса типĕтрĕ.

— Ма тытса кайнă? Пирĕн атте вĕт вăрă мар,—терĕ Ульяна мăнакка çумнерех сыпăçса ларса.

— Халĕ, ачамсем, вăрасене тивмеççĕ. Рабочисемпе хресченсенех тыта-тыта тĕрмене хупса лартаççĕ, е персе пăрахаççĕ...

## VI

Кашни кун Алешка манпа пĕр сменăра ĕçлекенччĕ. Паян ĕçе тухман, канторкăра куранмасть. Забойщик Артем:

— Алешкăна курмарăн-и?—тесе ыйтать кашни пынă çынран.

— Çук,—кĕскен тавăраççĕ лешсем.

Ĕçе анма вăхăт çитрĕ. Шахтерсем, пурте ламписене сутса, кайлисене, кĕреçисене йатса, кепĕрленсе тухса кайрĕç. Канторкăра эпир Артемпа иксĕмĕр çеç тăрса юлтăмар.

— Аçу ма ĕçе тухмарĕ паян, сывмар-и элле?—тесе ыйтрĕ манран Артем, пурте тухса кайса пĕтсен.

— Çĕрле карательнăй отряд салтакĕсем пырса илсе тухса кайрĕç. Ăçта илсе кайнине пĕлместеп,—терĕм кĕскен.

— Эх, сволăчсем! Шахтерсене пĕрерĕн-пĕрерĕнех пĕтереççĕ ĕнтĕ,—шăлне шатăр! çыртрĕ Артем.—Алешкана та çавсем çавăрса илнĕ пуль,—ĕçе тухмарĕ.

— Пулĕ,—пулмĕ тес çук...

— Мĕн кĕтсе тăрать çав Волков хăй отрячĕпе? Тайгаран тухасчĕ те, çĕмĕрсе такасчĕ йытасене. Эпир те, шахтĕрсем, пулăшаттăмăр,—ку самахсем Артемăн шăлĕсем витĕр хĕсĕнсе тухрĕç.

Эпĕ тин тĕплĕн ĕненьтĕм Алешкăн ашшĕ вилĕ маррине. Халех чупса кайса, аттене тытса кайни çинчен пĕлтерес килчĕ..

— Айта, анар шахтăна, ман откатчик пулăн. Иксĕмĕр ĕçлепĕр,—терĕ Артем, лампине тивертсе.

Çитмĕл халаç чикмек тăрăх Артем малтан, эпĕ хыçалтан, шахтана ĕçлеме ăнтăмăр.

## VII

Иккĕмĕш эрне çине кайре ĕнтĕ,—атте çинчен хыпар çук. Алешка та пĕтĕмпех çухалчĕ, ăçта кайса кĕчĕникам та пĕлмест. Эпир Артемпа иксĕмĕр ĕçлетпĕр. Вал кăмрăк чавать, эпĕ тиесе туртатăп.

Гудок кашни ир уласа ĕçе йăхăрать. Эпир вĕреннĕ ĕнтĕ çав гудок сассипе ĕçе çӳреме...

Ульяна, ĕлĕкхи пекех, эпĕ ĕçрен таврăннă çĕре апатçимĕç пĕçерсе хурать.

Атте пур чух апат çинĕ хыççăн выляма тухса чупаттăм. Халĕ, вылями мар, урама та тухас килмест. Тухсан та, унта илемĕ çук. Алешкăсăр мĕн илемĕ пултăр унта? Пĕтĕм вăйă илемне Алешка çеç кӳретчĕ вĕт. Халĕ вăйăн та илемĕ пĕтрĕ. Алешка çухалнăранпа ачапăчасем пĕтĕмпех вылямa пăрахрĕç. Урамра „вĕшле йытă" тенисем çеç, Алешка çухалнипе савăнса, хуçа пулса çӳреççĕ...

Манăн халь вăйă шухăшĕ мар, урăх: епле те пулсан аттене, е чĕррине е виллине шыраса тупас килет.

Кашни кас тĕттĕм пулсанах тухса каятăп та, арестленĕ шахтерсене хупса лартнă кирпĕчĕ барак патнелле пырса, епле те пулсан чӳречинчен пăхса, аттене кураймăп-ши тесе шухăшласа, каллĕ-маллĕ уткаласа çӳретĕп. Анчах чӳречинчен пырса пăхма мар, барак çывăхне те пыма май çук, алăкĕ умĕнче те, чӳречисем патĕнче те—салтаксем пăшалĕсене хатĕр тытса, каллĕ-маллĕ уткаласа çӳреççĕ. Кăшт çывхара пуçласанах:

— Эй, ан çывхар кунталла, юрамасты!—тесе кăшкăраççĕ хуралçă салтаксем.

Алешка пулсан, вăл епле те пулсан чӳречерен пырса пăхса, атте пуррипе çуккине пĕлетчĕ ĕнтĕ, анчах вăл çук. Ăçта кайса çухалчĕ-ши?—тесе шухăшлатăп та, каялла, баракалла çаврăнса утатăп. Хуйхă. Тӳсме çук хурлăх...

Çывăрма выртсан та, ыйăх килмест. Ирхине ирех ĕçе тăрса каятăп. Ĕçрен ӳсĕр çын пек каллĕ-маллĕ сулкаланса таврăнатăп.

Çапла, йывăр саманан хуйхăллă кунĕсем тулă чусти пек татăлмасăр чăсăлатчĕç. Вăхăт-вăхăт таман тухса, урнă йытă пек кĕрлекен çанталăкпа тулăшатчĕ. Барак сивĕ тытнă пек чĕтресе ларатчĕ. Алăкран, чӳречесенчен вăшăлтатса сивĕ çил кĕрет. Урай варринчи плитара пĕр чарăнмасăр çĕр кăмрăкĕ çунсан та, ăшăна пĕлмест барак.

## VIII

Аттене илсе кайнăранпа, хăраса ан пăсăлччăр тесе пуль, пирĕн пата кашни каçах мăнакка выртма пыра

пуçларĕ. Калаçма пит юрататчĕ вара. Мăнакка çывăрса кайиччен калаçаттăмăр. Ульяна та эпир калаçнине тахçанчченех итлесе выртатчĕ.

Пĕр каçхине, çапла шакăлтатса калаçса выртнă чух, сасартăк карательнăй отряд салтакĕсен пысăк барабанĕ пек: Тра-та-та!.. Ту-ту-ту-у!—кĕрле пуçларĕç урамра тĕрлĕ сасасем.

— Ах, турă çырлах! Мĕн пулчĕ ку? Шахта ишĕлсе анчĕ-шим?—сиксе тăрса сăхсăха пуçларĕ мăнакка. Хăй пĕрре кăвакарса, тепре шуралса каять.

Сиксе тăрса чӳречерен пăхрăм. Урам тулли халăх унталла та кунталла чупкалать.

— Пуçланчĕ пулас.

— Мĕн пуçланчĕ?

— Забастовка!

— Мĕнле пастовка? Ăçта?..

— Пастовка мар, мăнакка,—забастовка,—терĕм, мăнаккан йăнăш сăмахне тӳрлетсе.

— Камсем?

— Камсем пулччăр, шахтерсем.

— Апла пулсан, тинех хĕрлисен саккунĕ çитет пулĕ. Вăл саккунпа шахтерсене пит çăмăл пулмалла, теççĕ, аçу та çапла калатчĕ.—Шахтăра—çĕр айĕнчеултă сехет ĕçлемелле, çӳлте—сакăр сехет, тетчĕ.

— Ай! Пăшалпа переççĕ!—чĕтресе, мăнакка çумне çыпăçать Ульяна.

— Ан хăра, пире пемеççĕ вĕсем. Карательнăй отряд салтакĕсемпе пысăк хырăмлă буржуйсене, тесе йăпатма тытăнтăм Ульянана. Ман баракра ларас килмест, çие шахтеркана тăхăнтăм..

— Ăçта тухатăн, ачам, пăшалпа перĕшнĕ çере? Ансăртран пуля çитсе лекĕ те, е суранлĕ, е вĕлерĕ... Тем курса тăрăн. Турă хăех сыхлатăр—тесе чарасшăн мана мăнакка.

Çук, эпĕ хăрамастăп, урама тухасах килет. „Ах, пăшал çук. Пăшал пулсан эпĕ те забастовщиксене пулăшăттăм"—тесе шухăшлатăп хам ăшра. Чăтса тăраймарăм. Алăка яр-р! уçса, тулалла тухса кайрăм.

Урам тăрăх урлă та пирлĕ хăшĕ çуран, хăшĕ юланутпа чупкалаççĕ.

— Ав, тарать!

— Тыт...

— Ак кунта!

— Е-е-е .. лекрĕн-и?..

— Ак сана, пысăк хырăма!—тесе тĕрлĕ сасăсемпе кăшкăрашни пĕтĕм шахтăна хупласа хучĕ.

Çилсĕр, лăпкă сывлăшра пулясем вĕçсе ирте-ирте каяççĕ пуç урлă.

Эпĕ ниçталла кайма пĕлмесĕр, пĕр вырăнта тапăртатса тăратăп.

— Эй, пăрăн, юлташ! Мĕн çул çинче упа пĕк хытса тăратăн, таптаса каятăп вĕт!—тенĕ сасă илтĕнчĕ хыçалтан.

Çавăрăнса пăхрăм, хыçра юланутлă çын тăра парать.

— Кам ачи эсĕ?—ыйтать юланутлă çын.

— Арăслан ывăлĕ—Хĕветĕр.

— Арăсланов ывăлĕ. Эх, телейсĕр, ачам. Аçун пуçне çирĕç пулас йытăсем. Çитсе ĕлкĕреймерĕм... Ну, ан хуйхăр, халĕ ĕнтĕ хамăрăн влаç, пурăнапăр,—терĕ те вăл, лаши çинчен пĕшкĕнсе, аллипе хулпуççинчен çупăрларĕ.

Вăл мана çупăрланине кура эпĕ хăюллантăм.

— Эсĕ Алешка аппĕ мар-и?—тесе ыйтрăм унтан.

— Çавă, ачам,—Волков эпĕ.

Эпĕ тем пекех савăнса кайрăм. Алешка та отрядпах килнине шанса, вăл ăçтине ыйтрăм.

— Ăçта пултăр вăл, ав, малта, карательнăй отряд салтакĕсене турать,—тесе урамăн çӳлти вĕçнелле кăтартрĕ аппĕ.

Унăн пилĕкĕнчи чĕн пиçиххийĕ хушшинче икĕ кĕске пăшал, аллинче—хĕç.

— Пичче, пар мана пĕр кĕске пăшална, эпĕ те Алешкăна пулăшам.

— Ме, асту, ан çухат, хытă тыт.

Пăшал алла лексен, пĕтĕм вăйпа чăмăртаса тытрăм та çынсем кăшкăрашнă еннелле чупрăм.

Астумастăп, ура айĕнче те çĕр пурччĕ... те çукчĕ.

Тĕлĕкре мар.., чăн-чăнах урам тăрăх кайăк пекех вĕçрĕм...

---

## ÇУЛĂМ ВИТĔР

### I

Çанталăк кĕркунне енне сулăннă пулсан та, çаплах кĕрлеттерсе аслати авăтать, йăлтăр та ялтăр çиçĕм çиçет, шарлаттарса аçа çапать, витререн тăкнă пек çумăр çăвать.

Çĕрле. Тĕттĕм. Йĕри-тавра ним те курăнмасть. Ура айĕнчи çумăр шывĕ çеç тăхлан тĕслĕ кăваккăн çутăлса выртать. Тата, вăхăтран-вăхăт çиçĕм çиççе, пĕтĕм тĕнчене йăлтăр! çутатать те каллех тĕттĕмленет.

Çак тĕттĕм те хăрушă çанталăка пăхăнмасăр, икĕ арçын, пĕр хĕрарăм Том шывĕ патнелле чупаççĕ. Пĕр арçыннин аллинче винтовка, тепĕрин аллинче наган; хĕрарăмĕ, йывăр çын пирки, аран-аран чупать. Хыçала тăрса юла пуçласан, ăна арçыннисем кĕтсе илеççĕ. Вĕсене виçĕ юланут—казаксем хăвалаççĕ. Анчах тараканнисем, çĕр тĕттĕммипе пытанса, юланутлă казаксенчен ăнăçлăн хăтăлкаласа пыраççĕ.

Чупсан-чупсан, çуран çынсем Том шывĕ хĕррине çитрĕç. Хĕрарăмĕ тӳрех шыва кĕрсе кайма тăчĕ. Ăна пĕр арçынни тытса чарчĕ:

— Асту, Тамара, шыва ан кĕр! Юхса каятăн. Ав, унта кимĕ пур...

Казаксем те лашисемпе сиктерсе çитни илтĕнет. Тата виç-тăват минут е ик-виç минут—вĕсене çавăнтах хуса çитсе тытма пултараççĕ. Çуран çынсем васкасах кимме шыва сĕтĕрсе анчĕç. Анчах, ишме кĕсменсем çук.

— Мĕнпе ишес? Сан пăшаллунта патрон пур-и?—тесе ыйтрĕ пери.

— Тата иккĕ пур.

Казаксем вĕсем патнеллех пыни илтĕнет. Лаша ури сассисем çывăх.

Акă вĕсен лаши мĕлкисем мăкăльтетни те палăрать.

— Çитеççĕ!..

Акă виçĕ юлташ хыпалансах кимĕ çине ларчĕç те, кимми хумлă шыв çинелле шăвăнса кĕрсе кайрĕ. Виç-

çĕнрен пĕри, кĕсмен вырăнне пăшалсене кĕпçисенчен тытса, вĕсемпе авăсмашкăн тытăнать.

— Халĕ ĕнтĕ хăрушă мар, шывра эпир вĕсен аллине лекес çук,—терĕ пĕр арçынни.

Казаксем, лашисем çинчен сике-сике анса, çыран хĕррине чупса пычĕç.

— Каларăм сире: вĕсем вилсен те чĕрĕлле парăнас çук, тесе. Итлемерĕр! Халĕ ĕнтĕ, ав, тытăр!—терĕ пĕри.

— Перес—терĕ иккĕмĕшĕ.

Казаксем кăшт çеç палăракан кимĕ çине кĕрĕслеттерме тытăнаççĕ. Пăшал сасси пулсанах, кимĕ çинчисем кимĕ тĕпне тăсăла-тăсăла выртрĕç. Пульăсем кимĕ урлă шăхăрса иртсе каяççĕ е шыва çапăнса чăмплатаççĕ.

Çумăрпа хутăшлă сулхăн çил çĕлен пек шăхăрса тулашать. Çыранри шыв, ниçта кайса кĕме пĕлмесĕр, кăпăкланса, сиксе хумханать. Шыв çинчи кимĕ, пĕрре хумсем хушшинелле путать, тепре çӳлĕ хумсем тăррине çĕкленет. Анчах халĕ ăна тĕттĕмре казаксем курмаççĕ ĕнтĕ. Çиçĕм çиçсе çутатсан, кимме кăшт курсан çеç вĕсем ун еннелле пăшалсемпе переççĕ.

— Ну ĕнтĕ, вĕсем пурĕпĕр хумсем хушшинче пĕтеççĕ: пуля лекмесен те, шыва путса вилеççĕ,—тет пĕр казакĕ.

— Шыва путарса вĕлертĕмĕр, тейĕпĕр штабра,—хушса хурать тепри.

— Юрать,—килĕшеççĕ ыттисем.

Ĕçĕ тухман казаксем, кашниех пĕрне-пĕри айăплă пек шутласа, пĕр-пĕрин çине çилĕллĕн пăхса илчĕç те, лашисене утланса, килнĕ çулпалах каялла кустарчĕç.

II

Кимĕ, хумсем хушшинче чӳхенсен-чӳхенсен, шыв варринчи пĕр утрав хĕррине çитсе чарăнчĕ.

— Халĕ ĕнтĕ хăтăлтăмăр пулĕ, тухса канар çакăнта. Малалла мĕн тумалли курăнĕ,—терĕ Карачăм кимĕ çинчен анса.

Çумăр кăшт лăпланчĕ. Анчах çил çавах ахăрса тулашать.

Аршăн çӳллĕш урнă хумсем купан-купан утрав хĕррине çитсе çапăнаççĕ.

— Кунта эпир пурĕпĕр канлĕх курас çук. Атьăр çыраннăн тепĕр хĕррине тухар,—терĕ Карачăм арăмĕ Тамара.

— Чимĕр-ха. Халех юрамасть. Унта казаксем, сыхласа тăрса, хамăра тытса илме пултараççĕ. Пирĕн вĕсене хирĕç тăма вăй çук. Пăшалсенче пĕрер патрон çеç юлнă,— тавăрчĕ Карачăм арăмĕн сăмахне хирĕç.

Вăйлă çумăрпа шыв тулнăçемĕн тулать. Пĕчĕк утрав çинче йĕри-тавра пилĕк хăлаç çеç типĕ вырăн тăрса юлать. Унта та вăхăт-вăхăт хум çитсе çапса, çынсене чĕркуççи таран шыва путарать.

— Капла шывра йĕпенсе тăриччен, атьăр кимĕ çине ларар та ăна пĕр-пĕр йывăç çумне кăкарса хурар. Çутăла пуçласан ăçталла каймалливе курăпăр унта,— терĕ Кавруш. Çав вăхăтрах вăйлă хум çитсе çапрĕ те киммe юхтарса кайрĕ.

— Кимĕ кайрĕ!—виççĕшĕ те харăс кăшкăрса ячĕç. Хыçалтан хуса тытма тăчĕç,—çук, шывĕ тарăн. Кимĕ, пăхса тăнă çĕртенех хумсем хушшине кĕрсе кайса, курăнми пулчĕ.

Тамара ирĕксĕрех нăштк-нăштк йĕрсе ячĕ:

— Казаксен аллинчен хăтăлтăмăр. Халĕ акă шыва путса вилетпĕр,—хăй тĕллĕн калаçса илчĕ вăл.

— Вилмесĕрех шанчăка çухатас мар-ха. Атьăр, ак çак йывăç çине улăхса ларар,—терĕ Карачăм, пĕр лăпсăркка туратлă йывăç патне пырса.

Тамарăпа Кавруш та унта утса пычĕç.

— Улăхăр!

Малтан Тамарăна хăпартса лартрĕç. Унтан Каврушпа Карачăм иккĕшĕ те, йывăç тураттисем çине улăхса утлана-утлана ларчĕç.

Хура чатăр пек тĕттĕм çĕр çанталăка талккăшĕпех хупласа тăрать. Çил ш-ши-и-и! шăхăрса çанталăкпа тулашать. Хумсем хаяррăн шавлаççĕ...

## III

Кĕçĕр каç çеç вĕт-ха, хĕвел анса тĕттĕм пулсан, Кавруш ĕçрен таврăннă май Тамара инкĕшĕ патне кĕрсе тухма шутланă пулнă. Ăна хирĕç ушкăн çамрăк шахтерсем юрласа пынă:

Камшăн, мĕншĕн-ха вăрçаççĕ?
Чехсемпе ма явăçаççĕ?
Ăнланмаççĕ, теççĕ-ши,
Пурте суккăр теççĕ-ши?..

Ку юрра шахтăра вырăссем те, тутарсем те, чăвашсем те юрлаççĕ. Уншăн айăпласа миçе çынна тĕрмене

хупса лартса, миçе çынна шомпăлпа çапман-ши? Халăха юрлама чарасшăн. Çавах та ăна юрлать халăх. Пĕрри те хăрамасть. Ăçтан тытса чаратăн ăна? Халăх вĕт вăл вăйлă. Чарăнас вырăнне пушшех кăшкăрса юрлаççĕ. Çавантах чех салтакĕсемпе казаксен атаманĕсем те çӳреççĕ, анчах ним те тума пултараймаççĕ.

... Кавруш кайлипе тимĕр кĕреçине хулпуççи урлă хурса, сылтăм аллипе шахтер лампине тытса, кукăрмакăр урампа, бараксен хушшинчи пылчăк çийĕпе чĕркуççи таран ашса пынă. Шултăра çумăр пĕрчисем питçăмартинчен çăт та çат! çапăнна, çийĕнчи брезент пиншакĕпе пуçĕнчи сарлака çунатлă шĕлепки тăрăх шăпăртатса шыв юхнă. Такам хурлантарнă ăна кеçĕр, унăн сăнĕ салхуланнă. „Татах лекес мар“ тесе унталла-кунталла пăхкаласа тем çинчен шухăшласа пынă вăл.

— Хăçан вăхăт çитĕ!?—хăй тĕллĕн мăкăртатса калаçнă Кавруш.

Тĕве курпунĕ пек аванса аннă тăрăллă кивĕ барак тĕлне çитнĕ Кавруш. Баракăн çĕмĕрĕлсе пĕтнĕ чӳречисенчен шăши куçĕ пек лампа йăл-йăл çунни курăнна. Кавруш хай те сисмен, тăп чарăннă. „Мĕншĕн çывăрмасть-ха ку инке? Кĕрсе тухам-ха. Карачăм пиччерен хыпар-хăнар çук-ши?“—тесе шухăшланă. Пырса тĕкнĕ вăл барак алăкне. Алăкĕ уçăлман. Шалтан çаклатнă пулнă ăна. Чăмăрĕпе шак-шак-шак! шакканă алăкран.

— Кам унта?—илтĕннĕ шалтан хĕрарăм сасси.

— Эпĕ. Уç-ха алăка, инке,—тенĕ Кавруш хуллен.

Тамара алăка шăлтăр-шалтăр уçнă та Кавруша кĕртнĕ.

— Мĕн эсĕ çумăр витĕр йĕпенсе çӳретĕн?—тенĕ ăна Тамара, алăкне ерипенрех хупма тăрăшса.

— Ĕçрен таврăннă май кĕтĕм,—тенĕ Кавруш, кайлипе тимĕр кĕреçине кĕтессе тăратса.

## IV

Баракра çĕрĕк мачча хăмисем хушшинчен шăпăртатса тумла юхнă, çĕмрĕк чӳрече куçĕсенчен вăшлатса çил кĕнĕ.

— Каç пулвă-пулманах хăраса питĕрĕнсе ларатăн-им эсĕ?—тенĕ Кавруш тĕпелелле иртсе.

— Хăрамасăр! Карачăм пиччӳ шахтăран тухса кайнăранпах кашни каç сыхлаççĕ, вĕт. Чӳречерен киле-киле пăхаççĕ. Ак паян-ыранах хама та тытса кайĕç, тесе хăраса çеç пурăнатăп. Çавăнпа, çывăрма выртсан та, лампăна сӳнтерместĕп,—тенĕ Тамара чĕтрекен сассипе.

— Казаксем юна ёçни çитмен, халĕ тата чехсем килчĕç ĕнтĕ. Паян эпĕ те вĕсен саламатне тутантăм,—тенĕ Кавруш кăмăлсăрран пулса.

— Мĕншĕн хĕнерĕç тата?—пӳлсе ыйтнă Тамара.

— Мĕншĕн? Нимĕншĕн те мар. Шахтăран ĕç пĕтерсе тухрăм та килелле май утса пыратăп. Çумăр çăвать. Çĕр тĕттĕм. Хам та сисмен, патнех çитсе перĕннĕ мĕн. Пуçа çĕклесе пахрăм—чех офицерĕ тăра парать. Ним каламасăрах, саламатне ярса тытрĕ те пуç урлă çатлаттара пуçларĕ. Куçран йăлтăр-ялтăр хĕлхем тухса сирпĕнчĕ. Татах лекетчĕ пуль, аран тарса хăтăлтăм. Хыçран наганпа печĕ. Юрать çĕрĕ тĕттĕм, лекмерĕ—тенĕ Кавруш, çиллипе аллисене çатăртаттарса чăмăртанă май.

Пĕр вăхăта вĕсем пĕрне-пĕри сăмах чĕнмесĕр шухăш ăшне путса ларнă. Унтан Кавруш алăкĕн-тĕпелĕн уткаласа çаврăннă та:

— Ăçта çӳрет-ши ку Карачăм пичче? Пĕлесчĕ те манăн, ун патне вĕçтересчĕ. Кунта, эпĕ унăн тăван шăллĕ иккенне пĕлсен, мана е тĕрмене хупса лартĕç, е персе пăрахĕç,—тенĕ.

— Шахтăран тухса кайнăранпа нимелле хыпар-хăнар та çук ун çинчен,—тенĕ Тамара ассăн сывласа.

Кавруш чӳречерен пырса пăхнă. Таçта инçетре йытăсем вĕрни тата юрланă сасăсем илтĕннĕ. Çумăр чашлаттарса çунă. Йăлтар-ялтăр çиçĕм çиçнĕ. Çĕре чĕтретсе аслати авăтса янă. Çав вăхăтрах чӳрече умĕнчен пĕр мĕлке иртсе кайнă. „Хайхисем сыхласа çӳреççĕ",—тесе шухăшланă Кавруш. Чӳрече умĕнчен пăрăнса танă. Çамрăк чĕри кăкăрĕнчен сиксе тухас пек тапнă.

— Кам пулчĕ-ши?—тесе ыйтнă Тамара хуллен.

— Лешсем ĕнтĕ сыхлаççĕ. Тухса тарас. Унсăрăн хама та тытса илĕç,—тенĕ Кавруш алăк патнелле утса.

— Ах, хăратăп эпĕ, ывăлсам! Ан кай, кĕçĕрлĕхе кунтах çывăр, тесе йăлăннă Тамара.

Кавруш баракран тухса кайма ĕлкĕреймен, алăка шак-шак шаккани илтĕннĕ.

— Лекрĕм,—хăй тĕллĕн каласса илнĕ Кавруш.

Тамара алăк патне хăвăрт утса пынă та:

— Кам унта?—тенĕ хуллен.

Кавруш, алăкран тухса тарма май килменнине, чӳречерен тухса вĕçме хатĕрленнĕ.

— Ку эпĕ, Тамара. Уç хăвăртрах!—хуллен сасă илтĕннĕ тултан.

Тамара, пĕрре хăранипе, тепре савăннипе, алăк питĕркĕчне веçерсе яраймасăр тăнă, аллисем сивĕ тытнă пек чĕтренĕ.

— Хăвăртрах уç!—васкатнă сасă.

Ку сасă – Карачăм сасси пулнă. Ăна Кăвруш та, Тамара та палласа илнĕ.

— Пичче ку,—тенĕ тухса тарма хатĕрленнĕ Кавруш. Вăл хыпалансах алăк питĕркĕчне вĕçерсе янă.

— Карачăм!—савăнăçлăн кăшкăрнă та Тамара упăшкине мăйĕнчен ыталаса илнĕ.

## V

Карачăм шахтăран тухса кайни час уйăх çитет ĕнтĕ. Казаксем, тин çеç çурхи чечек пек шăтса тухнă совет влаçне çĕмĕрсе тăкса, шахтăна хăйсен аллине илнĕ вăхăтра Карачăм Хĕрлĕ Гварди отрячĕн командирĕ пулнă. Казаксене шахтăна кĕртесшĕн мар пулса, вăл хăйĕн отрячĕпе виçĕ тавлăк çапăçнă. Казаксем çĕнтерсе илнипе унăн шахтăран тухса каймалла пулнă. Урса çитнĕ казаксем шахтăна виçĕ енчен çавăрса илнĕ.

Карачăм хăйĕн отрячĕпе Том шывĕ еннелле чакнă. Унтан, кимĕсем çине ларса, шывăн тепĕр еннелле каçса кайнă.

Шахтăна казаксем йышăнсан, унта мĕн пулнисене Тамара хăй куçĕпе курса пурăннă. Пĕрре унăн куçĕ умĕнчех казаксем пĕр суранлă хĕрлĕгвардеецa персе пăрахнă.

— Эсĕ кам, большевик-и?—тесе ыйтнă унран урлă мăйăхлă казак атаманĕ.

Хĕрлĕгвардеец сăмахпа мар, пуçне çеç суллану.

— Расстре-лять!—тенĕ атаман, шăлĕ витĕр сăрхăнтарса.

Пăшал сасси сывлăша чĕтретсе ухлатнă. Хĕрлĕгвардеец, касса янă йывăç пек, месерле кайса ӳкнĕ. Юлашкинчен те пулсан:

— Ых, ташмансем!—тесе кăшкăрнă вăл.

Шахтăна шуррисем илсен, унта виçĕ кун, виçĕ çĕр пĕр чаранмасăр пăшал сасси кĕрленĕ.

„Мĕншĕн Карачăм мана хăйпе пĕрле илсе каймарĕши? Унпа пĕрле кайнă пулсан, çак хăрушлăха та курмăттăм"—тесе ӳпкелешнĕ вăл текех.

— Аран-аран пытанкаласа килтĕм. Ăста çитнĕ унта казаксемпе чехсем çеç пăшалĕсене йатса çӳреççĕ,—тенĕ Карачăм, сывлăшне çавăрса ярса.

— Эсĕ шахтăран тухса кайнăранпах шуррисем кăткă пек вĕркеççĕ. Малтанах казаксем çеçчĕ. Халĕ ĕнтĕ чехсем килсе тулчĕç,—тесе пĕлтернĕ ăна Тамара.

Карачăм хулпуççи урлă çакнă винтовкине хывса илсе стена çумне тăратнă. Унтан Кавруша алă панă:

— Ну, мĕнле пурăнатăн? Ĕççем мĕнле пыраççĕ?

— Начар. Паян чут персе пăрахатчĕç. Аран тарса хăтăлтăм,—тенĕ Кавруш, тарăнăн сывласа.

— Эсĕ халь пуçăнтан шăлса ачашласса кĕтетĕн-и? Çук, вăл пулмĕ. Ун выранне е саламат, е пуля,—тенĕ Карачăм татса.

— Карачăм, эсĕ мĕн, пĕтĕмпех тавăрăнтăн-и?—тесе ыйтнă Тамара.

— Сана курас килнипе çеç, çула май кĕрсе тухас терĕм. Ах, мĕне кирлĕ пулчĕ-ха ку эпĕ сана хăрушă вăхăтра хускатса çӳрени! Ну, Тамара, кала: хăçан эсĕ çăмăлланатăн? Эпĕ, вĕт, эсĕ çуратна пуль тесе. Малтанхи ача-çке-ха, курас килет манан ăна,—тенĕ Карачăм, арăмне ачашласа.

— Юлашки кунсене çӳретĕп,—пĕлтернĕ ăна Тамара.

— Ну, Тамара, Кавруш... манăн вăрах тăма вăхăт çук. Эпĕ отрядран икĕ сехетлĕхе çеç уйăрăлтăм. Вăхăт çитет. Çухатĕç тата,—кайма хыпаланнă Карачăм.

— Карачăм, эпĕ санран юлмастăп, илсе кай мана хупа пĕрле,—тесе йăлăннă Тамара.

— Эпĕ те юлмастăп, пичче,—тенĕ Карачăм шăлнĕ Кавруш та.

Карачăм арăмĕпе шăлнĕ çине пăхса илнĕ тĕ:

— Юрĕ, пырăр. Йывăр пулсан та пĕрле, тӳсĕпер— тенĕ вăл.

— Тавтапуç сана!—тенĕ Кавруш, пиччĕш аллине тытса чăмăртаса.

— Ну, сăмах-юмаха пĕтерер. Ĕçе тытăнар. Кĕçĕр пирĕн пĕр пысăк ĕç тумалла,—тенĕ Карачăм.

— Мĕнле ĕç?—ыйтнă Кавруш.

Шахтăран тухса кайнă чухне отряд пĕчĕкчĕ. Халĕ кашни кун вуншарăн, çирĕмшерĕн рабочисемпе хрессченсем пыра-пыра хутшăнаççĕ. Уйăх хушшинче отряд икĕ пин çынна çитрĕ. Отряд ӳсет. Анчах хĕçпăшал çитмест. Партизансенчен хăшĕ-пĕрисем тимĕр сенĕк-

семпе, çавасемпе çӳреççӗ. Шахтӑри казаксемпе чехсен складра хӗçпӑшал туллиех. Кӗçӗр пирӗн çав склада хамӑр алла илмелле,—тенӗ Карачӑм, унӑн-кунӑн пӑхкаласа.

— Ку ӗçе тӑвасси ним те мар: склад патӗнче яланах икшер казак çеç хурал тӑраççӗ, тата склачӗ шахтӑран уйрӑм. Çӗр тӗттӗм,—тенӗ ӑна Кавруш.

— Çапах та малтан тӗплӗнрех пӗлес пулать,—татса хунӑ Карачӑм.

— Ку ӗçе эпӗ хам çине илетӗп. Ун çинчен эпӗ халех кайса пӗлсе килӗп,—тенӗ Кавруш.

Урамра çил урмӑшса кайсах тулашнӑ. Вӑл кивӗ барака кӗç-вӗç йӑвантарса ярасла силлесе чӗтретнӗ.

Кавруш алакран тухса кайма ӗлкӗреймен, çав самантрах тултан кӗмсӗртеттерме пуçланӑ.

— Кам унта? Мӗн кирлӗ!—кӑшкӑрнӑ Тамара.

— Уç алӑкна! Мӗн питӗрӗнсе ларатӑн! Уç!—çиллӗ сасӑ янтраса кайнӑ.

— Лекрӗмӗр, пичче!.. Эсӗ таварӑннине сиснӗ лешсем. Е такам—систернӗ пулмалла,—тенӗ Кавруш алӑк умӗнчен пӑрӑнса.

— Тыт винтовкӑна!—хушнӑ Кавруша Карачӑм. Унтан Тамарӑна алӑк умӗнчен кайма каланӑ.

— Уç хӑвӑртрах! Унсӑрӑн алӑка çӗмӗретпӗр!

— Кам эсӗ? Мӗн кирлӗ сана? Кай алӑк умӗнчен!—кӑшкӑрнӑ ӑна Кавруш, пӑшалне хатӗр тытса. Унччен те пулман, пӑшал сасси кӗрлесе те кайнӑ. Пуля, чӳречене çӗмӗрсе кӗрсе, сӗтел çинчи вӗлтлетсе ларакан шӑши-куç лампине салатса пӑрахнӑ. Ахаль те тӗттӗм баракра пушшех те курӑнми пулса тӑнӑ.

— Тамара, эсӗ тӗпсакайне пытан!—тенӗ Карачӑм, урай хӑмине уçса.

— Чӳречерен тухса ан тарччӑр!—илтӗннӗ сасӑ тултан. Барак тавра тӗпӗртетсе чупкаланисем илтӗне пуçланӑ. Пӑшал сассисем шалтлатнӑ, пульӑсем стена витӗр кӑмакана çапӑннӑ. Карачӑмпа Кавруш плита хӳтлӗхне кӗрсе тӑнӑ та хирӗç пере пуçланӑ.

— Вӗсем ахаль парӑнас çук! Баракне вут тӗртсе çунтарас!—тенӗ сасӑсем Карачӑмпа Кавруш хӑлхисене пырса кӗнӗ.

— Мӗн тӑвас? Епле хӑтӑлас? Чӳречерен тухса тарма май çук—барак йӗри-тавра казаксемпе чехсем!—хӑй тӗллӗн калаçса илнӗ Карачӑм.—Вутра çунса виличчен, атьӑр чӳречерен тухса таратпӑр,—тенӗ вӑл.

Казаксем барак патне пĕр пичĕке кăраçин илсе пынă та вăл кăраçина барак çине сапнă. Çакăн хыççăнах барака хĕрлĕ вут çулăмĕ ыталаса илнĕ. Тĕттĕм çĕр йĕритаврана çутăлса кайнă.

Бараксенче лăпкă çывăракан шахтерсем вăранса, хăшĕ кĕпе вĕççĕнех, хашĕ çара уран, урамалла сике-сике тухнă.

— Пушар-р!..

— Пушар-р!..—кăшкăрса, çунакан барак патнелле чупнă шахтерсем.

Анчах барак мĕншĕн çуннине рабочисем никам та пĕлекенни çук. Рабочисем пыракан çул çине казаксем, чехсем тăрса тухнă та япун пăшалĕсене хатĕр тытса тăнă. Кĕрлесе çунакан барака сӳнтерме пыракан шахтерсене вĕсем:

— Стой, çывăха ан килĕр!—тесе кăшкăрса чарнă.

Явăнса çунакан барак çине шахтерсем ним тума пĕлмесĕр, тĕлĕнсе пăхса тăнă.

— Мĕншĕн пăхса тăрсах çунтаратпăр-ха?—пĕрпĕринчен ыйтнă рабочисем.

Сасартăк:

— Мĕн пăхса тăратпăр!? Тамара çунса вилет вĕт!—пĕр сасă янтăраса кайнă.

Çак сасса илтсен, казаксемпе чехсен рочĕ умĕнче кĕперленсе тăракан шахтерсем, татăлса кайнă пĕве шывĕ пек, барак патнелле кĕшĕлтетсе чупнă.

Казаксемпе чехсем рабочисене çунакан барак патне ярасшăн пулман.

— Çывăха ан килĕр!—тесе кăшкăрнă вĕсем, анчах йышлă халăха ним тума та пултарайман.

Шахтерсем, казаксем, чехсем пĕр ушкăна хутшăнса пăтранса кайнă. Кăшкăрашу, çухăрашу пуçланнă.

Шăп çав вăхăтра, ĕнтĕ, çунакан барак чӳречинчен икĕ арçын, пĕр хĕрарăм сиксе тухнă та, Том шывĕ еннелле чупса тарнă.

— Хăтăлчĕç!—хавас сасăсем илтĕннĕ шахтерсем хушшинче.

— Тухса тарчĕç! Халех хăваласа тытăр!—хаяр сасăпа кăшкăрнă урлă мăйăхлă атаман.

Çавăнтах виçĕ юланут, ушкăнран уйăрăлса, çулăм витĕр тухса тарнă çынсем хыçĕнчен хăвалама пуçланă.

— Амантсан та, ан вĕлерĕр. Чĕрĕлле тытса килме тăрăшăр!—кăшкăрса юлнă атаман. Анчах та Карачăм,

Кавруш, Тамара, тĕттĕм çĕрпе усă курса, хăвалакан казаксенчен ăнăçлăн тарса хăтăлаççĕ.

Барак хăвăрт çунса пĕтет. Çунса пĕтеймен пĕренисене çумăр сӳнтерет.

## VI

Çутăлас енне кайсан çил лăпланать. Шыв шавлама чарăнать.

— Утрав çинче ăçта та пулсан типĕ вырăн çук-ши?— терĕ Кавруш йĕри-тавра пăхса.—Çук, типĕ çĕр курăнмасть, çап-çутă шыв çеç йăлтăртатса выртать. Йывăççем, тин çеç шывран шăтса тухнă пек тăррисене йывăррăн кăнтарса лараççĕ.

— Ай!—хаяр сасăпа кăшкăрса, шăлне шатăр çыртрĕ Тамара.

— Мĕн пулчĕ?—тесе ыйтрĕ Карачăм.

— Ах, пилĕк тытма пуçларĕ!—йынăшрĕ Тамара.

Карачăм Тамарăна ыталаса тытрĕ.

— Мĕн тăвас-ши? Йывăç çинчен ансассăн та ниçта типĕ вырăн çук,—терĕ вăл, унăн-кунăн пăхкаласа.

Тискер çанталăк, Тамара асапне туйса илнĕ пекех, ерипен çемçелчĕ. Çил лăпланать. Шурăмпуçĕ хĕрелсе хăпарать. Çухрăм сарлакăшĕ шыв пĕр хумханмасăр, кĕленче пек çап-çутă курăнса, хуллен çеç пĕтĕрĕне-пĕтĕрĕне юхма пуçлать.

Шыв тыткăнне лекнĕ çынсем, ним тума пĕлмесĕр, йывăç тăрринче аптăраса лараççĕ. Кăшкăрас—хăрушă! Кавруша Карачăм кимĕсĕр те ишсе каçĕччĕç. Тамара ишме пултараймасть. Мĕн тăвас? Ниçтан та пулăшу çук! Епле çăлăнассин тĕлĕ те курăнмасть.

Сасартăк, инçетрен-инçетрен, шыв тăрăх пĕр хура пăнчă юхса анни курăнчĕ.

— Мĕн-ши вăл?—хăй тĕллĕн калаçса илчĕ Карачăм.

Тамара пĕтĕмпех аптăраса çитрĕ, аллисемпе варне тытса ăшталанать:

— Ай! Ох!—ӳпки тулли сывласа йынăшать.

Хура пăнчă хуллен юхса çывхарать, пысăкран пысăк курăна пуçлать.

— Кимĕ юхса килет!—савăнаçлăн кăшкăрса ячĕ Кавруш.

— Мĕнле тытас-ши ăна?—терĕ Карачăм.

— Эпĕ ăна халех!—Кавруш çийĕнчи тумтирне хывса йывăç туратти çине çакрĕ те тӳрех шыва сикрĕ. Шыв хумĕ уç йĕри-тавра ункă пек пулса саланчĕ.

— Асту, ывӑлсам, ан пут!—кӑшкӑрчӗ Тамара.

Кавруш, кимме хирӗҫ ишсе ҫитсе, кимӗ ҫине улӑхса ларчӗ те чӑрӑш патнелле ярӑнса пычӗ:

— Ну, анӑр, пичче, инке!—терӗ.

Карачӑм пилӗк тытнипе аптӑранӑ Тамарӑна тирпейлӗн йӑтса антарса, кимӗ тӗпне вырттарчӗ.

— Часрах ҫырма хӗррине, типӗ ҫӗре тухасчӗ!—терӗ Тамара пӑшӑлтатса.

— Халӗ ӗнтӗ кимӗ ҫинче, хӑрамастпӑр,—лӑплантарать Карачӑм Тамарӑна.

Кимӗ юхан шыва икӗ еннелле йӑшӑл ҫурса, ҫыран хӗрринелле шӑвӑнать.

Тамара пӗтӗм чун-хавалӗпе хаяррӑн кӑшкӑрса ярать. Ҫавӑнтах пӗчӗк ача сасси:

— Уа-уа-уа-уа-а-а!—шыв ҫинчи йывӑр сывлӑша чӗтретсе, лайӑх купӑс сасси пек таҫта ҫитичченех сарӑлчӗ.

— Тепӗр большевик ҫуралчӗ,—терӗ Карачӑм хӗпӗртенипе.

Кимӗ ҫыран хӗррине ҫитсе чарӑнчӗ.

— Громов юлташ ҫитрӗ!

— Командир юлташ килчӗ!—кӑшкӑрашса чупса пычӗҫ вӗсем патне партизансем.

— Лашу ӑҫта?—ыйтаҫҫӗ партизансем.

Карачӑм, лаша ҫинчен каламасӑрах, тӳрех:

— Сестра ӑҫта пирӗн? Калӑр-ха, килтӗр вӑл кунта,—терӗ кӑшкӑрса.

— Сестра, кунта!

— Командир патне!—темиҫе сасӑ янтӑраса кайрӗ.

Ҫавӑнтах сӑран пиншак тӑхӑннӑ, ҫӳҫне картусӗ ӑшне тӗркелесе чикнӗ ҫап-ҫамрӑк хӗрарӑм чупса ҫитрӗ:

— Мӗн тума кирлӗ эпӗ сире, командир юлташ!—тесе ыйтрӗ сестра, тутисене тӑп-тӑп тытса.

— Авӑ кимӗ ҫинче ман арӑм. Вӑл ача ҫуратрӗ. Эсир ӑна Щербаки ялне илсе кайса, пӗр-пӗр хресчен патне вырӑнаҫтарӑр,—терӗ Карачӑм.

Сестра, мӗн иккенне пӗлмесӗр, пӗрре Громов ҫине, тепре аллинче тин ҫуралнӑ ачана тытса ларакан Тамара ҫине пӑхса илчӗ те:

— Мӗнле-ха капла?!—терӗ.

— Нимӗнле те мар, ҫапла. Ывӑл ача ҫуралчӗ,—терӗ Карачӑм.

Ҫавӑнтах урапа кӳлсе пычӗҫ. Сестра Тамарӑна, урапа ҫине лартса, яла илсе кайрӗ.

— Пĕччен кайса тăваттăн килтĕмĕр.—Ку—ман шăллăм,—тесе партизансене Каврушпа паллаштарчĕ Карачăм.

— Эпир сана, тыткăна лекрĕ пулĕ тесе, шырама кайма хатĕрленнĕччĕ,—терĕ пĕр партизан.

— Эпир тыткăнран мар, çулăм витĕр тухса тарса хăтăлтăмăр. Пирĕн йăх вăл вутра та çунмасть, шывра та путмасть,—терĕ Громов татса. Унтан вăл иртнĕ çĕрте мĕн курнине, мĕн тӳснине йĕрки-йĕркипе каласа пачĕ. Партизансем шăппăн итлесе тăраççĕ.

Хĕвел, çӳлтен çӳле хăпарса, ирхи апат вăхăтне çитрĕ.

— Лашана эпĕ, шахтăна кĕрес чух, вăрмана кăкарса хăварнăччĕ.. Пĕлместĕп, те пур ĕнтĕ вăл унта, те çук,—пĕтерчĕ Карачăм хăйĕн сăмахне.

— Лаша вăл çухалсан та, татах пулĕ. Хăвăр хăтăлнă, ку пит аван,—савăнăçлăн калаçса илчĕç партизансем.

## VII

Казаксем, шахтăна тавăрансан: „Таркăнсене виççĕшне те шыва путарса вĕлертĕмĕр",—тесе пĕлтерчĕç. Çавăнпа казак атаманĕсемпе чех офицерĕсем командирсăр юлнă Громов отрядне çийĕнчех аркатса тăкма шухăш тытрĕç. Тепĕр каçхинех пĕр рота чех салтакĕсене тата тепĕр эскадрон казаксене, пулеметсемпе хĕçпăшаллантарса, партизансем патне ямалла турĕç.

Громов отрячĕ те çывăрмарĕ. Çав каçах шахта çине наступление кайрĕ.

Тăшмансем пĕр-пĕринпе, кĕтмен çĕртен, Шербакиялĕ çывăхĕнче хирĕç пулчĕç.

— Кам килет?—кăшкăрса ыйтрĕ отрядран çур çухрăм малта пыракан разведчик.

Хирĕç ответ пулмарĕ, ун вырăнне пăшал сасси çеç кĕрлесе кайрĕ. Партизан лаша çинчен месерле персе анчĕ, лаши каялла, отряд еннелле, çавăрăнса тарчĕ.

Пăшал сассине илтсен:

— Хатĕрленĕр! Казаксемпе чехсем пирĕн çине килеççĕ!—команда пачĕ Громов.

Куç уççа хупиччен партизансем лашасем çинчен сике-сике анчĕç, çавăнтах хăйсем те, лашисем те çĕре тăсăла-тăсăла выртрĕç.

Çанталăк шăп. Çĕр пит тĕттĕмех мар, умра аллă хăлаçа яхăнран лайăхах курăнать.

Казаксемпе чехсем партизан отрячĕ çине пĕр хăрамасăр кĕреççĕ. Отрядра командирĕ çук тенипе, вĕсем

партизансене ним вырӑнне те хумаҫҫӗ пулас. Ҫавӑнпа пит хӑюллӑн килеҫҫӗ.

Малтан икӗ юланут—разведчиксем курӑнчӗҫ. Вӗсене тивмерӗҫ, малалла ирттерсе ячӗҫ. Пилӗк минут урлӑ шуррисен отрячӗ пырса ҫитрӗ.

— Отряд, пли!—команда янтӑраса кайрӗ. Ҫавӑнтах йӗркесӗр пӑшал сассисем шӑтӑртатса кайрӗҫ. Пулемӗт тра-та-та-та-та!—калаҫа пуҫларӗ.

Шуррисен пӗр шухӑшсӑр, хӑюллӑн килекен отрячӗ айӑн-ҫийӗн пӑтрашса кайрӗ.

Нумайӗш ӳксе пӗтрӗҫ, юлнисем ҫаврӑнса тарчӗҫ. Пӑшал сасси тата нумайччен шӑтӑртатса тӑчӗ. Чӗрӗ юлнӑ казаксемпе чехсем курӑнми пулчӗҫ. Вилнисемпе суранланнисем, вырса пӑрахнӑ кӗлтесем пек йӑванса выртса юлчӗҫ.

Ҫапӑҫу хыҫҫӑн Громов малалла каймарӗ, пӗтӗм отрячӗпе Щербаки ялӗнче канма чарӑнчӗ. Партизансем килӗрен киле саланса вырӑнаҫрӗҫ. Карачӑм хӑй Тамара вырӑнаҫнӑ хваттере кӗчӗ.

Хуҫа арӑмӗ ӑна кӑмӑллӑн йышӑнчӗ:

— Ах, эсӗ пулатӑн-и-ха ӗнтӗ вӑл командир Громов текенни?

— Вара, эпӗ пулатӑп, инке, эпӗ,—тет ӑна Карачӑм, кӑмӑллӑн кулса.

— Ав, эсӗ мӗнле ырӑ ҫын иккен! Сана пуянсем юратмаҫҫӗ: „Ҫынсене вӗлерсе, пурлӑхӗсене ҫаратса ҫӳрет“ тесе элек сараҫҫӗ,—терӗ хуҫа арӑмӗ.

— Вӗсем калӗҫ, инке. Тата ытларах та калама пултарӗҫ. Хӑйсем ӗҫхалӑхне вӗлерсе ҫӳресе ҫаратни ҫинчен шарламаҫҫӗ пулӗ?—терӗ Карачӑм. Унӑн-кунӑн пӑхрӗ: пӳртре Тамара та, сестра та курӑнмарӗ. „Ӑҫта вӗсем?— шухӑшларӗ вӑл.

Хуҫа арӑмӗ йӑпӑр-япӑр чупкалать:

— Ҫиессӗр килет пуль? Мӗн ҫитерес-ши ӗнтӗ сире?

— Ним те кирлӗ мар, инке. Пулсан, ҫӑкӑрна пар та, сӑмаварна вӗрет. Инке, сан патӑнта пӗр ачаллӑ арӑмпа тепӗр хӗрарӑм пулма тивӗҫлӗ. Ӑҫта вӗсем?—тесе ыйтрӗ Карачӑм.

— Ой, ман патра нимӗнле ачаллӑ арӑм та, ахаль хӗрарӑм та ҫук,—терӗ хӗрарӑм хӑраса ӳксе.

— Ан хӑра, инке, ачалли вӑл манӑн арӑм, теприпирӗн отрядри сестра,—терӗ Карачӑм.

Хӗрарӑм Громов ҫине шӑтарас пек пӑхса илчӗ те:

— Суймастăн-и?

— Мĕншĕн суяс манăн сана!

— Эпĕ вĕсене, ăнсăртран яла шуррисем килсе кĕрĕç те тем туса хурĕç тесе, нÿхрепе пытарса лартрăм,—терĕ хĕрарăм савăнăçлăн.

— Эсĕ вара хĕрлисем майлă-им, инке?—тесе шÿт туса ыйтрĕ Карачăм.

— Ман пек упăшкасăр чухăн хĕрарăм, хĕрлисем майлă пулмасăр, камсен майлă пултăр тата?—терĕ хĕрарăм хĕпĕртесе. Унтан чупса тухса, Тамарăпа сестрана нÿхрепрен кăларса кĕчĕ.

Карачăм икĕ тавлăкри ывăлне аллине тытса лăпкарĕ.

— Тамара, ывăла мĕн ятлă хурăпăр?—тесе ыйтрĕ вăл ăшшăн.

— Эпĕ пĕлместĕп, ху шухăшласа туп,—терĕ Тамара кăмăллăн.

— Владимир... Володя. Лайăх ят вĕт? Ленин юлташ ячĕ,—терĕ сестра, упăшкипе арăмĕ калаçнă çĕре хутшăнса.

— Вăт ку лайăх ят! Володя! Владимир Герасимович Громов!—тесе, ачине пĕчĕк тутинчен чăп! чуптуса илчĕ Карачăм.

Тамара, сăмах чĕнмесĕр, савăнăçлăн йăлкăшса çеç ларчĕ.

## VIII

Громов отрячĕ Шербаки ялĕнче икĕ тавлăк ниçта тухмасăр канчĕ. Партизансем вăхăта ирĕккĕн ирттерчĕç.

Хăйсене çĕмĕрсе тăкнишĕн тискер кайăк пек çиленсе çитнĕ казаксемпе чехсем, пĕтĕм вăйĕсене пухса, Громов отрядне хирĕç тепĕр хут хатĕрленсе тухрĕç. Халĕ ĕнтĕ вĕсем Щербаки ялне, пĕр енчен çеç мар, йĕри тавраллах çавăрса илчĕç. Громов отрячĕ ăна кĕтмен те. Отряд яла кĕрекен çулсем çине хуралсем кăларса тăратнă та ыттисем ялта ним шухăшсăр çывăраççĕ.

Çурçĕр çитес умĕн пăшал сассисем кĕрлесе кайрĕç.

— Шуррисем килеççĕ!

— Яла пур енчен те çавăрса илнĕ!—тенисем илтĕнчĕç. Партизансем, хăшĕ çарамас, хăшĕ çара уран, пÿртсенчен сике-сике тухаççĕ.

— Тамара, лашасем хатĕр, хăвăртрах пуçтаранса тух!—терĕ Карачăм васкаса.

Ытла хăвăрт пулнипе, хуçа арăмĕ ним тума аптăраса ӳкрĕ:

— Ах, ху пăртак сываличчен, ачу тĕреклениччен кунтах пурăн, ачам,—тесе Тамарăна хăй патне юлма ыйтать.

— Кунта юлма юрамасть. Шуррисем, кусем ман арăмпа манăн ачам иккенне пĕлсен, пĕлетĕн-и вĕсем мĕн тăвасса? Тӳрех штык çине тăрăнтарĕç,—терĕ Карачăм.

— Никама та кăтартмăп эпĕ вĕсене, пытарса усрăп, —сăмах парать хуçа арăмĕ.

— Çук, халĕ ĕнтĕ эсĕ ăна пытарса усраймăн. Ялта эпир кам патĕнче тăнине пĕлеççĕ. Шуррисем, çитсенех, санăн пĕтĕм çуртна ухтарĕç.—терĕ Карачăм.

Пăшалпа пулемет сассисем вăйлăран вăйлă шăтăртаттарма пуçларĕç.

— Ах, хăй пурăнĕ, ачи пит шел! Пилĕк тавлăкри çеç вĕт-ха!—хăй тĕллĕн калаçса кулянать хуçа арăмĕ.

— Вăхăчĕ çавăн пек, инке. Вăрçăра çуралнă, вăрçăра пиçтĕр. Çирĕп пулĕ. Тăшманран хăрамĕ,—терĕ Карачăм пӳртрен тухас умĕн.

— Хăвăртрах!—кăшкăрчĕ Кавруш тултан.

— Ну, Кавруш, эсĕ Тамарăна пăх. Эпĕ кайрăм—терĕ Карачăм, лаши çине сиксе утланса. Вăл çавăнтах урамалла сиктерсе тухрĕ.

Партизансем пурте пĕр çĕре пуçтарăннă. Командир çитессе кĕтеççĕ.

Карачăм, отряд патне çывхарсанах:

— Ман хыçран!—тесе команда пачĕ. Командир чи малта, ун хыçĕнче отряд кĕшĕлтетсе пырать.

Имсĕр-сумсăр пăшал сасси кĕрлет. Партизансем пывă çĕртех йăвана-йăвана ӳкеççĕ, лашисем чикелене-чикелене анаççĕ. Казаксемпе чехсем пур енчен те хĕсĕрлеççĕ.

Сасартăк Тамара умĕпе пыракан Кавруш лаша ĕнси çинелле чикеленсе анчĕ. Аллинчи пăшалĕ çĕрелле вĕçеренсе ӳкрĕ. Вăйсăр урисем йĕнер пусси çинчен тухса кайрĕç.

— Ывăлсем, ывăлсем! Мĕн пулчĕ?—лашине чуптарса пычĕ ун патне Тамара.

Кавруш чĕнмерĕ, лаши пуçĕ урлă тĕшĕрĕлсе анчĕ. Лаши малалла тапса сикрĕ.

Тамара лаши çинчен анса, аллинчи ачине çĕре вырттарчĕ те Кавруша пулăшасшăн пулчĕ. Анчах ним тума та пултараймарĕ. Инçе те мар шăв-шав илтĕне пуçларĕ.

Çаварăнса пăхрĕ: юланутлă казаксем сиктерсе пыраççĕ. Тамара хăй те сисмерĕ, лаши çине утланса ларчĕ те отряд хыçĕнчен сиктерчĕ. Çĕр хăлаç кайсан тин вăл аллинчи ачи вилнĕ Каврушпа юнашар выртса юлнине аса илчĕ. Чĕри йĕппе чикнĕ пек ыратса кайрĕ. Лашине çавăрса каялла кайма тăчĕ. Çук, ĕç тухмарĕ, казаксем пĕлĕт пек хупласа çитеççĕ, аллисенчи хĕçĕсем йăлтăр та ялтăр! вылянаççĕ. Хăйсем урса кайсах кăшкăраççĕ. Çак хăрушлăха курсан, Тамара каллех пĕр вăхăта ачи çинчен манчĕ. Лашине хистесе сиктерме пикенчĕ. Пуçĕ урлă та, айăккинчен те пульăсем шăхăрса вĕçеççĕ. Малта та, хыçалта та партизансем, касса янă йывăçсем пек, тăкăнаççĕ. Тамара, тарса хăтăласшăн пулса, лашине чĕлпĕрĕнчен турткалать, урисемпе хĕтĕклет. Анчах, лаши сиксех чупать пулсан та, вăл ăна пĕр вырăнтах тапăртатса тăнă пек туйăнать.

Кайсан-кайсан çаварăнса пăхрĕ. Казаксем инçене тăрса юлнă. Карачăма хуса çитрĕ.

— Кавруш ăçта? Курмарăн-и?—ыйтрĕ унран Карачăм.

— Ăна вĕлерчĕç,—кĕскен пĕлтерчĕ Тамара.

— Володя ăçта?!

— Вăл, вăл... ывăлсемпе пĕрле,—урăх калаймарĕ, чĕлхи çыхланчĕ Тамарăн.

— Карачăм арăмĕпе урăх калаçмарĕ, лашине чĕлпĕрĕнчен туртса илсе, малалла сиктерчĕ. Ун хыçĕнчен Тамара та юлмарĕ.

Унтан лашине тытса чарчĕ:

— Тпру-у!.. хуллен утса пыр,—лашипе калаçса илчĕ.

— Карачăм, Володя ывăлсампа пĕрле чĕрĕлех выртса юлчĕ. Мĕн пулĕ-ши ĕнтĕ ăна?—терĕ Тамара тарăнăн сывласа. Карăннă кăкăрĕсем унăн чикĕшсе ыратса илчĕç.

Карачăм лашине чарса сиксе анчĕ. Тамара та анасшăн пулчĕ, анчах ĕлкĕреймерĕ. Сасартăк вунă-вунпилĕк юланут казаксем пырса тухрĕç.

— Стой! Вырăнтан ан хускалăр!—пĕр сасă янтăраса кайрĕ.

Тамара, нимĕне пăхмасăр, айккинелле сирпĕнчĕ. Хăлхи умĕнчен пульăсем шăйласа иртсе кайрĕç.

Громов лаша çине утланса та ĕлкĕреймерĕ, урине пуля çитсе лекнипе, çĕре хутланса анчĕ. Çавăнтах ăна казаксем сырăнса илчĕç.

— А-а-а... Лекрĕн-и!..—савăнăçлăн кăшкăрса ячĕç казаксем.

Громов казаксене паранмарӗ. Вăл наганне туртса кăларчӗ те пилӗк хут персе темиҫе казака йăвантарчӗ. Улттăмӗш пульă хăйӗн тăнлавне ҫӗмӗрсе кӗрсе ларчӗ. Унтан, аллисене сарса, ӳпне ҫаваранса ӳкрӗ. Лаши кӗҫене-кӗҫене, Тамара хыҫӗнчен аҫа-ҫиҫӗмлӗн ӗрӗхсе сирпӗнчӗ.

## IX

Кунсем, уйăхсем, ҫулсем ирте-ирте кайрӗҫ. Хӗрлӗ Ҫар шура бандитсене тӗпӗ-йӗрӗпех ҫӗмӗрсе тăкрӗ. Совет влаҫӗ тин шăтса тухнă чечек пек ешӗрчӗ. Ӗҫхалăхӗ юн тăкни харама ҫухалмарӗ: ирӗклӗ, савăнăҫлă пурнăҫ пуҫланчӗ.

Тамара Щербаки ялне иккӗмӗш хут, Ҫӗнӗ Конституци тăрăх суйлава хатӗрленес пирки, пропагандист пулса ҫитсе лекрӗ. Вăл тӳрех граждан вăрҫи вăхăтӗнче хăй хварттерте тăнă хуҫа арăмӗ патне чаранчӗ.

Малтанах вӗсем пӗрне-пӗри паллаймарӗҫ. Хуҫа арăмӗн ҫӳҫӗ шуралнă, сăнӗ ваталнă. Тамара та ӗлӗкхи пек мар, вăл хуламланнă, сăнӗ улшăннă.

— Астăватăн-и, инке, 1919-мӗш ҫул эпӗ пирвайхи ачана ҫуратсан, сан патăнта пурăнтăм?—тесе пӗлтерчӗ Тамара.

— Ах, эсӗ ҫав Тамара пултăн-и-ха?! Эпӗ, паллаймасăр тăратăп!—савăнăҫлăн кăшкăрса, Тамарăна ыталаса илчӗ килхуҫи арăмӗ.

Унтан вӗсем юнашарăн каласма ларчӗҫ.

— Эпӗ вӗт, сана та вӗлерчӗҫ пулӗ, тесе шутланă, терӗ килхуҫи арăмӗ.

— Хама вӗлерейменӗҫ, ачана ҫухатса хăвартăм,— терӗ Тамара, кăкăр туллин сывласа.

Шăп ҫав вăхăтрах пӳрте яштака пӳллӗ, хура куҫхаршиллӗ, вунсакăр ҫулхи каччă пырса кӗчӗ:

— Анне, апат ҫитер-ха мана. Васкатăп. Комсомол пуххине каймалла. Ах, хăна та пур иккен пирӗн! Аван-и?

— Эсир пулатăр-и-ха пирӗн яла килнӗ пропагандист?— терӗ ҫамрăк ҫын, Тамарăна ала парса.

— Вара, эпӗ,—васкаса ӳкрӗ Тамара. Унтан ҫамрăк ҫын ҫине тинкерсе пăхрӗ: „Епле ку ача Карачăм тӗслех?"—шухăшларӗ вăл хăй ăшӗнче.

— Палларăн-и?—тесе ыйтрӗ хуҫа арăмӗ, савăнăҫлăн йăлкăшса.

— Ҫук... Кам ку? Кам?!

— Вăл, вĕт, санăн ывăлу, Володя,—пĕлтерчĕ килхуçи арăмĕ.

Тамара, пĕрре савăннипе, тепре хурланнипе, ларнă çĕртех юпа пек хытса кайрĕ. Унтан майĕпе ура çине тăрса:

— Володя? Володя, ачам!..—аллисене анлăн хăлаçласа, ывăлне ыталаса илчĕ. Куçĕсем ирĕксĕрех йĕпенсе, тăрăхларах питçăмартийĕсем тăрăх куççуль тумламĕсем юхса анчĕç.

Кăшт тăрсан, килхуçи арăмĕ кала пуçларĕ.

— ... Çапăçу иртсен, урама тухрăм. Никам та курăнмасть. Пурте тарса, пытанса пĕтнĕ. Ăçта çитнĕ унта çын вилли çеç йăванса выртать. Инçе те мар ача сасси илтĕнчĕ. Пырса пăхрăм—чăнах та ача! Санăн ачу иккен, кипкинчен палларăм. Астăватăн-и: хамăн кивĕ кĕпене панăччĕ эпĕ сире кипке тума? Пĕччен пулсан та пăхса ӳстертĕм. 18 çула çитнĕ ĕнтĕ,—тесе пĕлтерчĕ карчăк.

Тамара ачи çинчен куçне илмесĕр пăхать:

— Ашшĕ тĕслех—хура, яштака пӳллĕ, хăй тĕллĕн калаçса ларать Тамара.

— Володя, ачам! Эпĕ сана халиччен каламанччĕ санăн аннӳ кам иккенне. Санăн тăван аннӳ ак çак пулать ĕнтĕ. Вăл сана çуратнă, эпĕ—пăхса ӳстернĕ,—терĕ килхуçи арăмĕ.

— Володя!— ыталаса чуптурĕ Тамара хăйĕн ывăлне.

— Ну, ан йĕр, анне. Пулнă та иртнĕ. Халĕ ĕнтĕ урăх вăхăт,—куççулĕпе шывланнă амăшĕн куçĕсене шăлса типĕтрĕ Володя.

„Анне“ сăмаха илтсен, Тамарăн хуçăлнă кăмăлĕ тулчĕ. „Анне! Анне!“ Мĕн тери вăл паха та сиплĕхлĕ сăмах,—хĕвел пек ăшăтакан сăмах!

# ТАЙГА ПАТТĂРĔСЕМ

## I

Вăл ял вырăнĕнче ĕлĕк пĕртен-пĕр сунарçă пўрчĕ çеç сăрт айккинче хĕвеле хирĕç салхуллăн пăхса ларнă. Пўрт çумĕнчен хура шывлă, нумай пулăлла Барсас шывĕ шăппăн пĕтĕрĕнсе юхса иртнĕ. Йĕри-тавра хура вăрман кашласа ларнă. Вăл вăрман Кальчугин шахтинчен пуçласа Нарыма çитичченех сарăлса выртнă. Унта ĕмĕртенпех упасем, рысьсем, тилĕсем, никамран хăрамасăр, хуçа пулса асса çўренĕ. Вăхăт çитсен—кĕркунне, вăл тавраналла сунарçăсем пынă. Пĕр вăхăта вăрманта пăшал сассисем кĕрленĕ. Йытăсем вĕрнĕ. Юр çуса сивĕтсен, сунарçăсем каялла кайнă. Вара вăрман каллех лăпланнă. Анчах хура вăрман нихăçан та кашлама чарăнман: вăл çулла та, хĕлле те, çилпе те, çилсĕр те, ялан кашланă. Вăхăт-вăхăт вайлă çилтăвăл тухса, вырăнĕ-вырăнĕпе ĕмĕрхи йывăççене тĕпĕ-тымарĕпе кăкласа пăрахнă. Ун пек вырăнсене çĕнĕ хунав шăтса тухса ўснĕ.

Тĕнче вăрçи пуçланас умĕн çав сунарçă утарĕ патне Утриван ятлă пĕр пуян куçса пынă. Вăл унта икĕ хутлă, çирĕм тăватă чўречеллĕ пўрт ларттарнă. Йĕри-тавра виçĕ аршăн çўллĕшĕ хўме тытса çавăрнă.

Утриван хыççăн унта кĕçех виç-тăватă кил куçса пынă, вара вăл вырăнта пĕчĕк ял пулса ларнă. Ялне „Утар" тесе ят панă.

Çав Утар ялне Вассапа Уçăп та çĕнĕ çĕре куçса пынă. Малтанах вĕсем икĕ çул хушши Утриван патĕнче тарçăра пураннă. Унтан тăватă кĕтеслĕ пĕчĕкçĕ пўрт лартса, хăйсем тĕллĕн пурăна пуçланă. Уçăп ашшĕ—Ехрим старик пулă тытса сутнă укçипе пĕр ĕне туяннă.

— Каçалхи пăрушне ўстерсен, икĕ чун ĕне пулать. Хĕле кĕрсен сунара çўресе кайăк-кĕшĕк тытса сутсан, укçипе лаша туянатпăр,—тенĕ Уçăппа Васса.

Пирвайхи çулсенчех Утар хресченĕсем тырпулă нумай акайман, мĕншĕн тесен вăрман кăкласа акасси çăмăл ĕç мар. Çавăнпа хăшĕсем вăрманта сунара çўресе,

хăшĕсем Барсасра пулă тытса тăранса пурăннă. Çур яла яхăн Утриван патĕнче тарçăра ĕçлесе тăранкаласа пурăннă.

Вăхăт çитсен, Вассасен ĕни пăрулана. Пăрушне Васса пĕчĕк ача пек пăхса ӳстерне. „Икĕ ĕне пулать", тесе кĕтне. Уçăп сунара çӳресе кайăк-кĕшĕк тытса сутса, лаша туянасса ĕмĕтленсе пурăннă. Анчах ĕмĕтленнĕ ĕмĕчĕ çитмен. Çав çул, шăп ыраш вырнă вăхăтра, Уçăпа иккĕмĕш хут салтака илсе—тĕнче вăрçине хуса кайнă. Ялтан пĕр Уçăпа çеç мар, унпа пĕрле тата вунă çынна илсе кайнă. Вунă херарăм юратнă упăшкисенчен уйрăлнă,—хăшĕсем тен вăхăтлăха, хăшĕсем тен ĕмĕрлĕхех. Пĕчĕк ача пек татăлса йĕнĕ Васса.

Пĕр çул çитнĕ. Икке те иртнĕ. Виççĕ тулнă. Анчах Васса хăйĕн юратнă упăшкиве кĕтсе илеймен. Малтанах Уçăп час-часах çырусем çырса тăнă. Кашни çырăвĕнчех: „Ан хуйхăр, Васса. Кĕтсе тăр—вăрçă чарăнсанах таврăнăп. Аттене те салам кала", тесе йăпатса çырнă. Чăнах та, Васса вăрçă чарăнса упăшки таврăнасса тем пекех кĕтнĕ. Хăш каç, упăшки асне килсен, пĕр куç хупмасăр çĕр каçнă. Çывăрса кайсан та, тĕлĕкĕнче Уçăпа курнă. Çапла кĕтсе пурăннă çĕртех, Уçăпран çыру килми пулнă.

— Вĕлерчĕç пуль, çавăнпа çыру çук...—кунĕн-çĕрĕнех йĕнĕ Васса. Кăвак куçĕсем путса аннă унăн.

Ватă хуняшшĕ—Ехрим старик кинне пĕтĕм чунĕнчен шелленнĕ.

— Кинĕм, ытла ан хуйхăр-ха... Вилмен пулсан, вăрçă чарăнсан таврăнĕ...—йăпатнă вăл кинне.

Васса йĕме чарăнман, кинĕн куççулне курсан, Ехрим старикĕн те куçĕсем шывланнă.

— Ах, атте,—тенĕ Васса,—Эпĕ Уçăпран пуçне никама та юратмастăп. Вăл киле таврăнмасан та, эпĕ урăх çынна савассăм çук. Виличченех сана пăхса усрăп, атте.

Çапла кинĕпе хуняшшĕ иккĕшĕ те макăрнă. Вĕсен куççулне никам та курман.

* * *

Барсас шывĕ тикĕт пек хура. Унта пулăсем чăмпăрт-чăмпăрт чăмаççĕ. Пулăсене тытса çиесшĕн кукăр çунатлă чарлансем шыв çийĕпе вĕçсе çӳреççĕ. Вĕсем вĕçсе пынă çĕртех шыва шăмпăрт чăмса тухаççĕ.

Барсасăн сылтăм çыранне хыр вăрманĕ пусса ларать, сулахай енче çаранлăх сарăлса выртать. Унта унка пек çаврака кÿлĕсем хăмăшпа витĕнсе выртаççĕ. Ирлĕкаçлă кайăк-кăвакалсем нартлатса ярăнса ишсе çÿреççĕ.

Çава тухсан Ехрим старик мĕн кĕркуннеччене Барсас хĕрринче пулă тытса пурăнать. Ăшă вăхăтра каçхине те киле таврăнмасть, çырма хĕрринчех, хурăн хуппинчен тунă хÿшĕре çыварать. Эрнере пĕрре çеç килне таврăнса, мунча кĕрсе кĕпе-йĕм улăштарать те, каллех çырма хĕррине анать. Мĕн тытнă пуллине Васса кашни кун пырса илсе каять. Унтан ăна Кальчугин шахтине кайса сутать. Укçипе çăнăх-кĕрпе илсе таврăнать.

Ялти салтак арăмĕсем нумайăшĕ Утриван патĕнче тарçăра ĕçлеççĕ. Васса ун патне каймасть.

— Пуян вăл сана ĕçне виличчен ĕçлесен те тăраниччен çимеллĕх памасть. Ан çÿре. Хамăрах тăранăпăр,— тесе йăпататать кинне Ехрим старик.

Çапла, çамрăк кинĕпе ватă хуняшшĕ пулă тытса тăранса пурăнаççĕ. Лаша чунĕ пулмасан та, икĕ ĕне усраççĕ. Сĕт-турăх çителĕклĕ, сутмалăх та ытлашши пур.

Утă çулнă вăхăтра Ехрим старик кинне купасем тума пулăшать.

„Ватă пулсан та,—атте пур. Вăл вилсе кайсан, пĕччен мĕнле пурнăп-ши?“—хуйхăрать Васса. Савнă упăшкипе икĕ çул пурăнса ача çуратманни кулянтарать ăна. „Ача пулсан—йăпанчăк пулĕччĕ“, тесе шухăшлать вăл. Упăшкинчен çыру килмесен те, вăрçă чарăнсан Усăп таврăнас пекех туйăнать ăна. Кунĕн-çĕрĕн кĕтет упăшкине Васса. Анчах вăрçă чарăнассин тĕлли-палли курăнмасть. Малтанах патшалăхпа патшалăх вăрçатчĕç. Халĕ ĕнтĕ Россия халăхĕ икĕ енне уйрăлса çапăçать: пĕр енче чухăнсем тăраççĕ, тепĕр енче пуянсем. Анчах çак икĕ вăй мĕншĕн çапăçнине Васса ниепле те чухласа илеймест, мĕншĕн тесен вăл хутла сахал пĕлет, пурĕ те икĕ çул кăна вĕреннĕ. Тата ниçта та тухса çÿремен.

— Шăп тĕлĕнмелле ку çынсенчен. Тем çитмест. Темшĕн çапăçаççĕ,—тесе тĕлĕнет Ехрим старик.

— Çапăçакансем мĕншĕн çапăçнине пĕлеççĕ пуль теха,—тесе тавăрать Васса хуняшшĕне.

Çапла кинĕпе хуняшшĕ кашни кунах вăрçă çинчен калаçаççĕ. Вăрçă чарăнасса кĕтĕççĕ. Анчах ниепле те кĕтсе илеймеççĕ. Вăхăт малаллах шăвать.

* * *

Пĕрре çапла Ехрим старик тетелĕсене шыва карнă та хӳшши умĕнче чĕлĕм туртса ларать. Сасартăк хыçра пăшал сассисем кĕрлесе кайрĕç.

— Мĕн, камсем унта пăшал персе çӳреççĕ? Хамăр ялсем-ши е шахтăран сунарçăсем çамрăк пăчăрсене пеме килнĕ-ши?— тесе хăй тĕллĕн калаçса илчĕ Ехрим старик. Çав самантрах ун патне пĕр çамрăк çын хашкаса чупса пычĕ.

— Мучи, тархасшăн эсĕ мана киммӳпе çырма леш енне каçма ирĕк пар,—йăлăнса ыйтрĕ вăл.

Ехрим старик ун çине тĕлĕнсе пăхрĕ: „Салтака каясран тарса çӳрекенскер пулас ку“, тесе шухăшларĕ.

— Мĕн тума каçасшăн эсĕ çырма леш енне?—тесе ыйтрĕ вăл.

— Эпĕ, мучи, шуррисенчен тарса килетĕп.,.—терĕ çамрăк çын чĕтрекен сасăпа.

Ехрим старик темĕн чухласа илчĕ:

— А-а-а... Вăл пăшал сассисем сан çине пулчĕç-и-ха... Эпĕ сунарçăсем çамрăк пăчăрсене переççĕ, тесе ларатăп. Ну, турă санпала, кимĕ унтах ав, лар та ишсе каç...

— Пысăк тав сана, мучи...

Çамрăк çын самантрах çырма хĕррине чупса анса кимĕ çине ларчĕ те шывалла кĕрсе кайрĕ. Анчах вăл кимĕпе ишме пĕлмест иккен, ăна хăвăрт юхакан шыв самантрах аналалла юхтарса кайрĕ.

— Эккей, хамăн лартса каçарса ямаллаччĕ. Кимми ӳпĕнсе кайсан, путса вилĕ айван,—тесе укĕнсе ури çине сиксе тăчĕ Ехрим старик. Кăшкăрма хăтланчĕ. Анчах кимĕ шыв кукринелле юхса кайса, курăнми пулчĕ. Ехрим старик курпунне кăларса, çыран хĕррине чупса анчĕ.

— Эй, старик! Çакăнтан пĕр çын иртсе кайнине курмарăн-и?—илтĕнчĕ ăна кăшкăрнă сасă.

Ехрим старик сасă енне çаврăнса пăхрĕ те хăйĕнчен инçе те мар виçĕ салтак тăнине курчĕ. Пĕри ылттăн пагонлă—вăл офицер пулас. Виççĕшин аллисенче те пăшал. Вĕсене курсан Ехрим старик хăраса ӳкрĕ. Хирĕç сăмах калама пĕлмесĕр хытса тăрать. Çамрăк çынна курнине те каласан аван, те каламасан лайăх. Каласан— кимĕ çине лартса янăшăн хăйне айăплама пултараççĕ.

— Ну, мĕн юпа пек хытса тăратăн?! Çын иртсе кайнине куртăн-и? Хăш еннелле кайрĕ? Çакăнтан иртмесен

—урăх ăна валли çул çук!..—тесе кăшкăрчĕ çиллĕн офицер.

Ехрим старик кăшт шухăшласа тăчĕ те:

— Салтак гимнастерки тăхăннă пĕр çамрăк çын, ав, çавăнталла чупса иртсе кайрĕ,—тесе, шыв юхăмнелле хирĕç тăвалла аллипе чăсса кăтартрĕ.

— Суймастăн-и?!. Асту! Суйсан—эпир сана кайран та шыраса тупăпăр!—тесе, аллинчи револьверĕпе юнаса хăратрĕ офицер.

— Ватă пуçăмпа ма суяс ман сире. Чăннипе калатăп: çавăнталла иртсе кайрĕ,—терĕ Ехрим старик ĕнентермех тăрăшса.

Офицер хăйĕн салтакĕсене ертсе, Ехрим старик кăтартнă май—шыва хирĕç тăвалла васкаса утрĕ.

— Ах, чуниллисем! Çыннин, тен, пĕр айăп та çук. А вĕсем ăна çаплах тайга тăрăх тискер кайăк пек хуса çӳреççĕ,—хăй тĕллĕн калаçса тăчĕ Ехрим старик.

Çамрăк çынна хăвалакан офицерпа хĕçпăшаллă салтаксем курăнми пулсан, Ехрим старик шыв юхăмне май, аналла лакăштатса чупрĕ.

Ватăскерĕн кăкăрĕ пӳлĕнет. Кăшкăрсан та сасси аран хăралтатса тухать. Çухрăм ытла чупсан тин вăл кимĕ çине ларса кайнă çамрăк çынна хуса çитрĕ.

Кимĕ çинчи çын ни леш хĕррине, ни ку хĕррине ишсе тухаймасăр çапкаланать. Кимми халь ӳпĕнсе каяс пек каллĕ-маллĕ чӳхенет, шыв пĕтĕрĕнсе юхакан вырăнсенче пĕр тĕлте çавăрăнса тăрать, унтан каллех юхса каять.

— Кунталла иш, кунталла!—тесе кăшкăрать Ехрим старик.

Тата çур çухрăм пек юхсан кимĕ аран-аран çыран хĕррине çитсе перĕнчĕ.

— Ишме пĕлмесен—ма кимĕ çине ларас! Калаççĕ ăна: ишме пĕлместĕп, тесе. Хам лартса каçарса янă пулăттăм. Кимми шел мар, хуна шел, путса вилме пултаратăн,—тесе, тарăхса ятлаçать Ехрим старик.

Кимĕпе ишсе чăм шыва ӳкнĕ çын кимĕ çинчен тухрĕ.

— Халь хăрамалли çук ĕнтĕ. Леш, сана хуса килекен салтаксене эпĕ, ав, тăвалла кăтартса ятăм. Ан тив, вăрман тăрăх шыраса çӳретчĕр,—терĕ Ехрим савăнăçлăн.

— Тавтапуç сана, мучи, мана хăтарнăшăн. Эсĕ киммӳне паман пулсан, вĕсем мана тытатчĕç,—терĕ çамрăк çын.

Самаях ывӑннӑ Ехрим старик, ҫыран хӗррине ларса, кукӑр чӑпӑклӑ чӗлӗмне тивертсе ячӗ.

— Эсӗ хӑш ялсем пулатӑн, ачам?—тесе ыйтрӗ вӑл.

— Эпӗ ялтан мар,—шахтӑран, мучи...

— Кальчугин шахтинчен-и?.. Апла—инҫетрисем мар. Ехрим старик, чӗлӗмне вӑрӑмӑн туртса, тӗтӗмне палкаттарса кӑларса ячӗ.

— Ма хӑвалаҫҫӗ вӑл салтаксем сана? Мӗн айӑп турӑн?..

Ҫамрӑк ҫын кӗскен каласа пачӗ:

— Эпир юлташпа ӗнер ҫеҫ Австрирен таврӑнтӑмӑр—тыткӑна лекнӗччӗ эпир унта. Вӑл пӗр кунлӑха ман пата хӑнана чарӑнчӗ. Эпӗ хам авланман. Килте ман ватӑ анне ҫеҫ. Вӑл пире мунча хутса кӳртрӗ. Мунчаран таврӑнсан чей ӗҫсе ларатпӑр. Сасартӑк пирӗн пата пӗр офицер тата икӗ салтак пырса кӗчӗҫ.

— Эсир-и-ха ҫак Австрирен тыткӑнтан таврӑннӑ ҫынсем?—тесе ыйтрӗ офицер.

— Вара, эпир пулатпӑр,—терӗм эпӗ.

— Эсир хӗрлисен ҫарӗнче пулнӑ-и?—тӗпчет пирӗнтен офицер.

— Ҫук, эпир Хӗрлӗ Ҫарта пулман. Вӗсем пире вӑйпа илмерӗҫ. Эпир хамӑр ирӗкпе юлмарӑмӑр. Киле таврӑнса ҫемьесене курас килчӗ,—терӗм эпӗ.

— Хӗрлисен ҫарӗнче пулман... Хм-м... Эсир пирӗн ҫара хӑвӑр ирӗкпе ҫырӑнатӑр-и?—ыйтрӗ пирӗнтен офицер. Эпӗ хамӑн юлташ ҫине пӑхса илтӗм.

— Пӗлместӗп, юлташ мӗн шутлать... Анчах эпӗ хам ирӗкпе ҫырӑнма пултараймастӑп. Вӑрҫӑ йалӑхтарса ҫитерчӗ ӗнтӗ. Канас килет,—терӗм.

— Эпӗ те хам ирӗкпе ҫырӑнмастӑп,—терӗ юлташ.

— Хӑвӑр ирӗкӗрпе ҫырӑнмастӑр пулсан, эпир сире вӑйпа илетпӗр...

— Сирӗн ирӗк,—терӗм эпӗ офицера.

— Ну, тумланӑр! Атьӑр, утӑр пирӗн хыҫран!—тесе хушрӗ офицер.

— Мӗн тӑвас?—вӗсем хӗҫпӑшаллӑ. Пӑхӑнтарчӗҫ. Тумланса тухрӑмӑр. Офицер малтан, эпир варринче утатпӑр. Пирӗн хыҫран салтаксем пӑшалӗсене хатӗр тытса пыраҫҫӗ. Манӑн ватӑ анне пӗчӗк ача пек йӗрсе юлчӗ.

„Мӗнле хӑтӑлас ку тӑшмансен аллинчен?" тесе шухӑшласа пыратӑп. Вӗсем пире тӳрех штаба илсе кайма

тăчĕç. Шуррисен штабĕ шахта тулашĕнче. Унта вăрман урлă каймалла. Шахтăран тухсан вăрмана кĕтĕмĕр.

— Вашеблагороди, ман ăш ыратать...—терĕм эпĕ пĕкĕрĕлсе.

Офицер ман çине шурă куçĕсемпе çаврăнса пăхрĕ.

— Штаба çитиччен тӳс. Инçе мар...—терĕ вăл çиллĕн.

— Тӳсме çук, вашеблагороди,—терĕм эпĕ авкаланса. Офицер ман ăш ыратнине ĕненчĕ пулас.

— Вăн, кайса лар...—терĕ йĕрĕнчĕклĕн.

Эпĕ çултан пăрăнса çӳллĕ курăк ăшне кĕрсе лартăм.

— Вашеблагороди, мана та ирĕк парăрсам...—тет ман юлташ. Вăл та манпа юнашар пырса выранаçрĕ.

— Тарар... Штаба çитерсен—кансĕр пулĕ...—тетĕп юлташа шăппăн.

Юлташ та тарма килĕшрĕ.

— Ну, хăвăртрах!..—кăшкăрать офицер.

Самантрах иксĕмĕр те харăс сиксе тăтăмăр та вăрман чăтлăхне пĕрхĕнтĕмĕр.

— Стой!..

— Стой!..—кăшкăрса ячĕ офицер.

Хыçран пеме пуçларĕç хайхисем. Пульăсем пуç урлă шилесе иртсе каяççĕ. Печĕç-печĕç—лектерейменрĕç. Тарса хăтăлтăмăр.

— Хăтăлтăмăр, юлташ,—терĕм эпĕ, чупма чарăнса.

Йывăç вуллисем хушшипе утса пыратпăр.

— Кунтан ĕнтĕ пирĕн ял инçе мар,—тесе калаçса пырать ман юлташ. Сасартăк хай офицерпе салтаксем пирĕн умма пычĕç тухрĕç.

— Стой!—кăшкăрать офицерĕ.

Эпир калле тапса сикрĕмĕр. Каллех пеме пуçларĕç. Ман юлташ, чупса пынă çĕртех, чикĕнсе ӳксе юлчĕ. Эпĕ ак—аран тарса хăтăлтăм. Тен мана тытатчĕç пулĕ... Эсĕ пулăшрăн, мучи...—тесе пĕтерчĕ çамрăк çын хăйĕн сăмахне.

— Эсĕ хăтăлтăн... Юлташна шел,—терĕ Ехрим старик вăрăммăн сывласа.

Унтан вĕсем пĕр вăхăта чĕнмесĕр ларчĕç.

— Манăн та, сан пекех, пĕр ывăл пурччĕ.

Салтака илсе кайрĕç те—çухалчĕ. Çыру та килмест. Те вĕлерчĕç, те тыткăна лекрĕ...—терĕ Ехрим старик хуйхăллăн.

— Вăл та, ку та пулма пултарать... Вăрçă вĕт... Сан ывăлу мĕнле хушаматлă? Тен эпĕ ăна пĕлетĕп те-и,—терĕ çамрăк çын.

— Протасов Уçăп.

Шахтер Ехрим старик куçĕнчен тинкерсе пăхрĕ.

— Протасов Уçăп?!. Вăл сан ывăлу?.. Эсĕ унăн ашшĕ?..

— Вара, ман ывăл... Эсĕ ăна пĕлетним?

— Тарса хăтăлаймарĕ... Вĕлерчĕç... тăшмансем...—терĕ шахтёр хуллен.

— Сан юлташу ман ывăл—Уçăп пулнă-и вара?.. Ехрим старик ури çине сиксе тăчĕ.

— Çавă, ман çывăх юлташ...—хуллен пăшăлтатрĕ шахтер.

Пĕр вăхăта вĕсем сăмах чĕнмесĕр пуçĕсене чиксе тăчĕç.

— Кĕтсе пурăнтăмăр... Вĕлерчĕç... Чуниллисем!..—терĕ Ехрим старик, куççулĕсене шăлса.

Хĕвел вăрман хыçне анса пытанчĕ. Çанталăка каçхи сăн хупласа илчĕ.

— Ывăлăн ӳчĕ инçетре-и?..—пăшăлтатрĕ Ехрим старик.—Пытарас пулать...

— Çывăхрах, мучи... Атя, кайăпăр...

Ехрим старикпе шахтер вăрманалла кĕрсе кайса курăнми пулчĕç. Барсас шывĕ сасăсăр юхать. Кӳлĕсенче кайăк-кăвакалсем нартлатаççĕ. Таврара пурăнăç вĕресе тăрать.

* * *

Шăматкун. Паян Ехрим старик киле таврăнмалла. Васса хуняшшĕне кĕтсе, мунча хутса хатĕрлерĕ. Анчах старик темишĕн час таврăнмарĕ.

— Мĕн туса тăчĕ тата?.. Пулă лайăх кĕрет пуль... Çавăнпа тытăнса тăрать...—тесе хăй тĕллĕн калаçать Васса килĕнче. Вăл паçăрах мунча кĕрсе тухнă ĕнтĕ—чӳрече умĕнче кăлкан пек сарă çӳçне тураса ларать. Çак вăхăтра Ехрим старикпе шахтер хапхаран пырса кĕчĕç.

Васса, салтак гимнастерки тăхăннă шахтера курсан, хăйĕн упăшки Уçăп таврăнчĕ пулĕ тесе савăнса ӳкрĕ; анчах савăнни кăлăхах пулчĕ.

— Кин, паллашăр.. Ку çын—Уçăп юлташĕ,—Морозов—терĕ хуллен Ехрим старик.

Васса пĕр самант сăмах чĕнмесĕр хытса тăчĕ.

— А Уçăп ăçта вара?..—ыйтрĕ вăл юлашкинчен.

Ехрим старикпе шахтер пӗр-пӗрин куҫӗнчен пӑхса илчӗҫ.

— Мӗн пытаратӑр эсир манран?.. Калӑр тӳррипе, Уҫӑп ӑҫта?

Шахтер Васса куҫӗнчен хурлӑхлӑн пӑхса илчӗ те: „сасартӑк каласа кӑмӑлне хуҫас мар", тесе шухӑшларӗ.

— Уҫӑп Кальчугина чарӑнса юлчӗ. Ыран килсе ҫитет...—терӗ вӑл йӑваш сасӑпа.

— Уҫӑп таврӑнать-и?!—савӑнӑҫлӑн кӑшкӑрса ячӗ Васса.

— Ҫаплах...—пӑшӑлтатрӗ хуллен шахтер.

Ехрим старик шарламарӗ: „Уҫӑпа вӗлерни ҫинчен каласан, халех ӗсӗклесе йӗме пуҫӑнать. Халь калас мар, кайран, ыран пӗлтерӗп", тесе шухӑшларӗ.

Васса упӑшки чӑнахах ыран Кальчугинран килет тесе, пӗтӗм чӗринчен савӑнса ӳкрӗ.

— Атте, мунча кайса кӗрӗр. Пултарни нумай пулать. Ҫивӗнсе кайӗ тата. Эпӗ эсир ҫӑвӑнса тухиччен апат хатӗрлем...—тесе, кӑмака умӗнче кӑштӑртатма пуҫларӗ Васса.

Ехрим старик хуйхӑллӑ. Вӑхӑт-вӑхӑт вӑл тарӑннӑн сывласа илет.

— Атя, ачам, кайса кӗрер...—терӗ Ехрим старик ассӑн сывласа.

Ехрим старикпе шахтер мунча кӗме тухса утрӗҫ, Вассаваскаса апат хатӗрлеме пикенчӗ. Халӗ ӗнтӗ унӑн пӗтӗм шухӑшӗ те Уҫӑп ҫинче. Хӑй та сисмест:

— Уҫӑп, чунӑм, ыран эпир санпа каллех пӗрлешетпӗр,—тесе хӑй тӗллӗн мӑкӑртатать Васса.

Тӗттӗм пулчӗ. Барсасран тӗтре ҫӗкленсе пӗлӗте хупласа хучӗ. Ялта никамӑн та хӑй ҫути курӑнмасть. Пӗр Васса пӳрчӗн чӳречисенчен ҫеҫ йӑлтӑр ҫутӑ курӑнать. Кӑмаки мӑръинчен палкаса тӗтӗм тухать.

Васса кӑмака умӗнче апат хатӗрлесе тӑнипе хӑй те сисмерӗ—пӳрт алӑкӗ яри уҫӑлчӗ те—пӳрте икӗ салтакпа офицер кӗрсе тӑчӗҫ.

— Килхуҫи арӑмӗ, эпир сирӗн пата ҫӗр выртма кӗтӗмӗр. Чармастӑн пулӗ,—терӗ хулӑн сасӑпа офицер.

Васса хӗҫпӑшаллӑ ҫынсене курсан хӑраса ӳкрӗ. Ҫанҫурӑмӗ сивве шӑннӑ пек чӗтресе илчӗ. Ури вӑйӗсем пӗтсе кайрӗҫ. Хирӗҫ сӑмах чӗнеймест—чӗлхи хытса ларчӗ.

— Ну, мӗн юпа пек хытса тӑран тата?!. Ҫимелли пур-и? Хатӗрле хӑвӑртрах! Халиччен салтаксене курман им эсӗ?—тесе хытах кӑшкӑрчӗ офицер.

— Ара, пирĕн пӳрчĕ пит пĕчĕккĕ-çке...Ăçта выранаçтарса вырттарăп эпĕ сире?..—терĕ Васса, аран пăшăлтатса.

— Пире вырăн нумай кирлĕ мар. Хатĕрле хăвăртрах апатна! Эпир паян иртенпе çимен,—терĕ офицер, салтăнма пуçласа.

Салтаксем пăшалĕсене алăк кĕтессине тăрата-тăрата хучĕç.

Васса, ним тума пĕлмесĕр, кăмака умĕнче хыпаланса çӳрет. Хăй пĕтĕм ӳт-пĕвĕпе сиксе чĕтĕрет.

— Самогон пур-и?—тесе ыйтать офицер.

— Çук, эпир халиччен ăна юхтарса курман.

— Хăвăрăн пулмасан—кӳршĕрен кайса тупса кил!—тесе хушать офицер.

— Пирĕн ялта пуян Утриван пур, унăн самогон çеç мар, пылла сăра та пички-пичкипех. Сирĕн пек иртсе çӳрекен салтаксем ялан ун патне кĕрсе выртаççĕ,—тесе пĕлтерет Васса.

— Эсĕ мана çĕр варринче пуян Утривана шыраттарса ан çӳре. Эпĕ мĕн калана—çавна итле. Пыр, халех пĕр четверть самогон тупса кил!

Васса ним тума аптраса ӳкрĕ. Çак самантра Ехрим старик мунчаран тухса пычĕ. Вăл офицерпе салтаксене курсан, алăк умĕнче хытса тăчĕ.

— А-а, пулăçă старик! Паян эпир сана иккĕмĕш хут куратпăр,—терĕ офицер, старик çине пăхса.

Ехрим старикĕн калаçса тăма вăхăт çук—халех шахтер пырса кĕме пултарать.

— Эккей... эпĕ чĕлĕме мунча умне манса хăварнă. Кайса илсе килем-ха, тесе, пӳртрен калле васкаса тухрĕ Ехрим старик.

— Атте, çул май аннесем патне кĕрсе пĕр четверть самогон илсе кил!—тесе кăшкăрчĕ Васса.

— Юрĕ,—алăк хыçĕнче старик саси илтĕнчĕ. Ехрим алăкран тухсанах шахтера хирĕç пулчĕ.

— Пӳрте ан кĕр. Унта хай, сана хăвалакан офицерпа салтаксем,—тесе пĕлтерчĕ.

Шахтер хăраса ӳкрĕ.

— Пыр, калле мунчана кайса пытанса лар,—терĕ старик шахтера.

* * *

Васса сĕтел çине апат хатĕрлерĕ.

— Сан упăшку ăçта?—тесе ыйтрĕ офицер, сĕтел хушшине кĕрсе ларсан.

— Тăваттăмĕш çул ĕнтĕ салтака кайнăранпа таврăнмарĕ,—тесе пĕлтерчĕ Васса.

Офицер Васса çине ăмсанса пăхса илчĕ.

— Салтак арăмĕ апла эсĕ. Аван!..—терĕ те, уссине калле-малле сăтăркаласа якатрĕ.

Кĕçех Ехрим старик пĕр четверть самогон йăтса пырса кĕчĕ. Вăл, чĕнмесĕр, четвертне сĕтел çине пырса лартрĕ те, хăй кăмака сакки çине кайса ларчĕ.

Офицерпа салтаксем самогон ĕçсе апатланаççĕ. Ехрим старик пуçне чиксе, шухăша кайса ларать. Унăн çав тери çилли тулса çитнĕ. Вăл, ватă пулсан та, хăйĕн пĕртен-пĕр кратнă ывăлне вĕлерекенсене халех тавăрма хатĕр.

— Старик, эпир леш эсир курнă çынна шыраса тупаймарăмăр. Тарса хăтăлчĕ, каналья! Ниçта та каяймĕ, эпир ăна пурĕпĕрех шыраса тупатпăр!—тесе мухтанать офицер.

Ехрим старик офицера хирĕç сăмах ченмест. Вăл, ăшĕ çуннипе пĕр вĕçĕмсĕр чĕлĕм мăкăрлантарать. Унăн: „Çын вĕлерекенсем! Юнĕçенсем!" тесе кăшкăрасси килет. Анчах шикленет.

Васса хуняшшĕ салху ларнине сисет. Тата шахтер мунча кĕрсе таврăнманни те тĕлĕнтерет ăна. Анчах офицерпа салтаксем умĕнче ыйтма хăяймасть.

Офицерпа салтаксем четверть самогона ĕçсе пĕтерчĕç.

— Ну, старик, эпир çывăрма выртатпăр. Эсĕ пире хуралла. Вăл ку пулсан, вăрат,—вахăт хăрушă,—терĕ офицер сĕтел хушшинчен тухса.

Ешеннĕ тата самогон ĕçсе ӳсĕрĕлнĕ офицерпа салтаксем выртă-выртманах çывăрса кайрĕç.

Ехрим старик кинне тула чĕнсе тухрĕ.

— Кин, пĕлтерем ĕнтĕ сана: çаксем паян пирĕн Уçăпа... персе пăрахнă,—терĕ вăл хурлăхлăн.

Васса кăна илтсен сулăнса кайрĕ. Пĕр вăхăт вăл сывламасăр куçне хупса тăчĕ. Унтан гран пăшăлтатса:

— Ара, ун юлташĕ, Уçăп Кальчугина чарăнса юлчĕ, ыран килсе çитет терĕ-çке...

Ехрим старик ĕç мĕнле пулнине йĕркипе каласа пачĕ.

— Эпир унăн юлташĕпе Уçăпăн ӳтне шыраса тупса вăхăтлăха çĕр айне пытартăмăр. Кĕçĕр çавăнпа час таврăнаймарăмăр,—тесе пĕтерчĕ вăл хăйĕн сăмахне.

— Вĕсем... ман упăшкана вĕлернĕ... Каçарассăм çук вĕсене уншăн!..—терĕ Васса çиллĕн.

Ехрим старик мунчана кайса шахтера чёнсе пычё. Виççён пёрлешсе, хăйсен тăшманёсене мёнле таварасси çинчен канашларёç. Унтан виççёшё те харăс пӳрте кёчёç.

Утă çулнă вăхăтри кёске çёр хăвăрт иртсе кайрё. Хёвел хёрелсе тухрё. Анчах ялтан офицерпа икё салтак тухса кайнине никам та курмарё. Вёсем çинчен Ехрим старик, Васса тата шахтер çеç пёлеççё. Вёсем хăйсен тăшманёсене кирлё пек тавăрчёç.

— Халё ёнтё, мучи, пирён алăра икё винтовка, тепёр наган пур. Татах та тупас пулать пирён вёсене. Шуррисене хирёç тăрса çапăçма чухăн хресченсенчен партизан отрячё тăвас пулать,—терё Морозов.

— Эпир те кинпе санран юлмастпăр!—терё Ехрим старик татăклăн.

II

Яла карательнăй отряд килес умён, Ехрим мучипе Васса, шахтер хушнипе, килти хаклăрах япаласене тата икё ёнине чухăн пуранакан кӳршё çыннине пăхса усрама парса хаварчёç те Барсас хёррине васкарёç.

Пысăках мар кимё инçе çула тухма хатёр: шахтер унта шур офицерпа салтаксенчен туртса илнё пăшалсене, çимелли, тăхăнмалли япаласене типтерлён майлаштарса хунă.

— Ну, васкар, мучи, çынсем ан курччёр тата,—терё шахтер, ун-кун пăхкаласа.

Старик пёр саманта ял çинелле пăхса шухăша кайса тăчё. Мён каласан та шел: паян вăл, ватă çын, тăван ялне, çуртне, выльăх-чёрлёхне пăрахса тухса каять. Нимён тума та çук. Вăхăчё çавăн пек.

— Ну, мучи, çынсем курман чух васкар,—терё Морозов тепёр хут.

Старик ыйхăран вăраннă пек шартах сикрё:

— Эпё... хатёр. Кайрăмăр,—терё вăл, кимё сăмсине шалалла пăрса.

Тепёр самантран кимё çыран хёрринчен уйăрăлчё те, шыва ик еннелле çурса, шалалла кёрсе кайрё.

Кимё çăмăллăн та хăвăртгăн аначалла шăвать. Çыран хёрринче ёмёр-ёмёр пуртă, пăчăка сасси илтмен пихтăсем, чăрăшсем, кедрсем ларса юлаççё.

Шахтерпа Васса юнашар ларнă: кёсменёсемпе шыва хумхантарса, мёнпур вăйран ишеççё. Ехрим старик кимме тытса пырать.

— Ну, мучи, вăрçа каятпăр вĕт!—тесе хăвăртран хăвăрт ишет шахтер.

— Каятпăр, ачамсем, каятпăр... Виççĕшне тĕп турăмăр, тата пĕр виçĕ пинĕшне пĕтересчĕ вĕсене, вара тин Уçăпшăн çунакан чĕрем лăпланĕччĕ,—тет ассăн та çиллĕн Ехрим старик.

— Виçĕ пин мар, тĕпĕ-йĕрĕпех кăкласа тăкмалла вĕсене. Вара тин эпир ирĕклĕн пурăнма пултаратпăр,—тесе сăмах хушать Васса.

— Тĕрĕс калатăн, Васса. Вăл тăшмансене пĕр тымар юлмиччен кăкласа тăкмалла. Унсăрăн эпир ирĕклĕ те телейлĕ пурăнăç курас çук,—тесе çирĕплетет шахтер.

Пĕр тавлăк, ниçта чарăнмасăр, Барсас тăрăх анаталла анчĕç вĕсем. Иккĕмĕш кунне Яя шывĕ çине тухрĕç. Яя шывĕ те, Барсас шывĕ пекех, хăвăрттăн та пĕтĕрĕнсе юхать, анчах унăн шывĕ Барсасăнни пек хура тĕслĕ мар, кĕмĕл пек çап-çутă. Пăхсан—тĕпĕ курăнать. Пуласем ишсе çӳрени те паллă. Барсаспа Яя пĕр çĕре пырса кĕнĕ çĕрте пĕр-пĕринпе хутшăнасшăн мар пек вăрахчен кĕрмешеççĕ. Мĕн чухлĕ кĕрмешсен те, Яя шывĕ Барсас шывне çĕнтерет: пĕр çухрăм пек анаталла ансан, Барсас шывĕ пăтранса каять. Яя шывĕ ăна хăй ăшне пĕтĕрсе чикет. Анаталла вара кĕмĕл тĕслĕ çап-çутă тăрă шыв юхать.

Яя тăрăх çурлă-кĕрлĕ пысăк мар пароходсем те улăхса анаççĕ. Сулăсем юхаççĕ. Халĕ пароходсем те, сулăсем те курăнмаççĕ. Пĕртен-пĕр кимĕ çеç никамран хăрамасăр анаталла анать: ун çинче пĕр хĕрарăм тата икĕ арçын ларса пыраççĕ.

Кимĕ Яя тăрăх пĕр пилĕк-ултă çухрăм пек анчĕ те:

— Çитрĕмĕр. Çаканта анатпăр,—терĕ шахтер.

Ехрим старик, кимĕ сăмсине пăрса, çыран хĕррине илсе пычĕ. Унтан вĕсем кимме шывран сĕтĕрсе кăларса, чăтлăх хăва ăшне кĕртсе лартрĕç.

— Кирлĕ пулĕ, çынсем курса ларса ан кайччĕр,—терĕ старик.

Ларса табак туртрĕç. Пĕрер татăк сухари çирĕç. Унтан, Ехрим старикпе шахтер винтовкисене илчĕç те, Вассана наган парса, вăрман ăшнелле кĕрсе кайрĕç.

Вăрах тя утмарĕç, Том шывĕ хĕррине çитрĕç.

— Çак таврара инçе мар партизан отрячĕ пулма кирлĕ,—терĕ шахтер.

Чарăнчĕç. Васса çыран хĕррине анса шыв ĕçрĕ, Морозовпа Ехрим старик ăна кĕтсе тăчĕç. Сасартăк:

— Стой! Аллăрсене çĕклĕр, вырăнтан ан хускалăр!— кăшкăрчĕ пĕр сасă.

Васса шартах сикрĕ, çаврăнса пăхрĕ, хăй те сисмерĕ, аллинчи наганне хыттăн чăмăртаса тытрĕ: çыран хĕрринче, пăшалне тытса, кивĕ накидка тăхăннă çын тăрать.

— Ну, парăнăр!—тет вăл татăклăн.

Ехрим старикпе шахтер пĕр-пĕрин çине пăхса илчĕç.

— Камсем пулатăр эсир?—ыйтрĕ Ехрим старик.

— Пăшалăрсене çакăр, утăр ман умра!—приказ пачĕ накидка тăхăннă çын.—Лере паллашăпăр.

— Партизансем пулас... Утар, мучи...—пăшăлтатрĕ шахтер, пăшалне хулĕ урлă çакса,—эпĕ кăштах паллатăп ку çынва...

Вĕсем накидка тăхăннă çын умĕн мирлĕнех утса пычĕç.

Нумаях та утмарĕç вĕсем, пысăках мар ĕшнери темĕнле пĕчĕк пӳрт патне тухрĕç.

Накидка тăхăннă çын вĕсене отряд начальникĕ патне илсе пычĕ.

— Рогов юлташ, акă—темĕнле çынсем, хĕçпăшаллă, —терĕ вăл начальник умне пырса.

Хура майăхлă, çӳçне шакла кастарнă Рогов хăй умĕнче тăракан пĕр хĕрарăмпа икĕ арçын çине тинкерсе пăхрĕ.

— Ара, Ехрим мучи, эсĕ вĕт ку?!—тĕлĕнсе ыйтрĕ Рогов.—Мĕнле майпа?

Ехрим старик те Рогова часах палласа илчĕ: ĕлĕк Рогов шахтăра ĕçлетчĕ. Çулла час-часах Барсас çине пулă тытма анатчĕ. Ехрим старикпе темиçе каç та пĕрле çĕр каçнă вĕсем. Пулă шӳрпи пĕçерсе çинĕ. 1914-мĕш çул Рогова вăрçа илсе кайнă. Çавăнтан вара Ехрим старик Рогова курман.

— Чим, Рогов вĕт эсĕ, Рогов!—хавасланса ӳкрĕ Ехрим старик.—Пулăç пулăçа инçетрен курать!

Вĕсем пĕр-пĕрин аллисене хыттăн чăмăртарĕç.

— Уçăп мĕнле, ăçта вăл? Ку кам пулать сирĕн?— ыйтрĕ Рогов, шахтер çине пăхса.

— Ку—Уçăп юлташĕ... Шахтер. Уçăпа... шуррисем вĕлерчĕç. Юлташĕпе—Иванпа пĕрле пулнă вĕсем,—терĕ пуçне усса Ехрим старик. Унтан вăл Уçăпа шуррисем мĕнле вĕлернине тĕплĕн каласа пачĕ. Рогов старик самахне шăппăн итлесе ларчĕ.

— Вĕсем манăн пĕртен-пĕр ывăлăма айăпсăр персе вĕлерчĕç, эпир те вĕсене шеллесе тăмарăмăр: вӳхрепе

ярса, çĕрпе витсе хутăмăр. Ак, пăшалĕсем пирĕн алăра, —тесе пĕтерчĕ хăйĕн сăмахне Ехрим старик.

— Уçăпа питех те шел... Анчах эсир аван тунă. Çапла кирлĕ вĕсене. Тăшман сана пĕрре çапсан, эсĕ ăна виçĕ хут ытларах тавăрса пама тăрăш. Çавăн чухне çеç тăшмана çĕнтерме пулать,—терĕ Рогов, шухăша кайрĕ.

Ывăлĕ асне килнипе старик кăмăлĕ хуçăлчĕ пулас, унăн ирĕксĕрех куçĕсем шывланса, пĕркеленчĕк вată пичĕ тăрăх куççуль тумламĕсем юхса анчĕç.

— Ну, ан кулян, Ехрим мучи. Эпир—партизансем. Ăнлантăм эпĕ сире: эсир пирĕн пата килнĕ. Пĕрле çапăçăпăр тăшмансемпе!—тесе лăплантарчĕ Рогов старике.

Ехрим старик шывланнă куçĕсене çан вĕçĕпе шăлса типĕтрĕ те:—Çаплах, ачамсем, пĕрле çапăçăпăр, халĕ йăлтах ăнлантăм ĕнтĕ эпĕ,—терĕ вăл, аллинчи пăшалне чăмăртаса.

Рогов пулас партизансене пÿрте чĕнсе кÿртрĕ.

— Кĕçĕр е ыран ирхине шуррисен парохочĕ Кузнецкран Томск еннелле иртмелле. Пирĕн çав парохода кирек мĕнле пулсан та хамăр алла тытса илмелле: унта хĕçпăшал нумай тиенĕ. Пире хĕçпăшал çăкăртан та ытларах кирлĕ. Хальхи вăхăтра революцие çынсемпе хĕçпăшал тăваççĕ,—терĕ Рогов.

— Тартас марччĕ, тытса илесехчĕ апла вăл парохода,—терĕ Ехрим старик.

Рогов, шакла пуçне шăлкаласа, пĕр вăхăт шухăша кайса ларчĕ.

— Темле, те хуса çитсе тытрĕç ĕнтĕ,—терĕ вăл пăлхануллăн.

Ехрим старик ăна ăнланаймарĕ.

— Паян ирхине,—терĕ Рогов,—пĕри тарчĕ пирĕн, шпион пулнă. Хыççăн ятăм. Тытса килĕç-и, килмĕç-и... Тытса килмесен—начар пулать, вăл пирĕн плана пĕлет: пароход каялла кайма пултарать.

Роговăн куçĕсем сасартăк çутăлса кайрĕç.

— Тартас çук-ха ăна манăн ăмăрткайăксем!—терĕ вăл.

— Тытсан, тем пекех лайăхчĕ...—пăшăлтатрĕ Ехрим старик.

— Ну, Васса юлташăм, эсĕ отрядра санитарка пулăн. Пирĕн халь пĕр санитар çеç. Вăл сана суранланнă юлташсене перевязка тума вĕрентĕ. Эсĕ, Морозов юлташ, ман

пулăшаканни пулăн,—терĕ Рогов хăйне итлесе ларакан Вассапа шахтер çине пăхса.

— Мана мĕнле ĕç хушатăн, Рогов юлташ?—ыйтрĕ Ехрим старик.

— Эсĕ хуть те хăçан та манпа пĕрле пулатăн, Ехрим мучи,—терĕ Рогов.

Старик нимĕн те чĕнмерĕ. Кăлкан пек шупка-сарă сухалне çеç каллĕ-маллĕ сăтăркаласа илчĕ.

Кĕçех пÿрте икĕ партизан пырса кĕчĕç. Хăйсем халь çеç шыва кĕрсе тухнă пек, йĕп-йĕпе тарланă.

— Ну, мĕнле,—тытрăр-и?—васкаса ыйтрĕ Рогов.

— Тытрăмăр, командир юлташ!—терĕç иккĕшĕ те харăс.

— Ăçта вăл?

— Хĕрĕх аршăн çÿллĕшĕ чăнкă çыран сăмсахĕнчен Том шывне чăмтартăмăр. Сикесшĕн мар, каналья: „Каçарăр.. Эпĕ калле отряда пыратăп. Сирĕнпе пĕрле пурнăçа шеллемесĕр çапăçăп. Эпĕ... йăнăшрăм“, тесе йăлăнать, куççулĕпех йĕрет. Ну-и шыва чăмтартăмăр ăна, персе сас тумарăмăр.

— Молодцы! Аван тунă. Халĕ ĕнтĕ пырăр, канăр,— терĕ Рогов партизансене.

Каçхине Том çыранĕ хĕррине, пароход килнине хураллама, Рогов хăй тухрĕ. Унпа пĕрле Ехрим старик те пур. Партизансем хÿтĕ вырăн суйласа çыран хĕррипе ларса тухрĕç. Вĕсен умĕнче кĕмĕл пек çутă Том шывĕ сарăлса выртать. Йĕри-тавра тайга вăрманĕ кашласа ларать.

Çуллахи çĕр кĕске. Лайăххăн тĕттĕм пулса та çитмерĕ,—хĕвел тухăçĕ кăвакара та пуçларĕ.

Сасартăк инçетре-инçетре, шыв çинче пĕр хура пăнчă курăнса кайрĕ.

— Пăхăр-ха, пăхăр,—мĕн хури унта?—терĕ Ехрим старик, хыпкаланса.

Рогов куçĕ умне бинокль тытса пăхрĕ.

— Кимĕ хăпарать, икĕ çын ишеççĕ. Разведка килет —шуррисен разведки. Вăл кимĕ çинчи çынсене пăшал сасси кăлармасăр илес пулать. Айтăр манпа виçĕ çын: Морозов, Иванов... айтăр!

— Эпĕ те пырам-и?—васкаса ÿкрĕ Ехрим старик.

Вĕсем пиллĕкĕн шыв хĕррине анчĕç. Самантрах çамасланса, хăмăш чăтлăхне курăнмалла мар пытанса ларчĕç.

Кимĕ çыран хĕррипе хăпарать. Çанталăк тăп тăрать, кĕсменпе шыва çаптарса ишни таçтанах илтĕнет. Ак партизансем çумĕнченех ишсе иртет кимĕ.

— Стой!.. Чарăнăр!—терĕ Рогов, хăмăш чăтлăхĕнчен çĕкленсе. Унпа пĕрле тата тăватă мĕлке çĕкленчĕç. Пурте пăшалĕсене хатĕр тытнă.

Кимĕ чарăнчĕ.

— Кимĕ çинчен анăр!—хушрĕ Рогов.

Икĕ çын мирлĕнех, ним пулман пек, кимĕ çинчен анчĕç.

— Ухтарăр!—приказ пачĕ Рогов.

— Пăшал таврашĕ çук... Шыва пăрахма ĕлкĕрнĕ пулас...—терĕ Ехрим старик, икĕ ют çынна ухтарса пĕтерсен.

— Камсем пулатăр, ăçта каятăр?

— Эпир хресченсем... Хăнана кайма тухнăччĕ...—терĕ вĕсенчен пĕри, чĕтрекен сассипе.

— Мĕншĕн çĕрле, кăнтăрла мар?

Тыткăна лекнĕ икĕ çын Рогов çине усал йытăсем пек, сăмах чĕнмесĕр, сăмса тăрăх пăхса тăраççĕ.

— А ну-ка, хывăр çиелти тумтирсене! Ну, ну, хывăр! Вот çапла çарамасах юлăр..

Икĕ çын хăйсен умне хывса хунă тумтирсене Рогов пĕрерĕн-пĕрерĕн çавăркаласа пăхма пуçларĕ.

— Кусем мĕнле кĕлемесем кĕпе-йĕм çинче!? Салтак кĕписем вĕт кусем!—терĕ Рогов, тыткăнри çынсем çине сиввĕн пăхса.—Мужиксем апла эсир? Хăш ялсем? Ăçта каятăр?

— Утара...

— Кам патне?—хыпăнса ыйтрĕ Ехрим старик.

Тыткăнри çынсем пĕр-пĕрин çине пăхса илчĕç те пуçĕсене усрĕç.

— Чĕнместĕр? Утарта кам пурăннине пĕлместĕр апла? Шел!—терĕ Рогов. Ну, ыйтса тăма кирлĕ те мар: пароход кунта хăçан пулассине эпир сирĕнсĕрех аван пĕлетпĕр.

Йĕри-тавра шăп. Ниçта нимĕнле сас-чӳ те илтĕнмест. Пĕр тайга вăрманĕ кăна майĕпен кашлать. Çанталăк уяр. Тӳпери çăлтăрсем йăлтăртатса курăнаççĕ. Тул çутăлса килет. Том шывĕнчен кăвак тĕтре çĕкленет.

— Ну, юлташсем, кусене шаларах, чăтлăхалла илсе кайăр... Пăшал сасси—ни-ни!—терĕ Рогов.

— Тăванăрсем патне хăнана çитеймерĕр... Халĕ айтăр ĕнтĕ хăнана пирĕн пата. Эпир сире самогонка мар, таса

спирт ĕçтерĕпĕр—терĕ Ехрим старик, тыткăна лекнĕ шуррисен разведчикĕсен аллисене каялла çыхса.

— Ну, айтăр...

— Ну, юлташсем,—терĕ Рогов.—Хатĕр пулăр! Час пароход килсе çитме тивĕçлĕ. Разведка пирĕн алăра!

Кăшт тăрсан тыткăнрисене илсе кайнă партизансем таврăнчĕç.

— Ну! мĕнле?—ыйтрĕ Рогов.

— Хăнана кайрĕç,—кĕскен ответлерĕ Ехрим старик. Отряд пароход килессе кĕтет. Партизансем тӳсейме-сĕр тăра-тăра пăхаççĕ.

— Çук, курăнмасть-ха...—пĕлтереççĕ пĕрне пĕри.

Вăрах кĕтни час çитрĕ: тепĕр вун-вунпилĕк минутран пароход курăнчĕ. Шыва хумхатса ишсе килни лайăх илтĕнет.

— Килет!..

— Килет!—сасăсем илтĕнчĕç.

— Команда пулмасăр, нимĕн те тумалла мар!—приказ пачĕ Рогов.

Пароход çинче çута çук. Тул çутăлса килнĕ май, корма çинче ик çын хуралта тăни те, руль будкинчи рулевой та уççăнах курăнаççĕ.

— Малти караулти икĕ çыннине тата рулевойне илес пулать пуль,—пăшăлтатать Ехрим старик.

Ак, пароход шăп отряд тĕлне ишсе çитрĕ.

— Рогов юлташ, ма пеме команда памастăр? Иртсе каять вĕт...—тӳсеймест Ехрим старик.

— Ан васка. Ĕлкĕретпĕр!—пӳлет ăна Рогов.

Сасартăк капитан будкинче йăлтăр çута курăнчĕ.

— Караултисене, рулевоя, капитан будкинчисене илес пулать,—приказ пачĕ Рогов.

— Отряд пли!..

Виççĕр аллă пăшал пĕр пăшал сасси пек харăс ухлатрĕ. Урăм-сурăм янраса кайрĕ тайга. Пăшал сасси нумайччен ухлатса тăчĕ сĕм вăрман тăрăх. Пароход чарăнчĕ, каялла ишме пуçларĕ. Тĕтĕм сирĕлсен, палуба çинче çынсем тĕркĕшсе чупни уççăнах курăнчĕ.

— Команда, пли!—тепĕр хут илтĕнчĕ Рогов сасси. Палуба çинчен шуррисем шывалла сикме пуçларĕç.

— Палуба çине!—команда пачĕ Рогов. Хăй пуринчен малтан шыва сикрĕ.

Пароход хăяккăн пăрăнса çыран хĕрринелле юхса пычĕ те ăшăх тĕле чарăнса ларчĕ.

— Парăнăр! Малта мина!—кăшкăрчĕ Рогов.

Партизансем парохода сырăнса илсе, васкавлăн палуба çине улăхма пуçларĕç. Палуба çинче тытăçу пуçланчĕ. Шуррисем сахаллăн иккен. Тытăçу нумая пымарĕ. Сывă юлнисем, аллисене çĕклесе, парăннине пĕлтерчĕç. Рогов тӳрех капитан будкине çĕмĕрсе кĕчĕ. Юнланса пĕтнĕ капитан урай варринче нăйкăшса выртать.

— Капитана халех перевязка тăвăр!—приказ пачĕ Рогов.

Вассапа тепĕр санитар васкаса капитан патне пычĕç; вĕсем унăн амманнă хулне перевязка тума пуçларĕç.

— Ан чăрманăр. Персе пăрахăр,—турткаланать капитан.

— Сирĕн, господин, хул кăна аманнă,—тавăрать ăна Васса.

Капитан перевязка тума памасть.

— Рогов юлташ, капитан перевязка тутармасть,—пĕлтерет Васса.

Рогов капитан умне утса пычĕ.

— Капитан, ан ухмахланăр! Эсир çăмăл аманнă. Эсир пире кирлĕ пулатăр.

— Эпĕ тăшмансен тарçи пулма пултараймастăп!—хаяррăн тавăрать капитан.

— Сирĕн обязанность: парохода хĕрлисем патне çитересси. Пирĕн кунта ăста матроссем пур. Пулăшĕç вĕсем сире. Чăн-чăн пурăнăç парăпăр сире.

— Çук, персе пăрахăр.

Рогов сăмах чĕнмесĕр наганне туртса кăларчĕ те капитан çинелле тĕллерĕ.

— Ну, сирĕн ирĕк,—терĕ вăл,—килĕшетĕр-и?— Е вилĕм, е пурăнăç?..

Капитан хыпкаланса ӳкрĕ. Пĕр вăхăт сăмах чĕнмесĕр шухăша кайса ларчĕ.

— Сирĕн арăму, ывăлусем те пулĕ?—тесе илчĕ ăна Рогов.

— Килĕшетĕп,—терĕ капитан,—перевязка тăвăр!

Вассапа санитар капитана типтерлĕн те çемçен перевязка турĕç.

Тепĕр сехетрен пароход хускалса кайрĕ. Ун çине партизан отрячĕ тиеннĕ. Капитанпа юнашар Рогов ларса пырать. Мачта тăрринче хĕрлĕ ялав вĕлкĕшет.

— Вăт ку лайăх! Хĕрлĕ Çарпа пĕрлешетпĕр, Рогов юлташ!—терĕ хавассăн Ехрим старик.

— Пĕрлешетпĕр, пĕрлешетпĕр!—тет Рогов, Ехрим мучине çурăмран лăпкаса.—Хĕрлĕ Çара пирĕн çулпуç-сем—Ленинпа Сталин ертсе пыраççĕ. Вĕсемпе пĕрле эпир тăшмансене çĕнтеретпĕрех!

Пароход шыва ик еннелле çурса, хăвăрттăн малалла шăвать. Шыв хумĕсем çыран хĕррине çите-çите çапăн-са юлаççĕ...

## УНКĂРАН

### I

Тарăн шухăша путса, йывăррăн кашлаççĕ тайгари ватă кедрсем, чăрăшсем, пихтăсем. Йĕри-тавра нӳрĕх, çĕрĕк йывăç, кăмпа, мăк шăрши. Сывлама йывăр. Çăварпа сывласан, пыр тĕпне касать, сăмсапа сывласан, вĕтĕ табак туртнă пек ӳсĕрттерет. Хура сăхман пек карса илнĕ хура пĕлĕтрен кĕрхи вĕтĕ çумăр йăсласа анать. Çавăнпа та çанталăк пушшех нӳрлĕ сăнлă курăнать.

Щетинкин партизан отрячĕ, шуррисен отрячĕпе виçĕ тавлăк пĕр чарăнмасăр çапăçнă хыççăн, ывăннă,—малалла чăтса тăрайман, вăхăтлăха чакма шутланă.

Шуррисем ытла хĕстернипе вăл çĕрле чакнă. Çумăр çунипе кĕркуннехи çĕр тĕттĕм пулнă. Уйăх мар, çăлтăр та курăнман. Çавăн пирки отряд ăçталла чакнине Щетинкин хăй те, партизанĕсем те чухласа илеймен. Юлашкинчен, аташса, çын кĕрсе тухайми лачака ункине кĕрсе кайнă. Лачака йĕри-тавра хĕрĕх çухрăм. Шăп вăта·çĕрĕнче утрав. Утравĕн урлăшĕултă çухрăм, тăршшĕ—тăхăр çухрăм.

Çав лачака ункинчен ĕнтĕ Абакан ятлă пысăк, пулăллă, ыткăнса юхакан, сулхăн шывлă çырма пуçланса каять. Абакан тăрăх çулла пĕчĕкрех пароходсем те çӳреççĕ. Абакан шывĕ, Минусинск хулинчен кăшт аяларах, Енисей шывне пырса хутшăнать.

Çав лачака ункине кĕрсен, унтан тухма питĕ кансĕр. Икĕ вырăнта çеç сукмаксем пур. Вăл сукмаксене хăшпĕр çынсем çеç пĕлеççĕ.

Çутăлса, курăна пуçласан тин Щетинкин хăйĕн отрячĕпе аташса, йăнăш çулпа кĕрсе кайнине чухласа илчĕ.

— Стой! Чарăнăр, юлташсем! Эпир йăнăш çулпа кĕрсе кайнă. Кам чухлать—хăш вырăнта эпир? Мана пирĕн отряд Абакан лачаки ункине çитсе кĕнĕ пек туйăнать,— терĕ вăл, виçĕ тавлăк пĕр хĕлхем çисе курман, хĕç пек çӳхелнĕ тимĕр-кăвак айăрне чарса. Айăрĕ те аташса йăнăш çулпа кĕрсе кайнине сисрĕ пулас: пуçне çĕклерĕ те, хăлхисене тăратса, унталла-кунталла пăхкаласа илчĕ.

— Тĕрĕс, Щетинкин юлташ, пирĕн отряд лачака ункине çитсе кĕнĕ. Малалла кайма çул çук. Кĕнĕ йĕрпе каялла тухмасан, эпир ку лачака ункинчен нихçан та тухас çук. Малалла кайсан та, айккинелле пăрăнсан та, лашапа та, çуран та каçма вырăн çук. Пирĕн йĕри-тавра —кĕсел пек хумханса тăракан лачака. Ку лачака ункинче сахалах мар охотниксем, ылттăн шыракансем, аташса кĕрсе, тухаймасăр пĕтнĕ,—терĕ Черемховски шахтинчен пынă шахтер, партизан Трусов.

Щетинкин Трусовăн куçĕсенчен шăтарас пек пăхса илчĕ те кăшт шухăша кайса ларчĕ. Унтан айĕнчи ăйăрĕн пĕкĕ пек авăнчăк мăйĕнчен аллипе çупăрласа:

— Çук, Трусов юлташ, кĕнĕ йĕрпе калле тухма юрамасть: хăрушă, мĕншĕн тесен шуррисем пирĕн отряд лачака ункине кĕрсе кайнине сиссен, эпир калле тухассах сыхласа, отряда пĕтĕмпех çĕмĕрсе тăкма пултараççĕ. Пĕтĕм вăя хурса пуçтарнă отряда салатса ярсан, çĕнĕрен пуçтарма питĕ йывăр ăна.

— Курăпăр. Кĕнĕ йĕрпе каймасан, ăçтан ертсе тухăн отряда?—çилленсе, пăрăнса кайрĕ Трусов.

— Юри улталаса ертсе кĕнĕ пуль пире ку лачака ункине. Отрядра шуррисен шпионĕ пур пулĕ,—мăкăрмăкăр калаçни илтĕнчĕ партизансем хушшинче.

— Ан хăрăр. Отрядра нимĕнле шпион та çук, юлташсем. Çĕр питĕ тĕттĕм пулнипе хамăрах йанăш кĕрсе кайнă,—тесе лăплантарчĕ Щетинкин партизансене хăйĕн яланхи ăшă сăмахĕпе.

— Щетинкин юлташ! Эпĕ ку лачака ункинчен тухма сукмак пĕлетĕп. Анчах халь хăш вырăнта иккенне кăшт маннă. Чухласа илейместĕп. Эсир мана шанатăр пулсан, эпĕ малтан разведкăна кайса килем. Вара пĕтĕм отрядпа тухăпăр,—терĕ партизан Макар.

Макар—çурта пек яштака пӳллĕ маттур йĕкĕт. Унăн çавракa тулли куç шуррисем, çĕр çывăрмасăр çӳренипе, сарăхнă. Вĕсем ылттăн тĕслĕ, сап-сарă курăнаççĕ. Питçăмартийĕсем тин пиçсе çитнĕ панулми пек,—таса, хĕрлĕ. Макар тăваттăмĕш çул ĕнтĕ пĕр канмасăр вăрçăра çӳрет. Малтан вăл Германи вăрçинче икĕ çул çӳресе таврăннă. Унтан килсен, пĕр эрне пек пурăнсанах, ăна Колчак çарне тытса кайнă. Унта нумай çӳремен вăл, —Щетинкин отрядне тарса пынă. Партизан отрядĕнче иккĕмĕш çул ĕнтĕ тайга тăрăх выçăллă-тутăллă, çĕтĕк-çатăк тумтирпе, эрни-эрнипе çывăрмасăр, уйăхĕ-уйăхĕпе пит-

куҫне ҫумасӑр, Колчакӑн карательнӑй отрячӗсемпе ҫапӑҫать. Партизана кашни сехетре, кашни минутра, кашни секундра — малта та, хыҫалта та — вилӗм сыхласа ҫӳрет. Анчах, мӗнле сыхласан та, Макара мӑйӗнчен ҫавӑрса тытса, пусса ӳкерейместь. Макар вилӗме парӑнмасть. Хӑрамасть. Вӑл паттӑр. Ҫӑмӑл ӗҫ мар вӑл пуянсемпе ҫапӑҫасси, вӗсене ҫӗнтересси...

Макар ҫамрӑк-ха. Тутисемпе янаххисене тин мӑйӑхсухал сӑрать пулсан та, вӑл нумай пурӑннӑ, нумай илтнӗ, нумай пӗлет, нумай тӳснӗ. Малта татах та нумай-ха курмалли, илтмелли, пӗлмелли, тӳсмелли. Макарӑн пурнӑҫӗ тин пуҫланать-ха.

Салтака кайиччен Макар тӗрлӗ прииск-шахтӑсенче ӗҫлесе пурӑннӑ. Кунта тӗрлӗ ҫын пулнӑ,—аванни те, усалли те. Шахта хуҫисем рабочисен культурлӑхӗшӗн тӑрӑшман, ҫавӑнпа та ӗҫлекенсенчен хӑшӗ-пӗрисем пушӑ вӑхӑта эрех ӗҫсе, картла выляса, хӗрарӑмсен хыҫӗнчен хӑваласа ирттернӗ, тепӗр чухне вӗсем айапсӑр ҫыннах тыта-тыта хӗненӗ. Макар та вӗсенчен юлман. вӑл та ҫавӑн пекех ирсӗр хӑтланнӑ.

Макар ҫак Абакан лачакинче эрни-эрнипе, уйӑхӗ-уйӑхӗпе ылттӑн ҫуса выртнӑ. Кунта вӑл урлӑ та, тӑрӑх та, ӑҫтан кӗмелли, ӑҫтан тухмалли сукмаксем тӑрӑх каллӗ-маллӗ сахалах мар утнӑ, чупнӑ. Ҫавӑнпа та Макар ҫак лачака ункине хӑй алли ҫинчи пӳрнисем пек таса пӗлет.

Макар тӗнчере ҫирӗм улттӑмӗш ҫул ҫеҫ пурӑнать. Тӳррипе каласан, вӑл хӑй ку таранччен мӗнпӗн пурӑннине те пӗлмен. Уншӑн эрех, табак, карт, хӗрарӑм, ҫапӑҫу, ирсӗр сӑмахсем пулсан, ҫитнӗ. Ҫак малта кӑтартнӑ пурнӑҫшӑн Макар ылттӑн ҫеҫ мар, чунне пама та хатӗр пулнӑ. Шеллемен.

Ӗҫсе ӳсӗрӗлсе, урнӑ йытӑ пек, кампа лекнӗ, унпа ҫапӑҫса ҫӳренипе Макар икӗ малти шӑлне ҫухатнӑ. Хӑй ылттӑн чавакан пулсан та, Макар хуть ҫав шӑлӗсене те ылттӑнран ларттарайман. Малти шӑлӗсем ҫуккипе, калаҫнӑ чух ҫӑварӗнчи хӗрлӗ чӗлхи каллӗ-маллӗ пӑтранни курӑнать. Сӑмахӗсем селӗп тухнинчен Макар хӑш чух вӑтанать пулас. Ун пек чух вара Макар, катӑк шӑлӗсене тутисемпе хупласа:

— Колчака ҫӗнтерсе, вӑрҫӑ пӗтсен, каллех ылттӑн ҫума пуҫласанах, пуринчен малтан шӑлсене ылттӑнран ларттаратӑп,—тесе мухтанать партизансем умӗнче. Юратать Макар хӑйӗн юлташӗсем умӗнче мухтанма.

Анчах мĕн каласан та, отрядра Макарăн усаллинчен ырлăхĕ нумайрах, мĕншĕн тесен вăл разведкăна кайсан, ĕçне тумасăр тавăрăнман. Макар, епле йывăр пулсан та, яланах шуррисем ăçта, хăш вырăнта, хăш ялта тăнине, мĕн чухлĕ вăй пуррине, мĕнле хĕçпăшалланнине тĕплĕн пĕлсе тавăрăннă. Макар разведки хыççăн отряд пĕр шикленмесĕр вырăнтан вырăна куçма пуçлать. Çак енчен пăхсан вара, Щетинкин Макар çине хăй çине шаннă пекех шаннă.

Щетинкин халĕ те чи малтан Макар çине пăхса илчĕ.

— Разведкăна, Макар, эсир Фроловпа иксĕр кайăр. Отряда кăлармалли çула тĕплĕн пĕлмесĕр калле ан çавăрăнăр. Яла-мĕне çитсе лексен, ĕççе, асса ан çӳрĕр. Юлашки хут астутаратăп,—кайран хресченсем мĕн те пулин каласси ан пултăр. Ун пек, кун пек пулас пулсан, малашне ман отряда юлăп тесе ан та шутла. Отряд ятне çĕртсе ан çӳре. Илтрĕн-и?.. Шуррисен отрячĕ хăш ялта тăрать, мĕн чухлĕ унăн вăйĕ, çавна пĕлсе таврăнăр. Анчах нумай ан çӳрĕр. Пит нумай çӳресен—çур тавлăк. Ăнлантăр-и?—начальникле хушса houses каларĕ Щетинкин.

Макар Щетинкин сăмахĕсемпе пĕтĕмпех килĕшрĕ. Хирĕç чĕнмерĕ. Яланхи пек, пуçне çеç тайрĕ. Макар нумай калаçмасть. Анчах мĕн хушнине тĕплĕн тума тăрăшать.

Разведкăна каякансемпе калаçса пĕтерсен, Щетинкин ытти партизансен енне çаврăнса тăчĕ.

— Лашăрсем çинчен анса, вĕсене курăк çине çиме ярăр. Кирлĕ вырăнсене хуралсем тăратăр!—тесе приказ пачĕ.

Партизансем çавăнтах лашисем çийĕсенчен сике-сике анса, çăварлăхсене кăларса, тăм ӳкнипе сарăха пуçланă вăрăм курăк çине ячĕç. Хăйсем ушкăнăн-ушкăнăн канма ларчĕç, хăшĕсем курăк çине чăсăлса выртрĕç.

Макарпа Фролов виçĕ тавлăк çитермен выçă лашисене майĕпен уттарчĕç. Вĕсене Щетинкин курăнми пуличченех пăхса тăрса ăсатрĕ.

## II

Йĕри-тавра вăрман кашласа ларать. Нӳрлĕ лачака шăрши сăмсана çурать. Кĕрхи шăнасем вилес умĕн аран-аран нăйласа вĕçеççĕ. Сентябрь хĕвелĕ майĕпен кăнтăр-

ланалла кармашать. Лаша ури айĕнче кĕрхи курăк чаштартатать. Макарпа Фролов лачака тăрăх тăвăр сукмакпа пыраççĕ. Макар малта пырать, Фролов—кайра. Иккĕшĕ те вĕсем çын илтмелле мар пăшăл-пăшăл калаçаççĕ. Çапла калаçса пынă çĕртех сисмен те, лачака ункинчен тухса та кайнă. Малта, инçе те мар, мечетле тутар ялĕ курăнать.

— Пăх-ха, пăх, Макар. Яла çитсе тухрăмăр. Мĕнле ял вăл, пĕлетĕн-и?—савăнăçлă кăшкăрса ячĕ Фролов.

— Кăшлав вăл, тутар ялĕ,—кĕскен пĕлтерчĕ Макар.

— Атя, кĕрсе апатланса тухар, манăн пит çиес килет. Санăн епле?—терĕ Фролов.

— Эпĕ те вĕт санпа пĕрлех виççĕмĕш кун çимен. Кĕрессипе кĕрĕпĕр те, юланутпа мар, çуран. Ку ялта шуррисен отрячĕ тăма пултарать, мĕншĕн тесен кунта тайга хĕрри. Пуян ял вăл Кăшлав,—терĕ Макар, ун-кун пăхкаласа.

— Апла лашасене ак çак кукăра кĕртсе кăкарса хăваратпăр та хамăр çуран кĕретпĕр,—тесе, Фролов утланнă лашин пуçне пĕр çăра хуран вăрманĕ еннелле пăрса уттарчĕ. Вăрман патне çитсе пынă чух сасартăк тăватă юланут, лашисене казакла йăкăлт-йăкăлт сиктерсе, пырса та тухрĕç.

— Лекрĕмĕр. Ав шуррисен разведки,—тесе, хăранă сассипе кăшкăрарах каларĕ Фролов.

— Чăнах. Атя, ан юл ман хыçран,—терĕ Макар, çĕлен пек авкаланса утакан çӳрен лашине карт туртса. Лаши çавăнтах мăйне хур пек чăсса хучĕ те тапса сикрĕ. Ун хыçĕнчен Фролов сиктерчĕ. Хыçĕсенчен пылчăк çеç çĕкленсе юлчĕ. Вĕсене курсан, шуррисем те лашисене хистесе сиктере пуçларĕç.

— Стой! Чарăнăр!—кăшкăраççĕ хыçалтан. Унччен те пулмарĕ, йĕркесĕр пăшал сассисем пĕрин хыççăн тепри кĕрлесе те кайрĕç.

— Ай!—хаяррăн кăшкăрса ярса, лаши çинчен кĕлте пек сирпĕнсе ӳксе юлчĕ Фролов. Лаши, аçа-çиçем пек, Макартан иртсе, килнĕ çулпа вĕçтерчĕ.

Макар лаши мăйĕ çумне сăвăс пек çыпçăнса выртрĕ те, шуррисенчен хăтăласшăн, лашине урисемпе хĕстерсе хавала пуçларĕ. Шуррисем пăшалĕсене кĕрслеттереççĕ, пульăсем, кĕркуннехи шăна-пăвансем пек, тĕрлĕ сасăсемпе шăйласа ирте-ирте каяççĕ. Ав, инçе мар, малта, тайга вăрманĕ, унта кĕрсен, Макар хăтăлать. Çавăнпа вăл ла-

шине юлашки вăйне хурса хистет. Сасартăк çил пек вĕçсе пыракан лаша, малти ури çине такăнса, çăмха пек пĕтĕрĕнсе анчĕ, Макар, лаша мăйĕ урлă сирпĕнсе, иквиçĕ хăлаçа кайса ӳкрĕ.

Шуррисем, çавăнтах тапăртаттарса çитсе, Макара çавăрса та илчĕç. Анчах Макар вĕсене часах парăнмарĕ: пĕр салтакне сăмси урлă çапса юн кăларчĕ, иккĕмĕшне, çӳхе çĕртен урипе тапса, ăнтан ячĕ, виççĕмĕшне кăкарĕнчен çапса антăхтарчĕ. Тăваттăшне те çапма тăнăччĕ, анчах ĕлкĕреймерĕ, лешсем, пĕтем вăйĕпе ахлатса, Макара тăнлавран пăшал купчекипе çапрĕ. Вара Макар, вăкăр пек мĕкĕрсе, çĕре чăсăлса ӳкрĕ. Унăн тăнĕ çухалчĕ...

III

Çав тери витĕрĕн шăнса, сивĕ тытнă пек пĕтĕм ӳтпĕвĕпе чĕтресе сике пуçласан тин Макар тăна кĕчĕ. Вăл, куçне уçса, пуçне çĕклесе пăхрĕ. Йĕри-тавра хăйне тытнă салтаксем кăшкăрашса тăнине курчĕ. Мĕн пулнине Макар хăй те ăнланса илеймест. Кăшт шухăша кайса выртсан-выртсан Макар хаяр сассипе кăшкăрашса илчĕ.

— Ха-ха-ха! Хĕрлĕ куштанăн ăнĕ кĕчĕ,—ахăлтатса кулса ячĕç салтаксем.

— Ах, шуйттансен аллисене çитсе лекнĕ вĕт эпĕ, ухмах. Мĕнле хăтăлас? Мана вĕлернипе вĕсем нимĕнле усă та курас çук та, анчах отряд... Отряда шел. Унта пилĕкçĕр çын ытла. Вĕсем выçă. Лачака укинчен тухма çул пĕлмеççĕ,—шухăшласа илче Макар. Унтан ури çине майĕпе тăчĕ.

— Ăна кĕрсе çитрĕ. Мĕн тăватăр ĕнтĕ унпа малашне?—терĕ пĕр урлă мăйăхлă, çара янахлă салтак, Макар çине кăтартса.

— Халех штаба леçес. Унта мĕн кирлине ыйтса тĕпчесен, ăçта хумаллине кăтартса парĕç,—терĕ шĕвĕр сăмсаллă фельдфебель.

— Мĕн чухлĕ тĕпчесен те, эпĕ сире пĕр сăмах та калас çук. Анчах чăтма йывăр. Мĕнле хăтăлас? Ну, Макар Кузьмич, пĕрре вĕсен аллине лекрĕн-тĕк,—виличчен тӳс. Вĕлерсен те, пĕр сăмах тĕрĕссине ан кала. Эсĕ вĕт хăвăншăн вилместĕн—пĕтĕм отрядшăн. Унта пилĕкçĕр çын, вĕсем лачакаран тухма çул пĕлмеççĕ,—каллех шухăшласа илчĕ Макар.

— Ăна хиртенех илсе килмелле марччĕ. Çавăнтах вĕлерсе хăвармаллаччĕ. Халĕ çӳре ĕнтĕ ун хыçĕнчен сыхласа,—тесе вăрçса илчĕ пĕр салтакĕ.

— Юлташсем, эсир мана штаба илсе кайиччен, çитерсе тăрантарсан, питĕ аван пулĕччĕ. Тутă хырăмпа калаçма авантарах. Эпĕ выçă. Виççĕмĕш кун ĕнтĕ çимен,—терĕ Макар хуллен, кăшт йăланнă пек пулса.

— Молчать! Ăçтан эпир сан юлташу пулатпăр? Эсир вĕт Российйăна сутнă. Анчăк çури!—сăнчăрти йытă пек хар кăшкăрса пăрахрĕ фельдфебель.

— Эсĕ ан çилен-ха, эпĕ сире „юлташсем“ тенĕшĕн. Йăнăш каларăм. Тĕрĕс, сирĕнпе эпир юлташлă пулма пултараймастпăр, эсир капиталистсемшĕн кĕрешетĕр, эпир ĕçхалăхĕпе хресченсемшĕн, господин фельдфебель. Çапах та эсир мана, выçă хырăмпа мар, çитерсе тăрантарса вĕлерме тивĕçлĕ, закон çапла,—терĕ Макар, кăшт мăшкăланă пек пулса.

— Парас пĕрер татăк çăкăр. Ан тив, çитĕр. Уншăн çылăх пулмĕ. Епле пулсан та, çын вĕт вăл, йытă мар,— терĕ çара янахлă салтак.

Фельдфебель, ним тăвайман енне, мăйăхне çăварне хыпса чăмлама пуçларĕ.

— Парăр эппин йытта пĕр татăк. Çитĕр те, унтан халех штаба илсе пырăр. Эпĕ малтан кайса систерем. У-у... Сволочь!—фельдфебель Макар çине усал куçĕсемпе çавăрăнса пăхрĕ те штаб еннелле васкаса утрĕ.

Çара янахлă салтак хăйĕн сăран сумкинчен пĕр пысăк чĕлĕ ыраш çăкăрĕ кăларса Макара пачĕ.

Макар, çăкăр чĕллине илсе, тавтурĕ. Унтан пуçне тайрĕ те, çăвар тулли çырта-çырта, чăмла пуçларĕ...

Çиййĕсене Англи шинелĕсене, пуçĕсене Франци картузĕсене, урисене Америка пушмакĕсене тăхăннă икĕ салтак, Макар çине, капкăна лекнĕ кашкăр çине пăхнă пек, вăл типĕ çăкăр кавленине усал куçĕсемпе пăхса, аллисенчи пăшалĕсене хатĕр тытса тăраççĕ. Макар, тарас тесе, кăшт çеç выранĕнчен хускалсанах, халех персе е чиксе пăрахма хатĕр. Макара çăкăр панă салтакĕ лешсем пек мар, вăл ун çине ăшă куçĕсемпе пăха-пăха илет. Пăхнă май сылтăм куçне кăшт хĕсет, пашалу пек хулăм тутисене йăл култарать...

Макар çара янаха куçĕсене илмесĕр пăхать: „Те хĕрхенет ку мана, Колчак йытти, те мăшкăласа кулать“,— тесе шухăшлать вăл хăй ăшĕнче.

— Эй! Тыткăна лекнине илсе килĕр хăвăртрах!—пырĕ тĕпне хыртарса кăшкăрчĕ фельдфебель штаб умĕнчен.

— Ну, çисе тăранган пуль, тăр. Атя, ут ман хыçран, —терĕ çара янах Макара.

— Тавтапуç, юлташ. Ах, каллех йăнăш каларăм. Каçар, господин салтак,—тесе ури çине тăчĕ Макар.

— Мана юлташ тесен те пырать. Эпĕ фельдфебель пек доброволец мар, мобилизованнăй, рядовой салтак çеç,—ответлерĕ те салтак, штаб еннелле утрĕ.

Макар, ним чĕнмесĕр, пуçне чиксе, çара янах хыçĕнчен утăмларĕ. Макаран ик аяккинче—икĕ салтак, виççĕмĕшĕ—хыçалта, пăшалĕсене Макар еннелле тытса пыраççĕ.

— Малтан эпĕ камне, хăш партизан отрядĕнче пулнине ыйтса тĕпчĕç. Эпĕ пĕр сăмах та каламăп. Вара... Вара мана е персе, е штыкпа чиксе, е юпа çине çакса вĕлерĕç. Унтан... Унтан ман ӳте выльăх вилли пек анкартисем хыçне кăларса пăрахĕç... Çапла мана йытăсем, кашкăрсем, çăхансем, татăкăн-татăкăн çалса, çисе пĕтерĕç. Юлашкинчен шăмăсем çеç, ăçта пăхнă унта йăванса выртĕç. Эх, вилĕм! Мĕн вăл вилĕм? Маншăн ним те мар. Эпĕ вилĕп те пĕтĕп. Нимĕн те пĕлмĕп, илтмен, курман. Анчах отряда шел. Унта пилĕкçĕр çын ытла. Вĕсем лачака ункинчен тухма çул пĕлмеççĕ. Выçă...

Çапла Макар таран шухăша путса утать. Вăл вилĕмрен хăрамасть. Унăн пĕтĕм шухăшĕ те—отряд çинчен. Май пулсан, вăл халех çак хăйне сыхласа пыракан салтаксене виççĕшне виçĕ çĕре çапса йăвантарĕччĕ те отряд патне чупĕччĕ. Анчах салтаксем пăшалĕсене тĕллесех пыраççĕ. Вĕсен хăрушă штык вĕçĕсене кура, Макар каллех, пуçне лашт чиксе, унка пек çавăрăнса илнĕ виçĕ салтак хушшинче пырать.

## IV

Шуррисен штабĕ мечетьпе юнашар ларакан мулла çуртĕнче. Алăкран кĕрсенех, пĕр пысăк пӳлĕм. Пӳлĕм вăта çĕрĕнче çавракан сĕтел; сĕтел йĕри-тавра хыçлă тенкелсем. Стена çумĕнче диван ларать. Çав диван çинче пуçне çӳлелле каçăртса, çăварне пирус хыпса, янахне сухал сăрма пуçланă çамрăк прапорщик ларать. Ун умĕнче, кăкăрне малалла каçăртса, пуçне тĕве пек çӳлелле çĕклесе, фельдфебель тăрать. Вăл хăйĕн начальникне Макара тытса пыни çинчен мухтанарах каласа парать:

— Пĕччен тăватă çынна парăнасшăн мар, ваше благороди. Пусĕнчен пăшал купчекипе çапсан тин парăнчĕ...

— Молодец! Сана уншăн хĕрес памалла тавăп,—мухтать прапорщик фельдфебеле.

Фельдфебель, маччана çитсе лекес пек, çӳлелле туртăнать.

Макара илсе кĕчĕç. Прапорщик ун çине ури тупанĕсенчен пуçласа пуç тӳпине çитичченех пăхса тухрĕ те кăвас икерчи пек тутисене кăшт култаран пек турĕ.

— Хе-хе-хе! Эсĕ пулатни-ха вăл Щетинкин бандит отрячĕн разведчикĕ?

Макар кăшт шухăша кайса тăчĕ.

— Пĕлетĕн-им? Пĕлсен, ыйтма та кирлĕ мар,—терĕ Макар, прапорщик куçĕсенчен шăтарас пек пăхса.

— Лайăх, пит лайăх. Анчах эсĕ ан хăра. Тӳррине каласан, эпĕ сана нимĕн те тăвас çук. Халех ирĕке ярăп. Анчах эпĕ мĕн ыйтнине пурне те ним суймасăр каласа пар. Юрать-и?..

Макар прапорщике хăйĕн пуçланă сăмахĕсене каласа пĕтерме памарĕ.

— Эпĕ санран ирĕк ыйтмастăп. Ыйтсан та, эсĕ мана ăна парас çук. Эпир ирĕке сирĕнтен хамăр алăсемпе вăйпа туртса илесшĕн. Пер хамшăн анчах мар,—пĕтĕм Российăри, Çĕпĕрти, Украинăри, Кавказри рабочисемпе хресченсемшĕн,—терĕ вал прапорщик сăмахне татса.

— Сирĕн отряд аçта, хăш вырăнта тăрать? Кала тӳррине?—ыйтрĕ прапорщик.

— Ха-ха-ха! Аçта? Çĕрпе пĕлĕт хушшинче,—кулса ячĕ Макар.

Халĕ çеç тилĕ пек йăпăлтатса калаçакан прапорщик сасартăках çилленсе ӳкрĕ.

— Ах, мерзавец! Эсĕ манпа— офицерпе—чиперрĕн калаçасшăн мар-и-ха. Эпĕ сана калаçтарăп. Калаçмасан, чĕлхӳне касса илĕп. Тирне чĕрĕлле сĕвĕп. Кала, хăш вырăнта тăрать сирĕн отряд?—тӳсеймесĕр ури çине сиксе тăчĕ вăл.

— Эпĕ сан аллунта, мĕн тăвас тетĕн, çавна тума пултаратăн. Эпĕ санран каçару ыйтмастăп. Отряд аçта тăнине каларăм: çĕрпе пĕлĕт хушшинче,—терĕ Макар.

—Илсе тухса кайăр йытта. Куç умĕнчех мăшкăлать!—фельдфебель çине пăхса кăшкăрчĕ прапорщик.

— Так точно! Итлетĕп, ваше благороди. Анчах аçта хурас? Мĕн тăвас унпа?

Фельдфебель, урисене шартлаттарса çыпăçтарса, майне прапорщик еннелле кăркка пек чăсрĕ.

— Ăçта хурассине, мĕн тăвассине пĕлместĕр-им? Эх, сволочь! Эсир çак бандит пек çирĕп пулсан, эпир вĕсене тахçанах çĕнтернĕ пулăттăмăр. Шкурниксем çеç эсир. Хăвăрăн тирĕрсене çеç сыхласшăн эсир, çветтуй вырăс Российăшăн ним чухлĕ те тăрăшмастăр. Мĕншĕн сĕтĕрсе килтĕр эсир ăна ман пата? Унăн кашкăр сăнне кăтартма-и?

— Ан хăра, прапорщик, эпĕ кашкăр мар, чăн-чăн партизан. Бандит ятне мана ан пар, ху çине ил,—терĕ Макар, прапорщика пӳлсе..

— Так точно, пĕлетĕп, ваше благороди, ăçта хумаллине. Ахаль çеç ыйтрăм,—терĕ фельдфебель.

— Пĕлетĕн пулсан, мĕн ыйтса тăратăн тата? Марш, халех илсе тухса кай! Ӳлĕмрен кун пеккисене ман пата ан илсе килнĕ пултăр. Илтрĕн-и?

— Так точно, илтрĕм. Шагом марш, ман хыçран!— команда пачĕ фельдфебель, Макар çине пăхса...

Шăп çав вăхăтра:

— Смир-но-о!—команда янрас а кайрĕ урамра.

Çавăнтах:

— Здорово, орлы!

— Здравия желаем,—йытăлла вĕрсе ячĕç салтаксем.

— Стой! Ан илсе тух. Капитан Могильников килет. Вăл калаçса пăхтăр-ха тата унпа,—терĕ прапорщик, фельдфебеле чарса...

Сарă алăк яр уçăлчĕ. Упа пек мăнтăр, кĕске майлă, лутра, хырнă янахлă, хĕрлĕ сăнлă капитан Могильников пырса кĕчĕ.

— Смирно!..—капитан умне хăвăрт утса пырса рапорт пачĕ прапорщик.

— Здравствуйте!

— Хав-хав-хав!—харăс ахăрса ячĕç штабри салтаксем.

Капитан, тĕпелелле иртсе, Макар çине чалăшшăн пăхрĕ:

— Ку кам? Мĕнле çĕтĕк-çурăк?

— Тыткăна лекнĕ бандит, господин капитан,—пĕлтерчĕ прапорщик.

— Эх-е-е!.. лекрĕн-им, голубчик... Ыйтса пĕлтĕр-и? Мĕн калаçать? Хăш банда отрядĕнчен?

— Ыйтса пĕлесшен пултăм та, калаçасшăн мар. Куç умĕнчех мăшкăлать, господин капитан,—терĕ прапорщик.

— Măшкăлать? Ах, сволочь! Эсĕ вырăс офицерĕнчен кулма-и-ха!.. Ак сана!—пĕтĕм вăйĕпе Макарăн янах шăмминчен чышрĕ капитан.

Макар шăлĕсене шарт çыртрĕ. Сасартăк çыртнипе, чĕлхине ыраттарчĕ пулас, çăварне аллипе тытса, çурчăкне шалалла ĕмсе илчĕ. Тўсеймерĕ Макар. Аллине чăмăртаса, капитан çине сăмси тăрăх пăхса илчĕ те:— Кучченеçе хирĕç—кучченеç! Ме, тыт!—тесе, млатук пек чăмăрне капитанăн лапчăкрах сăмси урлă хучĕ. Капитан, аллисемпе питне хупласа, диван çине кайса ларчĕ. Çавăнтах янаххи тăрăх юн юхса анса, урайне тумла пуçларĕ.

Прапорщик, васкаса, наганне туртса кăларчĕ. Макар çине тĕллерĕ. Анчах персе ĕлкĕреймерĕ, çав вăхăтрах тепĕр пўлĕмрен такана пек сарлака хырăмлă мулла чупса тухса, прапорщик умне пырса тăчĕ:

— Господин офицер. Господин, дома убивать нельзя. Крех большой. Улица можно убивать... Кровь, пол мараешь. После жить нехорошо. Большевик пахнит будет...—терĕ.

— Фу, сволочь! Турă качакисен кĕтўçи. Кансĕрлесе çўретĕн,—вăрçса тăкрĕ прапорщик муллана.

Капитан, юнлă сăмси çăварне тутăрпа шăлса,хушу пачĕ:

—Малтан шомпăлпа çирĕм пилĕк хут çапăр.Унтан пăрлă нўхрепе хупса лартăр. Ытла хаяр, кăшт йăвашлантăр. Вĕлерме ĕлкĕрĕпĕр. Малтан отрячĕ ăçта тăнине каласа патăр. Каламасан, тирне йĕппе сĕвĕпĕр. Илтрĕр-и?..

— Так точно, илтрĕм, господин капитан,—терĕ прапорщик.

— Хушнисене халех ĕçе кĕрт. Каçхине çĕнĕрен ыйтса тĕпчĕпĕр. Эпĕ канам-ха кăшт,—капитан тепĕр пўлĕме кĕрсе кайрĕ.

— Фельдфебель, илтрĕн-и господин капитан мĕн каланине? Марш! Халех илсе тухса кай,—терĕ прапорщик фельдфебеле.

Макар прапорщик çине арăслан пек сивĕ куçĕсемпе çавăрăнса пăхрĕ те, ним чĕнмесĕр, фельдфебель хыçĕнчен утса тухрĕ. Ун хыçĕнчен виçĕ салтак утрĕç. Пўлĕм пушанса юлчĕ.

## V

Вăхăт кăнтăрлахи апат тĕлĕ. Ялта автансем авăтаççĕ, хурсем какăлтатаççĕ. Карательнăй отрядăн салтакĕсем,

котелоксене шанкăртаттарса, урам варринче ларакан кухня патне чупаççĕ. Çумăр чарăнмасть, вăл майĕпен йăслать...

Килкарти ăшне тухса нӳхреп умне çитсен, фельдфебель Макара чарчĕ.

— Стой! Смирно! Антар йĕмне. Вырт çакăнта,—пӳрнине çĕрелле чăсса кăтартрĕ.

— Вăю çитсен, антар та вырттар. Хам йĕме хам антарсах, сана хĕнеттерме ухмаха ермен-ха эпĕ,—терĕ Макар çиллĕн.

— Э-э э э!.. эсĕ мана, начальнике, пăхăнасшăн мар-иха!.. Эпĕ сана пăхăнтарăп,—хаяррăн ахăрса, пилĕк çинчи кĕске пăшалне ярса тытрĕ фельдфебель...

— Эсĕ маншăн начальник мар,—тăшман. Акă çак кăвак шинельсемшĕн çеç начальник эсĕ.

Салтаксем çавăнтах Макара çавăрса тытса, йĕмне антарса вырттарасшăн пулчĕç. Макар чылайччен выртасшăн мар пулса кĕрешрĕ. Кĕрешсен-кĕрешсен, ывăнчĕ пулас, лăпланчĕ. Вара ăна çĕре чăсса вырттарчĕç. Унтан пĕр салтакĕ урисем çине, тепри ĕнси çине улăхса ларчĕç.

— Ну, Ванюшкин, кăлар шомпăлна. Çап çирĕм пиллĕк. Асту, ан шелле. Шеллесен, хăвна лекĕ,—терĕ фельдфебель пĕр салтакне.

— Ну, большевик, чăт; чăтсан, утаман пулăн,—хаяр сассипе кăшкăрса, аллинчи шомпăлне ӳкерем пек турĕ салтак. Анчах хăй çавăнтах, Макар пуçĕ тĕлне шомпăлне илме пĕшкĕнсе:—Эсĕ ан хăра, юлташ. Эпĕ хытă çапмăп. Анчах эпĕ çапмассерен, ыратнă пек туса, хаяррăн кăшкăр,—тесе хăлхинчен систерчĕ.

— Вара, ку хамăр çын вĕт. Капла хăтăлма та майсем пур,—тесе шухăшларĕ Макар.

Çара янахлă салтак тепĕр хут:—Ну, чăт. Пĕрре... Иккĕ... Виççĕ...—чăстарса суса, Макарăн çара ӳчĕ çине шомпăлне ӳкерет. Макар, ӳчĕ çумне шомпăл çитсе тивмессерен, качака пек çухăра-çухăра ярать.

Фельдфебель аяккинчен пăхса тăрать. Саваннипе вăл:—Э-э-э... пăхăнăн-и!—тесе шăлне шатăртаттарать.

Макарăн урисемпе ĕнси çинче ларакан салтаксем, Ванюшкин шомпăлне çӳлелле çĕклесе антармассерен, куçĕсене мăч-мăч хупа-хупа илеççĕ.

Ванюшкин, пĕтĕм вăйĕпе ахлатса çапнă пек:—вуннă... вунпиллĕк .. çирĕм. . ярăнтарса шутлать.

Çапла Макара, çирĕм пилĕк хут шомпăлпа çапнă хыççăн, пăрлă нӳхрепе пăрахса, питĕрсе илчĕ фельдфебель.

— Ванюшкин, эсĕ хурал тăр. Эпир апатланса килер. Унтан эсĕ кайăн. Асту, ан тарт. Хытă сыхла!..

— Итлетĕп, господин фельдфебель,—аллине картуз сăмси çумне тытса честь пачĕ Ванюшкин.

Фельдфебельпе салтаксем пурте апата кайрĕç. Нӳхреп лаççи умĕнче Ванюшкин пĕччен çеç тăрса юлчĕ. Нӳхрепре тĕттĕм, нӳрлĕ, сивĕ. Урисем айĕнче пăр, çĕрĕк шăрши.

— Шăнтăн пуль, юлташ?—илтрĕ Макар сасартăк Ванюшкин сассине.

— Шăнасса пиг шăнман та, çапах сивĕ!.. Мĕншĕн эсĕ мана „юлташ" тесе чĕнетĕн? Эпĕ саншăн ăçтан юлташ пулам! Эпир вĕт иксĕмĕр—тăшмансем,—терĕ Макар шалтан...

— Эх, юлташ. Эсĕ мана карательнăй отрядра танăшăн тăшман тесе шухăшлатăн пуль. Çук, юлташ. Эпĕ те сан пекех çын. Мана та хам ирĕкпе мар, вăйпа тытса килсе салтак шинелĕ тăхăнтарчĕç те, алла пăшал пачĕç Халĕ ĕнтĕ хам пекех ĕçлекенсемпе хресченсене пăшалпа персе, штыкпа чиксе вĕлерме, шомпăлпа çапма хушаççĕ. Хушнине итлемесен, хама вилĕм сĕнеççĕ. Тахçанах тарма шухăш тытнă, анчах нимпе те май тупаймастап. Пĕр эпĕ çеç мар кунта. Ман пеккисем татах та пур. Доброволецсемпе хутшăнтарса янă та, çапкаланса çӳретпĕр,—тесе, хурлăхлă сăмахне пĕтерчĕ Ванюшкин.

— Суймасть-ши ку тăшман? Йăпăлтатса калаçса, отряд ăçтине пĕлесшĕн мар-ши? Çук, апла тесен—çакăр пачĕ, шомпăлпа ыраттармасăр çапрĕ. Тĕрĕс! Вăйпа салтака тытса килнĕ хресчен ывăлĕ пулмалла,—тесе шухăшларĕ Макар.

Çав вăхăтра фельдфебель сасси янтраса кайрĕ:

— Молчать! Мĕншĕн тăшманпа калаçатăн? Кам хушрĕ сана? Çавăнтах тата: Ой!—кăшкăрса, пĕр çын пĕвĕ çĕре лаплатса ӳкрĕ.

Нумаях та вăхăт иртмерĕ, çăра шăлтăр-шалтăр турĕ. Унтан нӳхреп хупăлчи хăвăрт уçăлчĕ.

— Тух нӳхрепрен!—кăшкăрчĕ фельдфебель улшăннă сассипе.

Макар, нӳхрепрен пуçне кăларсанах, инçе те мар пĕр салтак юн юхтарса йăванса выртнине курчĕ.—Ах, тăш-

ман! Ванюшкина вĕлернĕ вĕт ку,—шухăшларĕ вăл, йĕри-тавра çаврăнкаласа пăхса.

## VI

Кĕрхи çумăр йăслама чарăнмасть. Хутран-ситрен ялта ўсĕр салтаксем юрлани илтĕнет.

— Халех тыткăна лекнине илсе килĕр. Живо,—кăшкăрчĕ штабран прапорщик.

— Халех, ваше благороди,—сасă пачĕ фельдфебель. Унтан, Макар çине пăхса:—Смирно. Атя, ут ман умран, —терĕ.

Макар малтан, ун хыçĕнчен, аллине наган тытса, фельдфебель утрĕ.

Вăл Макара штаба мар, урамалла хуса тухрĕ. Урама тухсан, пăхать Макар,—хапха тулашĕнче икĕ йĕнерлĕ лаша кăкаранса тăраççĕ: пĕри çўрен, тепри çĕлен-хура. Лашасене курсан, Макар пĕтĕм пĕвĕпе сиксе ўкрĕ:—Эх, пĕрин çине утланасчĕ те вĕçесчĕ,—тесе шухăшларĕ. Унтан вăл хăйĕн хыçĕнчен утакан фельдфебель çине çаврăнса пăхма çеç пуçне пăрнăччĕ, сасартăк:

— Живо, утлан çак лаша çине!—хушрĕ фельдфебель, çўрен лаша çине наганпа чăсса кăтартса.

Макар пĕр самантрах лаша çине партизанла сиксе утланса, чĕлпĕрĕнчен ярса тытрĕ.

— Ну, большевик, тарса хăтăлсан, сан телей. Хăтăлаймасан, хăвна ху ўпкеле,—терĕ фельдфебель, хура лаша çине утланма хатĕрленсе.

Макар пĕрре хăй утланнă лаши çине, тепре фельдфебель утланакан лаша çине пăхса илчĕ те:

— Апла та, капла та—пурĕпĕр вилĕм, тен хăтăлăп,—тесе шухăшласа илчĕ. Вара лашине, партизанла карт туртса, урисемпе хĕстерсе хучĕ те, малалла ўпĕнсе, чĕлпĕр вĕçĕпе çăт çапрĕ. Лаши çавăнтах, çĕлен пек авкаланса, сиккипе малалла вĕçтерчĕ. Макар лаша мăйĕ çумне çыпçăнса выртрĕ.

— Стой! Ăçта таратăн? Тыт, большевик тарать!—кăшкăрса ячĕ фельдфебель. Унтан наган сасси пĕр вĕçĕмсĕр янтрама пуçларĕ. Пульăсем Макар пуçĕ урлă, пăван пек сĕрлесе, ирте-ирте каяççĕ.

Макарăн çанçурăмĕ пĕрре шăнса, тепре вут пек пĕçерсе илет. „Лекмерĕç-ха, иртсе кайрĕç",—шухăшлать вăл, хыçалалла çаврăнса пăхса. Курать: фельдфебель пĕр пилĕк хăлаç пек çеç хыçра лашине сиктерсе пырать.

Макар, фельдфебельтен тарса хăтăласшăн пулса, лашиве урисемпе тапăрлать, чĕлпĕрĕ вĕçĕпе çапать. Çук, фельдфебельтен нимĕнле уйăрăлса кайма çук. Лешĕ çавах, хыçĕнчен юлмасăр, пырсан-пырсан, наганне кĕрлеттерсе ярать. Хăй çаплах:—Тыт! Тыт!—кăшкăрать.

— Мĕн ухмахланать ку пирĕн фельдфебель?

— Курмастăн-им? Авă, тыткăна лекнĕ бандита персе вĕлерме ялтан уял"а хуса тухать.

— Э-э... Ха-ха-ха!.. Пĕркун та вăл çапла пĕрне, уй тăрăх хуса çӳресе, персе вĕлерчĕ.

— Хы-хы-хы! Юрататъ бандитсене вĕлерме.

— Юратмасăр, виççĕмĕш çул вĕт карательнăй отрядра тăрать. Вĕреннĕ ĕнтĕ. Ахальтен мар икĕ медаль пана. Акă, час хĕрес те парĕç.

— Пур енчен те пултарать. Çырăва çеç сахал пĕлет. Тахçанах офицере тухмалла...

Савăнăçлă калаçса тăрса юлчĕç карательнăй отряд салтакĕсем.

Макар малтан, ун хыçĕнчен фельдфебель ялтан тухса кайрĕç. Макар çавăрăна-çавăрăна пăхать, фельдфебель çывхарнăçемĕн çывхарать. Наганне хăй пĕрмай кĕрлеттерет.

Акă, ял та курăнми пулчĕ. Фельдфебель наганĕнчен пеме чарăнчĕ. Кам пĕлет, тен патрон сахалланчĕ пулĕ, тен урăх сăлтав? Макар ăна пĕлмест.

Макар юлашки хут çавăрăнса пăхрĕ. Курать—фельдфебель çывăхах çитнĕ:—Персе мар, хĕçпе касса парахасшăн пуль. Ах, епле тарса хăтăлас,—шухăшлать вăл, лашине урисемпе тапăрласа. Çук: лаши, хуть те темле хистесен те, фельдфебель лашинчен нимпе те уйăрăлмасть. Макаршăн вăл пĕр вырăнтах тапăртатса тăнă пек туйăнать. Çавăнпа та, лаша çинчен сиксе анса, çуран тарма шутласа пăхать. Анчах тарса хăтăлассăн туйăнмасть. Макар çамрăк-ха, унăн пурăнас, курас, илтес, пĕлес килет. Вилес килмест: „Пурĕпĕр пĕрре! Халĕ ĕнтĕ эпир уй варринче иккĕн çеç, е вăл мана, е эпĕ ăна“,—тесе шухăшларĕ те вăл, лашине фельдфебель еннелле пăрса, кушак пек сикрĕ, фельдфебелĕн мăйĕнчен çавăрса илсе, лаши çинчен сĕтĕрсе антарчĕ. Ак, иккĕшĕ çăмха пек айĕн-çийĕн çавăрăна пуçларĕç. Пĕрре пĕри, тепре тепри çиеле тухать.

Акă, Макар, фельдфебеле çавăрса çапса, ун çине хăпарса выртрĕ те мăйĕнчен пăвма тытăнчĕ. Анчах çав

вăхăтрах фельдфебель сасартăк кăшкăрса ярса, Макара хăй çиййнчен аяккалла сирсе пăрахрĕ те ури çине сиксе тăчĕ.

— Çывăха ан кил. Халех персе пăрахатăп!—кăшкăрса ячĕ вăл, наганĕпе тĕллесе...

Макар, тăп чарăнса, юпа пек хытса кайрĕ:

— Тинех персе пăрахать,—тесе шутласа илчĕ вăл.

— Ха-ха-ха! Ан хăра! Эпĕ сана перес çук. Кил кунталла,—терĕ фельдфебель, савăнăçлăн кулса. Унтан наганне чиксе хучĕ. Макар пĕрре хăранипе, тепре савăннипе мĕн иккенне пĕлмесĕр тăрать.

—Мĕн хытса тăратăн тата? Кил ĕнтĕ,—тепĕр хут чĕнчĕ фельдфебель.

Юлашкинчен тин Макар фельдфебеле сасран уйăрса илчĕ. Вăл, фельдфебель мар, Ванюшкин пулса тăчĕ. Вилĕм аллинчен хăтăлнипе савăнса, Макарăн урисем лаштах кайрĕç. Вăл, ӳсĕр çын пек, чĕркуççисем çине хутланса ларчĕ.

Ванюшкин Макар умне пырса тăчĕ:

—Ан хăра, хăтăлтăмăр ĕнтĕ. Ме-ха, кăштах шыв ĕçсе пăх, çăвару типрĕ пуль.

Макар, шыв ĕçсе, сывлăшне çавăрчĕ.

— Эпĕ ним те ăнланаймастăп. Мĕнле пулчĕ-ха ку? Эпĕ вĕт сана фельфебель тесе, кашни секундăрах вилĕм кĕтсе тарнă. Халь Макарăн сăмахĕсем таса тухрĕç. „С“, „Ç“ саспаллисем вырăнне „Щ“ каламарĕ. Вăл сиксе тăрса Ванюшкина ыталаса чуптурĕ.

— Акă, мĕнле пулчĕ. Илтрĕн пулĕ вĕт, вăл ман пата пырсан: „Молчать. Мĕншĕн тăшманпа калаçатăн?“—тесе кăшкăрнине?

— Илтрĕм.

— Çавăн чух, йĕри-тавра пăхатăп, никам та курăнмасть. Салтаксем шыв илме кайнă. Фельдфебель нӳхрепла ççине кĕрсенех, ăна хырăмĕнчен штыкпа яшлаттартăм. Унтан, шинелĕпе картузне хывса илсе, тумлантăм. Ак, куратăн вĕт: эпĕ—фельдфебель, эсĕ— тыткăна лекни,—савăнăçлăн кулса ячĕ Ванюшкин.

— Ку лашасене ăçтан хатĕрлерĕн?

— Лашасем вĕсем леш капитан Могильниковпа унăн адъютанчĕн.

— Тавтапуç сана, юлташ. Эсĕ мана çеç мар, пирĕн пĕтĕм отряда хăтартăн. Унта пилĕкçĕр çын. Вĕсем лачака ункинчен тухма çул пĕлмеççĕ. Выçă. Ку ĕçшĕн сан яту пролетари кĕрешӳĕнче чаплă вырăн йышăнса тăрĕ.

Каллех пĕрне пĕри ыталаса илсе чуптурĕç.

— Ну, юлташ, атя хăвăртрах. Эпĕ отрядран тухни икĕ тавлăк çитрĕ. Унта мана кĕтеççĕ.

Макар, хăварт утса пырса, лаша çине утланса ларчĕ. Анчах халĕ çеç савăнăçлă Ванюшкин пуçне лашт чакнине курчĕ.

— Ванюшкин юлташ! Мĕн пулчĕ тата сана? Утлан лашуна. Атя хăвăртрах,—кăшкăрчĕ Макар.

— Эх, юлташ. Эсĕ савăнăçлă, хăвăн сывăх юлташусем патне таврăнатăн. Анчах эпĕ ăçта? Унта партизансем. Эпĕ карательнăй отряд салтакĕ. Ман çине мĕнле куçпа пăхĕç вĕсем?—терĕ Ванюшкин.

— Ха-ха-ха... Мĕнле куçпа? Çаплах, тӳп-тӳрĕ куçпах пăхĕç. Вĕсене эпĕ эс кам иккенне каласа парсан, сана, айăплама мар, алă çинче йатса çӳрĕç. Эсĕ вĕт карательнăй отряда ху ирĕкӳпе мар пынă, сана вăйпа тытса пынă.

— Тĕрĕс,—терĕ те лаши çине сиксе утланчĕ Ванюшкин..

Çавăнтах икĕ юланут, харăс сиксе, хускаласа кайрĕç.

## VII

Макарпа Ванюшкин, савăннипе, каç пулнине те сисмен. Çумăр çума чарăннă. Тулли уйах тăрă пĕлĕт çине çунакан капан пек çĕкленет. Çĕр тĕттĕмĕ уçăла пуçларĕ.

Икĕ юланут, лашисене йăкăлт-йăкăлт сиктерсе, лачака еннелле пыраççĕ. Сасартăк инçе те мар йывăррăн сывласа йынăшакан пĕр сасă илтĕнчĕ.

— Тпру!

— Кам йынăшать унта?

Макарпа Ванюшкин лашасене тăп чарчĕç. Сасă пĕр вĕçемсĕр ахлатса йынăшать. Вăл пĕрре таçта инçетре пек туйăнать, тепре çывăхра пекех илтĕнет.

— Çын сасси ку.

— Мĕнле çын-ши вăл?

— Атя, çитсе пăхар.

Çавăнтах, лашисене пăрса, сасă еннелле чуптарчĕç. Нумаях та каймарĕç, пĕр çын мĕлки упаленни курăнчĕ. Вăл ури çине тăрасшăн çĕр çумĕнчен çĕкленчĕ те каллех ахлатса йăванса ӳкрĕ.

Макар çын патне çитсе чарăнчĕ.

— Кам эсĕ? Мĕн пулнă сана?

— Ой, э-эпĕ... Щетинкин партизан отрядĕнчен. Тархасшăн вĕлерсе хăварăр мана, юлташ.

Çын, пуçне çĕклесе, мĕскĕнĕн пăхрĕ.

Макар çавăнтах палларĕ. Вăл лаши çинчен сиксе анчĕ те мĕлке умне чĕркуçланса ларчĕ.

— Фролов, эсĕ им ку?

— Э-эпĕ... шыв ĕçесчĕ. Ой! çунса вилетĕп.

— Ванюшкин юлташ, пар шывна...

Ванюшкин, лаши çинчен сиксе анса, фляжкине хывса пачĕ. Фролов фляжкăри шыва лăнкăртаттарса ĕçсе ячĕ.

Фролова шуррисен пульли вилмеллле мар лекнĕ,—вăл аманнă çеç. Икĕ тавлăк вăл, ăçталла та пулсан каясшăн пулса, упаленнĕ. Анчах лаши çинчен мĕнле ӳкнĕ, çав вырăнтан ниçта та хускалайман, мĕншĕн тесен унăн икĕ ури те аманнă пулнă. Пĕрмай ахлатнипе сасси тытăнса ларнă. Вутпа пеçернĕ пек, тути-çăварĕсем хăпаланса тухнă. Юн нумай юхнипе, сăнĕ шап-шурă шуралса юлнă. Çак икĕ тавлăк хушши ăна никам та курман, сассине те илтмен!

— Ну, Фролов юлташ. Иксĕмĕр те вилĕм аллинчен çăлăнтăмăр. Отряд инçе те мар. Сурану йывăр пулсан та, кăшт тӳс,—терĕ Макар, Фролова лаши çурăмĕ çинчи йĕнерĕ çине урлă вырттарса.

Çавăнтах юланутсем, уйăх çути айĕнчен йывăçсем хушшине кĕрсе кайса, куранми пулчĕç...

## VIII

Виççĕмĕш тавлăк кĕтет ĕнтĕ Щетинкин, пĕр куç хупмасăр, Макарпа Фролов çаврăнса килессе. Аптранă енне вăл тĕрлĕ май шухăшласа пăхать:

— Каллех пĕр-пĕр яла лексе, эрех ĕçсе, хĕрарăмсемпе асса çӳрет пулĕ... Эх, сана, Макар... Çук, апла тесен, вăл хăй килмесен те, Фроловне ярĕччĕ. Пĕлет вĕт вăл отряд лачакаункинчен тухма çул тупайманнине, выçă ларнине. Тен карательнăй отряд аллине çитсе лекрĕçши?.. Апла вара кĕтмелли те çук... Кенĕ йĕрпе каяллах тухас пулать. Анчах тухма хăрушă. Унта, мĕн каласан та, шуррисем сыхласа тăраççĕ. Урăх вырăнтан тухма çул пĕлекен çын çук. Эх, мĕншен ятăм-ха эпĕ ăна...

Щетинкин каллĕ-маллĕ уткаласа çӳрет.

Йĕри-тавра хура вăрман кашлать. Нӳрлĕ шăрш сăмсана çурать. Партизансем выçă. Çимелли нимĕн те çук. Аптăраса çитнипе вĕсем кĕпçесем тупса чăмлаççĕ. Хăшĕ-пĕрисем пиллĕкмĕш тавлăк çакăр хĕлхемĕ хыпса курман

пулсан та, пуҫӗсене усмаҫҫӗ. Унта та кунта юрлană ташланă сасăсем илтĕнеҫҫĕ:

Ай-ну. мĕн пулчĕ?
Буржуйсен шалчи тулчĕ...
Пире ирĕклĕх ҫитрĕ...
Ӗмĕрхи нуша пĕтрĕ.

Вĕсем пирвайхи кун ҫеҫ мар капла выҫă. Хăш чух кунтан та ытларах выҫă ҫӳренĕ. Ҫапах тӳснĕ, вилмен. Вĕсем Щетинкин ҫине шанаҫҫĕ: вăл кун пек йывăрлăхран ҫеҫ мар, ытлараххинчен те хăтарса тухнă.

Хăшĕ-пĕрисем пуҫĕсене уснă. Вĕсем Щетинкин ҫине сивĕ куҫĕсемпе шанчăксăр пăхаҫҫĕ:—Ун пирки ҫак лачака ункинче выҫă ларатпăр. Йăнăш кĕрсе кайнине пĕлсенех, кĕнĕ йĕрпе тухмаллаччĕ,—тесе пăшăлтатса калаҫаҫҫĕ. Кун пек шухăшлисене Щетинкин куҫĕсенчен пăхсах пĕлет.

Хăшĕ-пĕрисем лайăхрах кăмпа тупсан, хăйсем ҫимесĕр Щетинкин патне илсе пырса:—Щетинкин юлташ, санăн та хырăму выҫнă пулĕ, ме, ҫисе пăх,—тесе сĕнеҫҫĕ.

Ҫук, ун ҫиес шухăш мар, урăх. Унăн, епле майпа ҫул тупса, отряда лачака ункинчен илсе тухас шухăш. Ҫапах та, кăмпа параканăн кăмăлне хуҫасшăн мар пулса:—Тавтапуҫ, юлташ. Хăвăн ҫимеллеччĕ,—тесе тавтăвать.

Лачака йĕри-тавра унта та кунта разведчиксем ҫӳреҫҫĕ. Анчах ниҫтан та тухма ҫул тупаймаҫҫĕ.

Макарпа Фролов пĕтĕмпех ҫухалчĕҫ. Хăшĕ-пĕрисем вĕсем калле ҫавăрăнса килессине шанми пулчĕҫ.

— Эпĕ малалла выҫă тӳссе пурăнма пултараймастăп ку лачака ункинче. Эсир хуть те мĕн тăвăр. Эпĕ килнĕ йĕрпе калле тухатăп,—терĕ Трусов, Щетинкин умне лашипе пырса тăрса.

Щетинкин Трусов урлă та тăрăх пăха-пăха илчĕ.

— Хăравҫă. Йывăрлăха тӳсме пултараймастăн. Шкурник. Хăвăн тирне ҫеҫ сыхласшăн. Отряда пăхăнассу килмесен, кай. Эпĕ сана чармастăп. Анчах... Урăх вара пирĕн отряда килсе ан хутшăн. Мана хăравҫăсем кирлĕ мар. Эпир Макарпа Фролов килессе кĕтетпĕр-ха.

— Хуть те мĕн каласан та, эпĕ чарăнас ҫук ĕнтĕ. Шухăшлană—пĕтнĕ,—терĕ Трусов. Унтан лашине отряд килсе кĕнĕ йĕрпе калле сиктерчĕ. Трусов хыҫĕнчен тата ик-виҫ юланут хускаласа кайрĕҫ.

— Эх, хӑравҫӑсем. Выҫӑ вилесрен хӑраса, отряда пӑрахса каяҫҫӗ. Нумая тӳснине, сахала тӳсеймеҫҫӗ.

— Вӗсен партизанра мар, килӗсенче, арӑмӗсем хыҫӗнче ҫеҫ выртмалла пулнӑ,—тесе, кулса юлчӗҫ партизансем.

— Выҫӑ ларсан-ларсан, эсир те пирӗн хыҫран тухӑрха,—кӑшкӑрса хӑварчӗ Трусов.

Нумай та вӑхӑт иртмерӗ, инҫетре—тра-та-та... ух-ух... пӑшал тата пулемет сассисем кӗрлени илтӗнчӗ.

— Хырӑмсене тӑрантарасшӑн кайса, шуррисен капкӑнне ҫитсе лекрӗҫ,—калаҫса илчӗҫ партизансем.

— Тӗрӗс. Карательнӑй отряд пирӗн отряд тухасса сыхланӑ,—шухӑшларӗ Щетинкин та.

Кӑшт тӑрсан, Трусовӑн лаши, хырӑмӗ айнелле ҫавӑрӑннӑ йӗнерне ҫапкалантарса, аҫа-ҫисӗм пек сиксе пычӗ.

— Хайне е вӗлернӗ, е тыткӑна илнӗ ӗнтӗ,—каллех калаҫса илчӗҫ партизансем...

— Ҫав кирлӗ. Йывӑрлӑхран ан тартӑр...

Шетинкин малалла тӳссе тӑраймарӗ: ӑйӑрне утланчӗ те лачака тӑрӑх ҫул шырама кайма пуҫтарӑнчӗ. Шӑп ҫав вӑхӑтра шурӑмпуҫ ҫутти айӗнчен юланутлӑ мӗлкесем курӑнчӗҫ.

— Макар!

— Фролов!

— Ҫитрӗҫ.

— Урра-а-а-а!—кӑшкӑрса, хирӗҫ чупаҫҫӗ партизансем...

— Урра!—кӑшкӑрчӗҫ килекенсем те. Ҫул тупрӑмӑр. Отряд ҫӑлӑнать.

— Тавтапуҫ сире, юлташсем. Отряда лачака ункинчен туртса кӑларнӑшӑн сирӗн ятӑрсем пролетариатӑн историйӗнче паллӑ вырӑна ҫырӑнӗҫ,—терӗ Щетинкин, Макарпа Фролова ытала-ытала чуптуса.

— Пире ҫеҫ мар, акӑ кама пуринчен ытла тавту. Вӑл пире вилӗм аллинчен ҫӑлчӗ. Ун ырлӑхпе пирӗн отряд лачака ункинчен тухӗ,—тесе фельфебельле тумланнӑ Ванюшкин ҫине кӑтартрӗ Макар. Унтан ӗҫ епле пулнине йӗрки-йӗркипе каласа пачӗ. Партизансем Макара, ункӑ пек ҫавӑрса илсе, итлерӗҫ. Юлашкинчен Макар хӑйӗн сӑмахне ҫапла пӗтерчӗ: —Тӑвӑр сукмак тӑрӑх килетпӗр, сасартӑк лаша кӗҫенни илтӗнчӗ. Пӑхатпӑр— Фролов лаши пуҫӗ кӑна курӑнать. Вӑл сукмакран ҫиме шыраса пӑрӑннӑ та лачакана путса ларнӑ. Аран-аран кӑлартӑмӑр. Ман лашана карательнӑй отряд салтакӗсем персе вӗлерчӗҫ.

Шурӑмпуҫ сӳнчӗ. Хӗвел, юн пек хӗрелсе, ҫунса тухрӗ.

Щетинкин отрячӗ тӑвӑр сукмак тӑрӑх, хур кӗтӗвӗ пек, умлӑн-хыҫлӑн лачака ункинчен тухать.

Ҫав кун ӗнтӗ Щетинкин отрячӗпе Могильниковӑн карательнӑй отрячӗ юлашки хут тытӑҫрӗҫ. Кӑнтӑрла ҫитнӗ ҫӗре Кӑшлав ялне партизансем йышӑнчӗҫ. Анчах Могильниковӑн салтакӗсем ялтан тухса кайни курӑнмарӗ. Капитан Могильниковӑн хӑйӗн те ячӗ илтӗнмерӗ.

Ҫав чаплӑ ӗҫе ӗмӗр хисеплӗн асӑнмалӑх, каярахпа Кӑшлав ӗҫхресченӗсем хӑйсен ялне чаплӑ партизан отрячӗн пуҫлӑхӗн ятне пачӗҫ.

Халӗ ӗнтӗ ҫав тутар ялӗ Кӑшлав мар, Щетинкин ятлӑ.

---

## ТИЛЁ ХЫҪҪĂН

### I

Хĕлле. Ҫанталăк тӳсмелле мар сивĕ, уяр. Тинĕс пек тăрă пĕлĕт ҫинчи ҫăлтăрсем, халь ҫĕре персе анас пек, вăрман ҫинче чӳхенсе тăраҫҫĕ.

Шурăмпуҫ ҫăлтăрĕ, ҫĕнĕ ҫын пек кулкаласа, тăрă пĕлĕт ҫине ҫап-ҫутă хăпарса тăчĕ; ăна курсан, ытти ҫăлтăрсем те вăтанчĕҫ, те хăраса ӳкрĕҫ—пĕрерĕн-пĕрерĕн сӳнсе сахаллана пуҫларĕҫ.

Микула Макҫăмĕ, хăй ҫине витĕннĕ дохине* хăвăрт сирсе пăрахса, ялт сиксе тăрса ларчĕ те ҫывăрнипе тăрмаланнă ҫӳҫне кĕрепле шăлĕ пек хытă пӳрнисемпе кăтăр-кăтăр хыҫса, пушшех арпаштарса хучĕ.

— Кĕҫĕр ҫывраймасăр аптрарăм—шухăша путрăм...

Макҫăмăн пӳртĕнче тӳсмелле мар сивĕ. Пĕтĕмĕшпех шăннă чӳречин куҫĕсем пăр катăкĕ тĕслĕ кăвакăн курăнса лараҫҫĕ. Тăмран ҫапса тунă кăмаки ҫинче чĕрĕп пек хутланса арăмĕпе виҫĕ ҫулхи ывăлĕ ҫывăраҫҫĕ.

Макҫăм, хĕрлĕ сăрантан ҫĕленĕ обуткисене** тăхăнса, кунчисене чĕркуҫҫирен ҫӳлерех сӳс кантрасемпе туртатурта ҫыхрĕ. Унтан арăмне вăратрĕ.

— Мархва, эсĕ тăрса кăмака хут та ҫĕрулми пĕҫер, эпĕ унччен пăшала тасатам; ҫиес те каяс капкăнсене пăхма... Сан йăраскалунтан тен пĕрерĕш лекнĕ. Тирне сутсан, нимĕн иличчен малтан, пуҫна ҫыхмалли ситцă тутăр илсе парăп. Капкăнсене пăхнă хыҫҫăн тата тӳрех Куҫма йысна патне каяс. Вăл тахҫанах хăйсен ялĕ таврашĕнче ҫӳрекен хура тилле йĕрлеме чĕнсе каласа янăччĕ. Кĕтет пуль. Вот ҫав хура тилле тытасчĕ. Вара, ситцă мар, пурҫăн тутăр илсе парăттăм,—терĕ Макҫăм. Унтан вăл стена ҫинче ҫакăнса тăракан икĕ кĕпҫеллĕ пăшалне илчĕ те тасатма пуҫларĕ.

Мархви, ывăлне ҫĕтĕк сăхманĕпе витсе, кăмака ҫинчен анчĕ, урай варринче ларакан тимĕр кăмакине хутса

---

* Доха—тир тавăрса ҫĕлетнĕ тăлăп.

** Обутки—атă майлăскер, урана тăхăнмалли.

ячӗ. Кӑмакин мӑръи савӑт трупи пек кӗрлесе турта пуҫларӗ. Унтан, тӗпсакайӗнчен ҫӗрулми илсе тухса, ӑна чугун чӳлмекпе тимӗр кӑмаки ҫине пӗҫерме лартрӗ.

— Пуҫа ҫыхмалли тутӑрӗ те кирлӗ те-ха... Ҫӗрулми те пӗтсе килет—илмелле, ҫӑнӑх та тепӗр икӗ кӑваслӑх анчах юлать.. Тата парӑмсем те чылай, ҫавсене те парса татасчӗ... унсӑрӑн ялан киле-киле аптратса ҫӳреҫҫӗ. Ӗнер те, ху тайгана тухса кайсанах, лавкаҫӗ Мирун килчӗ те: „Ҫак кунсенче тупса параймасан, е пӑшалне, е йыттине—Нарымне, туртса илетӗп" тет.—Тилӗ тытса тирне сутсанах тӳлӗпӗр, нумай кӗтнине сахал кӗт ӗнтӗ, тесе аран-аран йӑпатса кӑларса ятӑм. Хӑй ӳсӗртерех, ир килсе каҫчченех аптратса ларчӗ...—терӗ те Мархва, пӗр татӑк ҫӑкӑр илсе, Нарымне ҫитерме тулалла тухса кайрӗ.

Макҫӑм пӑшалне тасатрӗ те чӳречене хирӗҫ тытса кӗпҫи витӗр пӑхрӗ; икӗ кӗпҫи те тап-таса, кӗмӗл пек йӑлтӑртатса тӑраҫҫӗ. Затворӗсене турткаласа пӑхрӗ: лайӑх ӗҫлеҫҫӗ. Унтан пӑшалӗн икӗ кӗпҫине те авӑрларӗ, авӑрланӑ хыҫҫӑн шӑпӑр шӑтӑкне тайӑнтарса хучӗ. Ҫав вӑхӑтра Мархва, Нарымне ҫитерсе, пӗр ҫӗклем хурӑн вутти йӑтса кӗчӗ.

— Ан хуйхӑр, Мархва, тӳлӗпӗр. Виҫӗ тенкӗ парӑмшӑн лавкаҫӑ Мируна пӑшалпа Нарыма вилсен те парассӑм ҫук. Тилӗ тытаймасан, тарҫа кайса кӗрсе тӳлӗп,—терӗ Макҫӑм. Хӑй алӑкӑн-тӗпелӗн хӑвӑрт утса ҫаврӑнчӗ.

Мархва хуйхӑрмасӑр тата кам хуйхӑртӑр. Мӗнпур пурлӑхӗ те вӗсен—Нарым ятлӑ йытти те ик кӗпҫеллӗ пӑшалӗ ҫеҫ. Вӗсенчен иккӗшӗнчен пӗрне лавкаҫӑ Мирун туртса илсен, выҫах вилес пулать-ҫке. Эх, ку пуян ҫыннӑн чӑнах та пӗр намӑс та ҫук ҫав! Чухӑн ҫыннӑн юлашки татӑк ҫӑкӑрне туртса илесшӗн ҫӳреҫҫӗ. Хӑҫан пӗтӗҫ ку мурсем? Хӑҫан ҫитӗ чухӑнсен ирӗкӗ!..

Хӗвел карталанса тухрӗ. Трупасенчен тухакан тӗтӗм витӗр вӑл хӗп-хӗрлӗ курӑнать. Ҫанталӑк ӑшӑтас пек туйӑнать.

Мархва пиҫнӗ ҫӗрулмине сӗтел ҫине антарса лартрӗ те Макҫӑма валли хутаҫа япаласем чиксе хатӗрлерӗ. Унтан кӑмака ҫинчи ывӑлне йӑтса, ашшӗпе юнашар ҫӗрулми ҫиме лартрӗ.

Апатланчӗҫ.

Макҫӑм сумкине, унтан пӑшалне илсе, хулпуҫҫи урлӑ ҫакрӗ:

— Ну, Мархва, эпир Нарымпа иксĕмĕр кайрăмăр... Тайга тăрăх пĕр кун, ик кун, виç кун... ытла та çӳрĕпĕр. Тилĕ тытмасăр киле таврăнмăпăр, час ан кĕтĕр пире,—терĕ. Унтан ывăлне тата Мархвине ыталаса чуптурĕ те алăкне майĕпен уçса тулалла тухса кайрĕ.

Мархвапа ывăлĕ Макçăмпа Нарымне ăсатса, пӳрт умĕнче чылайччен тăрса юлчĕç. Тухса кайнă чух нимĕн те каласа юлаймарĕç. Э, мĕн каламалли пур унта? Паян анчах каймаççĕ вĕт тайгана. Хăш чухне эрнешер ытла таврăнмасăр çӳреççĕ. Тайга вăрманне ывăçтупанĕ çинчи пек пĕлеççĕ: утăмпа виçсе тухнă... Тепĕр тесен тата пĕчченте мар,—иккĕн... Пĕр кун, ик кун, виç кун, эрне, тен ытла та çӳрĕç.., таврăнĕç-ха... Халь мĕн хăрамалли пур унта... Хĕллехи кун. Çулла мар. Упасем шăтăкĕсенче выртаççĕ, тĕлех пулас çук. Тĕл пулсан та, хăрасах ӳкеканнисем мар. Макçăмпа Нарым тăхăрвунă тăхăр упа тытнă, пĕринчен те хăраса таман, сахал мар, тепре тытсан çĕр пулать! „Çĕрмĕш упа ухутнике хăйне тытать". теççĕ те... кам пĕлет,—те чăн вăл, те суя? Курăпăр-ха кайран кам кама тытнине.

Çапла, Макçăмпа Нарым тăхăрвунă тăхăр упа тытнă. Тилĕ, рысь, кашкăр, юс мĕн чухлĕ тытнине шутне те пĕлмеççĕ. Çапах та Макçăмпа Мархва упа тирĕнчен доха, тилĕ, рысь, юс тирĕсенчен кĕрĕк çĕлетсе тăхăнса курман. Ав, лавкаçă Мирун—упа мар, мулкач та тытса курман, аллисене пăшал тытма хăрать; çапах та упа тирĕнчен çĕленĕ доха, тилĕ тирĕнчен çĕленĕ, хаклă йышши тăлапа витнĕ кĕрĕк тăхăнса çӳрет.

Мархвапа ывăлĕ Макçăмпа Нарыма паянхи пек нихăçан та ăсатса яман, паян темшĕн куçĕсенчен çухаличченех пăхса тăчĕç. Тайгана кĕрсе курăнми пулсан, вĕсем тин пӳртне кĕчĕç.

## II

Çанталăк çаплах уяр та сивĕ. Сурсан, сурчăк çĕре ӳкиччен пăрланса каять. Тайгари кедрсем шурă сăхман тăхăннă пек шап-шурă пăспа витĕннĕ. Анчах тайгара хиртинчен ăшăрах, мĕншĕн тесен çил лекмест. „Тайгана кĕрсен—тутар пӳртне кĕнĕ пек туйăнать", тесе ахаль каламаççĕ çав чалтунсем*.

---

* Чалтун—тесе Çĕпĕрте ĕлĕкренпех пурăнакансене каланă.

Максăмпа Нарым çăра кедрсем хушшинче пăркалана-пăркалана утса пыраççĕ. Умĕсенче урлă та пирлĕ—тĕрлĕ кайăк йĕрĕсем, халь анчах иртсе кайнă пек явăнса, таçтан курăнса выртаççĕ. Нарымĕ Максăмран малтан нăш-нăш! шăршласа чупать. Пĕрре вăл аякка кайса курăнми пулать, унтан, таçтан çавăрăнса, каллех Максăм патне чупса пырать, вара каллех курăнми пулать.

Максăм та, Нарымĕнчен юлас мар тесе, йĕлтĕрĕсене васкатса шутарать. Вунă капкăнтан тăххăрăшне пăхса тухрĕ, çук, пĕр капкăнне те тилĕ лекмен; çывăхах çите-çите иртсе кайнă, капкăнĕсем çине пусман. Сивĕ çав. „Сивĕре тилĕ тимĕр шăршине сисет" теççĕ те, те чăн вăл, те суя? Юлашки вуннăмĕш капкăнĕ.

... Пăхать Максăм: тилĕ лекнĕ те, хăй урине хăй кăшласа татса кайнă; капкăнĕ чĕп-чĕрĕ юн выртать; тиллĕн хăрах ури анчах юлнă. Максăм капкăнĕпе тилĕ ури çине чылайччен пăхса тăчĕ.

— Эх, мур пакарти... чее вĕт... Ватă тилĕ пулас... Анчах виç урупа аякка каяймăн! Пурĕпĕр манăн пулăн. Тытăпăрах,—тесе хăй тĕллĕн калаçса илчĕ. Унтан, çилипе, капкăнне илсе юр ăшнелле çĕклесе çапрĕ те, мулкач тирĕнчен çĕленĕ хăлхаллă çĕлĕкне хывса, çамки çинчи тарне шăлса типĕтрĕ, чĕлĕм туртма ларчĕ. Нарымĕ те хашкаса чупса çитрĕ, хăр-р р р! туса тилĕ урине тăлпаласа тăкрĕ те, унтан Максăм умне урисене тăсса хучĕ, канма выртрĕ.

Максăм чĕлĕмне туртса пĕтерчĕ, кĕлне хурчăканни пек вăрăм чĕрнисем çумне шаккаса кĕсъине чикрĕ. Унтан хутаççинчен пĕр татăк çăкăр кăларчĕ, çуррине Нарымне хуçса пачĕ, çуррине хăй çирĕ.

— Çанталăк уяр-ха, тăман тухас пек мар... Эй, кайрăмăр,—терĕ Нарымне. Йытти çавăнтах хăрлатса юр çине выртса йăванчĕ те, тăрса, виç уралла тилĕ йĕррипе чупса кайрĕ. Ун хыçĕнчен Максăм та, йĕлтĕрĕсене тăхăнса, чашлаттара пуçларĕ.

Нарымĕ малтан, Максăмĕ ун хыçĕнчен виç уралла тилĕ йĕррипе, часрах хуса çитесчĕ тесе, çăра кедрсем, чăрăшсем, пихтăсем хушшисенчен пăркалана-пăркалана чупаççĕ. Чылай пычĕç вĕсем. Тилĕ йĕрри пĕрмаях шаларла каять. Максăм пĕр лапсăркка кедр айне çитсе кĕчĕ; ун тăрринче пĕр пакша шик-шик шăхăрса, Максăмăн пуçĕ çине юр тăка пуçларĕ. Максăм пакша çине çилленсе пăхрĕ те, пăшалне хулпуççи çинчен илсе:

— Кулăни-ха эсĕ манран? Ак сана,—тесе пĕрех кĕрслеттерсе ячĕ. Пакша çавăнтах, çăмха пек пĕтĕрĕнсе, кĕпшек юр çине персе анчĕ.

— Виçĕ пуслăх тирĕ—вунă пуслăх сиен,—терĕ Макçăм; пакшана хӳринчен тытса кедр çумне çавăрса çапрĕ те каллех Нарымĕ хыçĕнчен йĕлтĕрĕсене шутарса кайрĕ.

Акă ĕнтĕ, кaç пуласси те инçе мар. Çанталăка кaçхи сăн çапрĕ. Тилĕ ниçта та чарăнса выртман, ялан шалтан шалалла каять, йĕрри таçтан курăнса, явăнса выртать.

— Тĕттĕм пуличчен хуса çитесчĕ...—Макçăмпа Нарым тусем, тарăн варсем урлă каçа-каçа васкаса карĕç. Çук, тилĕ ниçта та курăнмасть.

Пĕр çӳлĕ ту çине улăхса çитрĕç. Вĕсен умĕнче темĕн тарăнăш вар. Макçăм вар тĕпнелле, йĕлтĕрĕсем çине ларса, ярăнса анса кайрĕ. Нарымĕ çӳлте, урисем çумне çыпăçнă юра шăлĕпе тасатса ларса юлчĕ. Вар тĕпне анса çитес чух пăхать Макçăм: вар тĕпĕнче виç уралла тилĕ татăк урине чĕлхипе çуласа лара парать. Макçăмăн, савăннипе, алли урисем чĕтресе кайрĕç. Пăшалпа перес тесе пăхрĕ аякра... лектерейменĕ... Унтан йĕлтĕрĕсене хывса пăрахрĕ те кĕпшек юр çине пашт кĕрсе ӳкрĕ. Тилĕ патнелле хырăмĕпе шăва пуçларĕ. Шăва-шăва çывăхах çитрĕ. Пăхать: хĕрли мар, хура тилĕ, çиййĕнчи çăмĕ вут пек йăл-йăл курăнать. Макçăм пушшех савăнса кайрĕ. Тилĕ Макçăма курмасть; татăк урине чĕлхипе çулать. Макçăм пăшалне тĕллесе перес кăна тенĕччĕ, тилĕ пăлт сикрĕ те урлă çаврăнчĕ тăчĕ. „Аяккинчен персен тирĕ пăсăлать... Вара çур хака анчах каять" тесе шухăшласа, тилĕ пуçĕпе хăй енне çаврăнасса кĕтсе выртать Макçăм. Сивĕпе пӳрни вĕçĕсем те шăна пуçларĕç. Сасартăк Макçăмăн чĕри йĕппе чикнĕ пек ыратса кайрĕ: тилĕ çын пуррине сисрĕ пулас, хăлхисене тăратса, йăлт-йăлт пăхкаласа нăш-нăш шăршла пуçларĕ. Макçăм тилĕ çаврăнса ларасса кĕтмерĕ, пăшалне хулпуççийĕ çумне хурса, тиллĕн чĕри тĕлĕнчен тĕллерĕ те кĕрслеттерсе ячĕ; тилĕ çавăнтах, чикĕнсе анчĕ. Пăшал сасси тайга тăрăх ахăлтатса кулса саланчĕ; юлашкинчен таçта инçетре тепĕр хут—у-у-ух... туса пĕтрĕ. Пăшал сассине илтсен, Нарымĕ Макçăмран малтан тилĕ патне чупса çитсе, тилĕ çине утланса ларчĕ.

Макçăм та дохи çумне çыпăçнă юра силлесе, тилĕ патнелле утрĕ.

— Э-э-э, тилӗ тус, лекрен-и? Вӑл кӗсъерен чӗлӗмне кӑларчӗ. Сумккинчен ҫӑкӑр илсе Нарымне пачӗ.

III

Каҫ пулчӗ. Хӗвел тайга хыҫне анса пытанчӗ. Шурӑ пӑспа витӗннӗ йывӑҫсем ҫине кӑвак сӑн ҫапрӗ. Тинӗс пек тӑрӑ пӗлӗт ҫине каллех вӗҫӗ-хӗррисӗр ҫӑлтӑрсем тухса тулчӗҫ; вӗсем хушшине тулли уйӑх, ҫунакан капан пек хӗп-хӗрлӗ хӗрелсе, тайга хыҫӗнчен ҫӗкленчӗ.

Ҫӗрле. Максӑмпа Нарым лапсӑркка йывӑҫсем хушшипе тарӑн вар тӑрӑх хӑпараҫҫӗ. Нарымӗ малта. Вӑл юр ӑшӗвче лӑпкӑ ларакан пӑчӑрасене, ӑсансене хӑрата-хӑрата кӑларса ярать. Лешсем вӗҫсе тухаҫҫӗ те таҫта кайса ҫухалаҫҫӗ.

— Тинех телей тупӑнчӗ. Тирне пасара кӑларса сутсанах, нимӗн иличчен малтан Мархвана тутӑр илсе паратӑп ӗнтӗ, унтан лавкаҫӑ Мируна парӑма парса татас, тек аптӑратса ан ҫӳретӗр; юлашки укҫапа лаша илес, ҫӗнӗ тырра ҫитмелӗх ҫӑнӑх, ҫӗрулми илсе хурас. Пурӑн вара, Мархва, савӑнса!—Савӑннипе Максӑм юрласа ши-ши шӑхӑрa-шӑхӑра ярать, вӑл шӑхӑрнипе тайга ян-ян-янрать.

Малта уҫланкӑ курӑна пуҫларӗ. Пӗр такӑр ҫул ҫине тухрӗҫ. Ял та инче мар. Хӑйҫуттисем курӑна пуҫларӗҫ. Йытӑсем вӗрни илтӗнет. Пӑхать Максӑм: хӑйсен ялӗ мар, ют яла ҫитсе тухнӑ мӗн вӑл. Ҫӗрле... Мӗн тӑвас? Килелле утас-и? Кӗрсе выртас-и? Максӑм пӑртак чарӑнса пӑхса тӑчӗ те йӗлтӗрӗсене яла май шутарчӗ. Укӑлча патне ҫитсе пырать. Ял вӗҫӗнчи пӳртсем курӑна пуҫларӗҫ. Нарымӗ укӑлча хапхинчен чупса кӗрсе кайрӗ те тӑп чарӑнчӗ, хӑрлатса пӑхса тӑрать. Унччен те пулмарӗ, ҫул ҫине икӗ ҫын мӗлки чупса тухса та тӑчӗҫ: пӗрин аллинче—тимӗр сенӗк, теприн—авӑрсӑр ҫава. Ҫавалли ҫавине ҫӳлелле ҫӗклерӗ:

— Стой!.. Кам унта?—тесе хулӑн сасӑпа кӑшкӑрчӗ.

Максӑм илтмӗш пулса малалла утать, хулпуҫҫи ҫинчи пӑшалне илсе аллине тытрӗ.

— Стой!.. чарӑн, тенӗ сана!. Унсӑрӑн халех сана касса пӑрахатӑп—тесе тепӗр хут ҫиленсе хаяр сасӑ ҫухӑрса ячӗ.

Максӑм тӑп чарӑнса тӑчӗ те: „разбойниксем тилле туртса илеҫҫӗ ӗнтӗ... Асапланса ҫӳрени ахалех ҫухалать. Пӗтрӗ Мархван тутӑрӗ, пӗтрӗ лаша илсе ҫӗнӗ пӳрт лартса ырӑ курасси... Телейсӗр ҫуратнӑ пире атте-анне-

сем. Çук! пурĕ-пĕр пĕрре вилмелле, вĕлерсен вĕлерĕç,— çапăçмасăр памастăп. Кам кама çĕнтерĕ",—тесе аллинчи пăшалне çирĕп тытса тăрать. Шăнннăччĕ. Халĕ пĕтĕм çан-çурăмне вĕри çапрĕ.

Çавалла çын Макçăм патнеле утса пыра пуçларĕ.

— Кам эсĕ?

Макçăм чĕнмест.

— Чĕлхӳ çĕтрĕ-им?

Нарымĕ р-р-р-р-р туса тăрать. Çавалла çын Макçăм патне çитсенех карланкинчен çавăрса илме хатĕр.

— Мĕн чĕпместĕн? Е юпа-и эсĕ?

Макçăм, хăраман пек пулса:

— Çын. Курмастăн-им? Суккăр мар тăр?—терĕ.

Çыннине çын та-ха. Хăш ялсем эсĕ? Мĕн çĕр варринче аташса çӳретĕн, хăрама пĕлмесĕр?

— Кӳршĕ ялтан. Тилĕ хыçĕнчен йĕрлесе çитсе тухрăм.

— Калпаксем-и?

— Çук. Пирелсем.

— Макçăм, эсĕ мар-и вара?

— Эпĕ.

— Э-э-э... мур пакарти! Эпĕ сана шуррисен разведчикĕ пуль, тесе. Аван-и?

Çавалла çын Макçăма ала пачĕ.

— Куçма йысна, эсĕ-им ку?

— Эпĕ.

— Нарымĕ те, Куçмана палласа, ун тăрăх сике пуçларĕ.

— Шăнтăн пуль, атя пӳрте кĕрсе ăшăнар,—терĕ Куçма. Унтан вĕсем пĕр пӳртелле кĕрсе кайрĕç. Хыçалтан Нарымĕ те çенĕке кĕрсе выртрĕ. Тимĕр сенĕклĕ çын пĕчченех тăрса юлчĕ.

Пӳртре никам та çук. Ăшă. Урай варринче тимĕр кăмака çунса ларать. Макçăм, кĕрсенех, пăшалĕпе тиллине хулпуççийĕ çинчен илчĕ. Дохине хывса сак çине пăрахрĕ, тимĕр кăмака кутне ăшăнма пычĕ. Сăмахлама пуçларĕ.

— Эпĕ сире „разбойниксем" тесе, шăлтах хăраса ӳкрĕм. Мĕн, çак сивĕре хурал тăратăр эсĕр унта?.. Халь хĕлле, яла упасем килмеççĕ—тĕр?

— Хах-ха-ха! Разбойниксем?.. Тайгари упасем шăтăкĕсенче выртаççĕ пулсан та, ик уралла шурă упасем яла çите-çите тухаççĕ. Тискер, хăрушă упасем... Çавсене хуралланăр,—терĕ Куçма, юптарса.

— Камсене эсӗ „ик уралла упасем“ тетӗн вара?

— Ха, эсӗ çавсене те пӗлместӗн-и? Шуррисене калатӑп, шуррисене... Кӗçӗр ку ялта партизан отрячӗ тӑрать. Шуррисем Калпакра тӑраççӗ. Вӗсем яла сасартӑк çитсе кӗресрен сыхлатпӑр.

— Э-э-э... Апла эсӗ те партизан отрядӗнчен-ха?

— Улттӑмӗш уйӑх ӗнтӗ.

— Апла, аппапа ачасем ӑçта кайнӑ?

— Аппу? Ачисем?.. Иртнӗ ернере куç уçса пӑхайми тӑман пулчӗ. Çав вӑхӑтра пирӗн яла шуррисен отрячӗ килнӗ те аппуна, ачисене, ялтан мӗн пурӗ хӗрӗх çынна вӗлернӗ. Пирӗн отряд кунтан пӗр çӗр çухрӑмра пулнӑ.

Тата тем каласшӑнччӗ Куçма, анчах пырӗ тӗпне ӳслӗк çитсе капланчӗ те каласа пӗтерейменӗ, эхӗм-эхӗм усӗрсе, сурчӑкне ланкӑрт çӑтса, пуçне лашт чикрӗ.

Максӑм, тимӗр кӑмака кутӗнче ӑшӑнса тӑнӑ çӗртех, юпа пек хытса кайрӗ. Чылай чӗнмесӗр тӑрсан-тӑрсан:

— Апла, çӗрле пулин те, каяс манӑн. Хӑрушӑ ку ялта выртма,—терӗ Максӑм.

Куçма пӗртак шухӑша кайса тӑчӗ, Максӑмӑн куçӗнчен шӑтарас пек пӑхрӗ.

— Эх, Максӑм, епле эсӗ хӑравçа тухса кайнӑ, маннӑ пулас, епле иксӗмӗр пӗрле, Германи вӑрçинче окопра пыйтӑсене мӑнтӑрлатнине... Пурте сан пек хӑраса тӑрсан, каллех çавнашкал патшасемшӗн пыйтӑсем мӑнтӑрлатма илсе каясса кӗтетӗн-и? Вӑхӑт çитнӗ: пурсӑмӑрӑн та, хӗçпӑшал тытса, хирӗç тӑрас пулать. Сан пек хӑраса тӑрсан, шуррисене çӗнтерееc çук... Рассейрен хӗрлисем çитсен, мӗн калӗç хамӑра?.. „Хӑравçӑсем, ӗççыннипе хресченсене сутакансем“ тейӗç. Намӑса ӑçта хурӑпӑр?

Чӑнах та, Максӑм хӑшне-пӗрне мана пуçланӑ. Ысна-шӗ каласан, пурне те аса илчӗ.

— Çук, эпӗ манман. Чӑнах та, пирӗн хӗрлисене пулӑшас пулать. Унсӑрӑн... çиленни кӑна мар, урӑххи те...

Тата тем каласшӑнччӗ Максӑм... Сасартӑк пӗри чӳречерен шак-шак-шак! шаккарӗ. „Шуррисем!.. Сыхланӑр!.. „тенӗ сасӑ илтӗнчӗ. Унччен те пулмарӗ, пӑшал сассисем янтраса кайрӗç. Куçма тӳрех чӳречерен тулалла сикрӗ. Пӳртре Максӑм пӗччене тӑрса юлчӗ, ӑшӑнса çеç çитнӗччӗ, каллех шӑнса кайрӗ, сивӗ тытнӑ çын пек халтӑртатса чӗтреме пуçларӗ. Çӗмрӗк чӳречерен пӳртне сивӗ кӗрсе тулчӗ. Пӑшал, пулемет сасси пӗр вӗçӗмсӗр кӗрлесе тӑрать. Йыт-качка—вӗрет, пӗтӗм ял çуйӑхать...

Макçăм ниçта кайса кĕме пĕлмест, алăкăн-тĕпелĕн чупкалать. Вăл пĕрре пăшалне, тепре тиллине, унтан дохине тыта-тыта пăхать... Пӳртне сивĕ кĕнĕçемĕн кĕрет; тулти пекех сивĕнсе çитрĕ. Тимĕр кăмаки те сӳнсе ларчĕ. Макçăм дохине тăхăнчĕ те, пăшалне илсе, чӳречерен сикме тăчĕ; çаврăнса пăхрĕ: тилли шел, юлать-ылттăн вĕт. Таврăнсан, Мархва мĕн калĕ?.. Вăл тилле çурăмĕ çине çавăрса хучĕ те тулалла сикрĕ. Пăхать Макçăм: Куçма, чӳречерен епле сикнĕ, çаплипех тăсăлса ӳкнĕ. Кăкăрĕнчен юн сăрхăнать; сăнĕ хуп-хура хуралса кайнă; Макçăма курсан, вăл аллисемпе юра чăмăртаса, кăвакарнă тутисене мăкăлт-мăкăлт хускатрĕ, темскер каласшăн пулчĕ, анчах сасси тухмарĕ... Унтан, тарăн сывласа илчĕ. Шăлĕсене шатăр-р-р-р! çыртрĕ, куçĕсене майĕпен хупрĕ, вара сывлăшĕ те пĕтрĕ.

— Вилчĕ... калаçса та юлаймарăм... Ан çилен, йысна. Эпĕ ăнлантăм ĕнтĕ... Саншăн, аппапа ачисемшĕн тăшмансене тавăрăп. Эсĕр манран уйрăлсан та... эпĕ чĕрĕха. Сывă пул...— терĕ Макçăм. Унтан пуçне тайса пăртак тăчĕ те, Нарымĕ килессе те кĕтмерĕ. Пăшалĕн икĕ кĕпçине те авăрларĕ. Урам тăрăх чупрĕ.

Çĕр çав тери уяр та сивĕ. Урам варринче йывăççем, пуртăпа çурнă пек шарт-шарт çурăлаççĕ. Пăшал сасси чарăнмасть. Тăрă пĕлĕт çинчи çăлтăрсем, халь çĕре персе анас пек, чӳхенсе тăраççĕ. Тулли уйăх яла çутатать. Сивĕ сывлăша хупласа илет. Тĕрлĕ шăв-шав айĕнчен янăрашни илтĕнет:

— Ай!..
— Тыт!..
— Э-э-э!..
— Лекрĕн-и!..
— Ак сана!..
— Бандит!..

Пӳртсенче хĕрарăмсем çухăраççĕ, ача-пăчасем йĕни лăпланмасть.

Макçăм ял варрине чупса çитрĕ. Пăхать: шуррисем партизансене хĕстерсе çитернĕ; кусем, ӳке-ӳке ял вĕçнелле тараççĕ. Çывăхарах чупса çитрĕ те пăшалĕн икĕ кĕпçинчен те харăс кĕрслеттерсе ячĕ. Шуррисен икĕ салтакĕ тăсăлса та ӳкрĕç...

— Хыçалтан çавăрса илнĕ!..— тесе кăшкăрашса шуррисем унталла та кунталла тарма пуçларĕç. Макçăм

пăшалне татах авăрларĕ те тĕпĕр хут персе ячĕ. Унтан вăл пĕтĕм вăйĕпе:

— Ур-р-а-а-а!.. Юлташсем! Ан тарăр!!—тесе кăшкăра пуçларĕ. Çав вăхăтра Нарымĕ те хашкаса чупса çитсе улласа ячĕ...

Шуррисем чакма тытăнчĕç. Ӳке-ӳке таракан партизансем каялла çаврăнчĕç.

Шуррисен салтакĕсем тарчĕç, тарса ĕлкĕрейменнисем хăшĕ улăм айне, хăшĕ авăн вучаххине, хăшĕ нӳхрепе чăмрĕç.

Пăшал сасси лăпланчĕ. Партизансем хăшĕ-хăшĕ кĕпе вĕççĕн, хăшĕ çĕлĕксĕр, хăшĕ çаруран Макçăмпа Нарым тавра пуçтарăнчĕç. Тӳсмелле мар сивĕ. Партизансемшĕн çарамас, çара пуçăн пулсан та, сивĕ мар; мунчаран тухнă пек, пуçтӳписенчен мăкăрланса пăс тухать; питçăмартисем тăрăх шăпăртатса тар юхать. Шуррисене çĕнтернипе савăнса вĕсем, кулкаласа, тапăртатса çеç тăраççĕ. Пурте Макçăма тавтуса ыталаса чуптăваççĕ. Нарыма тыта-тыта ачашлаççĕ. Кам? Ăçтисем? Мĕнле çитсе тухрăн? Ыйтса пĕлеççĕ. Макçăм пĕр пытармасăр тĕпĕ-йĕрĕпе каласа пачĕ. Партизансем нумайĕшĕ Макçăма пĕлеççĕ. Германи вăрçинче пĕрле пулнă.

Çутăлчĕ. Хĕвел хĕп-хĕрлĕ хĕрелсе тухрĕ. Çанталăка кăвак тĕтре хупласа тăрать. Ирхине пушшех сивĕ. Урам тулли çын вилли: хăшĕ çул çинче выртаççĕ, хăшĕ пӳртсем çумне куклене-куклене ларнă; вилейменнисем турткаланса выртаççĕ.

Макçăм ялти çынсене пуçтарттарчĕ те, пĕр пысăк шăтăк алтса шуррисен салтакĕсене пуçтарса пытарма хушрĕ. Куçман ӳтне çуса тупăка вырттарчĕç. Ăна партизансем, хĕрлĕ ялавсем тытса, юрласа пытарчĕç. Куçма тăпри çине кедртан юпа лартрĕç. Юпи çине Макçăм хăй аллипе çапла çырчĕ: „Пиртен сана тăшман ĕмĕрлĕхе уйăрчĕ. Эпир, юлташусем, çав тăшмана уншăн тавăрма, сан тăпру çинче сăмах паратпăр: Вилмелле пулсан, сан пекех пĕр кулянмасăр пуçа хума хатĕр. Сывă пултăр санăн яту! Сывă пултăр ĕçхалăхĕн ирĕкĕ!".

Çанталăк тӳсмелле мар сивĕ тăрать. Куç уçса пăхаймн тăман вĕçтерет. Кунсем улшăнаççĕ, вăхăт пĕрмаях малалла шăвать. Анчах Мархвапа ывăлĕ Макçăмпа Нарымне ниепле те кĕтсе илеймеççĕ. Эрне те, ытла та иртрĕ вĕсем тухса кайнă хыççăн. Анчах вĕсем халь те çук. Таврăнмаççĕ...

„Аташса кайса вилчӗҫ пуль... Ҫук, апла пулас ҫук, ӗмӗр тайга тӑрӑх ҫӳренӗ, халиччен нихӑҫан та аташнине калаҫманччӗ. Хӑй аташсан та, Нарымӗ аташас ҫук"... тесе шухӑшлать Мархва. Ывӑлӗ те ашшӗшӗн тунсӑхласа ҫитрӗ.

— Анне, аттепе Нарым хӑҫан таврӑнаҫҫӗ?..—тесе ыйтать вӑл амӑшӗнчен.

Мархва ялан:—Ыран, ывӑлӑм, ыран,—тесе пуҫӗнчен шӑлса йӑпатать.

Уйӑх иртрӗ. Иккӗмӗшӗ те ҫитрӗ. Ҫук, таврӑнмаҫҫӗ. Мархва тунсӑхласа ҫитрӗ, ҫӗрӗ-ҫӗрӗпе пӗр куҫ хупмасӑр шухӑшлать. Ҫимелли пӗтрӗ, выҫӑллӑ-тутӑллӑ пурӑнкалаҫҫӗ. Ку сахал. Тата лавкаҫӑ Мирун парӑмшӑн, кашни кун тенӗ пекех, пыра-пыра аптратать; ӑна Мархва ялан: „ыран" тесе йӑпата-йӑпата кӑларса ярать. Шалт аптраса ҫитрӗ Мархва; никам та пулӑшакан ҫук. Юлашкинчен—венчете кӗнӗ кӗпине сутса пӗр пӑт ҫӗрулми илчӗ. Ҫавна ҫикелесе пурӑнкалаҫҫӗ.

— Ку пӗтсен, хуть те выҫӑ вил ӗнтӗ...

Пӗрре ҫапла, лавкаҫӑ Мирун пычӗ те, парӑмне таварма ыйтрӗ. Мархва ҫиленсе Мируна ҫатма аврипе ислетсе кӑларса ячӗ. Ҫавӑнтан вара, ерне ытла ӗнтӗ, Мирун пырса кӗмест. Сута парса, тӗрмере ҫӗртӗ, тесе хӑратаҫҫӗ Мархвана кӳршӗ арӑмӗсем.

— Тата пытӑр-ха, эпӗ ӑна тата лайӑхрах ислетсе ярам,—тет Мархва.

Сивӗ кунсем, куҫ уҫса пӑхайми тӑмансем иртсе карӗҫ. Ҫанталӑк ҫуркунне енне сулӑнчӗ. Хӗвел инҫетрен шуса иртекенччӗ; халӗ вӑл та ҫывӑхах киле пуҫларӗ. Хуралтӑ тӑррисенчен шӑпӑртатса тумла юха пуҫларӗ. Шӑнкӑрчӑсем, ушкӑн-ушкӑнӑн килсе, хӗлле тӑманпа ҫӗмӗрӗлсе пӗтнӗ йӑвисене тӳрлетсе, ҫӑмарта тума хатӗрленеҫҫӗ. Урамсем тӑрӑх шӑнкӑртатса шыв юхать. Унта ача-пӑчасем пӗчӗк шыв арманӗсем туса лартаҫҫӗ те: арманӗсем пӑлтӑртатса ҫавӑрӑнса лараҫҫӗ.

Кӗтмен ҫӗртенех Колчак ирӗксӗр илсе кайнӑ салтаксем вӑрҫӑран тара-тара киле таврӑна пуҫларӗҫ. Вӗсем „хӗрлисем час ҫитмелле" текен хыпарсем илсе килеҫҫӗ.

— Ҫынсем пурте килӗсене таврӑнчӗҫ... Манӑн нихӑҫан та таврӑнас ҫук ӗнтӗ, тесе, ывӑлне ыталаса йӗрет Мархва. Юлашки ҫӗрулмийӗ те пӗр-иккӗ пӗҫермеллӗх анчах юлчӗ. Малашне ыйткалама каясси ҫеҫ юлать. Анчах никам та парас ҫук. Пурте выҫӑхса ҫитнӗ. Ҫитменнине тата кӑҫал ҫуркунне те вӑраха тӑсӑлчӗ. Часрах

юр кайса пĕтсе ешĕл курăк тухсан,—курăк пĕçерсе çикелесе те пуранăччĕç.

— Ай, тем курса, тем илтес... Выçах вилсе пĕтетпĕр пуль,—тесе калаçаççĕ хĕрарăмсем, Мархва патне пуçтарăнса ларас пулсан.

— Ытах ан хуйхăрăр-ха. Хĕрлисем çитсен выçах вĕлермĕç,—тесе йăпатать Мархва хĕрарăмĕсене.

Нумайчен кĕтнĕ хĕрлисем çитрĕç. Пуянсен тыррисене турта-турта илсе, выçăхнă çынсене пара пуçларĕç. Мархвапа ывăлне те ыраш çăнăхĕ пачĕç.

— Каларăм сире—хĕрлисем выçă вĕлермеççĕ, тесе. Чăнах пулчĕ,—тесе савăнтарать вăл кӳршĕ арăмĕсене.

— Çĕршыв типе пуçларĕ. Хĕвел тӳперен, пуçран шăлса ачашлать. Ача-пăчасем пĕринчен пĕри ăмăртмалла выляса чупаççĕ; çитĕннисем те, хĕллехи йывăр тумтирсене хывса пăрахнă хыççăн, çăмăллăн та савăнăçлăн çӳреççĕ, хавасланса ĕçлеççĕ. Мархвапа ывăлĕ анчах пӳртре хуйхăрса лараççĕ. Пĕр ирхине кӳршĕ арăмĕ, Мархвана сума суса, хăнана чĕнме пычĕ. Куншăн вара Мархва тем пек савăнчĕ:

— Упăшкам çук пулсан та, сума сăвакансем пур-ха,—тесе вăл сăхманне тăхăнчĕ те тулалла тухма тăчĕ. Анчах пӳртрен тухас кăна тесе тăратчĕ, алăкĕ: яр-р-р уçălса кайрĕ те пӳрте Макçăм кĕчĕ.

— Акă сана, Мархва, тилĕ,—терĕ вăл, Мархвана хура тилĕ тирне тыттарса. Мархва çавăнтах Макçăма мăйĕнчен ыталаса илчĕ. Савăннипе йĕрсе ячĕ.

Макçăмпа Нарымĕ пушăла мар, хура тилĕ тытса таврăнчĕç. Анчах ку малтан тытни пулмарĕ,—Макçăмăн ăна шуррисемпе çапăçнă вăхăтра пăрахса хăвармалла пулчĕ. Ун вырăнне халь акă, шуррисене çĕнтерсе килнĕ чух, сăмах панине кура, çула май тайгана кĕрсе, тепĕр тилĕ тытмалла пулчĕ.

Макçăм та, Нарымĕ те ырă, сывă çитрĕç. Анчах Макçăм пăртак улшăннă: çӳçĕсем шуралнă, сăнĕ çуталнă. Нарымăн хăрах хăлхи çук: пĕрре, шуррисемпе хĕрӳ çапăçнă чух, пĕр салтак ăна хĕçпе касса татнă. Нарым, çиленсе, салтакне туртса ӳкернĕ те, пырне шăлĕпе кăшласа татнă.

Макçăмăн мĕн шухăшлани пулчĕ—тилĕ тирĕ укçипе Мархвана пурçăн тутăр илсе пачĕ, пĕр çӳрен лаша илсе ячĕ. Анчах лавкаçă Мируна парăмне тӳлемерĕ, мĕншĕн тесен Мируна Макçăм таврăниччченех таçта тытса кайнă... Çуртне туртса илсе халăх çурчĕ туса хунă.

---

# ЛЕВЕНТЕЙ МАСАРĔ

## I

Çĕпĕр тайги нумай кайăк-кĕшĕклĕ вăрман. Раççейре пурăнна чух пирĕн вăрман пекки пурччĕ те анчах унта мулкачран пуçне урăх нимĕн те пулман. Хĕл каçиччен пиллĕк мулкач тытнă Левентей сунарçă. Çапах нумай, тесе тĕлĕнтерчĕç вара Усăллă чăвашĕсем.

Чăнах та çав вăрмантан вунă мулкачран ытла пулман пуль.. Пиллĕкĕшне сунарçă—Левентей тытнă, тепĕр пиллĕкĕшĕ тепĕр çул валли ăратлăх юлнă... Çĕпĕрте тем тĕрлĕ кайăк та пур, сунарçăсем пуринчен ытла хаклăрах тăраканнисене тытма тăрăшаççĕ, çавăнпа мулкач унта питех пысăк хисепре мар.

Халĕ Левентей Раççейри вунă мулкачлă вăрманта мар, —вĕçĕ-хĕррисĕр Çĕпĕр тайгинче. Унта вăл шутсăр-сумсăр кайăк-кĕшĕк хушшинче хуçа пулса çӳрет. Мĕнле кайăк тытас тет, çавна тытать, хăш кайăкăн ашне пĕçерсе çиес тет—çавна пĕçерсе çиет..

Левентей сунар саккунне питĕ лайăх пĕлет, çавăнпа та çăва тухсан пĕр кайăка та тивмест. Ăнсăртран курсан та:

— „Кай! Куç умĕнче ан çӳре... Ачу-пăчусене пăх, тăрант",—тесе хăратса ярать.

Левентейпе арăмĕ—Кĕтерне—ялтан вунă çухрăмра, тайгара пурăнаççĕ. Тăвата кĕтеслĕ, икĕ чӳречеллĕ, тăррине хурăн хупипе витнĕ пӳрчĕ, Барсас ятлă пулăллă шыв хĕрринче ларать. Çăва тухсан çав хăйăр тĕплĕ шывлă çырмара чăма-чăма шыва кĕрет Левентейĕн çемьи. Çурлă-кĕрлĕ вăхăтсенче пулă тытса, хĕлле валли пăчĕ-пăчĕпе типĕтсе хурать.

Вăхăт çитсен тайгара çырласем пиçеççĕ: малтан хăмла çырли, унтан ытти çырласем: çĕмĕрт, хурлăхан. Çырла пиçсен, тĕрлĕ ялтан, тĕрлĕ халăх ушкăнĕ-ушкăнĕпе çырла татма пырать. Икшер-вицшер кун, ерни-ернипе çырла татса пурăнаççĕ. Витри-витрипе, катки-каткипе тĕрлĕ тĕслĕ çырласем татса пуçтараççĕ. Каçхине пурте Левентей утарне выртма пуçтарăнаççĕ.

— Левентей пиччє!

— Кĕтерне мăнакка,—мейĕр-ха, ҫырла ҫисе пăхăр...

— Манне те астивĕр.

Левентейпе Кĕтерне, хăйсем чăваш пулсан та, пуринпе те калаҫма пултараҫҫĕ. Вĕсем хăйсем те ҫырла вăхăтĕнче пăчĕ-пăчĕпе татса типĕтсе хураҫҫĕ.

Ҫырла татнă вăхăтра тайга иртен пуҫласа каҫчченех янтраса тăрать. Тĕрлĕ чĕлхепе тĕрлĕ юрăсем шăранаҫҫĕ. Эх, мĕн каламалли пур! Илемлĕ вăхăт тайгара ҫырла пиҫнĕ чух! Пуринчен ытла ҫитĕннĕ хĕрсемпе каччăсемшĕн. Вĕсенчен нумайĕшĕ тайгана, ҫырла татма мар, пĕрпĕринпе курăнăҫса йăл-йăл кулса калаҫса ҫӳресе вăхăт ирттерме ҫеҫ пыраҫҫĕ. Ҫырла татнине ашшĕ-амăшĕсене ĕнентересшĕн, киле таврăннă чухне кăшт та пулин ҫырла сутăн илсе каяҫҫĕ.

— Мĕншĕн пит сахал татрăн ҫырлуна, ачам?—тесе ыйтаҫҫĕ вара ашшĕ-амăшĕсем.

— Лайăх ҫырла тĕлне лексе пулмарĕ,—тесе суяҫҫĕ ачасем вĕсене.

Хăшин-пĕрин ашшĕ-амăшĕсем сисеҫҫĕ те пуль. Анчах шарламаҫҫĕ, мĕншĕн тесен хăйсем те ҫамрăк пулнă. Хăйсем те тайгана ҫырла татма ҫӳренĕ.

## II

Ҫанталăк кĕркунне енне сулăннă. Тайгари ҫырласем пĕрин хыҫҫĕн тепри пиҫсе пĕтеҫҫĕ. Вĕсене ҫынсем татса каяҫҫĕ, кайăк-кĕшĕксем ҫиеҫҫĕ, тăрса юлнисем хăрса, е ҫĕрсе тăкăнса пĕтеҫҫĕ. Ҫырла пĕтнĕ ҫĕре кедр майĕрĕ пулса ĕлкĕрет. Каллех тайга тулли халăх. Ирлĕ-каҫлă пăчăрсем пĕрне-пĕри шăхăрса чĕнме пуҫлаҫҫĕ. Кĕркунне ҫитет. Левентей Сăвăр ятлă йыттипе сунара ҫӳреме хатĕрленсе тăрать: икĕ кĕпҫеллĕ пăшалне тахҫанах тасатса хунă, капкăнсене, серепесене юсать...

Кедр майăрне татса пĕтернĕ ҫĕре тайгана ялсенчен ҫунарҫăсем икшер-виҫшер пăшалпа, йытăсемпе пыраҫҫĕ. Хăшĕсем Левентей утарне чарăнаҫҫĕ, хăшĕсем тата малалла иртсе каяҫҫĕ. Сунарҫăсем пырсан, тайга пăшал, йытă сассипе кĕрлеме тытăнать.

Вăхăт ҫитсен, Левентей те Сăвăрĕпе сунара ҫӳре пуҫлать. Кайăк-кĕшĕксене хăшне пăшалпа персе, хăшне капкăнпа ҫаптарса, хăшне серепепе ҫаклатса тытать, хăшне Сăвăрĕ ҫавăрса илет.

Сунарçăсем хыçĕнчен тата тепĕр тĕрлĕ „сунарçăсем“ пыраççĕ. Вĕсен пăшалпа йытă выранне кĕсъисенче укçа, лашисен çурăмĕсем çийĕсенче витри-витрипе эрех. Вĕсем кайăк-кĕшĕксене, пăшалпа персе тытас выранне, пăшаллă сунарçăсенчен укçа парса, эрех ĕçтерсе тата тĕрлĕ майсемпе улталаса илеççĕ. Пăшалпа çӳрекен сунарçăсем çинче çĕтĕк-çурăк пиншаксем, сăхмансем, кĕрĕксем. Лашаллисем çинче—упа, кашкăр, рысь тирĕсенчен çĕленĕ тумтирсем.

— Хе-хе-хе! Эсир пăшалпа çӳретĕр пулсан та, пирĕн чухлĕ кайăк-кĕшĕк тытаймастăр,—тесе кулаççĕ вĕсем лешсенчен куç умĕнчех.

Левентей те мĕн Раççейрен куçса килнĕренпех çав пăшалсăр-йытăсăр сунарçăсене хăй тытнă пек кайăк-кĕшĕк тирне, ашне сутса пурăнать. Укçипе çывăхри яла тухса çăнăх-кĕрпесем тата ытти ĕçме-çимелли япаласем илсе килет. Левентей тыра акмасть, выльăх-чĕрлĕх усрамасть; ухутана çӳренипе çеç тăранса пурăнать çемьипе.

Раççейрен куçса килнĕ çыннăн, Çĕпĕрти яла çĕре кĕрес тесен, малтан ялти куштансене аллă е çĕр тенкĕ укçа, пĕр-икĕ витре эрех парса ĕçтерес пулать. Вара тин çĕре кĕртеççĕ, эрехне ĕçнĕ хыççăн пĕрре тытса „ăшă мунча“ кĕртеççĕ. Ку вара—малашне ялти куштансене пăхăнса пурăнмалли çинчен пĕлтерет. „Ăшă мунча“ кĕртнĕ чух, çапла каласа çапаççĕ: „Эсĕ ĕнтĕ пирĕн ял çынни. Эпĕ каланине итле, чĕнсен пырса ĕçле, çиес килсен ыйт“.

Левентейĕн куштансене пама укçа, эрех ĕçтерме вăй пулман, мĕншĕн тесен вăл хăй те Раççейрен аран-аран Çĕпĕре çитсе ӳкнĕ. Тата пуянсен патакне çиес килмен, вĕсене пăхăнасшăн пулман. Çавăнпа та вăл, аслă тайга вăрманĕнче никама пăхăнмасăр ирĕклĕн пурăнас тесе, çак утара килсе ларнă. Левентейĕн икĕ ача пулнă: пĕри ывăл, тепри хĕр. Хĕрĕ яла качча тухнă, ывăлне авлантарса кинлĕ пулса курăпăр тесе кĕтнĕ. Анчах ĕмĕтленнĕ пек пулмарĕ. Кĕтмен çĕртенех вăрçă хускалчĕ. Вара 1914-мĕш çулта Кĕçтене Германи вăрçине хуса кайрĕç. Унтан икĕ çул çурăран таврăнчĕ. Таврăнсан каллех ăна Колчак çарне тытса кайрĕç. Çавăнтан вара çак утарта Левентейпе карчăкĕ иккĕшĕ çеç пурăнаççĕ.

Кĕçтен Колчак çарне кайни икĕ уйăх ытла иртрĕ ĕнтĕ, те чĕрĕ, те вилĕ—хыпар-хăнар çук, çыру та килмест.

— Хăçан чарăнмалла-ши ку вăрçă? Пĕрмаях вăрçăра çӳресе ĕмĕрне ирттермелле-ши ку Кĕçтенĕн?—тесе хуйхăрса пурăнаççĕ Левентейпе карчăкĕ. Кашни кун ывăлĕ таврăнасса кĕтеççĕ. Çук, ывăлĕ таврăнмасть.

III

Çырла пиçнĕ вăхăт иртрĕ. Кĕркунне çитрĕ. Çĕрсем вăрăмланса, кунсем кĕскелчĕç. Хутран-ситрен йывăç çулçисем саралчĕç. Час сунара çӳреме вăхăт çитет. Ак, ялсенчен сунарçăсем килĕç. Ыйăха кайнă тайгана вăратĕç. Пăшал сассисем кĕрлĕç, йытăсем вĕрĕç. Анчах çав савăнăçлă шăв-шавра Левентейпе пĕрле ун ывăлĕ Кĕçтен пулмĕ.

Пĕр ирхине çапла, Левентей тахçанах тасатса хунă пăшалне стена çумĕнчен илчĕ те, авăрласа, тулалла тухрĕ:

— Айта тайгана тăрăх пăхса çӳрер. Хăш вырăнсенче кайăк-кĕшĕксем нумай,—тесе шик шăхăрчĕ кедр айĕнче выртакан Сăвăр йыттине.

Сăвăрĕ çавăнтах сиксе тăрса, Левентей патне йăпăлтатса чупса пычĕ.

— Карчăк, эсĕ эпир таврăннă çĕре мунча хутса хур.

— Юрĕ,—ăсатса кăларса ячĕ Кĕтерне стариккипе Сăвăрне.

Сăвăрĕ малта, ун хыçĕнче Левентей, унталла-кунталла пăхкаласа, çăра йывăç вуллисем хушшипе, тăм ӳкнипе типнĕ курăксене чаштăртаттарса, тайга тăрăх утаççĕ. Умĕсенчен те, айăккисенчен те ăсан, пăчăр, вăрман чăххисем вĕçе-вĕçе çĕкленсе, йывăç тăрринчен мăйĕсене тăсса пăхса юлаççĕ. Кашни пихта тăрринче тенĕ пекех—лапсăркка хӳрелĕ, çурăм-çийĕсем кăвакара пуçланă пакшасем, шик-шик! шăхăрса, пĕр йывăç çинчен тепĕр йывăç çине сике-сике ӳкеççĕ. Ак курăка чаштăртаттарса пĕр кайăк тăрса тарчĕ. Левентей курса та юлаймарĕ: те кашкăр, те тилĕ пулчĕ. Ак тата кăшт маларах утсан тайгана çĕмĕрсе упа тăрса тарчĕ.

— Ну, Сăвăр, кăçал пире валли кунта кайăк-кĕшĕк çителĕклĕ. Хатĕрленсе çеç тăр! Анчах, Кĕçтен çук. Вăл пулсан, кăçал пуйсах каймалла та,—йыттипе калаçса илчĕ Левентей.

— Ну, пĕр карăкне персе илер те киле тавăрнар,—терĕ Левентей хăй ăшăнче.

Кĕтнĕ пекех, пĕр каракĕ лапăстатса çĕкленчĕ те хурăн тăррине вĕçсе ларчĕ. Левентей пăшалне хулпуççи çинчен илсе каракка тĕллерĕ. Пăшал сасси тайга тăрăх янтраса кайрĕ. Çӳлтен кайăк тĕкĕсем вĕçсе анчĕç. Анчах кайăкĕ ни ӳкмерĕ, ни вĕçсе каймарĕ.

— Мĕн пулнă ку пăшала? Вунпĕр çул сунара çӳресе те пенĕ кайăк çĕре ӳкмесĕр ларнине курман. Кам та пулсан пăсман-ши ман пăшала? Анчах ăна никам та алăпа тытса курман. Çук, ырра мар пулĕ.. Хамшăн хăрамастăп, нимĕн те пулмĕ. Кĕçтеншĕн, ăна е амантĕç е вĕлерĕç,—тесе хăй тĕллĕн мăкăртатса калаçса илчĕ Левентей. Унтан пăшалне тепĕр хут тытса, карăк çине тĕллесе печĕ. Карăк çавăнтах çĕрелле персе анчĕ. Сăвăр чупса çитсе кайăка çăлса илмелле пычĕ, анчах карăк сасартăк çĕртен çĕкленчĕ те, йывăç турачĕсене çунаттипе çапса хăварса вĕçсе кайса çухалчĕ.

— Ахаль мар ку, мĕн те пулсан пулать-пулатех... Ырра пулсан, юрĕччĕ!—тесе шухăшларĕ Левентей. Унтан пăшалне çĕнĕрен авăрлама пуçларĕ. Сăвăрĕ Левентей умĕнче хурлăхлăн пăхса ларчĕ.

— Ан хуйхăр! Пĕрне тытаймасан тепĕрне тытăпăр,—терĕ Левентей, Сăвăрне ачашласа. Çав вăхăтра инçе те мар шăхăрнă сасăсем илтĕнчĕç.

„Епле ытла ир килнĕ ку сунарçăсем? Кайăк-кĕшĕксем ĕлкĕрмен те-çке“—шухăшларĕ Левентей хăй ăшĕнче.

Сăвăр çын шăхăрнă еннелле сиксе вĕрсе чупрĕ.

— Сăвăр, Сăвăр!—тенĕ сасăсем илтĕнчĕç çавăнтах. Сăвăр вĕрме чарăнчĕ.

— Кĕçтен сасси вĕт ку!—тенĕ сăмахсем ирĕксĕрех тухрĕç, Левентейĕн çăварĕнчен. Пăшалне васкаса авăрласа малалла утма çеç пуçланăччĕ вăл, Левентей умне виçĕ юланут тухса тăчĕç. Вĕсенчен пĕри Кĕçтен пулчĕ.

— Аван-и, атте?—Кĕçтен лаши çинчен сиксе анчĕ те ашшĕне ыталаса чуптурĕ. Савăннă Левентей ывăлне хирĕç сăмах тупса калаймасăр чылайччен юпа пек хытса тăчĕ.

— Çитрĕн-и, ачам! Пуçпех таврăнтăн-и?—тесе ывăлĕн аллисенчен ярса тытрĕ.

— Пуçпех мар, атте, çул май çеç кĕрсе тухас терĕм.

— Ăçта? Хăш хулара пурăнатăн? Мĕншĕн çыру ямастăн?

— Хăш хулара? Атте, эсĕ хăш хулара пурăнатăн, эпир те çав хуларах пурăнатпăр. Ак, кусем ман юлташ-

сем,—савӑнӑҫлӑн кулса юлташӗсем ҫине аллипе тӑсса кӑтартрӗ Кӗҫтен.

Левентей тӗлӗнчӗ. Пӗрре савӑннипе, тепре ӑнланманнипе куҫӗсем чалӑрса кайрӗҫ.

— Мӗнле-ха вӑл апла? Сана вӗт Колчак салтака илчӗ.

Илесси илчӗ те тытса чараймарӗ. Сӑнчӑрӗ начар. Халӗ ӗнтӗ эпӗ Колчак ҫарӗнче мар.

— Ӑҫта тата?

— Ӗҫлекенсемпе хресченсем патӗнче. Халӗ эпӗ хӗрлӗ партизан.

Левентей куна ӑнланаймасӑр тӗлӗнсе кайса тӑрать.

— Ах, ачам хӑрушӑ!

— Нимӗн те хӑрушши ҫук, атте.

— Эпӗ ватӑлнӑ ӗнтӗ. Эсир ҫамрӑксем манран лайӑхрах пӗлетӗр пуль? Ачасем, эсир утара кайӑр. Эпир Сӑвӑрпа карӑксем тытса пырӑпӑр. Сирӗн хырӑм та выҫнӑ пуль? Аннӳ карӑк яшки пӗҫерсе ҫитерӗ,—терӗ Левентей савӑнӑҫлӑн кулса.

Ҫавӑнтах партизансем лашасене утар еннелле ҫавӑрчӗҫ. Левентейпе Сӑвӑрӗ вӗсенчен карӑк тытма уйӑрӑлса юлчӗҫ.

„Паҫӑрхи карӑк, усала мар, ырлӑха ӳкрӗ иккен"—тесе шухӑшларӗ Левентей.

Ҫур сехет хушшинче вӑл виҫӗ карӑк тытрӗ те утар еннелле васкаса утрӗ.

## IV

Левентейӗн пӳрчӗпе юнашар пӗр лапсӑркка кедр ларать. Ун айӗнче хурӑн вутти кӗрлесе ҫунать. Вут ҫинче ҫур витре кӗрекен чугун чӳлмек ҫакӑнса тӑрать. Вӑл чӳлмекре карӑк ашӗ пиҫет. Лакӑртатса вӗрет чӳлмек. Ҫав кедр айӗнчех Левентейпе карчӑкӗ тата виҫӗ партизан лараҫҫӗ. Вӗсем мӗн курни, мӗн илтни ҫинчен калаҫҫӗ. Лашасем хӑйсенчен инҫе мар курӑк ҫисе ҫӳреҫҫӗ. Сӑвӑрӗ вӗсене хирӗҫ урисене малалла тӑсса хурса вырттӑ та куҫӗсене илмесӗр пӗррӗ Кӗҫтен ҫине, тепре Левентей ҫине тата Кӗтерне ҫине пӑхса выртать.

Яшки пиҫрӗ. Кедр айне шӑналӑк сарса пӑрахрӗҫ те, ҫиме ларчӗҫ.

— Хӑҫан чарӑнмалла ку вӑрҫӑ? Малтан нимӗҫпе вӑрҫрӗҫ. Ку сахал. Халӗ ӗнтӗ хамӑрӑннисем йытӑпа кушак пекех туллашаҫҫӗ. Ним те ӑнланмалла мар. Такӑшӗ айӑплӑ, такӑшӗ айӑпсӑр?—терӗ Левентей йывӑррӑн сывласа.

— Ăнланасси атте, кунта ним те мар. Пĕр-пĕринпе ахаль ҫапăҫмаҫҫĕ. Пĕр енне ĕҫлекенсемпе хресченсем, тепĕр енне ҫĕрулпучĕсемпе буржуйсем тăраҫҫĕ. Ҫав икĕ вăй хушшинче вилĕмлĕ ҫапăҫу пырать. Эпир ҫав ҫĕрулпучĕсемпе буржуйсене ҫĕнтерсен ҫеҫ вăрҫă чаранма пултарать.

— Ҫапăҫса ывăннă пуль ĕнтĕ. Ялан капла туллашнинчен пĕр-пĕринпе килĕшмелле те, вара вăрҫă та чарăнăччĕ. Пурсăр та киле таврăнса пурăнаттăр. Ак, хăвнах илер-ха, ачам, эсĕ вĕт ĕнтĕ ҫирĕм ултă ҫулта, тăваттăмĕш ҫул вăрҫăра ҫӳретĕн. Ҫамрăк ĕмĕр иртет. Санăн ĕнтĕ тахҫанах авланса арăмлă, ача-пăчаллă пулса пурăнмалла. Вара мана та, аннӳне те ҫăмăл пулĕччĕ. Халĕ акă тайга варринче иккĕн ҫеҫ тарăхса пурăнатпăр. Эсĕ вăрҫă тăрăх сĕтĕрĕнсе ҫӳретĕн,—кăшт сыпнипе Левентейĕн чĕлхи-ҫăварĕ пĕтĕмпех ҫемҫелсе ҫитрĕ. Вăл татти-сыпписĕр калаҫа пуҫларĕ.

— Ҫук, атте. Пирĕн буржуйсемпе килĕшесси пулмасть. Е эпир вĕсене, е вĕсем пире ҫĕнтерме тивĕҫлĕ. Хăҫан та хăҫан ҫавсене ҫĕнтерĕпĕр, вара эпир те ҫак тайгаран тухса, ҫынсем пекех ялта пурăнăпăр.

Левентей ывăлĕн сăмахĕсене ăнланса илчĕ пулас, хĕрсе кайнă пулсан та, ывăлне хирĕҫ урăх сăмах каламарĕ. Пĕтĕмпех килĕшрĕ.

— Ну, атте-анне, ĕҫрĕмĕр, ҫирĕмĕр, халлĕхе сывă пулăр. Эпир каятпăр. Анчах эпир пулнине никама та ан калăр.

— Ăҫта каятăр ĕнтĕ кунтан?—Левентей кăмăлсăртарах пулса ыйтрĕ. Хăйĕн куҫĕсенчен шăпăр-шăпăр куҫҫулĕ юхса анчĕ.

— Юлташсем патне, унта эпир нумайăн, ан йĕрĕр. Малашне ĕнтĕ эпĕ час-часах килкелесе кайăп. Сывă пулăр!—ашшĕпе амăшне ыталаса чуптурĕ те лаши ҫине сиксе утланчĕ Кĕҫтен.

Виҫĕ юланут, ҫăра йывăҫлă тайга хушшине кĕрсе кайса, курăнми пулчĕҫ. Левентейпе карчăкĕ, ним чĕнме пĕлмесĕр, юпа пек хытса юлчĕҫ.

Юр ҫăвас умĕн кашни кун шап-шурă тăм ӳкет. Ҫырма хĕрринчи шыв шăнать. Ҫӳлĕ курăк ҫулнă пек йăванса пĕтрĕ. Сарăхнă йывăҫ ҫулҫисем юр ҫунă пек ҫĕре тăкăнаҫҫĕ. Халь нумаях та пулмасть кăвакăн-симĕсĕн курăнакан тайга ҫийĕ хура-саррăн курăна пуҫларĕ.

Сентябрь уйăхĕ. Сунара ҫӳреме вăхăт ҫитрĕ.

Кĕçтен хăйĕн юлташĕсемпе час-часах утара пырса каять. Халь Левентейпе карчăкĕ ывăлĕшĕн питех хуйхăрмаççĕ, мĕншĕн тесен халĕ ĕнтĕ вăл салтакра мар, хăй ирĕкĕпе аслă тайга варринче партизан отрядне ертсе çӳрет. Левентей ывăлĕн сăмахĕсене манмасть: „Буржуйсемпе килĕшмелле мар, е эпир вĕсене, е пире вĕсем". Çавăнпа та Левентей шуррисен отрячĕсем ăçта çӳренине пĕлсе, партизансене систерсе тăрать.

Вăл кĕркунне ялсенчен сунарçăсем пымарĕç. Левентей анчах Сăвăрĕпе тайга тăрăх çĕмĕрсе çӳрет. Вăл çулхи пек кайăк-кĕшĕк нумаййине Левентей Раççейрен куçса килнĕренпе те курман.

Пăшаллă-йытăллă сунарçăсем пыманнипе, леш кайăк-кĕшĕк тирĕ пуçтаракансем те пымарĕç. Вĕсенчен пĕр Тит Иванчă çеç пырса Левентейĕн тирĕсене йӳнĕ хакпа илсе каясшăн пулчĕ. Анчах Левентей йӳнĕ хакпа сутма килĕшмерĕ:

— Пит йӳнĕ паратăн, Тит Иванчă. Ку хакпа сутасси пулмасть. Эсĕ илмесен урăххисене сутатăп. Килĕç-ха...

— Мĕн йӳнĕ тата? Килти суту вĕт, яла тухса çӳремелле мар. Пĕлетĕн—вăрçă вăхăчĕ, эпĕ айăплă мар кунта. Санран хаклă парса илсен, манран йӳнĕ илеççĕ. Саншăн ман сиен курас-и? Кăçал мансăр пуçне урăх никам та тайгана кĕрес çук, мĕншĕн тесен бандитсенчен хăраççĕ. Эпĕ те хăра-хăра çеç килтĕм.

— Мĕнле бандитсенчен хăраççĕ?—ыйтрĕ Левентей.

— Ха-ха-ха! Сан утарна та килсе çӳреççĕ пуль-ха вĕсем... Леш, салтакран тарса юлнă çынсем. Халĕ вĕсем пĕр кĕтĕве пуçтараннă та пуянсене çаратса çӳреççĕ.

— Сана та çаратрĕç-и апла?

— Çук, мана тивмен-ха... ыттисене çараткаланă. Левентей тӳссе лараймарĕ. Тепĕр хут Тит куçĕнчен шăтарас пек пăхса илчĕ те:

— Эсĕ ху чăн-чăн бандит! Ĕмĕр-ĕмĕр пире—сунарçăсене улталаса, çаратса, хырăмна ӳстерсе пурăнатăн. Тухса кай кунтан! унсăрăн эпĕ халех пыршу-пакартуна юхтарса кăларатăп,—тесе хаяррăн кăшкăрса, пăшалне ярса тытрĕ Левентей.

— Ах туру, старик. Ан хăтлан. Тем курса тăрăпăр, —Левентей аллинчен пырса çакăнчĕ Кĕтерне.

Левентей карчăкне хыçалалла тĕртсе ячĕ те:

— Тухса кай тенĕ сана!—тесе кăшкăрчĕ Тит енне.

Тит хăранипе сивĕ тытнă пек чĕтресе:

— Мĕншĕн, мĕншĕн, Левентей? Эпĕ айăплă мар вĕт кунта... Вăрçă... Вăрçă... Çавăнпа йўнĕ,—хăй, çĕлĕкне хăпăл-хапăл тăхăнса, тулалла тухрĕ, лаши çине утланчĕ-те, хыçалалла çаврăнса пăхмасăр, утартан тарчĕ.

— Ах, старик, мĕнле ес çав пуянтан хăрамастăн? Тем кăтартĕ хамăра.

— Кăтарттарăп эп ăна!—пăшалĕпе юнаса юлчĕ Левентей.

## VI

Çав каç малтанхи юр çуса тултарчĕ. Утар таврашĕнче кашкăр кĕтĕвĕсем çўрерĕç пулас. Сăвăр çĕрĕпе пĕр чарăнмасăр уласа вĕрчĕ. Йытти вĕрнипе Левентейпе Кĕтерне çĕрĕпех çывăраймарĕç, çутăлас умĕн кăна кăшт кăтăш пулса кайрĕç. Сасартăк Сăвăрĕ йăнăшса вĕрсе алăка чăрмала пуçларĕ.

— Старик, старик тăр-ха!—аяккинчен чышса вăратрĕ карчăкĕ Левентее.

—Мĕн кĕçĕр çĕрĕпе çывăрма памарăн, пĕрмаях алăка чăрмалатăн,—йытти çине çиленерех пек пулса пăшалне йăтса тухрĕ Левентей.

Сăвăр çиленнине пĕлмест, вăрманалла вĕрсе кĕрсе каять те унтан каллех алăк патнелле чупса пырать.

— Мĕн пур вара унта?—Айта кайса пăхар.

Сăвăрĕ хыççăн Левентей йывăç хушшисене кĕрсе кайрĕ.

Шурăмпуç шуралса килет. Уйăх анать.

Пырсан-пырсан, Сăвăр тăп чарăнчĕ. Левентей умĕнче сухапуçне чĕртерсе кайнă пек пĕр йĕр йăран пек курăнса выртать.

— Ав, мĕншĕн вĕретĕн эсĕ. Упа иртсе кайнă. Кам та пулин шăтăкĕнчен хăратса янă пулас... Аякка каяйман, çутăлсан, пурпĕрех пирĕн пулăн. Атя, кайса апатланар та йĕрлеме тухăпăр.—Сăвăрĕпе калаçса каялла çаврăнса утрĕ Левентей.

Левентей утар патне çитсенех кедр айĕнче йĕнерлĕ лашасем кăкарăнса тănине курчĕ. „Кĕçтен килнĕ пулĕха“,—тесе шухăшларĕ вăл, пўртне васкаса кĕрсе кайрĕ. Анчах йăнăшрĕ. Алăкне хупнă-хупманах:

— Ну, старик, кала тĕрĕссипе, тўррипе каласан ним те пулмĕ: Епле час-час килсе çўрĕççĕ-и сан утарна бандитсем? Анчах ан суй. Суйсан—ак кăна куратăн-и?—аллинчи нухайккипе юнаса Левентей умне пырса тăчĕ

казак офицерӗ. Левентей, пӗрре тӗлленнипе, тепре хӑранипе, офицер ҫине пӑхса чӗнмесӗр тӑчӗ.

— Мӗншӗн чӗнместӗр? Мӗн чӗлхӳ ҫӗтрӗ-и? Кала хӑвӑртрах!—кӑшкӑрчӗ офирер.

— Сирентен пуҫне урӑх никам та килмен ман утара, —терӗ Левентей татса.

— Ха-ха-ха! Куҫ умӗнчех суять, ваше высокороди. Виҫӗм кун ҫеҫ эпӗ пултӑм. Манран пӗр кун малтан ҫеҫ бандит отряче выртса тухса кайнӑ ун патӗнчен,—тенӗ сасӑ илтӗнчӗ.

Левентей сасӑ еннелле ҫаврӑнса пӑхрӗ те такана хырӑмлӑ, кӗреҫе сухаллӑ Тит Иванча курчӗ. „Ав, мӗн йӗрлесе ҫӳренӗ ун чухне вӑл. Кайӑк-кӗшӗк тирӗсем мар, партизансен отрядне“—тесе шухӑшларӗ Левентей хӑйӗн ӑшӗнче.

— Ма суятӑн эсӗ, ват кӑркка! Тӳррипе кала!—офицер Левентее сылтӑм питӗнчен шартлаттарса ҫупрӗ.

Левентей куҫӗсенчен йӑлтӑр-ялтӑр вут хӗлхемӗсем тухса кайрӗҫ. Анчах патварскер кӑш та тайӑлмарӗ.

— Мӗншӗн эсир мана, ватӑ ҫынна, хӗнетӗр? Мӗнле саккун ку!—тесе ыйтрӗ вӑл хуллен.

— Ак сана саккун!—каллех шартлаттарса ҫупрӗ офицер.

— Ах туру, мӗншӗн хӗнетӗр эсир ман старике?—сиксе тӑрса чупса пычӗ Кӗтерне.

— Кай, ват ҫерҫи!—пӗтӗм вӑйӗпе чышса ячӗ Кӗтерне офицер. Кӗтерне кӑмака ҫумне пуҫӗпе ҫитсе ҫапӑнса йӑванса кайрӗ.

— Кала, хӑш вырӑнта тӑраҫҫӗ бандитсем? Каламасан, еп сана халех персе пӑрахатӑп!—наганӗпе тӗллерӗ офицер Левентей ҫине.

— Эпӗ нимӗнле бандитсене те пӗлместӗп,—терӗ Левентей.

— Э-э-э, эсӗ пӗлместӗн-и-ха, акӑ эпӗ пӗлтерӗп сана! Илсе тухӑр ӑна халех.

Казаксем ҫавӑнтах виҫҫӗн-тӑваттӑн Левентее чышкаласа тулалла илсе тухрӗҫ.

— Ҫыхӑр кедр ҫумне.—Левентее кедр ҫумне вӗренпе ҫыхса хучӗҫ.

— Ну, калатӑн-и бандитсем ӑҫтине?

Левентей чылайччен пуҫне усса шухӑша кайса тӑчӗ.

— Сӑмахпа каланипе эсир тупас ҫук вӗсене, эпӗ хам ертсе каям сире,—терӗ хуллен.

— Хе-хе-хе, такçанах çапла кирлĕ,—савăнăçлă кулса илчĕ офицер.

— Салтăр.

Казаксем çавăнтах Левентее салтрĕç. Унтан лашисем çине утлана-утлана ларчĕç. Левентей пăшалне çурăм хыçне çакрĕ те йĕлтĕр çине тăчĕ. Левентей малтан, ун хыçĕнче çирĕм юланут казаксем тин çунă юр çинчен тайга ăшнелле кĕрсе кайрĕç.

Кĕтерне ним тума пĕлмесĕр ăнтан кайса пăхса тăрса юлчĕ.

Сăвăрĕ сунара çӳренĕ чухнехи пек малтан унталла-кунталла пăхкаласа чупать. Сăвăрĕ хыçĕнчен юлмасăр, Левентей уринчи йĕлтĕрĕсене шутарать. Кăшт кайсан:

— Аякра-и?—кăшкăрса ыйтать офицер.

— Инçе мар,—тет Левентей.

Нумай вăхăт кайрĕç ĕнтĕ. Тайга ăшнеллех кĕреççĕ. Акă пĕр тарăн варăн чăнкă çыранĕсем хĕрне пырса çитрĕç.

— Час çитетпĕр-и? Эсĕ улталаса илсе килместĕн-и пире?—терĕ офицер çиленсе.

— Çитрĕмĕр, акă çак çырман леш енче. Ав, куратăр-и, пĕр çӳлĕ кедр курăнать, çав кедртан пĕр вунă хăлаç сылтăм енче утар пур, çав утарта отряд тăрать,—тесе пăшалĕпе тăсса кăтартрĕ Левентей.

Офицер бинокльне куçĕсем тĕлне тытса, кедр еннелле пăха пуçларĕ. Казакĕсем те пăхаççĕ. Унччен те пулмарĕ, пĕр казакĕ:

— Пăхăр-ха, пăхăр, ав, унта упа пырать!—тесе кăшкăрчĕ.

Пурте упа еннелле куçĕсене тĕллерĕç. Левентей хăй çине никам та пăхакан çуккине курчĕ. Пуçĕнчи çĕлĕкне пусарах лартрĕ те, уринчи йĕлтĕрĕсем çине хытă тăрса, вар тĕпнелле ярăнса анса кайрĕ. Хыçĕнчен Сăвăрĕ те юртрĕ. Казаксем, Левентее тарнине курса, кăшкăрма пуçларĕç. Çавăнтах пăшал сассисем кĕрлесе кайрĕç.

Казаксем тарăн вара анасшăн пăхкалаççĕ, анчах ниçтан та анма май çук. Вар çыранĕ çавтери çӳллĕ те чăнкă.

Кăшт вăхăт çитсен утар патне вăтăр-хĕрĕх юланут партизансем пырса çитрĕç. Вĕсене курсан, Кĕтерне чупса тухрĕ те:

— Аçуна казаксем тытса кайрĕç,—тесе пĕлтерчĕ Кĕçтене.

Кĕçтен лаши çинче кăшт шухăша кайса ларчĕ те:

— Ну, юлташсем, айтăр хыçĕнчен, вĕсем инçетре мар,—терĕ юлташĕсене. Çавăнтах отряд кĕрлесе хускалса кайрĕ. Партизансем нумаях та каймарĕç, казаксем хăйсем кĕнĕ йĕрпе каялла килнине курчĕç.

Партизан отрячĕ тăп чарăнчĕ. Пурте пăшалĕсене хатĕрлесе, пысăк йывăç тĕлĕсене пытана-пытана тăчĕç.

Ак, казаксем малта нимĕн пуласса кĕтмесĕр, шакăлтатса калаçса килеççĕ.

— Стариккине унта... Карчăкне утарĕнче. Утарне çунтарса ярăпăр,—мухтанса калаçса килет офицер.

— Отряд!—тени вăрманта сасартăк янтраса кайрĕ. Çавăнтах пăшал сассисем кĕрлеме те тытăнчĕç.

Малта мĕн пуласса кĕтмесĕр килекен казаксем лашисем çинчен кĕлтесем пек сирпĕне-сирпĕне анаççĕ.

Пĕр самантра тенĕ пек казаксем пĕтĕмпех ӳксе пĕтрĕç. Чĕрĕ юлнă лашасем партизансем патнелле сиксе пычĕç. Казак отрячĕ пĕтрĕ.

Кĕçтен, партизансене пухса, ашшĕне шырама кайрĕ. Левентейпе Сăвăр вар тĕпĕнче пĕр-пĕринчен аякра мар выртаççĕ.

Кĕçтен ашшĕне утара илсе таврăнмарĕ. Ăна вĕлернĕ çĕртех шăтăк алтрĕç те тирпейлесе пытарчĕç.

Ĕлĕк вăл вырăна „Кедр варĕ“ тенĕ. Халĕ ĕнтĕ, Левентей вилнĕренпе, ăна „Левентей масарĕ“ теççĕ.

---

## *ФРОНТРА ÇЫРНИСЕМ*

## 34-МĔШ АТАКА УМĔН

... Виççĕмĕш хут вăрçăра пуласси çинчен эпĕ мирлĕ вăхăтра шутламан та темелле. Аллă çула çитнĕскер, хам ирĕкпе вăрçă çынни пулса тăтăм.

1941-мĕш çулта пирĕн тăван çĕршыва хаяр тăшман тапăнса кĕчĕ. Çамрăкçене вăрçа иле пуçларĕç. Тăван çĕршывăма хаяр та усал тăшманран сыхламалла. Эпĕ хамран-хам ыйтатăп: аллă çула çитрĕм, эпĕ ватă ĕнтĕ, вăрçă çыннисен ретĕнчен тухнă. Икĕ хутчен вăрçăра пулнă. Анчах халĕ, çĕршывшăн питех те хăрушă кунсем килсе тухнă вăхăтра, мĕнле килте ларас-ха? Çук, эпĕ ун пек çын мар. Маншăн тăван çĕршыв хаклă. Эпĕ ăна вĕçĕмсĕр юрататăп, уншăн вăрçма граждăн вăрçи вăхăтĕнче хамăн ирĕкĕмпе Хĕрлĕ Çар ретне тăтăм, тăшмана çĕмĕрсе тăкиччченех çапăçрăм. 1914—16 çулсенче нимĕçсемпе вăрçнă. Суранланнă. Халĕ эпĕ каллех сывлăхлă. Тăван çĕршыва мăшкăллас, ăна чуралăха кĕртес шутпа килнĕ ирсĕр тăшмана çивчĕ шăлсемпе туртса çурас килет.

Тăшман ирсĕр те хаяр. Пирĕн хуласене, ялсене çĕмĕрет, çунтарать. Совет çыннисене—стариксене, карчăксене, хĕрарăмсене, ача-пăчасене çакса, персе вĕлерет, вутта пăрахса çунтарать. Ĕçлеме юрăхлă çамрăксемпе хĕрарăмсене Германие чура тума хăваласа каять. Вĕсене выçăллă-тутăллă усрать. Ĕçлейми пулсан—персе пăрахать. Çак мăшкăла илтсе, курса тăрса, епле-ха эпĕ килте ларма пултарăп? Çук, эпĕ вăрçăра пулма тивĕçлĕ! Пĕр нимĕç фашистне персе пăрахсан та, Хĕрлĕ Çара усă туни пулĕ. Çук, ку сахал. Эпĕ вăйлă-ха. Пĕр фрица çеç мар, вуннăшне, çĕрĕшне те пĕтерме вăй çитĕ.

Эпĕ вăрах шухăшласа тăмарăм. Хĕрлĕ Çар ретне хам ирĕкпе каясси çинчен заявлени çырса военкомата васкаса утатăп.

Малтанах мана çара илесшĕн мар пулчĕç.

— Çитĕ сана, эсĕ икĕ вăрçăра пулнă. Пирĕн çамрăксем те çителĕклех-ха. Килте пурăн,—теççĕ мана военкоматра.

— Эсир манăн çула ан пăхăр, сывлăха тĕрĕслĕр,—тетĕп эпĕ.

Военкоматра ĕçлекенсем ман çине пăхаççĕ те кулаççĕ. Вĕсем эпĕ шӳт тăватăп теççĕ пулас.

— Эсир ан кулăр. Эпĕ сирĕнпе кулăшла выляма килмен кунта. Вăрçă вăл кулăш мар,—тетĕп эпĕ çиленнерех.

Кураççĕ: эпĕ вĕсемпе шӳт тумастăп. Хăйсем хушшинче хуллен калаçса илчĕç.

— Ну, юрĕ. Паянлăха кай. Тепĕр хут шухăшласа пăх. Ыран татăклăн пĕлтерĕпĕр,--тесе ăсатса ярасшăн мана.

— Мĕн шухăшламаллине эпĕ тахçанах шухăшланă. Эсир мана каллĕ-маллĕ ан çӳретĕр. Эпĕ фронтра пулма тивĕçлĕ,—терĕм юлашкинчен татса.

Хам çирĕп тăман пулсан, эпĕ халĕ те фронтра пулас çукчĕ-и тен...

— Ну, юрĕ апла пулсан. Ыран кил,—терĕç юлашкинчен.

— Тавтапуç ырă сăмахăршăн,—тесе тавтурăм та пурне те алă тытса тухрăм.

Тепĕр кунне ирех военкомата çитрĕм. Вĕсем мана фронта ăсатмалли хутсене хатĕрлесе хунă.

— Ну, юлташ, ăнăçлă çул пултăр. Нимĕç захватчикĕсене лайăххрах çĕмĕрме сывлăх сунатпăр. Ырă, сывă таврăнмалла пултăр,—тесе ăсатрĕç вĕсем.

Паян акă эпĕ фронта çитсе фашистсене хирĕç çапăçма пуçлани 14 уйăх тулчĕ. Çак вăхăтра 33 хутчен наступленире пултăм. Икĕ хутчен çăмăл суранлантăм. Анчах суранласан та, стройран тухман. Сурана туртса çыхнă та, малаллах кайнă. Мĕнле те пулин нимĕç салтакĕсене нумайрах пĕтерме тăрăшатăп.

Хăвăрах шутласа пăхăр ĕнтĕ: çав 33 наступленире эпĕ вăтамран икшер фрица çеç пĕтернĕ пулсан та—66 фриц „леш тĕнчере". Виçшер вĕлернĕ пулса—99... Пĕр ӳстермесĕр калатăп: фронта килнĕренпе эпĕ 100 фрица вĕлернĕ-вĕлернех. Эпĕ вăл шута малашне татах ӳстерсе пыратăп.

Виçĕ хут вăрçăра пулса, виçĕ хут çĕнĕрен çуралса ӳсрĕм эпĕ. Фашистсем манăн пĕртен-пĕр юратнă ывăлăма вĕлерчĕç. Унăн выранне эпĕ вĕсене çĕр хут тавăрăп. Эпĕ ашшĕ. Манăн вата алă чĕтресе тăмĕ.

Хисеплӗ редактор, ҫак сырӑва эпӗ пичетлесе кӑларма ыйтатӑп. Чӑваш халӑхӗ эпӗ мӗнле ҫапӑҫни ҫинчен пӗлтӗр.

Ҫырӑва ҫӗрле, шӑши куҫӗ пек ҫутӑра ҫыратӑп. Эпир черетлӗ наступление кӗме хатӗр. Халӗ пурте тенӗ пек тӑванӗсем патне ҫырусем ҫыраҫҫӗ. Эпӗ те, ҫак ҫырӑва ҫырса пӗтерсе, 34-мӗш наступление кӗме приказ кӗтетӗп.

Май, 1943.

## КАМ АЙĂПЛĂ?

Ирхине. Шыв хĕрри. Çанталăка шурă тĕтре хупласа илнĕ. Курăк çинче, çумăр иртнĕ чухнехи пек, вăйлă сывлăм тăрать. Тĕтре витĕр тин çеç тухнă хĕвел хĕрелсе тăни курăнать. Пирĕнтен инçе те мар, сывлăмлă курăк çинче пĕр мĕлке мĕкĕлтетет. Мĕскер мĕлки вăл? Те çын, те выльăх, те пĕр-пĕр аманнă тискер кайăк? Çывăхне пымасăр пĕлме çук. Мĕлке пĕрре çĕкленет, тепре çĕр çумне ӳкет. Хăй çапах тин çеç тухнă хĕвел еннелле туртăнса, хĕвеле хирĕç кайма тăрăшать. Анчах питех те ерипен кăна шăвать. Акă хай мĕлке патнелле çывăхаратпăр. Вăл йĕпе курăка сирсе хĕвеле хирĕç упаленет. Чарăнса тăрса мĕлке çине пăхатпăр. Ăнланма çук. Татах та çывăхарах пытăмăр. Ку япала—выльăх та мар, тискер кайăк та мар—çынах иккен! Кам вăл? Мĕнле çын? Мĕншĕн-ха апла, тăват-уран упаленет?! Тен вăл чирлĕ, тен аманнă, тен ӳсĕр?

Мĕлке эпир çывăхарнине сисет. Çĕре тăсăлса ӳкет. Хăлхине çĕр çумне çыпăçтарса итлет, чылай вăхăт пĕр хускалмасăр выртать. Эпир татах çывăхаратпăр. Кĕлетке пиртен курăк ăшне пытанма тăрăшать. Хăй таврашĕнчи курăксене аллисемпе çăлса хăйĕн çине пăрахать. Курăкпа витĕнме тăрăшать.

Эпир ун патнех çитрĕмĕр.

— Кам есĕ? Мĕншĕн капла йĕпе курăк çинче йăванан?—тесе ыйтатпăр.

Пирĕн сасса илтсен, хай çын пуçне çĕклет. Пичĕпе пирĕн еннелле çавăрăнать. Анчах çыннăн куçĕсем курăнмаççĕ. Куç вырăнĕсенче пушă путăк çеç курăнать.

— Кам эсĕ?—тепĕр хут кăшкăрса ыйтатпăр.

Çын аллисемпе сывлăша хыпаласа ури çине тăчĕ. Унăн çамки çинче юн кĕвелчĕкĕ хытса ларнă. Куç путăкĕнчен юн шывĕ сăрхăнса тăрать. Вăл хăй камĕ çинчен пĕлтерме те хăрать пулас. Пĕтĕм ӳт-пĕвĕпе siксе чĕтрет. Тĕплĕн пăхсан, çӳçенсе каятăн: тумтирĕ шăтăк-çурăклă, тĕлĕ-тĕлĕпе ӳчĕ курăнать. Сывлăмлă курăк çийĕпе шуса пынипе хăй, шыва кĕрсе ӳкнĕ пекех, лачкам йĕпе.

— Эпĕ... Эпĕ...—хуллен пăшăлтататъ вăл. Юнĕ пĕтнипе кăвакарнă тутисем йĕнĕ чухнехи пек мĕклетеççĕ.

— Кам вара эсĕ?—тĕпчетпĕр эпир.

— Эпĕ нимĕçсен аллинчен, пленран тарса ÿкнĕ çын... Манăн хушаматăм—Егорчук... Халĕ ĕнтĕ эпĕ хам хăш вырăнтине хам та пĕлместĕп,—тет вăл.

— Эсĕ мĕнле, ăçта суккăрлантăн капла?—ыйтатпăр унтан.

Егорчук ассăн сывласа илчĕ:

— Мана нимĕçсем суккăрлатрĕç... Куççене шăтарчĕç... Нимĕн те курмастăп. Хĕвел хăш енчине çеç унăн ăшши пит çине ÿкни тăрăх чухлатăп, çапла вара хĕвеле хирĕç килетĕп... Хĕвелтухăçра—манăн тăван çĕршыв,—терĕ вăл хурлăхлă сасăпа.

— Ан хăра, эсĕ ĕнтĕ хамăрăн тăван çĕршывра. Эпир красноармеецсем пулатпăр,—тесе пĕлтертĕмĕр эпир. Егорчук савăнса кайрĕ. Вăл кĕл тĕслĕ кăвак тутисене сиктеркелесе кăшт кулнă пек турĕ.

— Юлташсем!.. Эсир чăнах та красноармеецсем-ши? Суймастăр пулсан, килĕр-ха ман патăма, манăн сире чуптăвас килет,—терĕ те вăл, пире ыталаса тытма хатĕрленсе аллисене икĕ енелле хăлаçларĕ.

— Мĕншĕн суяс. Чăн калатпăр. Эпир красноармеецсем.

— Пирĕнтен пĕри суккăр çын патне пычĕ. Суккăр ăна ыталаса илсе вĕçĕмсĕр чуптума пуçларĕ.

— Тавтапуç сире, юлташсем! Халĕ ĕнтĕ эпĕ, куçăмсем курмаççĕ пулсан та—сывă. Совет халăхĕ мана пăрахмĕ,—тесе пăшăлтататъ вăл.

— Кала-ха: хăçан, ăçта, мĕнле куççăрлатрĕç сана?—ыйтатпăр эпир.

Егорчук шăппăн йĕрсе калама пуçлать. Анчах куçĕсенчен ун, куççуль мар, юн шывĕ сăрхăнса тухать, шĕвек хĕрлĕ шыв питçăмартийĕсем тăрăх юхса анать.

— Эх, тăвансем, хам суккăрланни çинчен мĕн калас ĕнтĕ... Эпĕ хам та айăплă. Яла фашистсем пырса кĕрес умĕн, хамăр ялти колхозниксем пурте пекех вăрмана тухса тарчĕç. Эпĕ, мана нимĕнех те тумĕç-ха тесе, ялах тăрса юлтăм... Питех те хытă йăнăшрăм иккен. Фашист салтакĕсем яла пырса кĕчĕç те тÿрех мана ярса тытрĕç: „Кала, колхозниксем ăçта?"—тĕпчеме пикенчĕç. Мĕн тăвас? Каларăм. „Вăрмана тарса пĕтрĕç" тетĕп. „Тупса пар"! теççĕ мана. „Вăрман аслă. Ăçтан тупас манăн вĕ-

сене? Пултараймастăп"—тетĕп. Çакăн хыççăн тытăнчĕç мана хĕнеме. Хĕнерĕç, хĕнерĕç те каллех: „Тарнă çынсене тупса парсан, хăвнах çăмăл пулĕ. Унсăрăн—чĕррĕн юлмастăн, теççĕ.—Çук, хуть те мĕн тăвăр манпа. Вĕлерсен—вĕлерĕр. Вăрманти колхозниксене тупса пама пултараймастăп", терĕм эпĕ.

Фашистсем вара нумай калаçса тăмарĕç, хăйсен тискер ĕçне тума тытĕнчĕç.

— Куçĕсене чавса кăларăр та ялтан кăларса ярăр ăна,—тесе хушрĕ нимĕç офицерĕ хăйĕн салтакĕсене.

Эпĕ ку сăмаха малтанах ĕненмерĕм. Мана хăратма çеç калать пулĕ терĕм. Малалла татах та мĕн пуласса кĕтетĕп. Сасартăк пĕр фашисчĕ манăн алăсене ярса тытрĕ те хыçалалла çавăрса хучĕ, иккĕмĕш салтакĕ пуçа тытрĕ, виççĕмĕшĕ штык вĕçĕпе куçăмсене чава-чава кăларса илчĕ. Малалла вара мĕн пулнине пĕлместĕп. Ăн çухалчĕ. Халĕ тĕлĕкри пек çеç кăшт кăна астăватăп. Фашист салтакĕсем мана шыва пăрахрĕç. Шывран мĕнле тухнă, ăна астумастăп. Темле шыва путса вилмен... Такам, пĕр-пĕр çын курса кăларнă пулĕ, тен. Халĕ акă маншăн тĕнче сĕм тĕттĕмех. Кам айăплă çакăншăн? Е эпĕ хам?... Паллах, фашистсене кăшт та каçарма çук! Вĕсем тискертен те тискер этемсем! Çавах та, эпĕ хамăр колхозниксемпе пĕрлех вăрмана тарнă пулсан, мана никам та капла тăваяс çукчĕ. Куçăмсем тĕрĕс-тĕкĕлех пулĕччĕç. Вĕсене хирĕç алла хĕçпăшал тытса çапăçаттăм. Халĕ ĕнтĕ эпĕ фашистсен мăшкăлĕ пулса юлтăм!—тесе пĕтерчĕ Егорчук хăйĕн сăмахне.

Эсир те, вулакан юлташсем, шухăшласа пăхăр: кам айăплă ĕнтĕ çак тискер ĕçре?

Июль, 1943 ç.

## ВИЛӖМРЕН ХӐТӐЛНИСЕМ

Апрель уйӑхӗ. Сӑрт тӑррисем хура курӑнаççӗ. Кӑнтӑрла хӗвел хӗртсе пӑхать. Анчах ирлӗ-каçлӑ çаплах шӑнтать-ха. Çырмасенче те пӑр хускалса каяйман, аялтан шыв тулнипе çӳлелле çӗкленнӗ те мӑкӑрӑлса тӑрать.

Хӗвеланӑç енчен пӗр çын мӗлки утса килни курӑнать. Вӑл çулпа мар, варсем тӑрӑх пытанса утать. Унӑн çийӗнче çӗтӗк-çатӑк шинель, урисенче—тӗпӗ тухса ӳкнӗ çӑматӑ. Урисем тухса каясран çӑматтисене пралукпа чике-чике туртса каркаланӑ, пуçӗнче нимӗç салтакӗсем тӑхӑнакан кивӗ пилотка. Унӑн сӑнӗ хура-сарӑ курӑнать. Çулӗ çамрӑк пулсан та сухаллӑ, çӳçӗ вӑрӑм. Вӑл çын нумайранпа тӑраниччен çимен пулас. Халӗ ун темиçе тавлӑк хушши çӑварӗнче çӑкӑр тӗпренчӗкӗ те пулман пулӗ тен. Çурхи çил çинче çӳренипе тутисем çуркаланса пӗтнӗ, куçӗсем шалалла путса аннӑ. Вӑл çын пӗтӗмпех халсӑрланса çитнӗ, тайкаланса, пӗр уринчен тепӗр урине иртерейместӗр ярса пусать.

Кам вӑл? Ӑçтан килет? Вӑл, хӑй утаймиех ыванса çитнӗ пулин те, таçта васканӑ пек туйӑнать. Ӑçта васкать? Ӑна никам та хыçӗнчен хӑваламасть вӗт! Вӑл хӑй ирӗкӗпе утать. Ытах, ыванса çитнӗ пулсан, кӑшт та пулин ларса канасчӗ. Унтан—каллех малалла. Кам пӗлет ӑна, тен вӑл çавӑн пек хӑйне-хӑй шеллеме пӗлмен çын пулӗ. Вӑл çын вӑрахранпа çывӑрман та пулас, утса пынӑ çӗртех куçӗсем хупӑна-хупӑна анаççӗ. Ыйӑх тӗлӗшпе урисем тикӗс пусманран, пӗвӗ чуть çеç çӗре чикӗнсе анмасть. Çавӑнтах куçӗсене уçса пӑхать те: „Ых, сана, мӗн кирлӗ мар ыйхуна парӑнса пыратӑн! Вӑхӑт çитсен акӑ. Çывӑрса тӑранӑн. Инçе юлмарӗ ӗнтӗ, часах çитес çӗре çитӗн„, —тесе хӑй тӗллӗн калаçать. Хӑйне-хӑй çӗклентерсе, малалла васкать. Анчах супса çитнӗ урисем питех те итлесшӗн мар. Çитменнине тата шыв сӑхса кӳпченӗ çӑматтисем чул пек йывӑрланса çитнӗ. Халӗ уншӑн чул мар, çур кӗренке те тем пек йывӑр туйӑнать. Анчах, çӑматтисем çав тери йывӑр пулсан та, вӗсене хывса ывӑтма çук, ура айӗнче юр, вӑл сӗлтӗшленсе çитнӗ. Кашни ярса

пусмассерен ура сыппи таран, хӑш вырӑнсенче чӗркуççи пӗçтӗп таран путса анать. Çурхи юрлӑ-пӑрлӑ шыв çӑматтисен кунчинчен кӗрсе тӗпӗнчен юхса тухать. Урисем шӑнса кӳтнипе нимӗн те туймаççӗ.

Çын, утсан-утсан, пӗрре хыçалалла, тепре йӗри-тавра пӑхать те, каллех малаллаваскать.

Мӗн тӑвас тетӗн, урисем итлеççӗ, майӗпен пулсан та, яра-яра пусаççӗ. Çыннӑн пӗтӗм ӳт-пӗвӗ, чӗри, юнӗ, алли-урисем вилӗм алличчен тухасшӑн, хӑтӑласшӑн, пурӑнӑçшӑн кӗрешеççӗ. Пурӑнӑç епле йывӑр пулсан та, çын тӳсет. Вилӗм хӑрушӑ. Çын вилӗмрен тарать, пурӑнӑç патнелле васкать. Эх, пурӑнӑç... Никама та вӑл йӑлӑхтармасть. Тӑван çӗршыв хуть те камшӑн та хаклӑ.

Пӑхӑр ӗнтӗ çак çын çине. Вӑл вӗт çутӑ тӗнчешӗн, пурӑнӑçшӑн, тӑван çӗршывшӑн кӗрешсе утать. Çавсем уншӑн хаклӑ пулмасан, вӑл çакӑнта, юрлӑ-пӑрлӑ çурхи шыв çине выртӑччӗ те вилӗччӗ.

Çук, вӑл вилӗм çинчен шухӑшламасть те. Вӑл ун çинчен мансах кайнӑ. Вӑл темиçе тавлӑк хушши çимен, çывӑрман, супса çитнӗ пулсан та, малалла, çитес çӗре çитме тӑрӑшать.

Акӑ вӑл пӗр тарӑн вар тӗпне анса кайрӗ. Вар тӑрӑх çурхи юр шывӗ шавласа юхать. Унӑн çав шыв урлӑ каçмалла. Шыв тарӑн, сивӗ. Ӑна пӑхса тӑма юрамасть, каçасах пулать. Мӗнле каçас? Утса е ишсе... Çын шывран хӑраса тӑмарӗ, шампӑртаттарса кӗрсе кайрӗ. Ыткӑнса юхакан шыв ӑна çапса ӳкерчӗ. Вӑл юхать, ишет. Халӗ ӗнтӗ вӑл пӗтӗм хуйхине манчӗ. Мӗнле те пулсан шывран тухасшӑн çапкаланать. Пӗтӗм вӑйне пухса шывран тухрӗ. Хӑй тӑрӑх шапӑртатса шыв юхать. Алли-урисем кӳтсе çитнӗ. Пуçӗнчи пилоткине шыв юхтарса кайрӗ.

Ӑшӑнас тесе хӑвӑрт васкаса утать. Пӗр-пӗр яла кӗрсе типӗнӗччӗ, юрамасть, унта—нимӗç салтакӗсем. Вӗсем курсанах, ӑна тытма пултараççӗ. Тепӗр хут лексен, вара урӑх хӑтӑласси те пулмӗ. Ан та шухӑшла.

Каç та пулать. Хӗвел анса ларас пекех. Çын ута-ута юхан-шыв хӗрне çывхарать. „Пӑр хускалса кайиччен каçса ӗлкӗресчӗ",—тесе шухӑшлать. Анчах шыв урлӑ каçасси нимех те мар-ха. Нимех те мар—нимӗçсен окопӗ. Çав окоп урлӑ каççан... Часовойсем сиссен е тытса илӗç е тӳрех автоматран персе вӗлерӗç. Пӗр хут вилӗмрен хӑтӑлнӑ çыннӑн тепӗр хут вилӗм аллине пырса кӗресси килмест.

Вăл тĕрлĕ мел шырать.

Акă вал, тĕттĕм пуласса кĕтсе, пĕр снаряд шăтăкне пытанса выртрĕ. Унта та типĕ мар, шыв пулмасан та, юр ирĕлсе пĕтмен-ха. Ури ҫине тарсан, нимĕҫ салтакĕсем курма пултараҫҫĕ. Ҫитменнине тата ҫул инҫе мар, унпа час-часах машинăсем, юланутлă нимĕҫсем иртсе ҫӳреҫҫĕ.

Ҫын пĕтĕмпех шăнса ҫитрĕ. Шинелĕ айĕнчи йĕпе кĕпи ӳчĕ ҫумне ҫилĕмпе ҫыпăҫтарнă пек ҫыпăҫать. Ҫынна каласан ҫын ĕненес ҫук йывăр пулсан та, вăл чатать. Снаряд шăтăкĕ тĕпне чĕрĕп пек хутланса ӳкнĕ те, пĕр хускалмасăр выртать. Шăнса чĕтренипе ҫеҫ хулпуҫҫи ҫийĕнчи шинелĕ кăшт хускалнă евĕр курăнать.

Сасартăк, хайĕнчен инҫе те мар, ура сасси илтĕнчĕ. Ҫын шартах сикрĕ. Шăнни иртсе кайрĕ, ҫанҫурăмĕ вутла пĕҫерсе илчĕ: „Нимĕҫ салтакĕсем килеҫҫĕ. Каллех вĕсен аллине лекетĕп" тесе шухăшларĕ. Хăй ҫапах хускалмасть. Тен, курмасăр иртсе кайĕҫ...

Ура сасси унпа юнашарах. Пĕр ҫын снаряд шăтăкне анать. Леш чăтаймарĕ, пуҫне ҫĕклесе пăхрĕ.

— Кам эсĕ? Мĕн туса выртатăн кунта? Эпĕ сана вилнĕ тесе.

Сасă хуллен те йăвашшăн илтĕнет.

Ҫын хăй пагне пынăскере сассинчен палларĕ. Вăл — хĕрарăм. Ҫын тĕлĕнсе пăхать. Аҫтан, мĕнле майпа килсе тухрĕ ку хĕрарăм? Кам вăл?

— Кам эсĕ? — тепĕр хут тĕпчесе ыйтрĕ хĕрарăм.

Ҫын хĕрарăм умне чĕркуҫленсе ларчĕ:

— Малтан ху камне кала..

— Куратăн, эпĕ вырăс хĕрарăмĕ. Эсĕ вырăс-и е нимĕҫ?

— Эпĕ те вырăс ҫынни, — пĕлтерчĕ ҫын.

Хĕрарăм тата хăюллăнтарах калаҫа пуҫларĕ. Ҫын ҫумнерех кукленсе ларчĕ:

— Апла пулсан, пирĕн иксĕмĕрĕн ҫулсем пĕрле пулĕ..

— Эсĕ аҫталла каятăн?

— Эпĕ Совет Союзне таврăнма тухнă, — кĕскен пĕлтерчĕ хĕрарăм.

Ҫын ҫакна илтсен хĕпĕртесе ӳкрĕ. Вĕсем иккĕшĕ те вырăс ҫыннисем.

— Аҫтан килетĕн капла?

— Тыткăнран тартăм.

— Эпĕ те... — терĕ ҫын савăнăҫлăн.

Унтан вĕсем, юнашар ларса, пĕр тăвансем пек ăшшăн калаҫа пуҫларĕҫ.

Хӗвел анчӗ. Ҫанталӑка касхи сӑн хупларӗ. Халӗ ӗнтӗ питех хӑрамалла мар, ку снаряд шӑтӑкӗнче нимӗҫсем часах курас ҫук.

— Эсӗ красноармеец-и е ахаль ҫын-и?—ыйтрӗ хӗрарӑм.

— Эпӗ, Иван Перепелкин,—темшӗн тӳррӗнех каласшӑн пулмарӗ ҫын.—Ху мӗн ятлӑ?

— Эпӗ, Ляля Краснова.

Вӗсем мӗнле йывӑрлӑхсем пулсан та, пӗрне-пӗри пӑрахмалла мар сӑмах пачӗҫ вилсен те, пурӑнсан та—пӗрле.

— Халӗ ир-ха. Тӑхтар. Ҫӗрле пуларах патӑр. Нимӗҫсем ҫӳреме лӑпланччӑр,—тет Перепелкин.

— Тӑхтар. Ҫурҫӗр тӗлнелле фронт урлӑ каҫӑпӑр. Анчах пӑр хускалса ан кайтӑрччӗ,—тесе пӑшӑлтатать Краснова.

— Кӗҫӗрех хускалса каяймӗ-ха. Шӑнтать. Шыв урлӑ каҫсассӑн, вара унта хамӑрӑннисем,—тесе хӑйне-хӑй лӑплантарать сержант Перепелкин.

— Ваня, санӑн ҫиййӗнти тумтиррӳ йӗпе. Манӑн типӗрех. Манӑн пальтопа витӗнсе ӑшӑнмастӑн-и? Витӗр шӑннӑ эсӗ. Чирлесе ӳкӗн,—тет юлташне шеллесе.

— Апла хӑвна сивӗ пулӗ. Ҫук, сиплӗ мар. Эпӗ арҫын, тӳсӗп,—тет сержант.

— Манӑн пальто питӗ шалпар. Вӑл сана витӗнме те, мана валли те ҫителӗклӗ. Тыткӑнра пурӑннӑ чухне эпир вӑл пальтопа виҫҫӗн витӗнсе выртаттӑмӑрччӗ: пурсӑмӑра та ӑшӑтатчӗ. Хыв хӑвӑн йӗпе тумтирӳне,—тесе хушать Краснова.

Сержант итлет. Ҫиййӗнчи йӗпе шинельне хывать.

Вӗсем типӗ пальтопа витӗнеҫҫӗ. Самаях ӑшӑ пек туйӑнать.

— Ман ҫуммарах сыпӗҫ,—тесе пӑшӑлтатать Ляля.

— Ух, ӑшӑ. Ялан ҫакӑн пек ӑшӑра пурӑнасчӗ. Хӑҫан, мӗнле хамӑрӑннисем патне ҫитсе ӳкӗпӗр-ши? Унта вара каллех пурӑнаттӑмӑр.

— Ан кулян. Тыткӑнран хӑтӑлса кунта ҫитрӗмӗр ӗнтӗ. Фронт урлӑ ҫеҫ каҫӑпӑр. Мӗн тӑвас тетӗн. Вӗлерсен—вӗлерӗҫ. Урӑх ӗнтӗ вӑл тӑшмансен аллине лекессӗмӗр ҫук,—тесе лӑплантарать Ляля.

— Ҫук, манӑн пӗртте вилес килмест. Пурӑнас килет. Вилӗм тесен, ҫӳҫ-пуҫ вирелле тӑрать. Эпир вӗт санпа вилӗмрен хӑтӑлнӑ ҫынсем. Каллех вилӗм аллине лекмӗпӗр.

— Чăн, вилĕмрен хăтăлнă ҫынсем эпир... Ахаль ҫеҫ калатăп эпĕ. Манăн та, сан пекех, вилес килмест. Тĕнчере пурнăҫран хакли нимĕн те ҫук... Ара, ху 23 ҫулта ҫеҫ тетĕн, ҫӳҫӳн пĕрчисем шуралнă,—тет Ляля.

Вăл сержантăн вăрăм ҫӳҫ пĕрчисене тыта-тыта пăхрĕ.

— Ҫапла, шуралнă. Ҫӳҫ пĕрчисем шураласси вăл ҫултан килмест. Хăвах пĕлетĕн ĕнтĕ мĕншĕнне...

— Пĕлетĕп. Манăн хамăн та, санăнни пекех, шуралаҫҫĕ,—терĕ Ляля хуйхăллăн.

Ҫапла вĕсем пурăнăҫа юратса, вилĕме кураймасăр, ăшă пальто айĕнче пĕтĕм чĕререн калаҫрĕҫ.

Вăхăт ҫурҫĕр тĕлне ҫитрĕ. Нимĕҫ салтакĕсем лăпланчĕҫ. Ҫав каҫ ҫĕрĕ те ҫав тери тĕттĕм пулчĕ. Тӳпене хура тĕтĕм евĕр тачка пĕлĕтсем хупласа тăчĕҫ. Ҫаванпа пĕрлех кăвак тĕтре ҫĕкленчĕ. Уйăх та, ҫăлтăрсем те курăнмаҫҫĕ. Анчах нимĕҫсем пĕр вĕҫĕмсĕр, унга та кунта та ракета ярса тĕттĕм ҫĕре ҫутатаҫҫĕ.

Перепелкинпа Ляля, умлă-хыҫлăн утса, нимĕҫсен окопĕ патне ҫывхараҫҫĕ.

— Ракета ҫӳлелле ҫĕкленсенех, ҫĕре тăсăлса вырт. Ан хускал!—тесе вĕрентет сержант Лялькăна.

— Пĕлетĕп. Эсĕ ытла ан васка. Часовой тăнă тĕле пырса тухас мар,—тесе утать Ляля.

Акă траншей патне пырса ҫитрĕҫ. Пăхкаларĕҫ. Никам та ҫук. Траншей урлă упаленсе каҫрĕҫ. Чарăнса итлеҫҫĕ. Сас-хура илтĕнмест. Ракета ялтăртатса ҫутатрĕ. Вăл ҫур минутран сӳнчĕ. Халĕ ĕнтĕ вĕсен йĕплĕ пралук карта урлă ҫеҫ каҫмалла. Унтан шыв, унтан—хамăрăннисем. Хăш ҫĕрте тăватăуран упаленсе, хăш тĕлте хырăмпа шуса йĕплĕ пралук карта умне ҫитрĕҫ. Асархаса пахаҫҫĕ. Карта виҫĕ хутлă. Мĕнле каҫас? Тата тимĕр картан тулашĕнче минăсем пулма пултараҫҫĕ. Вĕсем ҫине ҫитсе кĕрсен—каллех вилĕм...

Халĕ ĕнтĕ вĕсем нимрен те хăрамаҫҫĕ. Хăрассине маннă вĕсем. Хăравҫă ҫынсем пулсан ҫакăнта ҫитеймĕччĕҫ те. Сержант, йĕплĕ пралуксен хушшинчен хĕсĕнехĕсĕне, тепĕр енне тухрĕ.

— Хăвăртрах!—васкатать вăл юлташне.

— Манăн пальто кансĕрлет,—тесе пăшăлтатать Ляля.

— Хывса ывăт пальтоне карта урлă,—хушать сержант.

Ляля ҫийĕнчи пальтоне хывса карта урлă ывăтма тăчĕ. Анчах пальти леш енне каҫмарĕ, йĕплĕ пралук ҫине ҫакăнса тăчĕ. Хăй хăвăртрах пралук карта айĕнчен

хĕсĕнсе юлташĕ патне тухрĕ. Çак вăхăтра ракета çутăлса кайрĕ. Нимĕçсем пралук карта çиййĕнче пальто çакăнса тăнине асăрхарĕç пулас. Ракета хыççăн ракета çутата пуçларĕç. Кăшкăрашаççĕ. Автоматсенчен пеме пикенчĕç. Нумай пульăсем çитсе лекнипе, пальторан çĕтĕкçурăксем татăлса сирпĕнеççĕ. Нимĕç автомачĕсен пульлисем вĕсен пуçĕсем урлă çеç шăхăрса иртеççĕ.

— Ну, Ляля, халĕ ĕнтĕ хăтăлтăмăр,—терĕ сержант ирĕккĕн сывласа.

Нимĕçсем çур сехет ытла пальто çине пĕр чарăнмасăр персе тăчĕç. Пальто таткаланса пĕтсе çĕре ӳксентин перкелешӳ лăпланчĕ.

Хамăраннисем патне вĕсем пĕр шиксĕр пычĕç:

— Чарăнăр! Камсем килеççĕ? Пропуск?—тесе кăшкăрчĕ часовой.

— Хамăраннисем. Тыткăнран тарса килекенсем эпир,—терĕ сержант.

Часовой караульнăй начальнике чĕнсе илчĕ. Çынсене штаба ăсатрĕç.

Унтан вĕсене, сывлăхĕсене юсама, госпитале ячĕç.

— Госпитальте канăпăр ĕнтĕ, тăраниччен çывăрăпăр, тăраниччен çиййĕпĕр,—тет Перепелкин.

— Халĕ ĕнтĕ кайăпăр. Вилĕмрен хăтăлăпăр,—тет Ляля савăнăçлăн йăл кулса.

1943

## КРАСНОАРМЕЕЦ САМСОНОВ

Пирĕн подразделенинчи красноармеец Ефим Григорьевич Самсонов çамрăк мар ĕнтĕ, хĕрĕхрен иртсе аллă çулсем енне çывăхарнă. Çӳçĕ те пĕрче-пĕрчĕ шуралкаланă.

Самсонов—турра ĕненекен çын. Вăл, Хĕрлĕ Çар ретне килсен те, мăйĕнчи йĕс хĕресне пăрахман.

— Самсонов, мĕншĕн мăйна ыраттарса çакса çӳретĕн çав чăх ури хĕресне?—тесе асăрхаттарăççĕ ăна юлташĕсем.

—Сирĕн мĕн ĕç? Маншăн йывăр мар ăна çакса çӳресси. Мăя та ыраттармасть,—тесе ответлет вăл хирĕç.

Самсонов хăй каласа панă тăрăх, килĕнче пурăннă вăхăтра çынна пăшалпа персе вĕлерме мар, аллине çĕçĕ тытса, автана пусма та хăранă.

— Юн курсан, эпĕ тӳсейместĕп, чĕре кăкăртан çурса тухасса тапса сикет,—тет вăл.

— Автансене кам пусатчĕ апла?—тесе ыйтсан:—Арăм пусатчĕ. Така пусма кӳршĕ çынна чĕнеттĕм,—тет Самсонов.

Халĕ ĕнтĕ Самсонов фронтра. Кунта нимĕçсемпе çапăçасси автан пусассинчен кăшт йывăртарах. Çын юнĕ те автан юнĕнчен кăшт нумайрах.

Пирвайхи çапăçуран Самсонов юнланмасăр тухрĕ. Вăл çапах та пĕр нимĕç салтакне персе вĕлернĕ. Ăна епле вĕлерни çинчен вăл юлташĕсене темиçе хутчен те калакала пачĕ. Малтанах итлекелерĕç унăн сăмахне, кайран вара никам та итлеми пулчĕ. „Иккĕмĕш хут наступленине кайсан нумайрах вĕлерме тăрăшас",—тесе шухăшларĕ Самсонов хăй тĕллĕн.

Иккĕмĕш хут наступленине кĕрсен, Самсонов пĕр нимĕç салтакне те персе ĕлкĕреймерĕ, ăна хăйне суранларĕç. Вăл пĕр вăхăта ăнсăр пулса выртать. Нумай-и, сахал-и вăхăт иртсен, тăна кĕчĕ. Куçĕсене уçса пăхрĕ: аллисем чĕп-чĕр юн, çăварне юн кĕвелсе ларнă. Хăйĕн юнне курсан, вăл тем пек хăраса ӳкрĕ. Чуть хаяр сассипе кăшкăрса яратчĕ. Анчах унран инçе мар нимĕç минни ухлатса çурăлчĕ. Ефим хăй юнланнине пăхмарĕ, вăл

вырӑнтан тӑрса, пӗр пӗчӗк окопа хӗсӗнкелесе кӗрсе выртрӗ.

„Ах, турӑ, мӗнле ҫӑлӑнас ку хӑрушлӑхран?

Халӗ ӗнтӗ вӑл хӑйӗн юнӗ ҫине хӑрамасӑр пӑхать. Унӑн мӗнле те пулин чӗрӗ юлас килет. Вӑл халӗ хӑйӗн пӗтӗм иртнӗ пурӑнӑҫне те — ачаран пуҫласа паянхи кунччен — асне илчӗ. Арӑмӗ, ачи-пӑчисем унӑн куҫӗ умне тухса тӑчӗҫ.

Самсонов кам кӑшкӑрнине уйӑраймарӗ. Пуҫне ҫӗклесе пӑхрӗ. Йӗри-тавра никам та курӑнмасть. Сывлӑш анчах уласа тӑрать. Унта та кунта мина, снаряд ҫурӑлать. Таврана хура тар тӗтӗмӗ хупласа илнӗ. Тар тӗтӗмӗ шӑрши сывлӑша хуплать. Пурӑнӑҫӑн чи хӑрушӑ вӑхӑчӗ ҫитрӗ. Кам кӑшкӑрчӗ ӑна „Сыхлан!" тесе? Самсонов пӗлмест. Хамӑрӑннисем те курӑнмаҫҫӗ. Нимӗҫ салтакӗсем те ҫук. Тен вӑл тыткӑна тӑрса юлнӑ? Ку ӗнтӗ уншӑн вилӗмрен те хӑрушӑ: „Фашистсен аллине лекиччен, хамахам персе пӑрахам. Ҫӑмӑлтарах пулӗ. Вӗсен аллине лексен, тем тӗрлӗ асаплантарӗҫ. Ыйтса тӗпчӗҫ. Эпӗ пӗр сӑмах та чӑннине каламӑп. Куншӑн пурӗ-пӗрех персе пӑрахӗҫ, тесе шухӑшлать вӑл. Турра кӗлтӑвать. Пуҫӗнчи пилоткине хывмасӑрах сӑхсӑхать. Сасартӑк танк кӗрлесе килни илтӗнчӗ. Вӑл окоп шӑтӑкӗнчен ҫӗкленсе пӑхрӗ. Курать: нимӗҫ танкӗ. Тӳрех ун ҫинелле шӑвать. Акӑ тата темиҫе минутран вӑл танк хӑйӗн гусениципе Самсонова лӳчӗркесе иртсе кайӗ. Ҫук. Самсоновӑн танк айне пулса вилес килмест. Вӑл хӑй выртнӑ вырӑна пӑрахса, урӑх тӗлелле шӑвать. Акӑ, унӑн умӗнче ПТР выртать. Пӑшалпа пӗрле патронсем те пур. Самсонов вӑрах шухӑшласа тӑмасть. ПТР-а ярса тытать те, авӑрласа, нимӗҫ танкӗ ҫинелле тӗллесе перет. Пӗр патрон, иккӗ. Виҫҫӗмӗш патронпа персен, танк пӗр вырӑнта ҫаврӑнса илет. „А-а-а... кирлӗ вырӑнтан лектертӗм", савӑнӑҫлӑн каласса илет Самсонов. Унтан каллех танк ҫине перет. Танка вут хыпса илет, ҫулӑмланса ҫунать. Танк ӑшӗнчен нимӗҫ танкисчӗсем 3 ҫын тухаҫҫӗ.

— Стой! Парӑнӑр! — хаяр саспа кӑшкӑрса ярать Самсонов. Ури ҫине сиксе тӑрать. Нимӗҫ танкисчӗсенчен пӗри пӑрахса тарать. Иккӗшӗ парӑнса аллисене ҫӗклеҫҫӗ. Самсонов таракан фрица персе пӑрахать.

— Ман паталла килӗр! — кӑшкӑрать аллисене ҫӗкленӗ танкистсене. Лешсем ӑна пӑхӑнса ун патнелле утаҫҫӗ. Ҫак вӑхӑтра Самсонов патне взводнӑй командир пырса ҫитет:

— Ну, молодец, Самсонов! Эсӗ килӗнте автан пусма хӑйман пулсан, фронтра фашист салтакӗсене персе пӑрахма маҫтӑрланса ҫитнӗ,—тесе мухтать ӑна командир.

— Совет Союзӗшӗн служить тӑватӑп!—тесе ответлет Самсонов. Хӑйӗн алли суранланнипе пичӗ-куҫӗ чӗп-чӗр юн. Халӗ ӗнтӗ вӑл хӑйӗн ҫийӗнчи юнне те курмасть. Юн ҫинчен шухӑшлама та маннӑ.

— Самсонов юлташ, санӑн кӑкӑру ҫинче темӗн ҫитменлӗх пур,—тет командир юптарса.

Самсонов хӑй тӑрӑх пӑхать. Вӑл хырӑмӗпе шуса ҫӳренӗ пирки гимнастеркин тӳмисем татӑлса пӗтнӗ, ҫавӑнпа ҫухи уҫӑлса кайнӑ та, ӳчӗ курӑнать.

— Гимнастеркӑн тӳмисем татӑлса пӗтрӗҫ ҫав. Эпӗ вӗсене халех ҫӗлесе лартатӑп,—тесе тӑрать Самсонов айӑплӑн.

Лейтенат йӑл кулать:

— Эпӗ гимнастерка тӳмисем ҫинчен мар калатӑп; санӑн кӑкӑру ҫине орден ҫакмалла, тетӗп.

Самсонов чухлать. Хӑй те сисмест, тутисем кулаҫҫӗ.

1943

## ПĂЛАН ХЫÇÇĂН

Лейтенант Павел Щипцов Хĕрлĕ Çара киличчен Шупашкарта, „Çамрăк большевик" хаçат редакцинче, ĕçленĕ. Халĕ вăл фронтра. Темиçе хутчен те çапăçура пулнă.

Пĕррехинче, çуллахи вăхăтра, Щипцов юлташ пилĕк боецпа пĕрле разведкăна кайрĕ. Ăна „чĕлхе" туянса килме задани панă. Задача çăмăл мар. Анчах мĕнле йывăр пулсан та ăна пурнăçа кĕртесех пулать.

— Ну, юлташсем, пирĕн ума лартнă задачăна пурте лайăх ăнланатăр-и?—ыйтрĕ Щипцов хăйпе пĕрле разведкăна пыракан боецсем çине пăхса.

— Ăнланатпăр, лейтенант юлташ,—ответлерĕç боецсем.

Вĕсем автоматсемпе хĕçпăшалланнă. Пилĕкĕсем çумĕнче тăватшар граната. Боецсем пĕринчен тепри хастаррăрах. Вĕсем разведкăра пуçласа мар, темиçе хутчен те пулнă.

Вăрмана кĕрсен, вĕсем виçшерĕн икĕ ушкăна уйрăлчĕç.

— Астăвăр, юлташсем, мĕнле пулсан та пăшал сасси ан кăларăр,—тесе çирĕплетрĕ лейтенант Щипцов боецсене.

— Есть, лейтенат юлташ!

Вăрман витĕр каçсан, вĕсен уя тухмалла. Çакăнта ĕнтĕ фашистсем çирĕпленсе ларнă. Вĕсем кунта иккĕмĕш хĕле кĕтсе илме хатĕрленеççĕ. Кантăрла шăпах. Çĕрле пулсан çеç ĕç пуçланать. Пуртă, пăчкă, тимĕр шанкăртатнă сасăсем илтĕнеççĕ. Вĕсем унта хăйсене валли йăвасем—блиндажсем, дзотсем тăваççĕ.

Разведчиксем сыхланса, унталла-кунталла пăхкаласа утаççĕ. Ку вырăнта вăрман çавтери çăра, йывăççсем çÿлĕ, вырăнĕ-вырăнĕпе хĕвел те курăнмасть. Вăрман айĕ вара таса: курăк та сайра, турат-тĕретсем те çукпа пĕрех.

Каçала сулăнчĕ. Хĕвел анасси те инçе мар. Вăрман сайрала пуçларĕ.

— Чарăнăр, юлташсем. Хĕвел анса тĕттĕм пуличчен тăхтар çакăнта. Фашист салтакĕсем йывăç касма килеç-

çĕ ĕнтĕ ку вырăна. Ав, куратăр-и, малта касса йăвантарнă йывăççем курăнаççĕ?—терĕ лейтенант Щипцов.

Боецсем пурте пуçтарăнчĕç. Никам курмалла мар вырăна тупса, пытанса ларчĕç. Лейтенант Щипцов пĕр боеца хăйпе пĕрле илчĕ те пĕр аллă метр маларах тухса ларчĕ.

— Манран приказ пулмасăр никамăн та вырăнтан хускалма юрамасть, сасă ан кăларăр. Тапак туртас пулсан, шинельпе пĕркенсе çеç туртăр. Фашист салтакĕсем нумайăн курăнсан, ан тапăнăр, пĕччен е иккĕн пулсан, чĕрĕлле тытса илме тăрăшăр. Ăнлантăр-и?—терĕ Щипцов.

— Ăнлантăмăр!

Хĕвел çĕрпе пĕлĕт хушшине хĕсĕнсе анать. Çил лăпланчĕ. Вăрман шăп. Йывăç çулçисем те хускалмаççĕ. Анчах вăрманга тĕрлĕ кайăк юрланипе сад пахчинче ларнă пек туйăнать. Эх, илемлĕ те вăрманĕ, вăрманĕнчен ытла кайăк-кĕшĕк сассисем савăнтараççĕ!

Сасартăк инçе те мар курăк чăштăртатни илтĕнчĕ. Щипцов каска урлă çĕкленсе пăхрĕ. Курать: хăйĕнчен инçех те мар,ĕне евĕрлĕ выльăх тăрать: „Мĕнле выльăх ку?“ Халиччен вăл кун пек ĕне курман, кунăн майракисем çур метр тăршшĕ чаркаланса тăраççĕ, кашни майраки виç-тăвата юплĕ.

— Ибрагимов, пăх-ха, мĕнле выльăх ку? Паллатăн и эсĕ?—тесе хуллен пăшăлтатса ыйтрĕ Щипцов хăйпе пĕрле ларакан боецран.

Боец Ибрагимов Пушкăрт республикинче, Урал тăвĕсем хушшинче, ӳснĕ çын. Сунарçă. Тĕнчери нумай тĕрлĕ кайăксене паллать. Çавăнпа та вăл майракаллă выльăха курсанах чĕтресе ӳкрĕ:

— Пăлан ку, лейтенант юлташ, пăлан. Персе вĕлерес ăна,—терĕ вăл автоматне тытса пеме тĕллесе.

Пăлан хăйĕн умĕнче çын пуррине сисрĕ пулас, тепĕр еннелле çаврăнса тăчĕ, майракисене лăпчăтса ĕнси çине хучĕ, тарма хатĕрленчĕ.

— Чарăн, ан пер! Пăлан тесе пĕтĕм ĕçе пăсас тетĕним эсĕ!—чарчĕ ăна Щипцов.

Ибрагимов кăмăлсăр пек пулса, автоматне аялалла кăнтарчĕ. Пăшал сасси кăларма юраманнине хăй те астуса илчĕ пулас.

— Эх, вахăтсăр килсе çитрĕ ку выльăх! Сахалтан та пилĕк пăт аш пулатчĕ. Çулталăк ытла вĕт ĕнтĕ пăлан какайне çисе курманни,—тесе шеллерĕ Ибрагимов.

Пăлан ик-виçĕ хутчен малалла сикрĕ те татах чарăнса тăчĕ. Вăл пĕр малалла, пĕр хыçалалла йăлт-ялт саврăнкаласа пăхать. Уншăн малта та, хыçалта та, йĕритаврах çынсем пур пек туйăнать. Çавăнпа вăл ниçталла тарма антăраса тăрать.

Сунарçă Ибрагимов пĕтĕм ўтпĕвĕпе сиксе чĕтрет. Унăн халех пăлана персе ўкерес килет. Ним тăвайман енне аллинчи автоматне тĕрлĕ май çаваркаласа пăхать.

— Лейтенант юлташ, пеме ирĕк пар. Эпĕ ăна пĕр пульăпа ўкеретĕп. Тупата ўкеретĕп,—тесе йăлăнать вăл.

— Чарăн! Каланă сана пеме юрамасть,—тесе чарать ăна Щипцов.

Сасартăк пăшал сасси ухлатса кĕрлерĕ. Пăлан ик-виçĕ хутчен пĕр вырăнта çўлелле сиксе илчĕ те, çавăнтах çĕре тăсăлса выртрĕ.

— Ы-ых, мĕншĕн петĕн?! Пĕтĕм ĕçе пăсрăн вĕт эсĕ! Куншăн сана...—хыттăн вăрçса тăкрĕ Щипцов Ибрагимова.

Леш нимĕн ăнланаймасăр тăрать:

— Çук, лейтенант юлташ, эпĕ пемерĕм. Ĕненмесен, акă, пăх автомат кĕпçине. Тап-тасах. Ăна леш юлташсем печĕç пулĕ...

— Ну, вĕсене!—ним тума пĕлмесĕр çилленет Щипцов.

Хăйсенчен аллă хăлаçра пăлан вилеймесĕр урисемпе тапкаланса выртать, пуçне çĕкле-çĕкле çапать.

Пăлана персе ўкернипе савăннă Ибрагимов: „Мана пеме ирĕк памасан та, юлташсем персе ўкерчĕç-ха. Пăлан ашне çиетпĕр ĕнтĕ", тесе шухăшлать.

Унччен те пулмасть, пăлан патне икĕ фашист салтакĕ чупса пыраççĕ.

— А-а... ав, камсем пенĕ пăлана,—тин чухласа илет Щипцов. Халĕ ĕнтĕ вăл фашист салтакĕсене мĕнле майпа тытса илесси çинчен шухăшлать.

— Ибрагимов, хăвăрт юлташсем патне упален. Пурте кунта килччĕр,—хушать Щипцов.

Ибрагимов, пĕр сăмахсăр, йывăççен хушшипе хыралĕпе шăвать.

Фашистсем пăшалсене йывăç çумне тăратса хураççĕ те пăлан тирне сўме хатĕрленеççĕ.

Лейтенант Щипцов фашистсем пăлан тирне сўни çине пăхса тăрать. Халĕ ĕнтĕ вăл вĕсене пĕр пĕччен те тытса илĕ, анчах тата кăшт тĕттĕм пуласса кĕтет, мĕншĕн тесен вĕсене тытнă вăхăтра мĕнле пулсан та шăвшав пулма пултарать. Вăхăт шăвать, боецсем час ки-

леймеççĕ. Фашист салтакĕсем ним васкамасăр пăлан тирне сĕвеççĕ. Нимĕнрен шикленмесĕр тенĕ пек, иккĕшĕ пакăлтатса калаçаççĕ: „Вырăс планне тытрăмăр. Ашне хамăр çийĕпĕр, тирне арăмсем патне кучченеç ярăпăр“, теççĕ пулас. Вăхăт-вăхăт кулса та илеççĕ. Савăнăç вĕсемшĕн.

Акă боецсем çитрĕç.

— Эсир тăваттăн хыçалтан çаврăнса пырăр, эпир Ибрагимовпа мала тухатпăр,—терĕ лейтенант Щипцов.

Фашистсем пăлан тирне сўсе пĕтерчĕç. Канма ларчĕç. Папирос чĕртсе туртаççĕ. Çийĕнчи гимнастеркисене юнпа вараланасран хывса пăрахнă. Кĕпи çаннисене чавса таран тавăрнă. Алли тунисем чĕп-чĕр юн. Инçетрен пăхсан, чăн-чăн палачсем пек туйăнаççĕ.

— Стой! Вырăнăртан ан хускалăр!—ытла хытах та мар кăшкăрчĕ лейтенант Щипцов.

Фашистсем мĕнле ларнă, çаплах хытса кайрĕç. Умĕсенче икĕ çын, хыçалта тăватă çын тăнине курчĕç. Çăварĕсенчи папиросĕсем çĕре тухса ўкрĕç.

— Кам ирĕк панă сире вырăс çĕршывĕнчи пăлана вĕлерме?—терĕ Щипцов фашист салтакĕсем умне пырса тăрса. Хăраса ўкнĕ салтаксем ăнланмалла мар пăк-пак туса калаçса илчĕç.

— Ну, илĕр хăвăрăн гимнастеркăрсене. Айтăр пирĕнпе пĕрле,—тесе команда пачĕ Щипцов.

— Пăлан ашне илетпĕр-и? ыйтрĕ Ибрагимов.

— Илес. Мĕншĕн хăварас ăна? Фашистсем тытрĕç, эпир ашне çийĕпĕр,—хушрĕ Щипцов.

Тăватă боец пилĕк пăтлă пăлан ашне, тирне йăтрĕç. Лейтенат Щипцовпа Ибрагимов фашист салтакĕсене хуса утрĕç.

— Ак, епле телей пулчĕ, ку фашистсем пирĕн алла пăлан хыççăн килсе лекрĕç. Халĕ ĕнтĕ пирĕн алăра „чĕлхе“ те пур, апат пĕçерме аш та çителĕклĕ,—тесе утать Ибрагимов.

1942.

## ВĂРМАНТА

Эпир Кураков красноармеецпа иккĕн разведкăран таврăнатпăр. Чылай çĕрте пултăмăр, мĕн кирлине турăмăр.

Эпир тухса кайнăранпа шăп кăна икĕ тавлăк çитрĕ. Çак хушăра эпир пурĕ пĕрре çинĕ,—çывăрман, ялан утса, упаленсе, хырăмпа шуса çӳренĕ. Ирĕк пулсан, çакăнтах йăванса каясчĕ те пĕр пелмесĕр çывăрасчĕ. Çук, пирĕн çитес çĕре вăхăтра çитес пулать, командир приказне тĕплĕн пурăнаçлас пулать.

Пирĕн утмалли тата чылай-ха. Вăрман урлă каçмалла. Унтан штаб вырнаçнă яла çитмелле. Çитсен, командира хамăр мĕн курнине, илтнине тĕплĕн каласа памалла.

Урасем ывăннă, хырăм выçнă, çывăрас килет пулсан та, эпир васкаса утатпăр. Тапак туртса ярасчĕ,—çук, вăл та пĕтнĕ пирĕн. Ак вăрмана çитсе кĕтĕмĕр. Çулпа кайсан—пилĕк километр кукăр пулать, тӳрĕ кайсан—çавăн чухлĕ çывăхрах.

— Мĕн тăватпăр, çулпа çавăрăнса каятпăр-и?—терĕм эпĕ вăрман хĕррине çитсен.

— Мĕншĕн çулпа çаврăнса çӳрес. Аташса каймăпăр. Пилĕк километра сахалтан та пĕр сехет утас пулать,—тет Кураков.

— Йывăççем хушшипе, çатăркасем урлă утасси йывăртарах та ĕнтĕ... Ун вырăнне пилĕк çухрăм çывăх,—тесе килĕшрĕм эпĕ.

Вăрмана кĕрсе кайрăмăр. Кураков компасне аллинче тытса пырать. Вăл малта. Эпĕ ун хыççăн пыратăп. Йĕри-тавра кайăксем юрлаççĕ. Тӳлек çил вĕрнипе вăрман хуллен кашлать. Васкаса утатпăр пулсан та, малалла хăвăрт каяймастпăр, мĕншĕн тесен ура вăйĕсем пĕтсе çитнĕ.

Кураков сасартăк утма чарăнчĕ:

— Куратăн-и?—тесе таçта малалла тĕллесе кăтартать.

— Мĕскер?

— Мулкач ларать.

— Пăхатăп: чăнах та, çапăсем хушшинче мулкач лара парать.

— Тытар. Вырӑна ҫитсен пӗҫерсе ҫийӗпӗр,—тетӗп эпӗ. Кураков автоматне хулпуҫҫийӗ ҫине тытрӗ те печӗ.

Мулкач ҫӳлелле сикрӗ те ҫавӑнтах ҫӗре тӑсӑлса ӳкрӗ. Ҫак вахӑтра пирӗн умра такам:

— Ой!—тесе ҫинҫе сасӑпа кӑшкӑрса ячӗ.

Эпир тӗлӗнсех кайрӑмӑр.

— Ара, мулкач ҫын сассипе калаҫма пуҫларӗ тем? Мулкач мар пулӗ вӑл, шуйттан пулӗ,—тесе тӑрать Кураков.

Эпӗ те аптӑраса тӑратӑп.

Мулкач юн юхтарса выртать, урисемпе тапкаланать. Хӑлхисене лашт янӑ хӑй.

Эпир ҫаплах мулкач патне пыма хӑраса тӑратпӑр. Пӗр-пӗринпе сӑмах чӗнсе калаҫмастпӑр. Кураков ман куҫран пӑхать, эпӗ ун куҫӗнчен пӑхатӑп. Вӑл, темӗскертен тӗлӗннӗ пек, куҫӗсене мӑч-мӑч! хупать. Хамӑн та ҫавах пулӗ, мӗншӗн тесен чӗре сиксе тухасла тапать. Тӗлӗнмелле, фашистсенчен хӑраманнине, мулкачран хӑраса ӳкрӗмӗр. Ҫитменнине тата персе вӗлернӗ мулкачран. Кам та пулин пӑхса тӑрас пулсан, ахӑлтатса кулмалла.

Ҫак вахӑтра пирӗн умра пӗр хӗрарӑм мӗлки курӑнчӗ. Тин чухласа илтӗмӗр: ак кам сасӑ панӑ иккен! Хӗрарӑм. Мӗнле хӗрарӑм вӑл, фронтӑн малти линийӗнче ҫӳрекенскер? Шпион мар-ши?

— Кам эсӗ? Мӗн шыраса ҫӳретӗн пӗччеҫӗ вӑрман варринче?—кӑшкӑрса чӗнчӗ Кураков, автоматне хытӑ тытса.

— Эпӗ... Эпӗ...—терӗ хӗрарӑм хӑранӑ сасӑпа.

Хӗрарӑма курсан, эпир мулкач ҫинчен мансах кайнӑ.

— Ан хӑра, кил кунта. Эпир красноармеецсем!—тесе чӗнетпӗр хӗрарӑма хамӑр пата.

— Хӑрамасӑр, хӑвӑр пӑшалпа перетӗр те,—тесе тӑрать хӗрарӑм. Пирӗн пата пыма шикленет хӑй, те татах перӗҫ тесе шутлать.

— Ҫук, эпир сана пемен, мулкача петӗмӗр. Ӗненместӗн пулсан, акӑ мулкачӗ,—тетӗп эпӗ, вилнӗ мулкача кӑтартса.

— Эпӗ ыйӑннипе йывӑҫ тункати ҫумне таянса лартӑм, хам та сисмен, тӗлӗрсех кайнӑ. Ҫывӑхра пӑшал сасси кӗрслетнипе вӑранса кайрӑм. Хӑранипе хам та сисмерӗм, кӑшкӑрса ятӑм,—терӗ хӗрарӑм, хӑй ҫаплах шикленешиклене пирӗн пата утса пычӗ. Унӑн ҫийӗнчи кӗ-

пи çуркаланса пĕтнĕ, çара уран, çара пуçăн. Çÿçĕ мĕлке пек лапăстатса тăрать; вăрах вăхăт выçă пурăннипе питçăмартийĕсем пĕрĕнсе кĕнĕ, куçĕсем путса аннă, сăнĕ сап-сарă.

— Кам эсĕ? Ăçтисем? Мĕн шыраса çÿретĕн кунта?— ыйтатпăр.

Хĕрарăм пиртен вăтанать пулас, хăй тăрăх пăхкалать, мĕншĕн тесен кĕпи çурăкĕсенчен ÿчĕ курăнать.

— Эпĕ Тула облаçĕнчен... Липатиха ятлă ял çынни. Мана нимĕç фашисчĕсем хăйсем патне ĕçлеттерме тытса кайрĕç. Икĕ уйăх хушши Германире пĕр çĕрулпучĕ патĕнче ĕçлесе пурăнтăм. Малалла чăтса пурăнаймарăм улпут мăшкăлне, тухса тартăм. Иккĕмĕш уйăх ĕнтĕ эпĕ унтан тарни. Çăкăр татăкĕ çисе курман. Çак вăрмана çитсе кĕтĕм те аташса кайрăм. Ниçтан тухма пĕлместĕп. Вилетĕп пулĕ тесе шутланăччĕ. Юрать, эсир çитсе лекрĕр,—терĕ хĕрарăм хурлăхлă сассипе.

— Мĕн ятлă эсĕ?

— Таня.

— Хушамату?

— Самокурова.

— Упăшку ăçта?

— Вăл Хĕрлĕ Çарта. Пĕлместĕп, те чĕрĕ ĕнтĕ, те вилнĕ.

— Самокуров? Самокуров хушаматлă красноармеец пур вĕт пирĕн ротăра?—тетĕп эпĕ.

— Пур. Тен Таня упăшкиех пуль,—тет Кураков.

Вăрманта вăрах тытăнса тăма вăхăт çук пирĕн. Часрах вырăна çитмелле.

— Ну, Таня, айта пирĕнпе. Хăвна вăрманта тупрăмăр, тен эпир сана упăшкуна та тупса парăпăр.

— Тăхтăр-ха, сирĕн ротăра Самокуров хушаматлă çын пур теместĕр-и эсир? Чăнах-и?—савăнăçлăн кăшкăрса сиксе ÿкрĕ Таня.—Мĕн ятлă вăл?

— Ятне пĕлместĕп çав. Хушамачĕ çаплах.

Эпир персе вĕлернĕ мулкача йăтрăмăр. Таняна илтĕмĕр те, вăрман тăрăх утрăмăр. Васкатпăр. Таня, иккĕмĕш эрне çăкăр çисе курман пулсан та, пирĕнтен юлмасть. Пырсан-пырсан çеç вăл:

— Час çитетпĕр-и-ха?—тесе ыйтать.

— Инçе юлмарĕ ĕнтĕ,—тесе лăплантаратпăр Таняна. Кураков çаплах компас çине пăхса утать.

Таняпа калаçкаласа пынипе вăхăт иртни те сисĕнмерĕ, çул та кĕске пулчĕ. Каç пулнă тĕле штаба çитрĕмĕр. Пире курсан, красноармеецсем чупсах çитрĕç.

— Самокуров юлташ, кил-ха кунта! Паллатăн-и çак хĕрарăма!—тесе чĕнтĕм эпĕ.

Самокуров хăйĕн арăмне тăруках паллаймарĕ:

— Павел! Паша!—тесе упăшкине ыталаса илчĕ.

— Юлташсем! Эпĕ урăх ниçта та каймастăп. Хампирĕкпе Хĕрлĕ Çар ретне çырăнатăп,—терĕ Таня пăртакран. Таняна красноармеец тумтирĕ пачĕç. Вăл пĕр эрне каннă хыççăн пирĕнпе пĕрле разведкăна çӳреме тытăнчĕ. Арçынсенчен пĕртте юлмасть. Питĕ те пултаруллă хĕрарăм вăл, ахаль пулсан вăл фашистсен аллинчен те тарса хăтăлайман пулĕччĕ.

---

## ЛИЗАВЕТА ЕГОРОВНА

Пушово ялёнче ёнер нимёçсем пулнă. Паян вăл пирĕн алла куçрĕ. Мĕнле каламалла: халĕ ĕнтĕ вăл ял мар, ялăн вырăнĕ çеç тăрса юлнă. Çурт-йĕрĕсем çунса пĕтнĕ, кăмака мăръисем çеç (ишĕлсе анайманнисем) тăрна мăйĕсем пек вăрăммăн курăнса ларaççĕ, çунса пĕтеймен пĕренесем тĕтĕм кăларса выртaççĕ. Кашни колхозникĕн панулми сачĕ пулнă, вĕсем те çунса пĕтнĕ. Ялта пĕр выльăх-чĕрлĕх чунĕ те юлман, пурне те нимĕç оккупанчĕсем пуçтарса хуса кайнă.

Çынсем те курăнмaççĕ. Ăçта саланса пĕтнĕ-ши вĕсем? Тен, çынсене те нимĕçсем пуçтарса хăйсемпе пĕрле илсе кайнă-ши? Тен, вĕлерсе пĕтернĕ пуль? Апла тесен, виллисем курăнĕччĕç.

Пăхатпăр, çунса пĕтеймен пĕренесем хушшинчен пĕр хĕрарăм пуçне çĕклесе пăхрĕ:

— Вырăссем-им эсир?—тесе хурлăхлă сасăпа ыйтрĕ вăл пиртен.

Эпир ун патне пытăмăр. Унăн пичĕ-куçĕ чĕп-чĕрĕ юн, çиййĕнчи кĕпи çуркаланса пĕтнĕ.

— Вырăссем. Красноармеецсем,—тет командир.

Хĕрарăм савăннипе кулса илчĕ:

— Эсир килместĕр пулĕ, çаплипех вилме тивет, тесе эпĕ пĕтĕм шанчăкăма çухатнăччĕ. Тавтапуçах сире!—тесе ури çине тăчĕ хĕрарăм. Вăл темшĕн аллисемпе сывлăша хыпалать.

— Мĕн пулнă сана, инке?—тесе ыйтатпăр.

Хĕрарăм аллисемпе хăлаçланса, пирĕн паталла утма тăчĕ, анчах пĕрене çине такăнса йăванса кайрĕ:

— Ах, куçăмсем курмaççĕ çав ĕнтĕ манăн. Ылханлă фашистсем мана сĕм суккăр туса хăварчĕç. Сассăра илтетĕп те, хăвăра курмастăп-çке.

Эпир ăна аллинчен тытса çĕклесе тăратрăмăр. Чăнах, хĕрарăмăн икĕ куçĕ те шăтса юхнă. Куç шăрçи вырăнĕсем пушă. Куç хупанкисене çĕклесе пăхать пулин те, нимĕн те курмасть. Çутă тĕнче уншăн пĕтĕмпех тĕттĕмленнĕ. Унăн куçĕсем ĕнтĕ нихăçан та юсанас çук, çутă хĕвел те уншăн сĕм тĕттĕм. Вăл хăй пĕчĕк ача

пек ёсёклесе йёрет, анчах унăн куççулĕ тухмасть. Чĕри патĕнчен тарăхса тухакан сасси çеç вăл йĕнине пĕлтерет тата вĕри сывлăшпа типнĕ тутисем çавна калаççĕ.

Кам-ха çак хĕрарăм? Мĕншĕн ăна фашист палачĕсем ĕмĕр-ĕмĕр асапланмалла туса хăварнă? Капла суккăрлантарса хăвариччен, вĕлернĕ пулсан, тен, уншăн çăмăлтарах пулнă пулĕччĕ?!

— Эпĕ хамăр ялта колхоз председателĕ пулса ĕçлеттĕм. Манăн икĕ ывăлăм та, упăшкам та Хĕрлĕ Çара кайрĕç. Эпĕ пĕчченех тăрса юлтăм. . Мана халăх суйласа лартнă, халăх мана шаннă. Колхоз калама та çук пуянччĕ пирĕн. Иртнĕ çул ĕçкунĕ пуçне вуншар килограмм тĕштырă, пилĕкшер тенкĕ укçа валеçсе патăмăр. Колхозниксем пуян та культурăллă пурăнма пуçланăччĕ. Фашист оккупанчĕсем килсе пĕтĕмпех пĕтерчĕç. Хама суккăр туса хăварчĕç,—тесе пуçларĕ хĕрарăм хăйĕн сăмахне.

Вăл хĕрарăмăн хушамачĕ—Губанова, ячĕ—Елизавета. Ăна колхозниксем—Лизавета Егоровна,—тесе чĕнеççĕ. Вăл çав тери хастарлă та тӳрĕ хĕрарăм пулнă. Ăна пурте юратнă. Вăл хушнине итленĕ.

— Лизавета Егоровна колхоз председателĕ çеç мар, вăл пирĕн питĕ те çывăх çын. Эпир вăл ертсе пынипе çапла ырлăхлă пурăнатпăр,—тесе мухтаннă колхозниксем. Вĕсем çак хĕрарăмшăн вутра çунма, шыва путма хатĕр пулнă. Анчах ялта Лизавета Егоровнăна курайман çын та пулнă. Çав çын ăна фашистсене сутнă. Çав тăшман пирки вăл халĕ çутă тĕнчене çухатнă, ĕмĕрлĕхе суккăр пулса юлнă. Мĕн каласан та, кашни çыннăн хăйне кура тусĕсем пур, çавăнтах тăшманĕ те çапкаланса çӳрет. Анчах вăл тăшман вăхăт çитиччен тискер кайăк пек пытанса пурăнать. Вăл хăй сурăх пек йăваш курăнсан та, вăхăт çитсен сурăх тирне хывса пăрахать те, кашкăр тирне тăхăнса, асав-шăлĕсемпе шаккаса, хăйĕн тискер ĕçне тума тытăнать.

Июнь уйăхĕн вĕçĕнче, пĕр ирхине, Пушэво ялне фашистсен карательнăй отрячĕ пырса çитет. Отряд начальникĕ—офицер, вырăсла таса калаçма пĕлекенскер, тӳрех колхоз правленине пырса кĕрет:

— Калăр-ха, кам кунта сирĕн колхозра председатель пулнă?—тесе ыйтать вăл.

Правлениниче Лизавета Егоровнăран пуçне тата икĕ колхозник лараççĕ. Пĕри—Сырцов Павел, тепри—Воронцов Сидор.

— Ара, ку нимĕç мар-çке, вырăс,—хăйсен хушшинче калаçса илеççĕ Сырцовпа Воронцов.

Лизавета Егоровна хăй председательне пытармасть:

— Эпĕ пулатăп председатель.

Офицер ун çине урлă та тăрăх пăхса илет:

— Аван. Халех колхозниксене пуçтар. Манăн вĕсемпе калаçмалли пур.

— Мĕн çинчен калаçасшăн апла?

— Вăл сан ĕç мар. Калана сана пĕр ре: колхозниксене пуçтар, тесе. Пуçтар!—кăшкăрса тăкать офицер сасартăк.

Лизавета Егоровна колхозниксене пуçтарма канцелярийинчен тухса каять.

Офицер Воронцова палласа илет:

— Сидор, эсĕ вĕт ку?

— Эпĕ, паллаймарăм-çке? Эпĕ сана нимĕç офицерĕ пулĕ тесе.

— Чăн, нимĕç офицерĕ. Анчах эпĕ нимĕç мар, вырăс. Астăватăн-и Брянцев улпута?

— Астумасăр. Епле астăвас мар хамăр хуçана. Ун патĕнче манăн атте приказчикра пурăнатчĕ,—тесе тавăрать Воронцов.

— Эпĕ унăн ывăлĕ—Сергей. Мантăн-им, пĕрле вылятгăмăр? Эпĕ сана час-часах хĕнеттĕм. Вăрах вăхăт иртнĕ çав ĕнтĕ. Çирĕм çул ытла вĕт... Эпĕ сана ака пирвай курсах палларăм,—тесе тутисене саркалать офицер.

— Сергей Васильевич! Вашбродь! Пăх-ха, ăçтан тĕлпултăмăр! Вот савăнăç,—хĕпĕртет Сидор.

Офицерпа Воронцов пĕрне-пĕри алă парса паллашаççĕ.

— Сирĕн яла фюрер мана пачĕ. Халĕ ĕнтĕ эсир пурсăр та манăн пулатăр. Ан хăра, эпĕ сана, Сидор, ялта староста тăвăп. Эсĕ мана халăха ĕçлеттерме пулăшăн. Килĕшетĕн пулĕ?—тет офицер.

Воронцов шухăшласа тăмасть:

— Тавтапуç, сана, вашбродь, мана пысăк ĕç шанса панăшăн,—тесе тавтăвать.

Сырцов Воронцовпа офицер калаçнине итлесе тăма пултараймасть, тухса шăвать.

Вĕсем иккĕн çеç юлса нумайччен калаçаççĕ. Малашне мĕн-мĕн тăвасси çинчен сăмах пĕтереççĕ.

Колхозниксем часах пуçтарăнман. Вĕсем пĕрерĕн-пĕрерĕн çеç пынă.

— Колхозниксем нумайёшё килте çук, уйра ёçлеççё, —пёлтернё Лизавета Егоровна.

— Аван, мён пуçтараннипе çитё мана, ёçлекенсем ёçлеччёр,—тет офицер.

Пуринчен ытла ватă стариксемпе карчăксем пуçтаранна. Çамрăксенчен пёр-икё çын анчах.

— Çамрăксем ăçта?—ыйтнă офицер, Лизавета Егоровна çине пăхса.

— Палла ёнтё, вёсем пурте вăрçа кайса пёгнё,—кёскен ответленё Лизавета Егоровна.

Офицер колхозниксем умне тухса тăнă, сăмах калама пуçланă:

— Эсир мана паллаймастăр пулас-ха. Паллаттарас. Эпё Брянцев улпут ывăлё пулатăп,—Сергей Васильевич. Астăватăр-и?

Чăнах та çавă, ашшё сăнарлах. Каллех эпир вёсен аллине çитсе лекрёмёр пулать-и? Пирён пётём пурлăх ăна пулать!—хайсем хушшинче калаçса илчёç колхозниксем.

— Вырăс çынни, епле-ха вăл нимёç офицерё пулнă?— тесе хуллен ыйтнă пёр ватă колхозница Лизавета Егоровнăран.

— Улпутсем вёсем пурте фашистсем майлă,—ăнлантарнă лешё ăна.

— Малашне ёнте колхоз, совет, тенё япаласем пётрёç. Паянтан пирён нимёçсен влаçё пуçланчё. Колхоз пурлăхё пётёмпех манăн алла куçать. Эсир ёçлетёр, эпё уншăн сире тăрантарăп. Ăнлантăр-и?—тесе ыйтрё офицер.

Ăнланмасăр, пурте лайăх ăнланнă. Анчах ирёк пурăнма вёреннё çынсен пёртте чура пулас килмен. Çапах та ăна вёсем улпут умёнче уçса каламаççё. Пёр Лизавета Егоровна çеç хăраман. Вăл сиксе тăнă та:

— Пётём колхоз пурлăхё сана пулать-и? А пире— хресченсене—мёскер?—офицер куçёнчен тинкерсе пăхса ыйтнă вăл.

Офицер аллисене хире-хирёç тытса йăвалана:

— Сире, хресченсене, нимён те кирлё мар. Эсир ёçлетёр. Эпё сире тăрантарăп. Ăнланмалла пек?

— Ăнланмалла та, пётёмпех мар,—пÿлнё офицера Лизавета Егоровна.

Офицер урăх нимён те каламан, ун вырăнне Воронцов тухса тăнă.

— Мĕн ăнланмалла марри пур вара кунта?

Лизавета Егоровна Воронцов куçĕнчен пăхса илнĕ.

— Ара, эсĕ, Воронцов юлташ, часах урăх май кайса ӳкнĕ-çке?

— Вăл сирĕншĕн текех юлташ мар ĕнтĕ,—господин староста. Вăл хушнине итлес пулать. Унăн сăмахĕ сирĕншĕн—закон. Ку та ăнланмалла пек,—тенĕ офицер.

Çакна илтсен, пурте тĕлĕнсе кайнă. Воронцов çине чалăшăн-чалăшăн пăхса илнĕ.

„Сутăннă",—тесе шухăшланă вĕсем.

Офицер урăх нумай калаçса тăман. Халăха саланма хушнă.

— Кам та кам мана хирĕç тăрать, уншăн ĕç начар пулĕ,—тенĕ вăл юлашкинчен.

Колхоз канцеляринчен офицерпа Воронцов юнашар утса тухнă.

— Вăл хĕрарăма пăхăнтарас çук. Совет влаçĕшĕн çирĕп тăраканскер вăл,—тесе пĕлтернĕ Воронцов Лизавета Егоровна çинчен.

— Пăхăнтарăпăр. Пит пăхăнмасан, мĕн тăвасси паллă,—тенĕ офицер.

Лизавета Егоровна хăраса ӳкмен. Вăл Хĕрлĕ Çар çĕнтерессе çирĕппĕн шанса тăнă.

— Пирĕн колхоз пурлăхĕ улпута ан пултăр тесен, ăна пĕтерес пулать. Кĕçĕр кам мĕн чухлĕ ĕлкĕрет—выльăх-чĕрлĕхсене ăсатăр, тырă-пулăсене пытарăр,—тесе пĕлтернĕ председатель колхозниксене.

Колхозниксем хăйсене ертсе пыракан хĕрарăма ĕненнĕ, ăна шаннă, вăл мĕн хушнине пурнăçланă: пĕр каçрах колхоз выльăхĕсенчен темиçе пуç çухалать, тырă та çаплах çĕр айне пытанать.

Тепĕр кунне офицер Лизавета Егоровнăна хăй патне чĕнтернĕ:

— Колхоз выльăхĕсемпе тырри ăçта кайнă?

— Пĕлместĕп. Халĕ ĕнтĕ эпĕ мар, эсĕ хуçа. Хăна кирлĕ пулсан—сыхла,—тесе ответленĕ Лизавета Егоровна.

— Эпĕ—хуçа, эсĕ—манăн тарçă!—кăшкăрнă офицер.

— Ман сăмаха итлемесен...

— Çук, эпĕ саншăн тарçă мар!—çирĕппĕн таварнă хĕрарăм.

Офицер хăйĕн салтакĕсене чĕнтернĕ:

— Ан вĕлерĕр. Пăхăнтарăр, çухалнă выльăхсене, тырăсене туптарăр,—тенĕ вăл.

Нимĕç салтакĕсем Лизавета Егоровнăна темиçе сехет хушши асаплантарнă. Лешĕ шăлне çыртса тӳснĕ. Выльăхсем ăçтине те, тырăсене пытарнине те пĕр сăмах та каламан.

— Лизавета Егоровна, кала, хăвнах çăмăл пулĕ,— пырса ӳкĕтленĕ ăна Воронцов.

— Çук, эпĕ нимĕçсен тарçи пулмастăп. Эсĕ вĕсене сутăннă йытă,—ответленĕ лешĕ.

Нимĕç оккупанчĕсем Лизавета Егоровнăна вĕлермен, унăн икĕ куçне те хĕртнĕ пăшатанпа тĕксе шăтарнă:

— Халĕ ĕнтĕ кăларса ярăр. Ыттисем курччĕр ăна. Эпĕ вĕсене пăхăнма вĕрентем,—тенĕ офицер.

Куçсăрланнă Лизавета Егоровна аллисемпе хыпашласа, урисемпе такăна-такăна урама тухнă.

— Колхозник юлташсем! Пуçтарăнăр ман патăма. Пăхăр ман çине. Мĕн турĕ мана çĕнĕ хуçа!—тесе кăшкăрнă вăл.

Колхозниксем хăйсен председательне курсан, тĕленсе каяççĕ. Ăна ытала-ытала чуптăваççĕ.

— Пирĕн тар кăларса пуçтарнă пурлăх çĕнĕ хуçана ан пултăр! Колхоз витисене, кĕлечĕсене, сарайĕсене вут тĕртĕр. Çĕнĕ хуçана кĕлĕ çеç юлтăр!—тенĕ Лизавета Егоровна.

Çав каçхине вара пĕлĕт çине хĕрлĕ шевле ӳкнĕ. Колхоз ялĕнчен çĕнĕ хуçа валли кĕл тата çунса пĕтеймен вут пуççисем çеç тăрса юлнă.

— Лизавета Егоровна, ытти колхозниксем ăçта?— тесе ыйтатпăр эпир куççăр хĕрарăмран.

— Вĕсем пурте вăрмана тарса пытаннă,—тесе пĕлтерчĕ вăл пире.

Тепĕр çур сехетрен вăрмана тарса пытаннă колхозниксем пурте пирĕн пата пуçтарăнчĕç. Вĕсем, нимĕнсĕр тăрса юлнă пулсан та, Хĕрлĕ Çар çĕнтерсе килнишĕн çав тери савăнаççĕ.

— Ан кулянăр, юлташсем! Хамăр тара тăкса пуçтарнă пурлăха хамăр алăпа пĕтертĕмĕр. Нимĕç оккупанчĕсене нимех те тивмерĕ. Совет влаçĕ сывă пултăр! Пурлăха ăна каллех тăвăпăр. Кивĕ ял вырăнне çĕнĕ ял шăтса тухĕ,—тесе ĕнентерет колхоз председателĕ Лизавета Егоровна. Вăл, нимĕç оккупанчĕсемпе кĕрешсе суккăрланнă пулсан та, шанчăкне çухатмасть. Кирлĕ пулсан, вилсе çĕр айне кĕричченех тăшманпа кĕрешме хатĕр.

## АНТУН ÇЕМЬИ

Ульяна пĕр çĕклем вутă çĕклесе кĕчĕ. Вăл салма яшки пĕçерме васкать. Анчах вутти чĕрĕ, çунасшăн мар. Шăхăрса-чашкăрса çеç выртать. Çунман вутăсене хăвăртрах хыптарса ярасшăн пулса, Ульяна вĕрме тытăнать.

— Ых, мур пуçĕ! Васканă вăхăтра вăл та çунасшăн мар,—тесе тарăхать Ульяна.

Анчах кăмакари чĕрĕ вутă çав-çавах чашкăрса çеç выртать.

— Ачам, эсĕ çăнăха илсе кĕрсе салмана çăр. Пар, кăмакана хам тивертем,—тет Ульянана амăшĕ.

Ульяна хăвăрт тухса, нимĕç çалтакĕсенчен пытарса усракан çăнăхне илсе кĕрет. Алламасăрах чуста çăрма пикенет. Амăшĕ кăмака умĕнче тăрмашать.

— Нимĕçсем таврăниччен пĕçерсе çисе ĕлкĕресчĕ. Вĕсем çитсен, каллех кӳпсе ярĕç. Вара каллех кунĕпе выçă,—тесе хăй тĕллĕн тарăхса калаçать амăшĕ. Хăй пĕр канмасăр кăмака тивертме хăтланса асапланать. Пĕркеленчĕк питçăмартийĕсем тăрăх тар пĕрчисем юхса анаççĕ.

Вĕсен ялне нимĕç салтакĕсем пырса кĕнĕренпе икĕ уйăх çитет ĕнтĕ. Çак хушăра Ульянапа амăшĕ пĕр татăк çăкăр çисе курман. Нимĕç салтакĕсенчен пытарма ĕлкĕрнĕ çăнăхран салма пĕçеркелесе тăранса пурăнаççĕ. Салма яшкине те вăрттăн, салтаксем килте çук чухне çеç пĕçереççĕ. Яшка пĕçернĕ тĕле пулсан, лешсем калаçса та тăмаççĕ, вăйпа туртса илсе çиеççĕ. Нимĕç салтакĕсемшĕн кил-хуçи хĕрĕпе амăшĕ выçă пурăнни нимĕн те мар. Вĕсем хăйсем çеç тутă пулччĕр. Вĕсене хирĕç сăмах чĕнме çук. Çавăнтах е çапса амантаççĕ, е персе пăрахаççĕ. Юлашки вăхăтра вăл нимĕç салтакĕсем тискер кайăкран та тискерленсе çитнĕ. Нимĕç çарĕ хĕвеланăçнелле чакать. Çийĕнчен тата хыçалта партизан отрячĕсем сывлама памаççĕ, кунĕн-çĕрĕн кĕтмен çĕртен сиксе тухса çĕмĕреççĕ. Йĕри-тавра вĕсем хăйсен тăшманĕсене кураççĕ. Капла пуласса кĕтмен-çке вĕсем. Вырăс халăхне çăмăллăн çеç пăхăнтарма ĕмĕтленнĕ.

Çапла ĕнтĕ вăл: тискер кайăка персе амантсан, вăл пушшех тискерленсе çитет. Хăйне персе амантнă сунарçа туртса çуркаласа тăкма хатĕр.

Амăшĕ асаплана-асаплана çунмасăр тарăхтарнă кăмакине тивертсе ячĕ. Часах чӳлмекри шывĕ те вĕреме кĕчĕ.

— Ачам, шыв вĕрет. Салмана яр ĕнтĕ хăвăртрах,— терĕ карчăк ирĕккĕн сывласа. Унтан вăл тарланă питне кĕпи çанни вĕçĕпе шăлса типĕтрĕ.

Ульяна салма татса пĕтерчĕ. Çак вăхăтра кантăк умĕнче çын ури сасси илтĕнчĕ.

— Ах, яшкана пĕçерсе ĕлкĕреймерĕмĕр. Нимĕçсем таврăнаççĕ. Паян каллех выçă юлтăмăр. Ульяна, ачам, татнă салмуна пытар. Курсанах тытса илĕç!—терĕ амăшĕ васкаса ӳксе.

Ульяна урай хăмине уçрĕ те таканине тĕпсакайне лартрĕ.

Амăшĕ кăмакари вуттине сӳнтересшĕнваскать. Анчах кĕрлесе çунакан пуленесем нимпе те сӳнмеççĕ. Хускатсан пушшех ялкăшса çуна пуçларĕç.

— Анне, шыв сапса сӳнтер!—тесе васкатать Ульяна амăшне.

Амăшĕ ним тума пĕлмесĕр кăмака умĕнче чупкала тăрать. Акă вăл каткаран куркапа шыв ăсрĕ. Çак вăхăтра тултан кантăка такам хуллен шак-шак! шаккарĕ. Карчăк кантăк çинелле пăхрĕ те шăртах сикрĕ. Хăранипе аллинчи шыв курки çĕре персе анчĕ.

— Ульяна, ачам! Пăх-ха... Хăратăп,—тесе сехĕрленет амăшĕ. Хăйĕн куçĕсем сиксе тухасла чарăлса кайнă, сăнĕ улшăннă, пĕтĕм ӳт-пĕвĕпе чĕтрет.

— Мĕн куртăн тата?

— Пăх-ха, авă пиччӳ кантăк умĕнче тăрать!—пăшăлтатать амăшĕ, кантăк еннелле пӳрнипе тăсса кăтартса.

— Ан аташ-ха, анне... Кăмакана хăвăртрах шыв сапса сӳнтер. Вилнĕ пичче ăçтан чĕрĕлсе килтĕр? Нимĕç салтакĕсем ăна юри, пире хăратасшăн, кантăка шаккаса çӳреççĕ,—тет Ульяна.

Унтан вăл амăшĕ каланине ĕненмесĕр, хăй те кантăк умне пырса пăхать. Сасартăк, хăранипе, кутăн-кутăн чакать. Чĕтрене ерет.

— Мĕнле?..

— Çавă, пичче сăнĕ!.. Ку мĕне пĕлтерет—аран пăшăлтатать Ульяна.

Амăшĕпе хĕрĕ пĕрре хăранипе тепре тĕлĕннипе ним тума пĕлмесĕр хытса тăраççĕ.

Чăнах та хăрамалла вĕт: Ульянан пĕртен-пĕр пиччĕшне, Антуна, уйăх ытларах каялла нимĕçсем тытса кайрĕç. Пĕр ăна çеç мар, Антунпа пĕрле тата 5 колхознике. Вĕсене фашистсем пурне те, коммунистсемпе комсомолецсем тесе, персе вĕлермелле тунă. Персе вĕлерес умĕн хăйсене валли хăйсенех шăтăк алттарнă. Вĕсене персе пăрахни ĕнтĕ уйăх ытла. Пиччĕшне тата унăн ытти юлташĕсене пытарнă масар çине Ульянапа амăшĕ темиçе хут та кайса ларса, тăприсем çинче выртса йĕнĕ. Мĕн чухлĕ куççуль тăкнă... Халĕ акă çав персе вĕлернĕ çын кантăк умне килсе шаккаса çӳрет! Ку мĕне пĕлтерет? Тен амăшĕпе хĕрĕ çывăраççĕ? Тен ку тĕлĕк пулĕ? Çук, ку тĕлĕк мар, чăн. Акă вĕсем иккĕшĕ те Антунăн сăнне кураççĕ. Антун та амăшĕпе йăмăкĕ çине пăхса тăрать. Унăн тин çеç сухал шăтма пуçланă тутисем савăнăçлăн кулаççĕ, таса хăмăр куçĕсем йăл-йăл выляççĕ.

Ульяна савăннипе Антун çинчен куçне илмесĕр пăхать. Антун та амăшĕпе йăмăкĕ çинчен куçĕсене илмест. Юлашкинчен, амăшĕпе йăмăкĕ хăраса ӳкнине чухларĕ пулас, сасă пачĕ:

— Ульяна, анне, ан хăрăр манран. Эпĕ вилмен. Сире курма, сирĕн сывлăхăра пĕлме, хама вĕлерме тăнă фашист салтакĕсене тавăрма килтĕм.

Ульянапа амăшĕ илтеççĕ: сасси те Антунăн. Кураççĕ: çийĕнчи тумтирри те унăн.

— Ах, пӳлĕхçĕм, чăнахах Антун-шим эсĕ?—кăшкăрса ыйтрĕ амăшĕ.

— Пичче, пӳрте кĕр!—чĕнчĕ Ульяна.

— Кĕретĕп. Анчах ан хăрăр эсир манран. Алăка уçăр...

— Антун ачам, пӳрте кĕр часрах.

Антун, пӳрт алăкне ярр! уçса пăрахрĕ. Унăн хулпуççийĕ çийĕнче автомат çакăнса тăрать, пилĕкĕ çумне наган хĕстернĕ. Кĕсъинчен граната аврисем курăнаççĕ. Вăл чăн-чăн вăрçă çынни.

Алăк янаххи урлă урине ярса пусрĕ:

— Халĕ ĕнтĕ эпĕ иккенне ĕненетĕр-и?

Ульяна чăтса тăраймарĕ, хирĕç чупса пырса, пиччĕшне ыталаса илчĕ:

— Пичче! Кала, вилĕмрен мĕнле хăтăлтăн?

Антун тĕпелелле утса иртрĕ. Амăшне ыталаса чуптурĕ.

— Антун ачам!—тесе амӑшӗ ӑна ҫурӑмӗнчен ачашласа ҫупӑрлать.

Пӑртакран Антун хӑй мӗнле майпа вилӗмрен хӑтӑлни ҫинчен каласа пачӗ:

— Хам вилӗмрен хӑтӑлнинчен хам та тӗлӗнетӗп эпӗ. Нимӗҫсем пире масар ҫине хӑваласа пычӗҫ. Кашнине тимӗр кӗреҫе тыттарчӗҫ. „Алтӑр хӑвӑра валли шӑтӑк", терӗҫ. Акӑ, аршӑн ҫурӑ таранӑшлӗ, виҫӗ аршӑн сарлакӑшлӗ шӑтӑк хатӗр. Унтан вӗсем пире ултсӑмӑра та шӑтӑк хӗррине юнашар тӑратрӗҫ. Ултсӑмӑра ултӑ фашист салтакӗ пеме хатӗр. Пурсӑмӑра та пӳҫсенчен тӗллерӗҫ. Пеме команда янтраса кайрӗ. Ҫак вӑхӑтра эпӗ, хам та сисмерӗм, пуҫа сылтӑм енне пӑрса ӗлкӗртӗм. Фашист салтакӗн пульли лекмерӗ, майран шӑтарса тухса кайрӗ. Эпӗ шӑтӑк хӗрне ӳкрӗм. Хамӑн ӑн ҫухалмарӗ. Вара юри вилнӗ пек пулса выртрӑм. Ытти юлташсем пурте шӑтӑка ӳксе пӗтрӗҫ. Нимӗҫ салтакӗсем: пурте вилчӗҫ, тесе шутларӗҫ пулас. Унтан вӗсем мана ураран сӗтӗрсе юлташсем ҫине пӑрахрӗҫ, ҫиелтен пӗр шит хулӑмӗш тӑпра витрӗҫ. Чылай выртрӑм тӑпра айӗнче. Пӑчӑ пулса ҫитрӗ. Сывлӑш тухми пулчӗ. Унтан тӑпра айӗнчен тухрӑм. Пӑхатӑп: никам та курӑнмасть. Ҫӗр тӗттӗм. Ӑҫта каяс ӗнтӗ? Киле таврӑнма ҫук. Майран юн юхать. Кӗпе ҫаннине татса илсе сурана ҫыхрӑм. Ҫумӑр ҫӑва пуҫларӗ. Ҫӗр пушшех тӗттӗмленсе ҫитрӗ. Утатӑп. Суран ыратать. Пӗр вӑрмана ҫитсе кӗтӗм. Ывӑннипе урасем утмиех пулчӗҫ. Кавма тесе лартӑм. Хам та сисмен, ӳкнӗ те ҫывӑрсах кайнӑ. Хӗвел тухас умӗн тӑрса лартӑм. Тӳсме ҫук ӗҫес килет. Ҫӑвар ӑшӗ типсе ҫитнипе чӗлхе хускалмасть. Йӗри-тавра пӑхатӑп: ҫук, ниҫта та шыв курӑнмасть. Эпӗ ҫывӑрса кайсанах ҫумӑр ҫума чарӑннӑ пулас. Эпӗ тӑтӑм та, шыв шыраса пӗр вар тӑрӑх утрӑм. Чылай вӑхӑт ҫӳрерӗм аташса, анчах шыв тупса ӗҫеймерӗм. Нимӗҫ салтакӗ персе вӗлерейменӗ, ун вырӑнне шывсӑр антӑхса вилетӗп, тесе шухӑшлатӑп хам. Каллех каҫ пулать. Эпӗ вӑрманта аташса ҫӳретӗп. Халӗ ӗнтӗ маншӑн тискер кайӑксем: упа, кашкӑр хӑрушӑ мар. Каяллах фашистсен аллине ҫитсе лекес мар. Ҫавӑнтан ҫеҫ хӑратӑп.

Ҫӳресен-ҫӳресен, партизансене тӗл пултӑм. Вӗсем, манран эпӗ камне, мӗншӗн кунта ҫӳренине ыйтса тӗпчерӗҫ. Эпӗ вӗсене ӗҫ мӗнле пулнине тӗрӗссипе каласа патӑм. Вӗсем мана йышӑнчӗҫ, хӑйсем пурӑнакан вырӑнне

ертсе кайрĕç. Ĕçтерчĕç, çитерчĕç. Сурана тирпейлесе сыхрĕç. Уйăхран суран пĕтĕмпех юсанса çитрĕ. Халĕ ĕнтĕ акă эпĕ партизан. Хама вĕлерме тăнă фашистсене тавăрма килтĕм. Эпĕ пĕччен мар, манăн юлташсем те пур, вĕсем ял тулашĕнче кĕтеççĕ... Мана нимĕçсен штабĕ кам çуртĕнче вырăнаçни кирлĕ,—тесе пĕтерчĕ Антун хăйĕн калавне.

— Ах, эпĕ вĕт малтанах ĕненмесĕр тăратăп. Ыр-усал пулĕ тесе чунăм тухать,—терĕ амăшĕ.

Пĕр вăхăта вĕсем—амăшĕ, ывăлĕ, хĕрĕ—пĕр çĕре чăмăртанса тăчĕç. Пĕрне-пĕри темиçе хут чуптурĕç. Ах, епле хаклă вăл амăшĕ ачисемшĕн, ачисем—амăшĕшĕн!.. Çак чунилен нимĕç салтакĕсем килмен пулсан, вĕсем пĕр хуйхăсăр пурăнатчĕç. Халĕ ĕнтĕ акă пĕри унта, тепри кунта саланса кайрĕç. Выçăллă-тутăллă пурăнаççĕ.

Амăшĕпе йăмăкĕ Антуна курса тăранаймаççĕ. Калаçмалли нумай та,—сăмах çук.

— Ачам, Антун, санăн хырăму выçă пулĕ? Мĕн тупса çитерес-ши сана?—терĕ амăшĕ.

Анне, кăмака çунать. Татнă салма хатĕр. Халех пĕçерсе пиччене апатлантаратпăр,—васкаса ўкрĕ Ульяна.

— Ан чăрманăр. Эпĕ тутă. Апатланса тăма вăхăт та çук. Тул çутăличчен пирĕн хамăра кирлĕ ĕçе туса пĕтермелле,—терĕ Антун.

Амăшĕпе йăмăкĕ нимĕçсен штабĕ кам çуртĕнче тăнине каласа пачĕç.

Пирĕн патра та тăватă нимĕç салтакĕ пурăнаççĕ. Калама та çук усалскерсем. Пире çиме те ирĕк памаççĕ. Вĕсем çук вăхăтра çеç салма яшки пĕçерсе тăранкаласа пурăнатпăр,—тесе пĕлтерчĕ амăшĕ.

— Халĕ ăçта вăл салтаксем?—ыйтрĕ Антун.

— Кам пĕлет вĕсене? Каçпа тухса каяççĕ те çĕрĕпе таçта çўреççĕ. Çутăлас умĕн тин килеççĕ. Çимеллишĕн кастараççĕ. Мĕн пурне йăлтах кўпсе пĕтерчĕç. Кăнтăрла кунĕпе килте. Çывăраççĕ. Пире нимĕн тума та памаççĕ. Хамăра пўртрен кăлараççĕ. Кўрше каяс,—унта та çавах —салтаксем...

Антун çиллипе шăлне çыртрĕ:

— Ых, йытăсем! Пире чура тума-и? Сук, вăл пулмĕ. Эпир вилмен-ха, чĕрĕ. Пурсăмăра та вĕлерсе пĕтереймĕç. Кирлĕ пулсан, вилнисем те масар çинчен тухса çапăçĕç.

— Пичче, эпĕ те санпа пĕрле пыратăп,—терĕ Ульяна, Антун куçĕсенчен пăхса.

Вăл вунпиллĕкре çеç-ха...

— Вилсен те, чĕрĕ пулсан та, ачамсем, пĕрле. Нимĕçсен мăшкăлне тӳссе пурăнасси пулмасть. Эпĕ те сиртен юлмастăп,—терĕ амăшĕ те.

Антун кăшт шухăша путса тăчĕ. Куçĕсемпе пӳрте йĕри-тавра пăхса çаврăнчĕ. Стена çумĕнче вунпилĕк çул ĕлĕк вилнĕ ашшĕн сăнне курчĕ. Вăл салтак шинелĕпе, урисенче—кĕске кунчаллă салтак атти, пуçĕнче—сăмсасăр картус. Ку сăнне вăл 1915 çулта ӳкерттернĕ. Вăл та вĕт 1914—1916-мĕш çулсенче вăрçăра нимĕçсемпе çапăçнă. Суранлансан, нимĕçсен аллине тыткăна лекнĕ. Унта икĕ çул тăршшĕ нимĕç баронĕ патĕнче йывăр ĕç ĕçлесе пурăннă. Çавăнта вĕт вăл чире кайса таврăннă. Темиçе çул хушши вăл Германирен илсе килнĕ чирпе асапланнă. Амăшĕ Ульянана çуратнă çул ашшĕ вилсе выртнă. Амăшĕ, çамрăк пулсан та, урăх качча тухман. Ачисене пăхса ӳстерме тăрăшнă. Ӳстерсе çитерсе пурăнма çеç пуçланăччĕ. Каллех нимĕçсем вăрçăпа килчĕç.

— Юрĕ, анне, Ульяна, пуçтарăнăр, манпа пĕрле пырăр. Антив, пирĕн пĕтĕм çемье нимĕçсемшĕн хаяр тăшман пултăр,—терĕ Антун.

Лешсем хĕпĕртесе ӳкрĕç. Çавăнтах тумланма пуçларĕç. Анчах çуртне пăрахса хăварма çавтери йывăр пек туйăнать амăшне. Вĕсем вĕт çак çурта упăшкипе иккĕшĕ татăкăн-татăкăн пухса тунă. Çак çуртра пурăнса çур ĕмĕрне ытла ирттернĕ. Ватăлмалăх кунĕнче хăйĕн тăван çуртĕнче выртса вилме ĕмĕтленнĕ.

— Антун, ачам, çурта мĕнле пăрахса хăварăпăр? Шелçке?—терĕ амăшĕ.

— Ан кулян, анне. Пуçсем сывă пулсан, çурт тăвăпăр. Анчах малашне ĕнтĕ пирĕн çуртра нимĕç салтакĕсем те саркаланса пурăнаймĕç. Çитĕ,—терĕ Антун татса. Уншăн халĕ нимĕн те шел мар, вăл халĕ пурин çинчен те маннă. Унăн пĕтĕм шухăшĕ нимĕç оккупанчĕсене пĕтерес, вĕсене ăçта курнă унта персе пăрахас шухăш.

— Пичче, хăвăртрах тухса каяр. Унсăрăн нимĕç салтакĕсем час таврăнĕç. Яланах вĕсем пĕр вăхăтра таврăнаççĕ,—терĕ Ульяна пиччĕшне васкатса.

— Юрĕ. Эсир аннепе малтан утăр. Вăрмана кĕрсен, çулăн сылтăм енче пĕр ватă хыр пур, çавăн айĕнче пире кĕтсе тăрăр.

— Эпĕ юлташсемпе пĕрле пырăп,—терĕ Антун. Вăл йăмăкĕпе амăшне ăçталла каймаллине кăтартса ячĕ.

Вĕсем пӳртрен тухрĕç. Антун çавăнса пӳрт алăкне хупма çеç ĕлкĕрнĕччĕ, сасартăк асне илчĕ:

— Ах, чуть аттен сăнне манса хăварман. Эпĕ халех кĕрсе илсе тухăп. Эсир карта хыçнелле утăр,—терĕ вăл.

Ульянапа амăшĕ пахча урлă каçса вăрман еннелле утрĕç. Антун каланă вата хыр вĕсене хăнасене йышăннă пек кĕтсе илчĕ.

Амăшĕне хĕрĕ хыр айне çитсе ларсан, вăрах та вăхăт иртмерĕ, ялта пăшал пенĕ сасăсем, гранатăсем ухлатса çурăлни илтĕнчĕ. Çуртсене пĕрин хыççăн тепĕрне вут çулăмĕ ыталаса иле пуçларĕ. Çулăм айĕнче фашист салтакĕсем хăшĕ çаруран, хăшĕ кĕпе вĕççĕн чупкаланине Ульянапа амăшĕ савăнăçлăн пăхса ларчĕç.

— Ак, çапла кирлĕ вĕсене!

Нимĕçсен штабĕ вырăнаçнă çурт пĕренисем çӳлелле çĕкленчĕç. Çурт тĕлĕнче хура тĕтĕм çеç мăкăрланса тăчĕ.

— Тăшмансен пĕр йăви пĕтрĕ!—савăнса кулчĕ Ульяна. Антунпа унăн юлташĕсем фашист салтакĕсемпе офицерĕсене миçе çын пĕтернине эпĕ çырмастăп. Çапла çеç калама пулать: вĕсем ялтан пĕри те тухса каяйман. Мĕншĕн тесен, ялăн йĕри тавра партизансем тăрса тухнă та, курнине пĕр пере-пере ӳкернĕ. Чылайĕшĕ çулăм ăшĕнче пĕтнĕ.

Шурăмпуç шуралса килчĕ. Партизансем вата хыр айне пуçтаранчĕç.

— Паллашăр: ку манăн анне, ку йăмăк—Ульяна,—тесе пĕлтерчĕ Антун хăйĕн юлташĕсене.

Пурте алă тытса паллашрĕç.

Çапла Антунăн пĕтĕм çемьи тăшманпа çапăçма тухрĕ.

1943

# ТУПМАЛЛИ


| | Стр. |
|---|---|
| **М. Д. ДАНИЛОВ-ЧАЛДУН ПУРНĂÇĔПЕ ПУЛТАРУЛĂХĔ (ЭЛКЕР статьи)** | 3 |
| Çăлтăрлă çĕлĕк | 13 |
| Çапăçу иртсен | 36 |
| Шахтăра | 43 |
| Çулăм витĕр | 56 |
| Тайга паттăрĕсем | 74 |
| Ункăран | 94 |
| Ти[illegible]ĕ хыççăн | 115 |
| Левентей масарĕ | 127 |
| **ФРОНТРА ÇЫРНИСЕМ.** | |
| 34-мĕш атака умĕн | 139 |
| Кам айăплă? | 142 |
| Вилĕмрен хăтăлнисем | 145 |
| Красноармеец Самсонов | 151 |
| Пăлан хыççăн | 154 |
| Вăрманта | 158 |
| Лизавета Егоровна | 162 |
| Антун çемьи | 168 |

Редактор *Я. Ухсай.* Тех. редактор *И. Григорьев.*

Корректор *С. Алексеев.*

НТ 05151 Заказ № 1265 Подписано к печати 14. 9. 47 г. Количество печ. знак. в 1 п. л. 35904, Тираж 10.000 экз. Об'ем 11 печ. листов

Типография № 2 Управления полиграфпромышленности при Совете Министров ЧАССР, гор. Алатырь.

Хакĕ 8 тен.
Цена 8 руб.

22264

М. Н. ДАНИЛОВ-ЧАЛДУН

ВОЕННЫЕ РАССКАЗЫ

На чувашском языке

ЧУВАШГОСИЗДАТ
Чебоксары ♦ 1948